# ТУХĂҪ ПОЭЗИЙĔН ТĔСЛĔХĔСЕМ

## Хрестомати

РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНТŸ ТАТА
ĂСЛĂЛĂХ МИНИСТЕРСТВИ

Профессилле аслă пĕлÿ паракан
федераллă патшалăх учрежденийĕ

«И.Н. Ульянов ячĕллĕ чăваш патшалăх университечĕ»

# ТУХĂÇ ПОЭЗИЙĔН ТĔСЛĔХĔСЕМ

## Хрестомати

*Чăваш Республикин*
*Вĕренÿ тата çамрăксен политикин*
*министерстви аслă тата вăтам шкулсенче*
*усă курма ирĕк панă*

Шупашкар 2009

ББК Ш43(5)*=635.1я73
О - 23

Рецензенты:
кафедра чувашской литературы Чувашского государственного педагогического университета им. И.Я. Яковлева
(зав. кафедрой д-р филол. наук, проф. **П.Н. Метин**);
научный сотрудник отдела литературоведения и фольклористики ЧГИГН, канд. филол. наук **Е.В. Федотова**

**О - 23** **Образцы** восточной поэзии: хрестоматия / авт.- сост. И.В. Софронова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2009. – 244 с.

Представлены переводы китайской, японской, индийской, турецкой, среднеазиатской поэзии, а также образцы некоторых восточных мотивов и жанров. Показаны новые грани в развитии художественного перевода в чувашской литературе.

Хрестоматия окажет помощь при изучении дисциплин «История чувашской литературы», «Зарубежная литература (Восточная классика)», дисциплин специализаций.

Для студентов I-V курсов факультета чувашской филологии и культуры, учителей-филологов общеобразовательных школ.

Утверждено Редакционно-издательским советом университета

Отв. редактор: д-р филол. наук, профессор В.Г. Родионов

ББК Ш 43(5)*=635.1я73

© Софронова И.В.,
составление, 2009

# УМ СĂМАХ

Кирек мĕнле халăхăн литератури те хăйне тĕллĕн çеç, кӳршĕ, тĕнче литературин витĕмне туймасăр аталанма пултараймасть. Чăвашсем тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен шутне кĕреççĕ. Ытти тĕрĕк халăхĕсемпе пĕрле вĕсем Алтай тăрăхĕнчен пуçласа Вăтам Ази, Çурçĕр Кавказ çĕрĕсем тăрăх куçса Атăл çине килсе вырнаçнă. Кӳршĕллĕ пурăннă халăхсен сăмахлăхĕнчи сăнарлăха йышăннă, хăйсем те вĕсен фольклорне пуянлатнă, летопиçĕсемпе хроникисенче, çыруллă литературинче палăрмалла йĕр хăварнă. Тухăç халăхĕсен сăмахлăх пуянлăхĕ паянхи чăваш фольклорĕнче, тĕнче курăмĕнче упранать. Китай çыннисемпе, индо-иран халăхĕсемпе çыхăну авалтарах пулнă. Мусульман тĕнне ĕненекен халăхсемпе вара X ĕмĕр хыççăн хутшăнса пурăннă. Ку культура паллисене чăваш фольклорĕнче уйăрса илме те çăмăлтарах.

Тухăç литературин традицийĕсем çыруллă чăваш литературине куçару тата реминисценци (евĕрлени) урлă кĕреççĕ. Куçаруçăсемпе сăвăçсем ку традицисене кăмăллани пĕр евĕр культура патне туртăннинчен, халăх историйĕпе кăсăкланнинчен килет. Сăвăсемпе поэмăсенче авалхи чăвашсен ахрăмĕ чĕрĕлсе тăрать. Сăвăçсем тухăç литературин тĕслĕхĕсене тӳрремĕн, кӳршĕ халăхсен литератури, ытларах вырăс чĕлхи урлă куçараççĕ. Вырăс авторĕсен тухăç мотивĕсемпе çырнă хайлавĕсене куçарни те асăннă традицисене чăваш литературине кĕме май парать. Г. Айхишĕн, тен, П. Эйзиншăн та, Анăç литературипе паллашнă хыççăн Тухăç классикипе кăсăкланасси, ăна евĕрлесси характерлă пулса тăрать.

«Тухăç поэзийĕн тĕслĕхĕсем» кĕнекене яппун, китай, инди, турккă, Вăтам Ази авторĕсен, авалхи шумер тата еврей литературин тĕрлĕ вăхăтри куçарăвĕсем кĕреççĕ. Вĕсемпе юнашарах асăннă литература традицийĕсене евĕрлесе çырнă е вĕсене çывăх сăвăсене вырнаçтарнă. Вăтам Ази литератури тĕслĕхĕсен куçа-рăвĕсене темати-

ка, мотив, жанр тĕлĕшĕнчен уйăрнă. Кĕнекере илсе кăтартнă темăсем çав хушăрах пĕтĕмĕшле Тухăç литературишĕн те традициллĕ шутланаççĕ. Вăл е ку литература аталанăвĕ çинчен ятарлă статьяра кĕскен каласа пама тăрăшрăмăр. Кашни параграф хыççăн вырнаçтарнă усă курмалли литература списокĕ те тухăç литература традицийĕсемпе тӳрремĕн паллашма май парĕ.

«Тухăç поэзийĕн тĕслĕхĕсем» хрестомати студентсене «Чăваш поэзийĕнчи тухăç лирикин традицийĕсем» специализацине вĕреннĕ чух çеç мар, пĕтĕмĕшле литература историне, классикăлла тухăç литературине пăхса тухнă чух та усăллă пуласса шанатпăр. Тăван литературăри пулăмсене çĕнĕлле хаклама, куçару ĕçĕн аталанăвне тишкерме пулăшĕ тетпĕр.

# I СЫПĂК

## ТУХĂÇ ПОЭЗИЙĔ ÇИНЧЕН ПĔТĔМĔШЛЕ КАЛАНИ

### Авалхи шумер литературин пуянлăхĕ

Авалхи Шумер патшалăхĕ Тигрпа Ефрат тăрăхĕнче пирĕн эрăччен тăвată пин çул каялла йĕркеленсе çитнĕ. Унăн хăйĕн чаплă хулисем (Лагаш, Киш, Ур, Урук), культура хутшăнăвĕсем пулнă. Историксем шумерсен хула культури, юридици хутшăнăвĕсем, сутуилӳ, çырулăхĕ çӳллĕ шайра пулнине ĕнентереççĕ. Археологсем тупнă тăм кĕнекесем авалхи халăхăн литература пуянлăхне паянхи куна çити упраса хăварма пултарнă. Вĕсенче мифсемпе эпикăлла халап тĕслĕхĕсем, йăла юррисем, патшасене халалланă гимнсем, юптарусем, ваттисен сăмахĕсем, икĕ çын калаçăвĕ евĕр йĕркеленĕ вĕрентсе каланисем, юрату лирикин тĕслĕхĕсем çырăнса юлнă.

Авалхи шумер литературинчи чылай сюжетсем каярах тĕнче литературинче сарăлаççĕ, паллă пулса тăраççĕ. Вĕсем шутне Рай пахчи пирки калани, тĕнчене шыв илни, çынсен чĕлхисене хутăштарса яни, хĕлпе çу тавлашни, турăна пӳрнĕ ырлăхсемпе йывăрлăхсемшĕн тав туни тата ыттисем те кĕреççĕ. Гильгемеш (Билгемеш) паттăрăн ĕçĕсем çинчен калакан халапсем чылай халăхшăн паттăрла эпосăн ум историйĕ шутланаççĕ.

Гильгемеш эпосăн тĕп сăнарĕ, кайранхи халăхсен эпосĕсенчи пек, турă мар, çĕр çинче пурăнакан ахаль çын. Вăл юрату тата курайманлăх туйăмĕсене туйма, савăнма тата кулянма, малалла талпăнма тата халтан кайса ларма, шанчăка ĕненме тата ăна çухатма пултаракан çын. Эпосри ĕçсене турăсем те хутшăнаççĕ. Гильгемеша хăйне те çурма турă, çурма этем тесе калама пулать. Çапах та эпосра паттăр ахаль çын пулнине палăртасси, унпа çыхăннă ĕçсене сăнласси тĕпре.

Турăсем пирки калани фон вырăнне тата паттăрăн ĕçĕсене сăнланине йĕркелесе пыма кирлĕ.

Эпосра пур вăхăт çыннине те хумхантарма пултаракан проблемăсене хускатнă. Вĕсен шутне юлташ тупас тени, шанчăклăха мухтани, чапшăн çунни, паттăрла ĕçсем тăвас тени, вилĕмрен хăрани, вилĕмсĕрлĕх патне ăнтăлни тата ыттисем те кĕреççĕ. Çак пăтрашуллă туйăмсем ĕмĕрсем хушши çынсен чунне пăлхантарни çинчен калани эпосăн шăнăрĕ пулать. Вĕсене пула хайлав тĕнче тăрăх сарăлма, паянхи куна çити упранма пултарнă.

Эпос Урук хулине тата унăн патшине мухтаса каланинчен пуçланать. Гильгемеш питĕ вăйлă паттăр, хăйне валли тивĕçлĕ тăшман тупайманран вăл Урук халăхне хĕсĕрлесе пурăнать. Уйрăмах хĕрсемпе хĕрарăмсене канăç памасть. Халтан кайнă çынсем турăсенчен пулăшу ыйтаççĕ. Турăсем çынсене пулăшма çĕр çине Аруру турă амăшне яраççĕ. Вăл Энкиду паттăра тăмран йăваласа тăвать. Çынсен пурнăçне пĕлмен çăмламас Энкиду тискер кайăксемпе пĕрле пурăнать. Тискер кайăк чунлă Энкидуна Гильгемешăн шăнăçайми мăн кăмăллăхне пусарма, ăна вырăна лартма пӳрнĕ. Анчах та малтан Энкидуна çын ретне кĕртмелле пулнă. Урук хулинчен юхха хĕрарăм килсе паттăра илĕртет. Çакăн хыççăн вăл кăмăл-сипет, ăс-тăн тĕлĕшĕнчен пуянланать, унăн тискерле вăй-хăвачĕ те чакать. Этем ретне кĕнĕ паттăра тискер кайăксем ăнланма пăрахаççĕ. Хĕрарăм ăна çынсем хушшинче хăйне мĕнле тытмаллине, хутшăну культурине вĕ-рентет, пиртен тунă тумтире тăхăнма хăнăхтарать, çăкăр çитерсе тата эрех ĕçтерсе кăтартать.

Энкиду килессине Гильгемеш тĕлĕкре курать. Ăна çапăçăва чĕнет. Кĕрешӳре Энкиду вăйлăрах пулни курăнать. Гильгемеш хăйĕн мăн кăмăллăхĕ çинчен манса каять, паттăра юлташла ыталаса илет. Хĕрӳ çапăçуран çирĕп туслăх çуралать. Малашне икĕ юлташ мĕн пур паттăрла ĕçне пĕрле пурнăçлаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ çичĕ ту урлă каçса Хувава аçтаха хураллакан патшалăха кедр йывăççи касма кайса килеççĕ. Иштар юрату турри

çilleннипе Урук хулине пĕтерме янă тӳпе вăкăрне çĕнтереççĕ. Иштар хăйне Гильгемеш качча илменшĕн тарăхнипе унăн юлташне вилмелле тăвать. Энкиду вилнишĕн хурланнă паттăр тĕнче тăрăх вилĕмсĕрлĕх шырама тухса каять. Тĕнчене шыв илнинчен çăлса хăварнă Утнапиттим ăна çĕр çинчи çынсенчен никам та вилĕмсĕрлĕхе тивĕçеймĕ тесе пĕлтерет. Уншăн ыйхăна та çĕнме хĕн, вилĕме пушшех те. Юлашкинчен вăл тинĕс тĕпĕнче асамлă курăк пурри çинчен калать. Анчах та тупса тухнă курăка çĕлен çисе ярать. Шанăçа çухатнă Гильгемеш хăй ятне те пулсан вилĕмсĕр тума шутлать, чаплă хуласем хăпартать.

Шумерсен сăмахлăхĕнче Гильгемеш çинчен калакан сюжетсем кашни хăйне тĕллĕн уйрăм халапсем евĕр çӳреççĕ. Каярах вĕсем аккадсен сăмахлăхне кĕреççĕ. Кунта вĕсене пĕр пĕтĕмĕшле эпоса пĕрлештернĕ, паттăрăн ĕçĕсем пĕри тепринпе çыхăнса, вĕçе-вĕçĕн пулса пыраççĕ. Çак улшăну тĕнче литературинче сăмах культури, уйрăмах паттăрлăх эпосĕ аталанса пынине кăтартса парать.

Авалхи халăхăн вĕрентсе калас туртăм, пурнăç çине хăй евĕрлĕ пăхасси ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсенче палăрса юлнă. Вĕсене пирĕн эрăччenхи виçĕ пин çул каяллах тăм кĕнекесем çине çырса хума пуçланă. Каларăшсем шухăш тĕлĕшĕнчен паянхи куншăн та актуаллă пулнине асăрхама пулать:

*Çывăрмасăр çийе юлмĕ, апат çимесĕр ӳт хушăнмĕ.*

*Пурпĕр вилĕм килет – пурлăха салатар пуль, пурăнас килет – пурлăх пуçтарар пуль.*

*Арăмпа ача усраса курман çын сăмсине çĕрĕ çакса курман.*

*Туслăх пĕр кун тăсăлать, тăванлăх ĕмĕр тăсăлать.*

*Темиçе алпа пӳрт купалама пулать, темиçе хырăмпа пӳрте салатма пулать.*

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем çемьери хутшăнусене, тĕрлĕ профессисене, социаллă тата политикăлла хутшăнусене, ĕç пахалăхне сăнласа параççĕ. Вĕсенче тискер чĕрчунсен сăнарĕ урлă шухăша палăртнине те асăрхама пулать.

Чылай тĕпчевçĕ шумерсемпе чăвашсен мăн аслашшĕсем хушшинче çыхăну пулнине ĕнентерме тăрăш-

нă пĕр тапхăр. Шумерсен лексикинчи, ĕненĕвĕсенчи ятсен чăваш чĕлхинчи тӳр килĕвĕсене шыранă. Ку ĕç суя этимологине çывăх пулнă пулин те шухăша яракан фактсем чылай тупса палăртнă вĕсем.

Шумерсен туррисем, çынсем пекех çемьепе пурăнни, Аслă туррăн тĕрлĕ тарçă-турăсем пулни, кашни хулан, ялăн, вырăнăн хăйĕн турри пулни чăвашсен пандемонимумне аса илтерме пултарать. Çăтмахпа Тамăк алăкĕсене уçса хупакан пулни, леш тĕнчепе ку тĕнче хушшинче çырма е юхан шыв пулни пирки калани те пĕр евĕрлĕ. Шумерсен культури ытти цивилизацисенчен чылай малтан аталанни, вăл кайранхисене витĕм кӳме пултарни çинчен аса илсен, ку пĕрпеклĕхсем закономерлă тесе пĕтĕмлетме пулать.

## Пĕлкемĕш çинчен хунă юрă

*(Сыпăк)*

Таçта та пулнă вăл, темĕн те курнă,
Çӳллĕ сăртсем урлă çӳренĕ,
Тинĕсĕн тарăн тĕпне те çитнĕ.
Çут тĕнчере вăл ăс-хакăл пухнă;
Пурнăçăн тупсăмĕ уçăлнă уншăн,
Никам пĕлменни палăрса тăнă.
Этемлĕх пуласлăхĕ уншăн паллă.
Инçе çĕрсенче çӳренĕ хыççăн
Вăл ывăнса каялла таврăннă,
Курни-илтнипе çӳрени çинчен
Катса вăл çырнă măн чул çине.
Урук хулине хӳмепе çавăрнă,
Сăвап Эаннă вырăнне хӳхĕмлетнĕ.
Пăхсам еплерех – карчĕсем пăхăртан,
Тăпра тӳпемĕ урлă каçаймăн.
Авалхи пусаха çине таптаса
Эаннăна кĕр, Иштарăн килне,
Пулас патша та капла тăваймĕ.
Хăпарсам çӳле, çӳре хӳмепе,
Никĕсне тимле, кирпĕчне хыпашла;

Çулăм çинче вĕсене хĕртмен-им.
Хӳмене лартман-им çичĕ ăста.

Кашнинчен вăл ăслă, вăйлă, хăватлă,
Пĕр пайĕ çынран тăр, икĕ пайĕ турăран.
Яштака ӳт-пӳллĕ, чиксĕр вăйлă.
Канăç çук уншăн, хĕрхенмест никама та,
Тур вăкри пек урнăн хаярлă ар вăл.
Çапăçура унпа никам танлашаймĕ,
Параппанĕ çапсанах юлташĕсем хатĕр,
Мĕн хушасса кар тăраççĕ.

Урук çыннисем хурлăха путнă:
«Пĕр ывăл хăвармасть ашшĕсене Пĕлкемĕш!
Хĕр-упраç хăвармасть яшсем валли вăл!
Кун-каç алхасать, аскăнлăха путнă:
Вăл пирĕн ертӳçĕ Урук патши-çке,
Хăватлă, чаплăскер, вĕç-хĕрсĕр ăслă,
Халăх хутне кĕрекен мар-им.»

Çӳл Турăсем çак ӳпкеве илтеççĕ,
Урук хулин Тур Амăшне калаççĕ чĕнсе:
«Пит чăрсăр ывăл çуратрăн эсĕ,
Тур вăкри пек урнăн хаярлă ар вăл.
Çапăçура унпа никам та танлашаймĕ...»

Çӳл Турăсен ӳпкевне илтет Ану,
Аслă Аруран чĕнсе калать вăл:
«Аруру, эсĕ Пĕлкемĕше çуратрăн,
Текех унпа танлашакана чĕртсем!
Вăл унăн вăйĕпе тавлашма пултартăр,
Тытăçчĕр, Урук хули кантăр».

Аруру илтрĕ çакна. Ану хакăлне
Хăй чунне кĕртрĕ. Чĕптĕм тăм илсе
Хура çĕр çине сулласа пăрахрĕ.
Энкидуна вăл йăваласа кăларчĕ.
Тепĕр паттăр çĕр çине çуралчĕ.
Сĕм çурçĕр çури, Нинуртăн çар çыннийĕ,

Ӳт-пӗвӗ лапкӑшпех ҫӑра ҫӑмлӑ.
Хӗр арӑм евӗр ҫивӗтсемпе ҫӳрет,
Ҫӳҫӗ ҫӑра, тачка кӗлтесем пек...
Пӗррехинче ҫапла пӗр сунарҫӑ
Кӗтӗвне шӑварма шыв хӗрне ансан
Асӑрхать ӑна чӗр чунсен хушшинче.
Пӗрре асӑрхать, тепӗр кун татах;
Малтанах хӑрать, хурланать кайран,
Тарӑн хуйхӑна путать унӑн чунӗ.
Кӗтӗвне ҫавӑрать, хӑвалать ялалла.

Килне ҫитсенех ашшӗне калать вӑл:
«Аттем, темле арҫын, таҫтан килнӗскер,
Шыв хӗрне анать, – хӑй пит вӑйлӑ,
Анну ҫарӗ пекех иксӗлми хӑватлӑ.
Сӑрт-тусем тӑрӑх ҫӳрет ҫӗтсе вӑл,
Тискер чӗрчунсемпе шӑварӑнма пырать.
Шиклентерет вӑл, ҫывхарма хӑратӑп...»

Ашшӗ ӑна ҫапла каларӗ:
«Ывӑлӑм, Урук хулинче пурӑнать Пӗлкемӗш.
Унран вӑйлӑрах этем те ҫук:
Пӗтӗм тӗнчипе чапа вӑл тухнӑ,
Кай ун патне, каласа пар эс, –
Ҫав ҫын ҫинчен пӗтӗмпех пӗлтер.
Мӗн тумалла сӗнӗвне калатӑр...»
Итлерӗ сунарҫӑ тӑван ашшӗне,
Пӗлкемӗш патне ҫитме шутларӗ...

Пӗлкемӗш ӑна ҫапла каларӗ:
«Каях сунарҫӑ, ясар Шамхат санпа пырӗ.
Ҫитӗр иксӗр шӑварма вырӑнне.
Вӑл хирӗҫ тухтӑр ӑна курсанах,
Кӗпине салтса илемне кӑтарттӑр.
Кун хыҫҫӑн вара пӗрле вӗсем пулччӑр. –
Тискер чӗр чунсем ҫавӑнтах тарӗҫ».
Утрӗҫ тухса сунарҫӑпа Шамхат.
Виҫӗ кунтан шыв хӗррине ҫитрӗҫ...

Курчĕ Шамхат тискер çак çынна –
Хирпе сăрт-тусем çинче ӳснĕскере...
Хывăнчĕ Шамхат, çарамасланчĕ,
Кĕпине уçса шур кăкрине кăтартрĕ.
Тухрĕ ун умне пĕр вăтанмасăр.
Энкиду çакна курсан манать пĕтĕмпе;
Выртать хывăнса вăл Шамхат çине.
Савăшу парнелес – хĕрарăм ĕçĕ, –
Ачаш аллисем ăна килĕшеççĕ...

Юлашкинчен тăранса çитсен
Çаврăнчĕ вăл чĕрчунсем енне.
Ăна курсанах чĕрчунсем тарчĕç.
Ту качакисем пымарĕç патне.
Сиксе тăчĕ Энкиду ӳт-пĕвĕ вăйсăр,
Урисем хавшак – хуса çитеймерĕ.
Таврăнчĕ вăл хĕрарăм çумне, –
Куçран пăхать ăна – мĕн калать-ши.
Халь тимлесе итлеме вăл хатĕр.

«Чипер эсĕ, Энкиду, Турă пекех-тĕр, –
Мĕн тăватăн кунта чĕр чунсем хушшинче.
Атя-ха сана Урука илсе каятăп:
Çут кермене, Аслă Ану килне.
Унта Пĕлкемĕш – вăйлăран та вăйлă,
Тур вăкăрĕ евĕр хăватлă ар вăл.
Ăна пĕр курсан нихăçан манаймăн,
Хăвна килĕштернĕн килĕштерĕн ăна!
Тăрсам çĕр çинчен, – ку кĕтӳç вырăнĕ!»

Энкидуна сăмахсем килĕшрĕç, –
Аслă вăл халĕ – юлташ ăна кирлĕ.
Çапла хуравне каларĕ Энкиду:
«Атя ертсе кай мана эсĕ, Шамхат,
Çав сăвап кермене, Ану килне,
Пĕлкемĕш унта пуринчен те вăйлă,
Тур вăкăрĕ евĕр хăватлă пултăр, –
Ăна çапăçма чĕнсе эп кăларăп...»

*В.Макаров куçарнă*

### *Пайăр ятсене ăнлантарни*

***Урук*** *– пирĕн эрăченхи 2800-2700–мĕш çулсенче йĕркеленнĕ шумер хули.*

***Иштар*** *– юратупа туслăх тата вăрçă турри.*

***Ану*** *– Урук хулине хӳтĕлекен Çӳлти турă.*

***Энкиду*** *– тискер паттăр, Пĕлкемĕш тусĕ.*

***Нинурта*** *– вăрçă турри, Эллил ывăлĕ.*

***Арури*** *– этеме пултарнă Турă Амăшĕ.*

***Эанна*** *– Анупа Иштар турăсене пуç çапмалли сăваплă вырăн.*

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*1. Авалхи шумер литературин тĕслĕхĕпе паллашăр. Хайлавра мифологи, паттăрлăх эпосĕ, юрату лирикин традицийĕсен паллисене уйăрăр.*

*2. Авалхи шумер литературинче сарăлнă сюжетсен тӳркилĕвĕсене паянхи сăмахлăхра тупма пулать-и. Çакна сăлтавласа парăр.*

*3. Тĕнче литературинче «Пĕлкемĕш çинчен хунă юрăпа» кăсăкланни, ăна тĕпченин тата куçарнин историйĕ.*

*4. Авалхи шумер литературин традицийĕсем кӳршĕ тата тĕнче литературинче сарăлни. Вĕсен çĕнĕлле сăн-сăпачĕ.*

*5. В. Макаров куçаруçăн ĕçне пахалăр. Унăн пултаруллăх çул-йĕрне тишкерсе тухăр.*

*6. Н. Шелепи çырнă «Константин хулине туни çинчен» хайлаври кайăкпа çĕлен çапăçăвĕ сюжета авалхи аккадсен мифологийĕнчи кайăкпа çĕлен çапăçăвĕ сюжета танлаштарса пăхăр. Н. Шелепи авалхи сюжета усă курнин сăлтавĕсем, интерпретацийĕ. Асăннă хайлава В.Г. Родионов мĕнлерех хак парать.*

*7. Г. Юмартăн «Хĕвеле мухтав!» сăввинчи йăла-йĕрке тата авалхи сăмахлăхăн витĕмĕ.*

### *Усă курмалли литература*


1. Крамер, С.Н. История начинается в Шумере // С.Н. Крамер. – М.: Наука. – 1965. – 256 с.

2. История всемирной литературы:. в 9 т. Т.1. – М.: 1983.

3. Терентьева, О. Шелепи сăмахĕ // О. Терентьева // Тăван Атăл. – 2006. – 6№. – С. 126–127.

# Китай поэзийĕн пуянлăхĕ

Китай цивилизацийĕ тĕнчери чи ватă цивилизацисен шутне кĕрет. Çавăнпа пĕрлех вĕсен çырулăхĕ те, литератури те сĕм авалах пуçланса кайнă. Малтанхи çырулăх палăкĕсем пирĕн эрăченхи XIV-XI ĕмĕрсенчех пулни паллă. Çыруллă литература яланах халăх пурнăçне сăнланипе палăрса тăрать. Китайри илемлĕ текстсен пахалăхĕ Дао тата Конфуций вĕрентĕвĕсемпе килĕшӳллĕн аталанса пынă. Чи авалхи кĕнекесем шутне «И-цзинь» тата «Ши-цзинь» кĕреççĕ. Вĕсенче йăла-йĕрке юррисемпе пĕрле патшасене халаллакă мухтав юррисем пулнă.

Вăтам ĕмĕрсенчи китай поэзийĕ Тан йăхĕнчен тухнă патшасен вăхăтĕнче уйрăмах вăй илет. Унчченхи çыруллă литература фольклортан уйрăм тăнă. Тĕп хуласенче пурăнакан аристократсен хăйне уйрăм сăмах культури пулнă. Литературăра ашшĕпе амăшне, патшана хисеплекен идеаллă çын сăнарĕ тĕпре пулнă.

Тан патшалăхĕнче поэзине пысăка хурса хакланă. Патшалăх чинне ĕçе вырнаçнă чух та поэзи традицийĕсене пĕлнине, сăвă хывас ăсталăх пуррине тĕрĕсленĕ. Тĕп сăлтавĕ вара ритм саккунне пăхăнса тăракан поэзинче гармони, йĕрке тăвас идея тĕпре пулни. Хăйĕн структурипе сăвă хаоса хирĕçлет. Çакă патшалăх йĕркине тытса пыракансене кирлĕ пулнă та.

Тан тапхăрĕнче сăвă хывăм традицийĕсем те çирĕпленсе çитеççĕ. Сăвăра уйрăм тонсем, рифмăсем тăтăшах пĕр-пĕринпе черетленсе тăмалла пулнă. Йĕркене пиллĕк е çичĕ сăмах вырнаçмалла (ку вăхăтра чĕлхере пĕр сыпăклă сăмахсем ытларах пулнă), сăвă тăваттă, е саккăр, е нумай йĕркеллĕ пулма пултарнă.

Анăç çыннине, китай поэзийĕнче историпе тата мифологипе çыхăннă аса илӳсем, систерсе каланисем нумай пулнине кура, сăвăри шухăша ăнланма йывăр. Кашни систерсе каланине тĕплĕн ăнлантарса пани вара сăввăн шухăшне, янравлăхне туйма чарать. Сăвăна иероглифпа çырнинче те хăйне евĕрлĕ илем пур.

Тан тапхăрĕнчи авторсенчен Ли Бо, Ван Вей, Ду Фу, Бо-Цзюй-и ячĕсем ĕмĕрлĕхех палăрса юлаççĕ. Кай-

ранхи сăвăçсем те чăн малтан сăвă ăсталăхне «Шицзинь» кĕнекерен тата çак авторсенчен вĕренеççĕ.

Авалхи тата Вăтам ĕмĕрсенчи китай поэзийĕнче пейзаж лирики тĕпре пулнă. Ку вăхăтра пейзаж лирики тесе сăрт-тусемпе шыв-шура, уй-хирсемпе сад-пахчисене мухтаса калакан сăвăсене каланă. Поэзин чĕререн тухакан сасă евĕр янăрамалла пулнă. Анчах та лирика геройĕ палăртакан шухăш, Европа çынни хăнăхнă пек, поэт индивидуальнăçĕпе тӳр килмен. Китайра поэт хăй хавхине космосран, Вĕççĕрлĕхрен илекен медиумпа танлашать.

Тĕнче вăрттăнлăхĕ, китай çыннин шухăшĕпе, шăплăхра, пушăлăхра, ним çуклăхра упранать. Шăп çакăнта Аслă Дао çулĕ пуçланать те. Дао мĕн пур япалана шухăшласа кăлараканĕ, ним çуклăхран туртса кăларса пурнăçра калăплаканĕ. Илемлĕ чечек çурăлать-и, поэт чĕринче янăравлă сăвă шăранать-и, пур япала та пĕр çĕрте тĕвĕленет. Уçлăхри мĕн пур япала талккăш тата вăхăт тăрăх Дао çулĕн ритмĕпе килĕшӳллĕн куçса пырать. Сăвăçа çут çанталăкпа пĕр пулни тĕнче, уçлăх вăрттăнлăхĕсене пĕлме, ăнланса илме пулăшать. Хутшăнун малтанхи тапхăрĕнче унăн чунĕ çав вăрттăнлăха ăша хывма хатĕрленет, кайранхи тапхăрта хутшăну туйăм шайĕнче пулса иртет.

Китай çыннин пурнăçĕнче, поэзире ту сăнарĕ пысăк пĕлтерĕш йышăнать. Поэт ту çине хăпарнă май çылăхлă тĕнчерен уйрăлать, унăн нуши-тертĕнчен тасалать. Аялта юхса выртакан юхан шывсем уншăн Дао çулĕ евĕр. Пĕччен юлни чуна уçса яма май парать. Сăвăç уйрăм тăракан йывăçа тĕл пулсан унпа туйăм шайĕнче калаçма, пĕр пулма пултарать. Вăл çак çут çанталăкра хăйне хăна пек, ют япала пек туймасть. Куç умĕнче тĕсне, формине улăштаракан пĕлĕт те, хускалми шăп ларакан йывăр тусен ĕречĕ те, çак тĕнчене самантлăх килнĕ этем те – çаксем пурте вĕçĕмсĕр хумханса, улшăнса тăракан ĕмĕрлĕх пурнăçăн пĕчĕкçĕ тумламĕсем пулаççĕ. Вĕсем Вилĕмсĕрлĕхĕн пайĕсем пулнисĕр пуçне пĕр пĕрин пурнăçне тултарса тăракан, пĕр пĕринпе тачă çыхăнса тăракан тĕпренчĕксем. Çавăнпа та поэт çут çанталăк çине айккинчен сăнаса пăхмасть,

шалтан курса, туйса тăрать. Вĕсен пайĕ пулнине кура çут çанталăкри пулăмсемпе пĕр тан шайра калаçать.

Китай поэзийĕнче çулталăк вăхăчĕсем çинчен, вĕсен урлă этемпе çут çанталăк пĕрлĕхĕ çинчен çырасси йăлара пулнă. Кулленхи пурнăçăн çылăхĕсенчен хăпасси, ӳсен-тăран тĕнчинче пурăнасси илĕртнĕ вĕсене. Кунта çеç асап-тертрен хăтăлма, лăпкăлăхпа чун тасалăхне тупма пулать.

Тухăç çынни ту çине чунпа пуянланас тесе хăпарать. Мĕн чул çӳлерех хăпаран, çавăн чул ырăрах. Ту çине хăпарнипе мухтанмалли, унта хăвăн йĕрне хăвармалли йăла çук вĕсен. Анăç çынни пек ту хысакне ху ятупа палăртасси вĕсемшĕн характерлă мар. Мĕнле-ха вилĕмсĕр ту тĕнче тусанĕ шутланакан этем ячĕпе хисепленсе тăтăр.

Тухăç çынни çут çанталăкпа çеç мар, пĕтĕм ратнипе, вилнисемпе тата çĕр çине килессисемпе, уйрăлми çыхăнура тăрать. Ку та хăйне евĕр пĕрлĕх. Çак чăмăрăн пĕр пайĕшĕн килĕшӳллĕ япала ыттисемшĕн те юрăхлă. Кашни китай çынни йăх пĕрлĕхĕшĕн, ырлăхĕшĕн пурăнать. Поэзире те çемье пĕрлĕхне идеаллă сăнарсем урлă палăртма йышăннă. Юхан шыв хĕрринчи мăшăр кайăк – пĕр-пĕрне чунтан юратакан, ватăсен йăлисене хисеплекен, ачисен пуласлăхĕшĕн тăрăшакан мăшăр; саранча ушкăнĕ – ача-пăчасен, мăнуксен йышлă хисепĕ; хаклă йышши нефрит чулĕ – илемлĕ, таса, сăпайлă пике...

Авалхи китай поэзийĕн чĕлхи лаконизмлă, анлă пĕлтерĕшлĕ. Кунта ят ылмаш сăмахĕсем çукпа пĕрех. Конкретлă вăхăта тата вырăна палăртман. Пĕр сăмахах нумай тата куçăмлă пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнине кура унпа перекетлĕ, асăрханullă, кашни хушма пĕлтерĕшне шута илсе усă курма тивет. Сăввăн кашни йĕрки уйрăм тумлам пек. Тумламсем пĕр сăвва пуçтарăнса кӳлленчĕк пулса лармаççĕ, шăрçа пек пĕр çыхха тирĕнеççĕ. Шăрçари пĕр тумлам çухални те ăна аркатса яма пултарать. Китай çынни сăмах илемне уйрăмах хисепленĕ. Унăн янăравĕ урлă Аслă Дао сассине илтме пулать тенĕ.

Китай поэзийĕнче пейзаж лирикине эрехе мухтас мотив та пуянлатать. Поэт шучĕпе, эрех çыннăн кăмăлне ирĕке ярать, чăн сăн-сăпатне тавăрса çут çанталăкпа пĕр пулма май парать, Тӳпепе, Çĕрпе танлаштарать. Чылай поэт эрехе мухтани урлă обществăн киревсĕр енĕсене питлет, вĕсемшĕн ӳсĕрĕлнĕ самант çылăхлă тĕнчене пăрахса тусем çине кайнипе танлашать.

Çут çанталăкпа этем пĕрлĕхĕ çинчен монах-сăвăçсем çеç мар, патша çывăхĕнчи сăвăçсем те, тĕрлĕ чинри çынсем те çырнă. Общество пурнăçĕнчи вăрçă-харçă, мур е ытти пăтăрмахсем хуçалансан та поэтсем хăйсем курса-тӳснине çак пĕрлĕх урлă палăртаççĕ.

Чăваш çыннин тĕнчекурăмĕ те, вăл тухăçран килнине кура, китай çыннин тĕнчекурăмĕпе пĕр. Фольклорта çеç мар, паянхи çыруллă литературăра та çут çанталăкпа этем пĕрлĕхĕ çинчен çырасси тĕпре.

## *КУÇАРУСЕМ*

### Юрă

Пăхăр, туссем, çаврăнса
Чаплă пуху çинелле!
Эпĕ куратăп умра
Хамăрăн музăсене.
Хӳхĕм сăмах каласа,
Çепĕç кĕвĕ янратса
Гимн юрлаççĕ вĕсем.
Çутă пуçа – Кĕтӳçе
Аслăласа юр юрлаç,
Ылтăн пуç кăшăлĕсем
Яврĕç вĕсем ун валли.
Куртăм та эпĕ çакна,
Чĕнтĕм савса вĕсене,
Пĕр самантa шăпланма
Эп тархаслатăп сире,
Эй, итлесемĕр мана,
Итлĕр айван сăмахне.
Калĕ чунтан вăл сире,

Унăн сăмахĕ çапла:
Кайĕ Кĕтӳç аякка,
Пирĕншĕн хӳтлĕх кӳрен,
Хунтă пек хаклă этем.
Илтрĕм татах музăсен
Аслă мухтав юррине:
Иккĕленӳсĕр кайма
Ăнăçлăх кӳтĕр сана
Эсĕ çитес тенĕ çĕр.
Сансăр тăрса юласран
Пит кулянатпăр эпир.
Эсĕ манмастăн пире,
Уншăн савăнать пирĕн чун.
Хăв ырлăхне пехилле
Эсĕ пурне те пире!
Ăнăçлă çул çӳреме
Тур пулăшинчĕ тесе
Кĕлĕ тăвăпăр эпир!

*Г.Юмарт куçарнă*

## Китай юрри

Ишрĕ хĕр пĕр каçхине
Акăш пек, пĕве пуçне.
Пиçĕ пĕвĕ калăн ыр пикен.
Тикĕс авăсать кĕсмен.
Ах, ах, тикĕс авăсать кĕсмен.
Чиперкке чечек пекех чечен.
Ах, ах, тикĕс авăсать кĕсмен.

*Г.Юмарт куçарнă*

## Хунсене каятпăр вăрăçăпа

1. Пуçтартăмăр упа сарри сĕм вăрманта,
Хунавланса анчах пыратчĕ ун чухне.
Киле кайма хушиччен пире, тупата,
Çулталăк вĕçленĕ, катса кунсен шутне.
Кил-йыш та çук, çурт-йĕр те çук. Инкек...
Пире килсе тустарчĕ хунсен урти.
Выртма та, ларма та путмар çук халь. Синек...
Пире килсе тустарчĕ Хунсен урти.

2. Пуçтартăмăр упа сарри сĕм вăрманта,
Çемçеччĕ ун чухне, чеченччĕ ун туни.
Киле кайма хушиччен пире, тупата,
Типсе халсăрланĕ чĕремĕрсен ани.
Чунсене кулленех тунсăхлу çунтарать,
Çимелли çитменни ăш-чике кастарать.
Чиксене сыхлассин вĕçĕ çук пуль, аях,
Килтисен хыпарне эп пĕлместĕп пачах.

3. Пуçтартăмăр упа сарри сĕм вăрманта,
Тĕрекленнĕччĕ паркан туни ун чухне.
Киле кайма хушиччен пире, тупата,
Çулталăк çывхарчĕ вун уйăх патне.
Патшашăн çарта сан хастар пулмалла,
Ырсан та, ӳксен те сан сайра канмалла.
Кĕлленсе те çунса эп пăхап инçене,
Вăрçăран çар çынни таврăнаймĕ килне...

*В.Ахун куçарнă*

## Тăлăх юрри

Тем чухлĕ тăмлӳ артемизи, капăр,
Çук, артемизи мар вăл – армути!
Эй, хура-шурă! Аттепе анне!
Хĕнпе, тĕртпе вĕсем мана ӳстерчĕç.

Чӳлмек пушанчĕ –
Лакăмран тултарчĕç.
Пĕччен тертленесси –
Типсе вилни пекех.

Аттем çук – кам çумне кăшт тайăнас.
Аннем çук – кам çумне пуçа тĕкес.
Ăçта кайсан та – ют çĕрте, кичем,
Ăçтан килсен те – килĕм-çуртăм çук.
Атте-анне çуратнă та мана
Ĕçес килсен ĕçтернĕ,
Ачашланă,

Çиес килсен çитернĕ те ăс панă,
Пĕр маншăн çунăхнă ырми-канми.
Халь тав туса сунасчĕ ырлăх-сывлăх –
Куç умĕнче çĕрпе тӳпе кăна.

Çав кантăкри тăва атте тееймĕн.
Çавраçиле, «Аннеçĕм, кил!» – тееймĕн.
Ăçта пăхсан унта – телейлĕ çын.
Кам умĕнче-ши айăпа эп кĕнĕ.

Çав Кăнтăр тăвĕ те пăхма тискер.
Çавраçилтен те шикленсе тăратăп.
Ăçта пăхсан унта – телейлĕ çын.
Ман хуйхăм-суйхăм çеç татти-сыпписĕр.

*В.Энтип куçарнă*

## Шу сунара пуçтарать

Шу сунара пуçтарать,
Тăвата ут тытса кӳлет.
Килхепине явса тытать те
Пичевсене ташлаттарать.
Шу чăтлăха тин çех кĕресчĕ,
Вут-çулăм пĕрхĕнчĕ тӳрех.
Тумне хывса тигра йĕрлетчĕ –
Ав, тытнă та – пире сĕнет.
«Эй, Шу, лăплан!
Асту, амантĕç!»

Шу сунара пуçтарăнать,
Тăвата сар çӳрен кӳлет.
Тĕпкĕчĕсем пуç каçăртаççĕ,
Пичеврисем çилхе ухаççĕ.

Шу чăтлăха тин çеç кĕрсеччĕ -
Вут-çулăм пĕрхĕнчĕ тӳрех.
Шу яланах пит тĕл перет.
Çитменнине вăл лайăх лавçă,
Тилхепине карăнтарать те

Сасартăк ирĕке ярать.
Шу сунара пуҫтарăнать.
Тăвата сар ҫӳрен кӳлет.
Тĕпкĕчĕсем – сăмса ҫумне сăмса,
Пичеврисем – ик вут ҫунат.

Шу чăтлăха тин ҫеҫ кĕрсеччĕ,
Вут-ҫулăм пĕрхĕнчĕ тӳрех.
Ак учĕсем юртма пуҫласҫĕ,
Ак сăнă сайрарах вĕҫет,
Ак йĕннин виткĕҫĕ те уҫă,
Ҫĕкленнĕ ухă хупăлчи…

*В.Энтип куҫарнă*

## ДУ ФУ

### **Ылтăн ҫамрăксене**

Ҫĕр ҫыннин хытанка
Аллисем тытакан
Кивĕ тăм кăкшăмран,
Эй, ан кулăр нихҫан!

Ачасем, мăнуксем
Ӳссе ҫитĕнчĕҫ ман –
Кулленхи пурнăҫра
Пулăшать вăл ялан.

Сирĕн савăт-сапа
Ҫуталать кĕмĕлпе, –
Йăпăлтатĕ хăна,
Мухтаса ун чапне.

Пурпĕр пурте эпир
Ӳсĕрлетпĕр пĕр пек,
Йăванатпăр пĕрлех
Ҫĕрлехи ҫĕр ҫине.

Вĕлтĕрти чĕкеçсем,
Йăвине пăрахса,
Тӳпери çӳлĕпе
Кайрĕç ăшă енне.

Кун çитсен, чечексем те
Лараççĕ хăрса –
Çеçкипе илĕртме
Çути çук малашне.

Шухă шухăшлă та
Сарă тумлă яшсем,
Килсе курăр кунта
Çут çанталăк сăнне,

Ăнланайăр, – çитеймĕç
Эпир кĕтнисем.
Курăр чăрсăр шывсем
Шавласа юхнине.

*Г.Юмарт куçарнă*

## Пăлан

Юхан шыв хĕррине
Эс анаймăн нихçан –

Ăшаланă сана,
Лартнă ĕнтĕ çимешкĕн.

Хӳтлĕхе пытанма
Ĕлкĕрмерĕн пулсан,

Кирлĕ мар халĕ тин
Ӳкĕнмешкĕн-йĕмешкĕн.

Ĕлĕкрен-авалтан
Шелсĕр, хăтсăр тĕнче,

Илеме паян кун
Инкекре тертлентерĕç.

Çавăнпа уявра
Улпутсен умĕнче
Сĕтеле тĕс кӳрен,
Вакласа хунăскерĕм.

*Г.Юмарт куçарнă*

## Попугай

Пурнăçне асилсе,
Попугай кулянать,
Мĕн пулни-иртнине
Астăвать пĕтĕмпе;
Капăр тĕкĕ кĕскелчĕ,
Çунат усăнать;
Уссине курма çук
Калаçма пĕлнипе.

Алăка уçасса
Пурпĕрех вăл кĕтет.
Юратсан та, ăна
Çын тытать читлĕхре.
Пĕр-пĕчченçĕ турат
Вăрманта ĕнтĕркет.
Попугайăн илемĕ
Типет пӳлĕмре.

*Г.Юмарт куçарнă*

## Кăнтăрлахи тĕлĕк

Тунсăхлатăп та
Тăван кĕтесшĕн
Ыйхă çеç хуплать
Ман чунăма...

Çывăрмашкăн
Çĕр те вăрăм теесшĕн,
Çук, çут кун та
Путăп ыйăха.

Персик çеçкере,
Çанталăк пăчă –
Шывланаççĕ ватă
Куçăмсем.

Çĕр çинче
Ăрша пушар пек тăчĕ –
Ыйхăра
Канаççĕ шухăшсем.

Тĕлĕк куртăм,
Пурнăç урăхланнă,
Çук сукмак
Ниçтан та кил енне.

Тигр, шакалсем
Килсе капланнă,
Тапăнаççĕ
Чжунюань çине.

Шарт сиксе
Тăратăп та калатăп:
Эх, кăçал чарасчĕ
Вăрçине.

Ырса çитнĕ халăх
Хăвалатăр
Хăй юнне ĕмен
Улпутсене.

*Ал. Аслут куçарнă*

## Кăнтăрлахи тĕлĕк

Тăван енне тунсăхласа çитсессĕн,
Путатăп тутлă-тутлă тĕлĕке.
Асран кайми сăнарсене чĕртсессĕн,
Çӳреп тĕлĕнсе те, тĕлĕрсе.
Çеçке шăрши-ши, шăрăх-ши, пĕлеймĕн,
Вăйран ярать те ӳсĕртет куça.

Хӗвел ҫиҫет ҫӗр ҫийӗн пит илемлӗн –
Чӑмап те манӑҫа, те канӑҫа.
Тӗлӗкӗмре йӑлт улшӑннӑ пек пурнӑҫ,
Пӗр тӳр сукмакӗ ҫук ун ман валли.
Хуралҫӑсем – шакал та тигр – урнӑ,
Умра, хыҫра тискер ӗҫсен палли.
Куҫа уҫап – умра тӑшман ӗречӗ.
Вӗҫлесчӗ ҫак вӑрҫа ӗмӗрлӗхе.
Хӗсметҫӗ-хыркӑн таврашне хиреҫҫӗ,
Имретнӗ халӑх мантӑр эрлӗке.

*В.Энтип куҫарнӑ*

## Ҫапӑ пухакан хӗрсем

Ҫӑтмах мар хӗрсемшӗн
Ҫак Куйчжоу.

Ҫӳҫӗсем те ҫамрӑклах
Шуралаҫҫӗ.

Кил те ҫук, ҫук мӑшӑр та –
Хӑть шырӑр –

Хӗрӗхре
Ултав кӑна кураҫҫӗ.

Вӑрҫӑ-харҫӑ
Ахӑр саманамӑр.

Авланма та яш каччӑсен
Кун ҫук та.

Телее, хӗрсем,
Ан ӑмсансамӑр,

Сирӗн халь
Кӑштах пуласчӗ тутӑ.

Вырӑнти йӑли
Киревсӗр мар-и –

Арҫынсемшӗн
Ӗҫ ытла та ютӑ,

Пӗтӗмпех тӳсет
Пӗр мӗскӗн арӑм,

Пур ӗҫе те
Шарламасӑр тутӑр.

Арӑмсем
Кӑвак ҫутпах тӑраҫҫӗ,

Ҫӳллӗ вӑрманпа та
Сӑрт-тупа та

Хӑрӑк ҫапӑ
Хӑвӑрт пуҫтараҫҫӗ –

Пасарта сутса
Укҫа тупатӑн.

Мӑшӑр ҫивӗт
Хуйхӑпа хупланнӑ,

Курпунланнӑ
Хул пуҫҫи ҫинче.

Пир чечек –
Пӗрех хитрелӗх памӗ,

Ҫук илем
Йӗпеннӗ куҫсенче.

Выҫлӑх
Ӗҫлеме хистет ҫав вӗҫсӗр –

Çулĕпех нуша
Таптанă йывăр.

Кăлармa тăвăр
Кайса халь кĕр,

Пĕр тӳллев –
Хăть чĕптĕм те ан çывăр.

Чуллă çĕр çинче
Ĕçчен те чухăн.

Килсенче шав выçă,
Сивĕ те.

Çавăнпа куççуль тăкса
Эс хухăн,

Куççуль çеç çутатĕ
Сăн-питне.

Ĕненсемĕр,
Пирĕн таврара

Çуралать ача
Чăн пукане пек.

Чжау-цзюнь те,
Илтнĕ хăвăрах,

Илнĕ илемне
Кунта пĕлетпĕр.

*Ал. Аслут куçарнă*

ЛИ БО

## Сăрт тъпинчи храмра

Сăрт тӳпинчи храмра пĕччен эп çĕр каçасшăн.
Чи çӳллĕ çăлтăра кăшт сĕртĕнсе иртеп.

Пăшăлтатма хăрап: тирпейсĕр калаçсассăн,
Тӳперисен ыйхи ан кансĕрлентĕр теп.

*В.Энтип куçарнă*

## Ду Фуна шӳтлесе парнелетĕп

Ту çинчи чăрăшсен хӳттинче уçăлаттăм,
Ăнсăтран-ши тĕл пултăм Ду Фу тусăма.
Каласам, мĕншĕн эсĕ çав тери начарлантăн –
Хĕн-им çаврăм çумне çаврăм сăвă хывма.

*В.Энтип куçарнă*

## Çĕрле туспа пĕрле

Кив тунсăха çĕн тунсăх çĕнчĕ-çке.
Ăш çуннине сӳнтермĕ çĕр черкке.
Каçа кура тăванлă калаçу.
Чăп тулнă уйăх – хупăннă куçу.
Халтан кайнишĕн кăмăл еккипе
Çĕр – ăшă вырăн, виткĕç – çут тӳпе.

*В.Энтип куçарнă*

## Йăпанатăп

Черкке алрипелен эп ас туман та
Каçĕ пур енчен çывхарнине.
Эрешленĕ ман çи-пуçăм янтă:
Чечекĕ-çке ӳкнĕ ман çине.
Эп, ӳсĕрскер, утатăп уйăх тăрăх:
Танккаса пырап шыв хĕррипе;
Кайăксем сас тумаççĕ урăх,
Халăх та мĕн тӳннĕ ерипе.

*И.Ивник куçарнă*

## Тăрна куçĕ пек тăрă шывра

Тăрна куçĕ пек тăрă шывра
Çутă уйăх тӳлеккĕн çыврать.
Тăрна куçĕ пек шыв хĕрринче
Чечексем эп суйларăм пĕччен.
Лотăсăм, савнă çеçкем,

Таталмастăн, йĕместĕн пуль-çке.
Эп курап та пĕччен кимме,
Тарăн хуйхă хĕсет чĕреме.

*И.Ивник куçарнă*

ЛУ Ю

**Ăнсăртран çыртăм хутăм пĕве хĕрринче**

Лартăм сулхăнта ним шутламасăр,
ямша шăхличе чилеттерсе.
Иртрĕç çулăмсем вуншар-вуншарăн
кивĕ ĕмĕте тĕллентерсе.
Тарăн юхăмра çӳрет ват йывăç –
кам аса илсе шеллет ăна.
Çил хуса кайсан çулне чухлаймĕ
типнĕ армути, хура туна.
Çын телей шырать вăл ĕмĕр-ĕмĕр –
пурнăçăн йăли-йĕрки çапла.
Ĕлĕк илĕртни ялан йăпатмĕ –
мĕншĕн хурланса пуç усмалла.

*В. Энтип куçарнă*

**Уйăх çутинче**

Уйăх тулли; картиш пушах;
йывăç мĕлки юпаллă.
Тĕксĕм тĕмре – темле сас-чӳ:
сакăлтисем ĕнтĕ, паллă.
Ватă, айван, ача ăсне
тин ăнкарсан хастаррăн –
Çутă хуртсем тытас тесе
сывлăм шăрçи пуçтартăм.

*В. Энтип куçарнă*

БО-ЦЗЮЙ-И

**Уездра**

Пĕтĕмпех килме пăрахрĕç
Хыпарсем тăван килтен.
Ах, ытла та пит вăрах-çке

Кунта çулăм ман иртет.
Инçетре-ши, тетĕп, почта,
Кĕл тăватăп шав, килех,
Пахчара çеç питĕ вăрттăн
Чечекне тăкать пилеш.

*И.Ивник куçарнă*

### Кĕркунне çумăр çунă чух

Сенкер мăк хушшинчи йăм хĕрлĕ çулçă
Куçăма манне йăлăхтаракан пулчĕ.
Çитменнине сив çиллĕ çумăрсем
Кашни каçах çăваççĕ такамшăн тилмĕрсе.
Çавăнпа та, савнă тусăм, ан тĕлĕн.
Тĕрĕснех калас пулсан, эп ватă-çке санран, –
Шуралма пуçларĕ ĕнтĕ хура çӳçĕм ман.

*И.Ивник куçарнă*

### Çĕрлехи юр

Ыйтас пулсассăн кам та кам:
Ма сивĕ-ха тӳшек-минтер. –
Эп калăп: кур ав кантăка
Шуратнă çамрăк хĕл мĕн тер.
Çĕрле, эп çыврăнă, курман,
Юр çуса лартнă, – тухма çук.
Илтетĕп ак халь хушăран, –
Ун айĕнче çурлать бамбук.

*И.Ивник куçарнă*

### Юрăç лютни

Пит-куçĕ – роза, çӳçĕ-пуçĕ – пĕлĕт,
Вăл Ямша башнинче çӳлте ларать.
Вун çичĕ хĕлĕхлĕ, йĕркеллĕн, меллĕн
Ват çыннăн кăкăрне çурса яраç.
Систер, тăванăм, кала, хĕрхентĕр, –
Ан кĕттĕр вăл кĕвви вĕçленессе.
Ахаль те-çке юр пек шап-шурă ĕнтĕ
Цзян-Чжоури çак ваттăн çӳçĕсем.

*И.Ивник куçарнă*

## Пĕве варринчи çĕрлехи кимĕ

Вĕрĕшник çине çĕрле
Улăхнă вăл пĕр пĕччен...
Пас вĕçет çилпе пĕрле,
Каç тăрать пĕрех кичем.
Çӳллĕ хăмăш хушшинче
Кимĕ пур мĕн тахшисен:
Çывăхра шыв хĕрринче,
Йăлкăшать кăвайт хуллен.

*И.Ивник куçарнă*

## Тусăмпа канашлатăп

Орхидея лартасчĕ чечек пахчине,
Армути шăтнă тухнă хăех ун çумне.
Тĕрĕслерĕм: тымарĕ вĕсен пĕр тĕмре.
Калчисем папкаланчĕç пĕрле пит хитре.
Питĕ хăвăрт ӳсет ыр шăршли те йӳççи.
Çурăлса ешĕлленчĕ кашнийĕн çулçи.
Йӳççине çăлмаллачĕ – хăратăп тĕкме:
Амантма та пултарăн юратнă тĕме.
Шăварсаччĕ ăна лĕп шывпа сĕм çĕрле –
Армути туртĕ илĕ нӳрре сĕмсĕрле.
Орхидея шансассăн, йăшать армути.
Сарăлать ырă шăршă, çумкурăк тути.
Юратап-и, шелеп-и – пĕлмес ним тума.
Тусăмпа канашлатăп, чĕнсе пулăшма.

*В. Энтип куçарнă*

## Сивĕ çимĕç касĕ

Уйăх çутатмасть, çук вут çути –
Сивĕ çимĕç касĕ темшĕн сулхăн.
Çур çĕр те иртет – тĕм хӳттине,
Тĕксĕм чечексен хыçне, тăратăп,
Çĕнĕ кун çывхарнă чух çиçсе
Хамăн çулсенчен хăра пуçлатăп.
Чăн та, шăп çур ĕмĕре çитме
Пĕр çул çех, хăрах çул çех-çке юлнă.

*В. Энтип куçарнă*

## ВАН ВЕЙ

### Хуацыган сăрчĕсем

Кайăксем ăсанчĕç хурлануллăн,
Сисрĕç пулĕ сив хĕл çывăхне.
Сăртсенче кăна çĕкленĕ çулăм
Тараватлă ылтăн кĕркунне.
Илĕртеç пулин те вăхăт-вăхăт
Сан сăртусем, Хуацыган, –
Савнăçăм ăшра сӳнет ман хăвăрт,
Йăвăр хуйхă çеç сӳнмест нихçан.

*И.Ивник куçарнă*

### Бамбук ращинчи улах вырăн

Ман ращам ыйха йăлт путнă
Эп ларатăп пĕр пĕччен.
Хушăран çеç ырă лютня
Янăрать ман пит чечен.
Эп кунта сĕм шăплăх витĕр
Киленеп çут уйăхпа,
Ун çинчен пĕлмест пĕри те,
Ни кунта, ни хулара.

*И.Ивник куçарнă*

## ЦАО ДЖИ

### Ахлату ăине ахлату

Шăпин çулне курап та, тупата,
Шеллетĕп тĕлсĕр утмăл турата.

Пач татăлса çĕрти тымарĕнчен
Кусса çӳремелле ун хăçанччен.

Хыçне хăварнă тăхăр йăрана,
Çич çул хĕрри те чарайман ăна.

Çитет те çавра çил кĕтмен çĕртен
Лăскать хуралнă мĕскĕне темччен.

Varkăштарса кăра тăвăлĕпе,
Вĕçен-çӳрен тăвать унран тӳпе.

Вăр-вар ваййи йăлăхтарса çитсен,
Вăл пăрахать çунатсăра çӳлтен.

Эпĕ те çапла çуралнă кăнтăрта –
Хĕвет сив çурçĕр юрĕ кил-çурта.

Тус тухăçра – анăçалла тĕнккеп,
Тымарсăр утмăл туратах, тен, эп.

Пĕччен ӳке-ӳке, тăра-тăра –
Таптатăп пилĕк сăрт чулне, анра.

Тăван кил тĕтĕмне куç хупиччен
Курас пек сакăр кӳлĕ хыçĕнчен.

Пуласчĕ курăк хамăрăн хитре –
Ан тив, кĕл тутăр вут, лексен вирте.

Эй, тем те тӳсĕп, чĕрĕлĕп кĕлтен,
Çĕрти тымар çĕрменнине пĕлсен.

*В. Энтип куçарнă*

***

Тĕпе хапхи ак янкăр уçă
Çăп-çăмăл тумăм кайăк тĕкĕнчен;
Вĕре çĕлен утланнă юланутçă,
Вĕçеп туссем патне сăрт тĕпинчен.
Вилĕмсĕрленнисем юравсăр юлмĕç,
Пухасчĕ сиплĕх курăкĕ – линчжи;
Эмел ĕçсе пăхма хушсаччĕ юмăç,
Тен, ĕмĕр-ĕмĕр пурăнаймăп-ши?

*В. Энтип куçарнă*

## МЭН ХАО-ЖАНЕ

### **Çӳçе çӳçисем**

Курсам, сивĕрех çупăрлаççĕ шыва
Çӳçе çӳçисем, сывлăмпа çуталсан.
Юр евĕр тасалăх шуратнă хăва
Хитрен тайăлать унталла çил тухсан.

Салху чиперкке кантăкран туртăнса
Сăнать тĕмсĕнӳллĕн каçхи çулсене.
Татать те çӳçенкĕ çӳçе çӳçине
Шыва вĕçтерет, вăрттăн шухăш тытса.

*В. Энтип куçарнă*

### **Хура курак**

Хура курак кранклатрĕ сĕм çĕрле –
Турат хӳтти чармасть пуль сив çиле.

Тăвать-ха тăлăх арăм хăй ĕçне –
Тĕртет вăл пурçăн, тĕттĕм тĕслине.

Хаш! хашлатса пăхать тĕттĕмелле:
Татах ирччен пĕччен тертленмелле.

*В. Энтип куçарнă*

## СУ ШИ

***

Çак енне килсе çитрĕм кăна –
Çил вĕркешрĕ те çумăр тумларĕ.
Мĕскĕн кĕлĕм пек çул çӳревçĕ
Тупĕ-ши кил пекки тĕнчере.
Тӳпери кăпăшка пĕлĕтрен
Шурă çĕлĕк туса тăхăнасчĕ,
Юпăнчă выранне пĕркенесчĕ,
Çул вĕçне йăванса, тип çĕрпе.

*В. Энтип куçарнă*

### Чӳрече умӗнче

Тухҫăри кӳршӗсен садӗнче
Шурă тирӗк ӗшни тӗлкӗшет.
Ҫумăр ҫитрӗ ҫӗрле – тӗттӗмре
Ҫулҫă шавӗ ӳсет те ӳсет.
Ыйăх ҫук – чӳрече умӗнче
Ҫунӗхатăп, анчах пӗччен мар,
Хăй ҫути умӗнче хӗвӗшет
Ҫӗрлехи хурт-кăпшанкă йăр-яр.

*В. Энтип куҫарнă*

### Мӗлке

Ӳсет сийӗн-сийӗн, шăвать капланса
Мӗлке Яшма храмӗ енне.
Хушсаччӗ тарҫа пӗрре мар, темиҫе
Шăлма шăпăрпа ун сӗмне.
Хӗвел тӗнчине ҫутатса вӗҫнӗ май
Пухса вăркăтать ҫав сӗме.
Кун иртӗ кăна – уйăх умӗн татах
Вăл таврăнӗ шиклӗх кӳме.

*В. Энтип куҫарнă*

## ЛИ ЦИНЬ-ЖАО

### Хризантема

Си-си ӳссе хăпарнă ҫулҫăсем,
Вӗсен ҫӳҫийӗ, калăн, ямшăран.
Вӗсен пин-пин ҫеҫки умра ялтăрать
Шăратнă ылтăн пек хитрен-хитрен...
Эй, хризантема, эй, кӗрхи чечек,
Хăв евӗрскер, эс тăнлă курăнан,
Хастарлă арăн ҫивӗч кăмăлне
Асилтерен.
Ларин халь мэйхуа та чечекре,
Ҫапах та унăн тумӗ чухăнрах.
Хуплатăр-и ҫеҫки те сирене –
Унран та эсӗ ӗлккенрех тăран...

Эс ним те хĕрхенместĕн-çке мана –
Ыр шăршуна кӳретĕн ытлăнах,
Инçе çĕрти çынна асăнтарса,
Хурлантаран.

*Г.Юмарт куçарнă*

***

Шаннă лотос чуна савăнтармĕ,
Эп унра кĕр сăнне асăрхатăп.
Шухăша путнă май салтăнатăп,
Ким çинче пĕр-пĕччен çĕр каçатăп.

Çӳл хӳме тăрринче çутă уйăх,
Шурă пĕлĕт шăвать хушшăн-хушшăн.
Те çыру пăрахасшăн хуркайăк –
Кăшкăрашрĕ çĕрле те пĕр ушкăн.

Туратсем чечекне сапалаççĕ,
Вĕсене хум инçе хăваларĕ.
Уйрăлса пурăнма тӳр килсен те,
Шухăшра пĕр пулма кам-ха чарĕ.

Тунсăх-юншăх манран пĕр самант та
Сирĕлме-сĕврĕлме пикенмерĕ.
Куç харшийĕм çинчен хăваларăм –
Сăннипе чĕререн вăл чикейрĕ.

*Г.Юмарт куçарнă*

## МАО ЦЗЕ-ДУН

### Сарă аист пашни

Сарлака Китай çĕрĕ Янцы шывĕпе çăвăнать.
Пĕрлештерчĕ çав шыв çурçĕрпе кăнтăра.
Çумăр витĕр ем-ешĕл вăрман пит хитрен курăнать.
Çĕлен ту тата Тимĕр шапа Янцые сых тытать.
Сарă аист пиртен вĕçсе кайрĕ таçта аякка
Пашни çеç халь ăна асăнтарĕ пире.
Тултаратăп курка, эрехне çырмана эп тăкап.
Çĕнĕ туйăм хум пек çĕкленет чĕрере.

*П.Хусанкай куçарнă*

## Дабоди

Хĕрлĕ, сарă, сип-симĕс,
Кăн-кăвак тата хура кăшт...
Кам ташлать-ши çӳлте,
Чăпар пурçăн тытса.
Çумăр хыççăн ялтрать
Кĕç хĕвелĕ, кур акă,
Сăрт-тусен тăррисем
Инçетре тап-таса...
Çак çĕрте ĕлĕкрех
Вăрçнă, çапăçнă пулнă,
Чул хӳме çумĕнче –
Етресен йĕрĕсем.
Халь пăхсам таврана:
Ялтăркка чăпар тумлă
Çеçкеленнĕ сăрт-ту.
Хӳхĕм-çке çĕрĕсем!

*П.Хусанкай куçарнă*

## Бэйдайхэ

Çумăр пĕр вĕççĕр ташлать Юань çийĕн,
Шур пĕлĕте çитиех хушка хумĕ.

Тинĕс çинче – Циньвандо хулийĕн
Çывăхĕнче кăпăкра ишет кимĕ.

Пулăç кимми, кĕрешетĕн патваррăн,
Хăш çырана сана тинĕс кăларĕ.

Темĕн пулнă авал, тем те пулнă!..
Çак Цзешиань ту патне У-ди çарĕ,

Мал еннеле васкаса килсе тухнă, –
Çав саманта ун сăвви ăнлантарĕ.

Çил, кĕрхи çил. Авалхи пек улать-ха.
Анчах пĕтĕмпех тĕнчере урăхла халь!

*П. Хусанкай куçарнă*

# Чăваш поэзийĕнчи Китай литературин мотивĕсем

## ПЕТĔР ЯККУСЕН

### Çыру

Кĕркунне çыру çырса хăварнă
Ман валли çăка çулçи çине.
Тăрăшса ăна вăл çыпăçтарнă
Чӳрече çине, урам енне.

Вăхăтра курмарăм çав, мăнтарăн,
Чӳречем те халĕ йĕп-йĕпе.
Илтĕм çырăвне те – вулаймарăм, –
Тĕсĕ кайнă сивĕ йĕпхӳре.

Хĕл ларассине хамах пĕлетĕп,
Çырнăччĕ пуль темĕн кирлине.
Ăнланса илмесĕрех иртетĕн,
Ăнланасчĕ тенĕ кĕркунне.

### Хак

Çак вăхăта кĕтетĕп –
Ырă самантăм пур:
Янкăр кăвак тӳпе те
Кĕмĕл çиттиллĕ юр.

Уй варрине тухатăп
Çутă курма çеç мар,
Уй çутинче куратăп
Эп витĕрех хама.

Çут тĕнчери тасалăх
Çак самантра кунта.
Çук-и манра суялăх,
Çук-и манраултав.

Уй çутипе тĕрĕслентĕм,
Хак параканăм пур:
Янкăр кăвак тӳпе те
Кĕмĕл çутиллĕ юр.

**Мĕскер сассипе?**

Çулла тăван килĕм – веранда
Е хӳшĕ пекскер – утăран,
Автан сассипе эп вăрантăм
Паян та кăвак çутăллах.

Нумай эп тăнларăм. Ăнлантăм
Кашни йывăç-курăка,
Чĕр-чун тĕнчипе хаваслантăм,
Ыр сунтăм кашни курăка.

Кĕрет хăлхана кассăн-кассăн
Чечек çурăлан ырă сас.
Çынсен тĕнчине ăнланмашкăн
Мĕскер сассипе вăранас.

***

Мĕн кăмăлпа, мĕн хаваспа,
Мĕн çăмăлпа эс килтĕн, туйăм.
Уттартăн тĕрлĕ сукмакпа,
Умра выртать халь аслă уйăм.

Уй талккăшпех чĕлтĕртетет –
Сар уйăхăн сап-сар тусанĕ,
Уй варринче мана кĕтет
Асаттесен лаштра юманĕ.

Пин çул тасалăхĕ умра,
Сăмах чĕнме те хăяймастăн.
Каçхи уйра, таса уйра
Эс хăвна ху та суяймастăн.

***

Хĕвел ăшши. Тусем хуралнă.
Хавшаççĕ лапчăнса кĕртсем.
Ай, çĕнĕ папкасем çуралнă!
Салам, эппин, пĕчĕкскерсем.

Эсир кунта епле пурнатăр
Тесе тĕпчессĕр килнĕ пек,
Ачашшăн куçăмран пăхатăр
Çут тĕнчерен тĕлĕннипе.

Епле пурнатăр. Ним чĕнменшĕн
Ӳпкев ан тăвăр тĕлĕнсе.
Хĕвел çуттин хакне пĕлмешкĕн
Эп вĕренетĕп сирĕнтен.

***

Ман тертĕме, тен, курчĕç турăсем.
Кун-çулăма хурла-хурла ылханмăп:
Китай пейзажĕ евĕр туратсем
Ман чӳрече умне ярапаланнă.

Кашни çулçи – пĕрле те уйрăм пек.
Çав çыхăну манра та пур, туятăп:
Çӳл ту çинчи китай ăсчахĕ пек,
Килĕшĕве халь хам ăшра шыратăп.

Тинех тĕнче ларать пек хăй картне,
Пурин валли те тупăнать пек вырăн...
Пĕртен-пĕр майсăр-мелсĕр, ахăртнех,
Унта выртать эп утнă утма çулăм.

Тăхта-ха. Чим-ха. Вăл та – кирлĕскер:
Пĕртен-пĕр юравли çав пулчĕ маншăн...
Чӳречемре – йăмра усăннăскер.
Йăваш та лăпкă чăвашри пейзажăм.

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Китай литературинчи классикăлла сăвăçсен пултарулăхĕпе паллашăр. Вĕсен лирикинчи çут çанталăк, самана сăнарĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен каласа кăтартăр.*

*– Конфуций, Дао вĕрентĕвĕ çинчен эсир мĕн пĕлетĕр.*

*– Китай тата авалхи тĕрĕксен хутшăнăвĕсем çинчен Н.Я. Бичурин, Л.Н. Гумилев тĕпчевçĕсем мĕн çыраççĕ.*

*– П. Яккусен сăввисене тишкерĕр, хак парăр.*

*– Китай поэзине куçарасси чăваш литературинче еплерех пулса пынине сăнаса тухăр.*

*– Китай поэзине тăтăшах куçаракан авторсен пултарулăхĕнче тухăç литературин традицийĕсем палăраççĕ-и.*

*– А. Юрату çырнă прозăлла сăвăсене тишкерĕр. Вĕсенче китай философийĕ палăрать-и, тухăç литературин мотивĕсем пур-и.*

### *Усă курмалли литература*


1. Догданов, Г.Б. Чань-буддизм в творчестве Ван-Вея / Г.Б. Догданов. – Новосибирск: Наука. Сиб. отд-ие,1984. – 135 с.

2. Конрад, Н.И. Запад и Восток / Н.И. Конрад. – М.: Наука, 1972. – 496 с.

3. «Дао дэ цзин», «Лунь юй» // Древнекитайская философия. Собрание текстов: в 2 т. Т.1. – М.: Мысль, 1972. – С.114-138, 139-174.

4. Григорьева, Т.П. Дао и логос (встреча культур) /Т.П. Григорьева. – М.: Наука. Главная редакция вост. лит., 1992. – 424 с.

5. Лисевич, И. О том, что остается за строкой // Китайская пейзажная лирика. / Под. ред. В. И. Семенова. – М.: Изд-во Моск. ун-та, 1984. – 320 с.

# Китай поэзийĕнчи çул йывăрлăхĕ мотив

Мăн кĕрӳ такмакĕ чăваш фольклорĕнчи чи авалхи жанр шутланать. Ăна усă курасси тĕрĕк халăхĕсен туй йăли вăхăтĕнче эпикăлла хайлава юрласа кăтартас традицине тӳр килет. Мăн кĕрӳ такмакĕ халăхăн историне, тĕнче курăмне, ĕненĕвĕсене сăнарлă кăтартса парать. Унăн тытăмĕпе композицийĕ тĕрĕксен паттăрлăх эпосне çывăх пулнине те палăртма пулать. Такмакра калуçă хăйсем килнĕ çул йывăрлăхне сăнлать, каччă-кĕрӳне мухтать, хĕр пурнакан пӳрте кĕме ирĕк ыйтса илет.

Каччă-кĕрӳ пĕлтерĕшне ӳстерсе кăтартма такмакçă вăл çул çинче пурнăçланă паттăрла ĕçĕсене каласа тухать. Калура йывăрлăхсем çинчен пысăклатса, паттăрăн вăй-хăватне, хăюлăхне, тавçăрулăхне ӳстерсе каланине курма пулать. Такмакра çул йăвăрлăхĕсене çут çанталăк пулăмĕсем пĕлтереççĕ: тарăн юр, тĕттĕм вăрман витĕр тухни, çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă каçни. Каччă туйĕ чи маттур, вăйлă, паттăр çынсенчен тăрать, çавăнпа та вĕсем çак йывăрлăхсене çĕнтерме пултараççĕ. 12, 60, 70, 77 тата ытти сакраллă хисепсене усă курни те йывăрлăхсен пĕлтерĕшне ӳстерме пулăшать.

Паттăр вăй-хăватне çул йывăрлăхĕсене çĕнтерни урлă кăтартасси авалхи тĕрĕк литературинче те йăлара пулнă:

*«...Когда Кюль Тегину было 26 лет, мы предприняли поход на киргизов. Проложив дорогу через снег глубиною в копье и поднявшись на Кегмэнскую чернь, мы разбили киргизский народ; с их каганом мы сразились в черни Сунга. Кюль Тегин сел на белого жеребца из Байырку, бросился в атаку, одного воина он поразил стрелою, двух мужей заколол копьем. При этой атаке он погубил белого жеребца из Байырки, сломал ему бедро...»* [Малов. 1951, С. 41].

*«...Вернувшись с целью устроить согдийский народ, мы переправилисиь через реку Йенгу, прошли с войском вплоть до Темир-капыга. После этого масса тургешского народа пошла на ставших ей врагами кенгерсов. Кони нашего войска были тощи, провианта для них не было; плохие люди, мужественные люди на нас напали... Кюль Тегин дал сражение. Сев на белого коня героя Шалчы, он произвел атаку. Убил*

*многих из народной массы тюргешей и покорил оставших-ся...»* [Малов. 1951, С. 44].

Илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсенче тӗрӗк паттӑрӗсен вӑй-хӑватне мухтаса калама тарӑн юр, тарӑн юхан шыв йышши йывӑрлӑхсене усӑ курнӑ. Ҫапӑҫӑва кӗрсен лаша вилни ҫинчен калани те ҫак пӗлтерӗшех пурнӑҫлать. Кюль Тегин вӑйлӑ, харсӑр, ҫавӑнпа вилмест, нимле йывӑрлӑха пӑхмасӑрах малалла талпӑнать, тӑшмана ҫӗнтерет. Унӑн вилӗмӗ Шӑпаран ҫеҫ килме пултарать.

А. Бомбачи тӗрӗк литературин палӑкӗсене тӗпченӗ май авалхи фольклор жанрӗсене тупса палӑртать, вӗсене хак парать. Ун шучӗпе, халӑх сӑмахлӑхӗ ҫеҫ мар буддизм тексчӗсем те тӗрӗк литературин аталанӑвне витӗм кӳнӗ. Китай тата тӗрӗк паттӑрлӑх юррисенчи тӗп сӑнара сӑнлас традицисем пӗр евӗр пулнине палӑртса хӑварать вӑл. Ҫак шухӑша тутарсен Р.К. Ганиева тӗпчевҫи малалла аталантарать. Ун шучӗпе те «китайские стихи, воспевавшие боевые походы, верность воинскому долгу, во многом напоминают героический пафос, стиль и энергичные ритмы орхоно-енисейских памятников V-VIII вв. Торжественный и украшенный характер больших надписей был подсказан существованием китайских образцов этого жанра» [Ганиева. 1992. С. 184]

Тӗрӗкпе китай халӑхӗ кӳршӗллӗ пулнӑ, пӗр-пӗринпе вӑрҫса пурӑннӑ. Иккӗшин те ҫар ӗҫӗ, ҫапӑҫу тактики ҫӳллӗ шайра шутланнӑ. Ҫавӑнпа та икӗ халӑхӑн та ҫар ӗҫне мухтаса калакан поэзи аталаннӑ тесе калама пулать. Ку тапхӑрти сӑмахлӑхра ҫут ҫанталӑк параллелизмӗ тӗп илемлӗх мелӗсенчен пӗри пулнӑ. Унӑн традицийӗсене паттӑрлӑх сӑмахлӑхӗнче те усӑ курма пултарнӑ.

Сӑнар характерне ҫул йывӑрлӑхӗ урлӑ палӑртасси хальхи китай поэзийӗнче те пур. 1958 ҫулта П. Хусанкай куҫарнӑ Мао Цзе-Дунӑн 18 сӑвви хушшинче ҫак мотивпа ҫырнӑ сӑвӑсем пуррине асӑнмалла.

## *КУÇАРУСЕМ*

МАО ЦЗЕ-ДУН

### Аслă вăрçă çулĕпе

Хĕрлĕ çаршăн пулсан хăруш мар вăрçă çулĕ.
Пирĕнпе юхан шыв, пăрлă ту – тем те пулĕ...
Пилĕк тăрă – лутра хум кăна вăл умра.
Умын тăвĕ урлах каçаратпăр çара,
Цзиньша шывĕ ăна ўкереймĕ çапса,
Даду шывĕн кĕперĕ яраймĕ шăнтса.
Шурă юрлă Миньшань тăвĕсем – хыçалта,
Савăнăç çутатать пирĕн сăн-сăпатра.

*П.Хусанкай куçарнă*

### Мçн кўрў такмакĕ

*(сыпăк)*

Эпир килес çул çинче
Туйра вăрман пит нумай,
Тĕнел пуçĕсем çакланчĕç.
Эпир килес çул çине
Вун икĕ аршăн юр çунă.
Вун икĕ аршăн юра ишме
Çил çунатлă ут кирлĕ.
Çил çунатлă ут тытма
Кайăк чĕреллĕ çын кирлĕ.
Кайăк чĕреллĕ çын пăхма
Чĕкеç чĕреллĕ хĕр кирлĕ.
Чĕкеç чĕреллĕ хĕр шыраса
Тăват кĕтеслĕ çут çанталăка
Тăват çул хушши тăватшар хут
Çаврăннă пирĕн ача.
Юлашкинчен çакăнта
Çаврăнса çитнĕ çав ача...
... Сĕм вăрман витĕр тухнă чух
Утмăлултă упа ури куртăмăр,
Çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă каçнă чух
Хĕрĕх пĕр хĕрхĕ чĕрни те ай куртăмăр.
Çеçенхирте пăлан йĕрĕ,

Вăрман хĕрринче кашкăр йĕрĕ,
Аслă урамра хĕр йĕрĕ,
Çавсен йĕрпе килтĕмĕр...
...Калама çук чаплă кĕпер хыврăмăр,
Икĕ вĕçне икĕ тĕнче турăмăр,
Тăршшĕне тăхăрвунă юпа çапрăмăр,
Сарлакăшне сакăрвунă хăма сартăмăр.
Юпасене тимĕртен тутартăмăр,
Карлăксене кĕмĕлтен кустартăмăр,
Хăмисене ылтăнтан сартартăмăр...

## *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Авалхи тĕрĕк литературин палăкĕсем çинче паттăра сăнлас традицисем еплерех пулнине тупса палăртăр.*

*– Чăвашсен мăн кĕрӳ такмакĕнче ытти тĕрĕксен паттăрлăх эпосне тӳр килекен вырăнсем пур-и.*

*– Авалхи тĕрĕк палăкĕсенче, хальхи чăваш фольклорĕнче çут çанталăк тата этем хутшăнăвĕ проблемăна еплерех татса панă.*

*– Авалхи тĕрĕк тата авалхи вырăс литературисенчи çут çанталăк сăнарĕн пĕлтерĕшне танлаштарăр.*

## *Усă курмалли литература*


1. Бомбачи, А. Тюркские литературы. Введение в историю и стиль / А.Бомбачи // Зарубежная тюркология. – М.: Наука, 1986. – С. 141 – 294.

2. Ганиева, Р.К. Восточный ренессанс и его традиции в тюркских литературах.: Дис. … д-ра филол. наук/ Р.К. Ганиева. – Казань, 1992. – 354 с.

3. Малов, И.С. Памятники древнетюркской литературы / И.С. Малов. – М.,Л.: Наука, 1951. – 971с.

4. Мао, Цзе-Дун. Вунсакĕр сĕвĕ / Цзе-Дун Мао. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1985. – 98 с.

5. Стеблева, И.В. Развитие тюркских поэтических форм в XI в. / И.В. Стеблева. – М.: Наука,1971. – 297 с.

6. Стеблева, И.В. Поэтика древнерусской литературы и ее трансформация в раннеклассический период / И.В. Стеблева. – М.: Наука,1976. – 214 с.

7. Чăваш халăх сăмахлăхĕ: в 6 т. Т. 6. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1958. – 304 с.

# Яппун поэзийĕн пуянлăхĕ

Кирек хăш халăхăн та фольклорĕнче философилле тарăн шухăш палăртакан вак жанрсем пур. Халăх сăмахлăхĕнчен вĕсем çырулла литературăна куçаççĕ, çĕнĕ поэтика формисене йĕркелесе яма майсем уçса параççĕ. Яппун поэзийĕнче анлă сарăлнă танка жанрĕ фольклортан куçнă. Вăл сĕм авал тыр-пул тухăçлăхне ӳстерме халалланă йăла-йĕрке вăхăтĕнче хĕрсемпе каччăсен ушкăнĕсем юрламалли юрă пулнă.

Танка çырассипе Японире императортан пуçласа ахаль çын таранах кăсăкланнă. Кашнинех çĕршер тĕслĕх асра тытмалла, кирлĕ вăхăтра импровизацилесе шухăшласа кăларма ăсталăх çитермелле пулнă. Çыру çӳретнĕ чухне те сăвăласа çырма çеç юранă.

Танка çырас йăла уйрăмах аристократсен йышĕнче анлă сарăлнă пулнă. Тĕрлĕ уяв каçĕсенче император сăвăçсен турнирне ирттернĕ. Икке пайланнă ушкăнăн ятарлă темăпа е уйрăм сăмахпа çыхăннă сăвă çырмалла пулнă. Чи пултаруллă, ăнăçлă тĕслĕхсене пуçтарса сăвă пуххисем пичетлесе кăларнă. Литература историйĕн аталанăвĕнче «Манъесю» (Собрание мириад листьев) (VII ĕмĕр), «Кокинвакасю» е «Кокинсю» (Собрание старых и новых стихотворений) (IX ĕмĕр) сборниксем пулни паллă. Кĕнекери сăвăсене тематика тĕлĕшĕнчен пĕр-лештернĕ. Тĕп темăсен шутĕнче яланах юрату тата çут-çанталăк темисем пулнă. Пейзаж лирикипе çырнă сăвăсене çулталăкри тапхăрсен ылмашăвĕпе килĕшӳллĕн вырнаçтарнă. Çавна май, сăвăсене вуланă чух куç умне çуркуннепе çулла, кĕркуннепе хĕлле черетленĕвĕ, юрату туйăмĕ çурални, аталанни, кайран сӳнсе пыни тухса тăнă.

-но Цу-

юки (868-945) поэзи ăсталăхĕ пирки çапларах каланă: «Песни Японии... прорастают из семян сердец людских, обращаясь в бесчисленные листья слов. В мире сем многое случается с людьми, и все помыслы, что лелеют они в сердце, все, что видят и слышат, – все высказывают в словах. Слушая трели соловья, что распе-

вает среди цветов, или голоса лягушек, обитающих в воде, понимаем мы, что каждое живое существо слагает свои песни. Не что иное, как поэзия, без усилия приводит в движение Небо и Землю, пробуждает чувства не видимых взору богов и демонов, смягчает отношения между мужчиной и женщиной, умиротворяет сердца яростных воителей. Песни эти родились с появлением Неба и Земли».

Танка жанрĕ авалхи тата вăтам ĕмĕрсенчи япун поэзийĕнче тĕпре пулнă. Ку сăвă пилĕк йĕркерен тăрать, унта нумайран та 31 сыпăк пулмалла. Сăвăри йĕркесем рифмăланмаççĕ, апла пулин те кĕвĕлĕх çук мар. Япун поэзийĕ силлабикăлла шутланать. Сăвăри сыпăксен çирĕп хисепĕ, черетленĕвĕ унăн кĕвĕлĕхне, ритмикине йĕркелет. Пĕрремĕш йĕркере, сăмахран, пилĕк сыпăк пулмалла, иккĕмĕшĕнче – çиччĕ, виççĕмĕшĕнче каллех пиллĕк, тăваттăмĕшĕпе пиллĕкмĕшĕнче – çичшер.

Калăпăшĕ пĕчĕк пулни сăвăри сăмахсен шутне перекетлеме ыйтать. Çавăнпа та VIII ĕмĕрте литературăра ятарласа çулталăк вăхăчĕпе çыхăннă сăмах-символсен йышĕ йĕркеленет. Вăхăт иртнĕ май вăл улшăнса, пуянланса пырать. Çулталăкăн кашни тапхăрне поэзире уйрăм пулăм ячĕпе е сăмахпа палăртма тытăнаççĕ. Сăвăç ĕç-пуç хăçан пулса иртнине тĕплĕн каламасан та пултарнă, символ-сăмах урлă çеç систерсе хăварнă. Çакăнпа пĕрлех яппун поэзийĕн тепĕр хăйне евĕрлĕхĕ, каламасăр хăварни, çуралать. Систерсе, ытарлă калани урлă сăвăç хăйĕн кăмăлне уçасшăн пулать. Вулаканĕ вара мĕн калас тенине хăйĕн пурнăç, поэзири опытне кура ăнкарса илет.

Танкăра туйăм çинчен каласси, ăна сăнласа парасси çук. Автор сăвăра хăйĕн чунĕнче çут çанталăк патне еплерех туйăм çуралнине кăтартса парать. Ĕç-хĕл сăмахĕсем, анлă илемлĕх мелĕсем çукпа пĕрех. Çутçунталăк ÿкерчĕкне ят сăмахсемпе ÿкернĕ. Юрату лирикинче те çут çанталăк сăнарĕ тĕпре. Сăвăççемшĕн чун савнин сăн-питне, чун пуянлăхне сăнласси характерлă мар. Анăç Европа литературинчи пек «культ прекрас-

ной дамы» текенни çук. Лирика геройĕ ытларах чух савнипе юр çуни, уйăх, чечексем, хĕрлĕ вĕрене çулçи, илемлĕ пейзаж çине пăхса киленни çинчен калать. Сăвăра тин çурăлнă чечексене сăнлани юратнă çынна кĕтни, тĕл пулма шаннине пĕлтерет.

Анлă сарăлнă символ-сăмахсем шутне çаксем кĕреççĕ: слива, чие, гвоздика, камели чечекĕсем, каярах мерченпе яшмă – юратнă çын сăнарне пĕлтереççĕ.

Сăвăра хĕртен унăн ятне ыйтса пĕлни унпа кунçула пĕрлештерме шухăшланипе танлашать.

Юрату лирикинче çанă сăнарĕ нумай пĕлтерĕшлĕ. Савнин пуçĕ айне сарнă çанă юрату вăййине пĕлтерет. Икĕ çанă пĕр-пĕрне перĕнни – таса та çутă туйăм. Йĕпеннĕ çанă вара – вĕçĕмсĕр куççуль. Пĕр пĕринчен уйрăлакан çанăсем – уйрăлу символĕ. Çанăран ырă шăршă кĕни – савнине кĕтни.

Çуллахи куна цикада, куккук, курăк, чечек, сăра, бамбук калчи лартмалли кун йышши сăмахсем урлă палăртма пулать. Кĕркунне çитнине пăлан, вĕренен хĕрлĕ çулçи, сывлăм, рис уйĕ символсем пĕлтереççĕ. Кĕрхи уяр каççенче уйăхпа киленме аван пулнине кура ку вăхăта уйăх сăмахпа та палăртма йышăннă. Хĕллене шурă юр тата слива чечекĕ пĕлтереççĕ.

Çут çанталăк ӳкерчĕкĕ урлă философилле лирикăна палăртасси те пур. Тарăн шухăшлă сăвă çыракан авторсем ытларах кĕркунне тата çуркунне сăнлаççĕ. Сăвăсенче çуркунне шанчăка, пурнăç пуçламăшне пĕлтерет пулсан, кĕркунне сăнарĕ вара – вăхăт иртнине, ватлăха, вилĕм çывхарса килнине, юратури уйрăлăва. Унсăр пуçне, çулталăк тапхăрĕсен чиккинчи саманта сăнласси те йăлара. Юр айĕнчен тин çеç тухакан бамбук калчи, çурăлма пуçланă слива чĕчĕкĕ çине юр çуни тата ытти символсенче тарăн шухăш пур. Басă (1644-1694) лирикинче, тĕслĕхрен, юр айне пулнă слива туратти çирĕп чăтăмлăха пĕлтерет. Вăхăт çитсен илемлĕ чечексем çурăлса тĕнчене илем кӳме пултарĕç.

Танка сăввисем хăйсен чăнлăха кăтартса парас уйрăмлăхне кура ытти ӳнерсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Шурă хут çинчи пейзаж, танкăра каланă шухăш тата

танкăна каллиграфи мелĕпе илемлĕ çырса хуни пĕр-пĕринпе тӳр килме пултараççĕ, пĕр полотно çинче вырнаçаççĕ. Кунта сăрланмасăр юлнă шурă вырăнсем те тарăн пĕлтерĕшлĕ пулма пултараççĕ. Сăвăçсем пĕр-пĕр ӳкерчĕке курнă хыççăн хăйсен хайлавне çыраççĕ е художник пĕр-пĕр танкăна вуланă хыççăн хавхаланса ĕçлет. Пĕр çын пултаруллăхĕнче темиçе ӳнер ăсталăхĕ те палăрма пултарать. Сăввăн кĕвĕлĕхĕ, сыпăксен черетленĕвĕ музыка ӳнерне те çывăх. Танка янăравĕнче çумăр шавне уйăрса илме пулать теççĕ.

Яппун поэзийĕнче Ăси Исаму, Исикава Такубоку, Какиномото-но Хитомаро, Ки-но Цураюки, Сайгă тата ытти сăвăçсем танка çырнипе палăрса юлнă.

Яппун çыннин пурнăçĕ пĕчĕк территоринче шуса иртнине кура культурăра та вăл ансат тата ахаль япаласенчен тунă формăсене ăсталать: хĕрарăм усă куракан веер, ал айĕнчи хатĕрсенчен ăсталанă çăмăл кил-çурт. Тĕрлĕ чулсенчен йĕркеленĕ сад пахчи тĕнче усăлăхĕн пуянлăхне палăртать. Илемлĕ ӳкерчĕк ӳкерме шурă хут, кисть, хура чернил çеç кирлĕ. Çаксем пурте яппун çынни хăй пурнăçне лаконизмла йĕркелеме тăрăшнине çирĕплетеççĕ. Сăмах ӳнерĕнче те çак принципах тĕпре. Сăмаха перекетлĕ усă курасси, сахал сăмах урлă тарăн шухăш палăртасси, нумай япала çинчен систерсе, асăрхаттарса çеç калама пул йку сăвă виçин хăй евĕрлĕхĕ шутланать. Хокку вăл танка виçин кĕскетнĕ варианчĕ. Рифмăланман виçĕ йĕркеллĕ сăвă вун çичĕ сыпăкран тăрать (5-7-5).

Хоккури тĕп тема çут çанталăкпа этем пĕрлĕхне вăхăт улшăннă май кăтартасси. Сăвă пуххисенче те хоккусене çулталăк тапхăрĕсен ылмашĕвĕпе килĕшӳллĕн ушкăнласа вырнаçтараççĕ. Ун урлă çын пурнăçĕнчи мĕн пур кирлĕ мар, пустуй япаларан хăпса çут çанталăкпа пĕр пулма тăрăшнине кăтартаççĕ.

Хокку çырнă чухне те çулталăк тапхăрĕсене палăртакан символ-сăмахсене усă курасси тĕпре. Унсăр пуçне, кĕске сăвăра илем тата пĕчченлĕх çинчен çырасси йăлара пулнă. Çынсенчен уйрăм тăни, сăнама юратни, пĕчченлĕхе суйласа илни çĕр çинчи хуйхăсем çинчен

манма май парать. Поэтсем юрату туйăмĕ çинчен çырманпа пĕрех. Вĕсен шучĕпе тепĕр çынна хăнăхни, унпа çывăхланни чуна ыраттарма çеç пултарать.

*Бренный я блуждаю...*
*Кукушка,*
*Сделай меня одиноким!*
*(Басё)*

Куккук кунта пĕчченлĕх, килсĕр-çуртсăрлăх, çемьесĕрлĕх палли. Пĕчченлĕхпе илем çураçуллăхĕ çут çанталăкра çеç мар, кулленхи пурнăçра та палăрма пултарнă.

Кĕске сăвăсене, вĕсен ӳкерчĕклĕхне кура, япала тĕнчине сăнлакан поэзи теме пулать. Сăвăç кашни ахаль, куллен усă куракан япалара куçа курăнман илеме, вĕççĕр тĕнчен паллисене сăнлать. Уншăн пурнăçри кашни пулăмрах хăйне евĕр пĕлтерĕш пур. Поэзире те чĕр-чун тата ӳсен-тăран тĕнчин деталĕсене, вĕсен пурнăçне сăнласси, конкретлăх патне туртăнасси пур. Европа çынни тухăç пэзийĕнче чулсем, кăпшанкăсем çинчен çĕкленӳллĕ çырнине ăнланмасан та пултарĕ. Яппун поэзийĕнче вара лĕпĕш, пăван, пыл хурчĕ, кăткă, йывăç папки... çинчен çырнă сăвăсем тем чухлех.

Басă (1644 – 1694), Исса (1763 – 1827), Бусон (1716–1784) сăвăçсен хокку тĕслĕхĕсем çĕнĕ жанра яппун поэзинче çирĕплетсе хăвараççĕ, вĕсен сăввисене тĕнчипе юратса вулаççĕ.

Танка, хокку жанрĕсем хальхи вăхăтра яппун çыннисемшĕн наци палли шутланаççĕ. Истори аталанăвĕнче вĕсене усă курасси анлă сарăлни тата манăçа тухма пуçлани тапхăрсем те пулнă. XVIII – XIX ĕмĕрсен чиккинчи литературăра традицилле формăсене пăсас, Анăç сăвă виçине йăлана кĕртес туртăм палăрать. Анăç литератури вара, çав шутра вырăс литератури те, тухăç традицийĕсене ăша хывас тесе тăрăшать. Хальхи чăваш, бурят, удмурт литературисенче те асăннă вак жанрсем тĕпленме пуçланине палăртма юрать.

## *КУÇАРУСЕМ*

### БУСОН ЁСА

***

Пĕчченлĕх пуссан
Нихçанхинчен ытла
Хаклăн уйăха.

***

Чиен техĕмне
Ăнланăнах, Сагăра
Çутăсем сӳнсен.

***

Слива тăкăнать –
Ешĕл хăван та, калăн,
Кулянчăк самант.

***

Кăмпа пухатăп.
Пуçăма çĕклерĕм те –
Ту çийĕн уйăх...

***

Тунсăх саманчĕ!
Вăлта çиппине лăскать
Кĕрхи сив çил çеç.

***

Çулçăсăр хăва,
Типсе юлнă юхан шыв,
Çап-çара чулсем.

***

Çурхи шыв-шурта,
Кур, еплерех хаяр вăл,
Ятсăр юхан шыв!

***

Çуркуннехи каç –
Таçта çăра сĕмлĕхре
Шуçăм пытаннă...

***

Вĕççĕр уй-хирпе
Утатăп, мана хирĕç –
Пĕлĕтсен карти.

***

Аçа çапнăран
Хресчен çурчĕ кĕлленчĕ.
Кавăн çеçкере...

***

Çурта çутрĕç те –
Самантран тĕсĕ çитрĕ
Сар хризантемăн.

***

Хунар çутрăм та –
Харăсах сӳнчĕ тейĕн
Сар хризантема...

***

Тĕсерех пăхсан
Куртăм – чечек те кĕçĕр
Куçнă çимĕçе...

***

Куккук сасси
Хейан керменĕ çийĕн
Вĕçет чалăшшăн.

***

Сивĕ чул çине
Çырăнчĕ сăввăм, пушă
уйпа утнă май.

*Н.Мордяков куçарнă*

## БАСЁ

***

Хура çăхан –
вăл та илемлĕ иккен
пĕрремĕш юр çинче.

***

Ăçта халĕ эсĕ, уйăх
шыва путнă чан евĕр
пытантăн тинĕс тĕпне.

***

Çерçи чĕриклетет тулта.
Ăна хирĕç шăши
пӳртрен сас парать.

***

Епле шăхăрать кĕрхи çил.
Уйра çĕр каçсассăн тин
Ăнланăн сăввăмсене.

*П.Эйзин куçарнă*

## ИСИКАВА ТАКУБОКУ

***

Ĕçле!
Ĕçле! Мĕн усси.
Пурнăç пур-пĕр йывăр.
Тĕмсĕлсе пăхатăп
Аллăмсем çине.

***

Манăн чĕре
кăмакаран
тин çеç кăларнă
ăшă çăкăр пек
туйăнать хăш чух.

***
«Мĕн вăл салхуллăх?» –
тесе ыйтсан;
«Çиме чарнă тутлă çимĕç», –
тейĕп.
Ăна ытла та ир тутантăм.

***
Куçăм ыратсан
хура куçлăха тăхăнаттăм.
Шăпах çавăн чух
çын сисиччен макăрма врентĕм.

***
Улăхри çемçе курăк тăрăх
Ахалех, сăлтавсăрах
Вирхĕнсе чупасчĕ!
Сывлăш пӳлĕниччен
Ыткăнасчĕ.

***
Йĕкĕт
Мĕнле хитре кулать!
Вăл вилес пулсассăн,
Пĕтĕм тĕнче
Кăштах тĕксĕмленĕччĕ.

***
Пĕтĕм чуна
Уçса калаçрăм...
Тем çухатнă пекех
Туйăнчĕ.
Тусăмран уйрăлма васкарăм.

***
Кĕр кунĕ
атте пекех кăра.
Кĕр кунĕ
анне пекех кăмăллă –
килсĕр-çуртсăр ачашăн.

***

Каçхи салхуллă сасăсем
Шăплăхра пăт-пат ӳкеççĕ.
Пĕр-пĕччен çӳретĕп,
Вĕсене çĕр çинчен
Пуçтарма тухнă пек.

***

Хула тулашне
тухрăм та эпĕ,
Пĕрремĕш юрату
Вил тăпри çине
Çитнĕ пекех туйĕнчĕ.

***

Ялăмра
пилĕк çул пулманччĕ.
Чирлерĕм те
Тĕлĕкре
Куккук сасси илтĕнет.

***

«Кала-ха, вилес килмест-и.» –
терĕм те хĕре:
«Акă, кур», –
терĕ,
мăйĕ çинчи çĕвве кăтартса.

*Г.Юмарт куçарнă*

# Чăваш поэзийĕнчи
# Яппун лирикин традицийĕсем

## НИКОЛАЙ МОРДЯКОВ
(Мăрчак Кули)

### **Лао-Цзы сукмакĕпе**

***

ИЛЕМЕ
çуратать
тасамарлăх...

***

ыр кăмăллăх
таса
çăлтан

***

ТИВĔÇӲ
пурнăçлансан
эс
кирлĕ мар

***

упрайăн-и
ЧУНпа
ӳт пĕрлĕхне...

***

çăкăр чĕлли
хăй
ЧĂНЛĂХ

***

ТАВА ТИВĔÇЛИ
хăйне
йăтас çук
хăйне çĕнтерме

пултаракан
МУХТАВЛĂ
Тĕнче Хуçи
пулас-тăк, –
тусан пĕрчи пулма
пĕл...

***

ПУРНĂÇА КĔРЕШӲСĔР
улăштарма
вĕренер

***

ÇӲЛТИ
пĕлет çĕнтерме
пĕр
кĕрешӳсĕр

***

...вилĕмлĕ-и
вилĕмрен
хăраманни...

***

ЧĂНЛĂХ
çитсен
аса килĕ
чăнлăх çукки

***

Тĕнче Хĕррине
Айван çынпа ан васка, –
Аяла тăвĕç.
Пуçĕнче çук-тăк,
Сăмса шăтăкĕнче те
Çук çав япала...

***

Никĕсрен бомба
Кăларчĕç те ... пурнассăм
килсе кайрĕ...

***

«Бомбах-ши бомби...» –
Килчĕ йăтса мăлатук
Ĕненмен чăваш...

***

«Вистес!» те «вартас!..»
Çĕнĕ пура турпаса
Ан куçинччĕ çеç...

***

Пĕлетĕп мĕнле
тумаллине... Тулĕк хам
Тытса тумастăп...

***

Хутăм чăххăма
Икĕ кантăк хушшине, –
Ак, холодильник!

***

Яка савалан, –
Шăна шуса ӳкмелле, –
К черту пахалăх...

***

Еврей пулас-тăк...
Еврей пулса çуралăр...
Юнра çукки – ÇУК!..

## ПЕТĔР ЭЙЗИН

***

Касрĕç йăмрана.
Ӳкрĕ вăл.
Çĕр ахлатса ячĕ.

***

Симĕс çаран.
Кăвак пĕве.
Шурă хур.

***

Чĕмсĕр юпа.
Çил тăман чух
миçе çын пурнăçне
çăлса хăварнă вăл.

***

Пĕр пĕчĕкçеç чечек –
Хура кĕр кунĕн ăш-чиккине
çутатса ячĕ!

***

Хура кĕр кунĕ.
Пыльчăк çинче
калча
ешерет.

***

Çил-тăман.
Çара турат çинчех
çывăрать
папка.

***

Тӳпере –
Кивĕ уйăх.
Никам та

ун çине
пăхмасть.

***

Хура
вăрман.
Уйăх та
çĕтсе кайнă Нарспи пек
хăрать.

***

Чылайччен
папка çурăласса кĕтетĕн.
Çураçнă хĕр
кăштăртатса пуçтарăнать пек
чăланĕнче.

***

Улмуççи тăрринче
улма пур.
Кăнтăрла
хĕвел
курăнать ун витĕр.
Çĕрле – çăлтăр.

***

Хĕвел тухнине
чи малтан
йăмра тăрринчи хура курак
курать.

***

Улмуççин юлашки çулçи.
Ăна та
татса илчĕ
çил.

## ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

***

Ырă кӳнĕ çыннăма
Тав тăвам тесеттĕм,
Тек хатĕрленеттĕм –
Тивĕçмерĕ курнăçма,
Куçа-куçăн калаçма.

Шухăшлаттăм сад лартма,
Тек ĕмĕтленеттĕм,
Хăтлăх пултăр теттĕм –
Май килмерĕ садăма
Тулăх çимĕçлĕ тăма.

Савнă тенĕ çыннăма
Савăнса кĕтеттĕм,
Савăшăп-ха теттĕм
Тӳр килмерĕ тĕл пулма,
Пыл пек тутлăн савăшма...

Пурнăç, пурнăç! Пирĕнпе
Юриех-и эс вылятăн,
Пытанса кулатăн.
Ыра эсĕ пĕринпе,
Çиллĕ эсĕ тепринпе.

Чун кӳтет кӳреннипе,
Укĕнен-ӳпкелешетĕн,
Килĕшӳсĕр кӳлешетĕн.
Кĕтнĕ пек пулманнипе
Ырă мар пек пĕтĕмпе.

Пурнăç, эсĕ тӳррипе,
Çук, улталамастăн,
Пирĕнтен кулмастăн,
Сив пулсан та пĕринпе,
Ырă эсĕ тепринпе.

Çавăнпа та ытларах
Курăнатăн хӳхĕм.
Çиттĕр пирĕн тӳсĕм –
Терт иртнин асаплăрах,
Килĕ савнăç хăтлăрах.

## СТАНИСЛАВ САТУР

***

Хĕрарăм!
Ĕнтĕркеттерен
каçăхтаран
ааштаран
санри илемлĕхе
ăçтан пĕлсе
мĕнле ăста
ăсларĕ-ши.

***

Пур
сан ятна
шевле хушши
е çил ачашлăхĕн ăшши
е пурăнмалăх çĕр пирчевĕ!..
Мĕн-ма хăвна телейсĕр тетĕн.!.

***

Питĕ хĕнлĕ çарран çӳреме
типсе ларнă чĕрӳ тĕпĕнче!..

***

Эп
сан çинчен
шутларăм çĕрĕпех.
Вара тĕлĕкĕмре
аташрăм
каçпа вĕçсе çӳрен лĕпĕшсемпе... –
кампа-ши эс савниçĕм.
чун çунтармăш.

***

Пĕчченлĕхĕмĕн
тупсăмĕ –
куллен
эп çак Çĕр çинче
пурăннинче!..

***

Эс хальхи самантпа
генилле пурăнатăн... –
Ахăртнех çавăнпа
путишле курăнатăн!..

***

Çутталла вĕçекен лĕпĕшле
чĕрӳре ялкăшан вут çине
ывăтатăп пăхмасăр ниме
çунайса кĕлленеслĕхĕме!..

***Ыйтусемпе ĕçсем***

*– Яппун поэзийĕнчи классиксен пултарулăхĕпе паллашăр.*
*– П. Эйзин сăввисенче яппун поэзийĕн традицийĕсем туллин палăраççĕ-и. Вĕсенчи чăваш сăмахлăхĕн поэтикине тупса палăртăр.*
*– Г. Юмартăн сăввине тишкерĕр. Танка виçине тӳр килекен паллăсене кăтартăр. Сăвăç пултарулăхĕнчи ярăмлăха мĕнпе çыхăнтаратăр.*
*– Н. Мордяков, С. Сатур, М. Карягина кĕске сăввисене тупса тишкерĕр. Вĕсен лирика хăй евĕрлĕхĕ мĕнрен килет-ши. Сăвăçсен ку йышши тĕслĕхĕсене мĕнлерех хак панă пулăттăр.*
*– Асăннă сăвăçсен яппун поэзийĕн традицийĕсемпе кăсăкланасси мĕнрен килет.*

## *Усӑ курмалли литература*

1. Баруздин, С. Раннего слова свет... / С. Баруздин // Дружба, Литературно-художественный альманах. – Чебоксары, Чуваш. кн. изд-во, 1982. – 272 с.

2. Боронина, И.А. Поэтика классического японского стиха / И.А. Боронина. – М., Наука, 1978. – 374 с.

3. Боронина, И.А. Японская средневековая лирика и ее европейские соответствия /И.А. Боронина // Типология и взаимосвязи средневековых литератур Востока и Запада. М., Наука, 1974. – С. 540-559.

4. Ильина, Н.Г. Поэтический мир современной чувашской лирики. Дисс. ... канд. филол. наук / Н.Г. Ильина. – Чебоксары, 2002. – 185 с.

5. Конрад, Н.И. Очерки японской литературы: Статьи и исследования / Н.И. Конрад. - М, Худож. лит., 1973. – 463 с.

6. Конрад, Н.И. Японская литература. От «Кодзики» до Токутоми / Н.И. Конрад .– М., Наука, 1974. – 567 с.

7. Одинокий сверчок: Классические японские трехстишия хайку. – М., Дет. лит., 1987. – 63 с.

8. Соколова-Делюсина, Т. Странствия в поисках поэзии / Т. Соколова-Делюсина // Мацуо Басё, Избранная проза. – СПб., Гиперон, 2000. – 288 с.

9. Софронова, И.В. П.Эйзин пултарулӑхӗнчи тухӑҫ мотивӗсем / И.В. Софронова //Тӑван Атӑл.– 2004.– 5№. – С.53-55. –

10. Хузангай, А.П. Поиск слова: Литературно-критические статьи / А.П. Хузангай. – Чебоксары, Чуваш. кн. изд-во, 1987. – 191 с.

11. Человек и мир в японской культуре: сб. ст. – М., Наука, 1985. – 280 с.

12. Яковлев, Ю.В. «Эсӗ пур. Лайӑх» / Ю.В. Яковлев // Ҫамрӑксен хаҫачӗ, 1998. – 04 юпа.

# Инди поэзийĕн пуянлăхĕ

Инди культури чи авалхи культурăсен шутне кĕрет. Унăн аталанăвĕ тĕпрен илсен ку çĕрутрава ариецсен йăхĕсем пирĕн эрăчченхи II ĕмĕрте куçса килнипе çыхăннă. Авалхи инди литературин палăкĕсен шутне чăн малтанах Веда кĕнекисене кĕртмелле. Вĕсем тăвată пайран тăраççĕ: Ригведа, Самаведа, Яджурведа, Атхарваведа. Вĕсем пĕр пĕринчен хăçан çырнине, тĕллевне, кам усă курнине кура уйрăлса тăраççĕ. Кĕнекесенче авалхи çын тĕнче, космос, общество йĕрки, этем пĕлтерĕшĕ, ку тĕнчене Турăсен тĕнчипе çывхартма пулăшакан чӳксен пĕлтерĕшĕ çинчен каласа ăнлантарнă.

Инди çыннин ăнлавĕнче истори, çут çанталăк, этем, турăсем уйрăлми пĕрлĕхре. Çавăнпа та çĕр-шыв аталанăвĕ çинчен каласа кăтартакан уйрăм кĕнекесем çук. «Махабхарата», «Рамаяна» авалхи кĕнекесем халапсен, мифсен, халалсен, философилле текстсен, чăн пулнă событисен сюжечĕсене усă курса Çурçĕр Индири йăхсен хутшăнăвĕ çинчен каласа кăтартаççĕ. Вĕсенче усă курнă чылай мотив каярах çĕршыври, тĕнче литературисенче сарăлать. Кĕнекесенче карма пĕлтерĕшĕ, ырăпа усал хутшăнăвĕ çинчен ăнлантарни те пур. Тухăç çыннишĕн пурлăх никĕсĕпе чунлăх, пурнăçпа вилĕм, телейпе хуйхă, пуçламăшĕпе вĕçĕ пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăнса, пĕри тепринчен тухса тăраççĕ. Анăç философийĕ ăнлантарнă пек ырă усала хирĕçлесе тăмасть. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр пулăмăн икĕ енĕ.

Авалхи инди литературинчи «Панчатантра» («Пять книг», «Пять поучений», «Пять хитростей») кĕнеке те тĕнче, çав шутра чăваш литературишĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Текста патша ăсчахĕ анлă сарăлнă юмахсемпе юптарусене ятарласа патша ывăлĕсене пĕлӳ, воспитани парас тĕллевпе каласа панă евĕр йĕркеленĕ. Кашни юптарăвĕ умĕн калани̇нчен тухса, унпа тачă çыхăнса тăрать. Кĕнекере ăса вĕрентсе калани чылай, анчах тепĕр чух пĕр халапĕнче каланă шухăшĕ теприн-че каланине хирĕçлеме пултарать. Çакă сăмахлăхри пур

шухăша та хирĕçлеме пулать тенине пĕлтерет. Унсăр пуçне, уйрăм шухăша уçса пама тесе усă курнă халапа илюстраци евĕр çеç йышăнмалла мар, вăл хăйне евĕр илемлĕ хайлав пулнине асăрхама та вĕрентет.

«Панчатантра» кĕнекери юптару сюжечĕсене авалхи грецири Эзоп хăй юптарăвĕсене çырнă чухне усă курать. Эзоп юптарăвĕн сюжечĕсене каярах Европăри Федр, ун хыççăн Лафонтен çыравçăсем усă кураççĕ. XVIII – XIX ĕмĕрсенчи вырăс юптаруçисем вара маларах асăннă юптаруçăсене куçараççĕ çеç мар, вĕсене евĕрлесе те çыраççĕ. Çапла вара, инди юптарăвĕн хăй евĕрлĕхĕ И.А. Крылов юптарăвĕсенче, Л.Н. Толстойăн «Азбукинче», В.М. Гаршинăн «Çӳревçĕ-шапа» юмахĕнче пурри çинчен калама сăлтавсем пур. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсем асăннă вырăс авторĕсен хайлавĕсене куçарса Букваре кĕртеççĕ. Ку вăхăтри куçаруçăсем ятарласа тухăç литературин палăкĕпе, унăн мотивĕсемпе кăсăкланаççĕ тесе çирĕплетме çук. Вĕсемшĕн хайлавсенче ют тĕнчесем çинчен каласа кăтартни, вĕсенче пĕлӳ, воспитани традицийĕсем пулни тата хура халăхăн терт-нуши пирки калани çывăх пулнă.

Инди çĕршывĕ хăйĕн культура пуянлăхĕпе, асамлăхĕпе ют çĕршыв тĕпчевçисене, çул çӳревçисене хăй патне илĕртсе тăнă. Сăмахран, XIX ĕмĕр вĕçĕнче вырăс тĕпчевçи, таврапĕлӳçи Н.К. Рерих çемйипех ку çĕршыва çитсе курать. Унăн культурине, тĕнĕсене, чĕлхипе литературине, архитектура палăкĕсене тĕпчет, литература традицийĕсене пăхăнса илемлĕ хайлавсем çырать. Инди культура палăкĕсене тĕпчеме ятарлă тĕпчев институчĕ уçать. Н.К. Рерихăн «Цветы Мории», «Пути Благословения», «Сердце Азии», «Шамбала» кĕнекисене кĕнĕ илемлĕ хайлавĕсенче этемлĕх историйĕпе çут çанталăк пĕрлĕхĕ «космос эволюцийĕпе» тачă çыхăннă текен шухăш тĕпре.

XX ĕмĕрти паллă инди сăвăçин Рабиндранат Тагорăн пултарулăхĕ те чăваш литературишĕн çывăх пулнă. Унăн сăввисене куçарасси ку вăхăтри политика ыйтăвĕсемпе тӳр килсе тăнă. Демократилле Инди çĕршывĕнче пурăнакан сăвăç миршĕн кĕрешет,

хĕрарăмăн правасăрлăхĕ, раса тата тĕн дискриминацийĕ çинчен çырать. Апла пулин те чăваш авторĕсем унăн çынлăх проблемине хускатакан, çут çанталăкпа этем пĕрлĕхĕ çинчен калакан, çĕр çинчи пур япалана та этемшĕн тунă текен шухăша палăртакан сăввисене ытларах куçараççĕ. Р. Тагорăн сăввисенче философилле шухăшлав, çут çанталăка мухтаса каланипе, е юрату лирикипе, е тата гражданла лирикăпа черетленсе тăнине курма пулать.

Чăваш çыравçисем инди литературипе куçарусем урлă çеç паллашма пултарнă теме çук. Хв. Уяр хăй вăхăтĕнче çак çĕр шывра пулса курать, çул-çӳрев дневникĕсене литература журналĕсенче пичетлесе тăрать. Г. Айхи сăввисенче «Махабхаратра» кĕнекери шухăшсене аса илтерекен вырăнсем, мотивсем чылай тесе палăртать Г.А. Ермакова тĕпчевçĕ. Икĕ культура хушшинчи çыхăну туйăм шайĕнче те пулса иртет пулас. Е. Лисинăн «Хупах хăлха Илюк» повĕçĕнче Инди çĕршывĕнчен слон çури тĕрлĕ терт-нуша тӳссе Шупашкарта пурăнакан чăваш хĕрачи патне килни çинчен çырса кăтартни те ăнсăрт пулăм мар тесе калас килет. И.Петрова ачасене валли çырнă «Савпипе Кришна» юмахри тĕп герой та тĕрлĕ ăнсăртлăха пула Атăлçи Пăлхар патшалăхне Инди çĕршывĕнчен килсе лекет, кунти пăлхава хутшăнать. Пирĕн халăхра хура çынсем пулни ăнсăрт пулăм мар, тесе палăртать автор юлашкинчен.

## *КУÇАРУСЕМ*

### Ятсăр поэт

***

«Килсем кунта, чиперĕм, ан ăмсан
Хитре çипуăлă ачапчасене,
Аçу чипер таврăнайсан сана
Хăлха алки те, сулă та парнелĕ».
Хура хутаçлă мĕскĕн çулçӳревçĕ,
Çакна илтсе тăрать пӳрт умĕнче
Куçне çаннипеле шăла-шăла.

*В. Энтип куçарнă*

### Йогешвара

Улăм ăшшине сив çавраçил вăрланă.
Сӳннĕ улăмне тепре чĕртеесле
Хулă вĕçĕпе тĕксе пăтраткалаççĕ
Пĕчĕк вучаха ĕшеннĕ хресченсем.
Йăрăм-йăрăм тĕтĕм йăсăрланчĕ.
Çăтăр-çăтăр тунă май арпа
Ырă шăршă сарăлать пит тутлăн
Хĕл пушатнă кив йĕтем ăинче.

*В. Энтип куçарнă*

### Бхатрихари
### «Халăх ăслăлăхĕ ăинчен хунă çĕр сăвă» ярăм
(*Сыпăк*)

***

Вутран шыв çăлĕ, шăрăхран – сĕм сулхăн,
Пиле (слон) – патак, мула – хунав хули.

Чирлен – сыватĕ сиплĕх пухнă курăк,
Çĕлен сăхсан – вĕрӳ-суру чĕлхи.

Тăр ухмаха нимле вĕрӳ-суру та,
Им-юм та ăс кĕртес çук нихăçан.

***

Чӳлмекçĕ евĕр вăл, хура шăпа,
Тăм çăрнă пек çăрса, уна-уна,
Пĕр пĕчĕк чăмăркка туса, чуна
Перет тертпе хĕн çаврашки çине.
Вара çаврать, кавар туса, вăйна,
Синкер çине синкер сĕне-сĕне.

*В. Энтип куçарнă*

## «Сутасаи» анталоги

***

Эсĕ ун савниййĕ пулмасан,
Мĕншĕн кунĕ-кунĕпе çывратăн
Амăшĕн сĕтне тутаннă хыççăн
Каçăхнă йĕпе пăру пекех?

***

Шалкăм çумăр лӳшкет маччари хушăк витĕр,
Аллаппи ăшшипе хӳтĕлет вăл ачашшăн
Упăшки инçетрен таврăнас вăхăта
Астума чĕрнĕ паллăсене.

***

Шыва кĕрсе тухать те шăрăхра
Тарланă упăшкин кăкри çинче
Сапаласа ярать йĕпе çӳçне,
Хумсем шăршиллине.

***

Пархатарсăр эс, эп мĕскĕн хĕрача,
çав самантра аса илме хăратăп
Санпа пулма тесе çăрса каçайнă
Хура çырман хăрушă пылчăкне.

***

Эй, çумăр пĕлĕчĕ, кĕрле те пит тискеррĕн
Яр ман çине анчах сăннусене!
Ан тĕп тусам çӳçне-пуçне пухмасăр
Мана килте çунса кĕтекене!

*В. Энтип куçарнă*

## «Юрату çинчен хунă çĕр сăвă» ярăм

***

Чипер хĕр куçĕ вырăнне сăхса аманттăр тенĕ
Çĕлен – вăр-вар та йăпăр-япăрскер,
Çеçке авăнчăкне куça
Йăмăхтараканскер.
Çĕлен сăхсассăн сыватма пултарĕ ырă юмăç.
Чипер хĕр çиçĕмĕ кĕтмен çĕртен тивсен,
Сăмах та, курăк та мана çăлаяс çук текех.

***

Кам çак ăпăр-тапăра çуратнă,
çак хĕрарăм ятлă теттене, -
Наркăмăш пыллатнă ĕçмене,
Йĕкĕç чун-чĕрин танатине,
Ултавпа чеелĕх çӳпçине,
çăтмахсен хапхин уралçине,
Тамăкри сукмак ертӳçине,
Кикенлĕ çум курăкĕпе
Йĕплĕ çум курăкĕпе
Йĕплĕ хулă сыхлакан хире,
Тĕрлĕ намăс-симĕс нӳхрепне,
Яххана,
юрта,
Алхаспие.

*В. Энтип куçарнă*

## Тутлă ытам

Курни, илтни, сисни, пĕлни, туйни –
Эп чун савни илемĕнче тупни.

Тĕлĕнтермĕшле вут чун савни ӳтĕнче,
Инçетре пĕçертет, чĕтретет çумĕнчен.

Ӳт ӳт çумне вĕрин пăчăртансан,
Чунпа чун хушшине вĕçсе кĕмест тусан.

*В. Энтип куçарнă*

## Уйрăлу асапĕ

Савса ăшăрхарăм – çук сиплĕх усси,
Ăсса ĕçнĕçем тарăнах ун пусси.

Ик енлĕ тарасам – кашни виçи çĕнесшĕн,
Ку – вăтану нуши, леш – савăшма чĕнесшĕн.

Вĕўсĕр хĕрсĕр тинĕс – юратун çут çулĕ.
Ишĕттĕм – çук кимĕ, каçăттăм – çук сулă.

*В. Энтип куçарнă*

***

Пур вĕçленў е вĕçленменлĕх шайĕ -
кашни кунçул çаврăмĕнчен килет.
Кам кăшт та пулин улăштарай.
Кунçул йĕркин тĕп тытăмне пĕрре?

*В. Энтип куçарнă*

## «Çулталăк çинчен» ярăм

***

Мăнаçлăн кĕрлекен пĕлĕтсенчен
Сасартăк çумăр чашкăрса ансан,
Каçхи хура тĕксĕмлĕхре йăр-яр
Сар ылтăн çиçĕм ялкăшса илсен,
Сĕм тĕттĕмре чун савнисем патне
Хăюллăнваскакан чиперккесен
Чĕрисене сив пыл тапса тулать.

*В. Энтип куçарнă*

***

Çумăрта савни çумра, васкамасть килне.
Сивĕре ыталану çирĕп те вĕри!
Йĕпхўре тĕтресене сирекен çилсем
Ўт-пĕве уçăлтараççĕ, сывлăш пўлĕнсен.
Çак телейлĕ пикесем каччисемпеле
Савăшаççĕ кунĕн-çĕрĕн чарăна пĕлми.
Çак йĕпе-сапа вĕсемшĕн канăç та рехет.

*В. Энтип куçарнă*

***

Хĕл çилĕ еркĕн евĕр сиввĕн
Чуптунă май пике питне
Çӳçне сапаласа ярса
Кăтрисемпе хуплать куçне,
Сирет кĕпин пĕркенчĕкне,
Шăртлантарса çемçе тĕкне,
Ак саппунне туртса хывать,
Уçса тулса кӳпченине,
Купарчине те пĕççине.

*В. Энтип куçарнă*

***

Ирхипеле каăхи шурăмпуççем,
Çап-çутă кунсене илсе каяççĕ!
Шухăшсемпе, ĕçсемпе, ĕçсем вĕççĕррипе
Васкавлă вăхăт иртнине сисместпĕр.
Эпир çуралнине те вилнине
Сăнать пăшăрханмасăр, тĕлĕнмесĕр
Хĕрĕнкĕленнĕ ăссăр çут тĕнче.

*В. Энтип куçарнă*

***

Пĕртен пĕр шăпунтан ăçта тарасшăн.
Пуррипеле йăпан, пăлхавлă чун!
Ăçта вĕçсе çӳрен, йĕрлес пек, айăп.
Суя ĕмĕтсемпе мĕн пурнăçлайăн!
Пуласлăхна çывхартмĕ иртнĕ кун,
Кĕтмен телей чĕнет – ыр кур тархасшăн.

*В. Энтип куçарнă*

## «Тӳрĕлĕх» кĕнеки

### Тав

Питĕ вăхăтлă ырă ĕç турăн –
Çĕр пекех, аслă йышлă тус тупрăн.

Тӳллев кĕтмесĕр тунă чи пĕчĕк пулăшу та
Хĕвел ăшши пекех – çук унăн хакĕ, шучĕ.

Çич çĕнелĕве асаилӳ хăварĕ
Выçлăх çулсенчи туссен çăкри-тăварĕ.

Ыр тунине манни – çĕр çыннисемшĕн намăс.
Усал ăстăнлисем вутра та ăшăнаймĕç.

*В. Энтип куçарнă*

## Тӳрĕлĕх

Чуна тырă пек акăнмасть тĕрĕсмарлăх.
Акмасăр шăтни – тӳрĕлĕх тырри мар вăл.

Тӳрĕлĕхпе тĕлленекен телейлĕ –
Мухтавĕ пур-и, çук-и, пур тĕллевĕ.

Ӳте шывпах çума пулать ăна,
Чун тасалать тӳрĕлĕхпе кăна.

*В. Энтип куçарнă*

## Пурнăçпа вилĕм

Кунсем вĕркеççĕ пăчкă шăлĕ евĕр –
Касаççĕ пурнăç йывăçне шеллевсĕр.

Сывахчĕ – халь ак йĕкĕр ывăç кĕл çех.
Ят, чап вилĕмпе тĕрĕсленчĕ кĕçех.

Мĕн чул пурнасса пĕлмесен те этем,
Çут ĕмĕчĕ ун пин çула çитĕ, тен.

Вилĕм – ыйăх çех, теççĕ ăслă пилсемĕ
Ыйăхран вăранни – Çуралу вăл, пĕлсем.

*В. Энтип куçарнă*

## НИКОЛАЙ РЕРИХ

### **Сăваплă паллăсем**

Эпир пĕлместпĕр. Вĕсем пĕлеççĕ.
Чул пĕлĕт. Йывăç та
Пĕлет. Асĕнче тытать.
Шыв-тăва ят хураканĕ кам –
Йăлт ас тăваççĕ.
Ишĕлнĕ хулана кам хывнă.
Кам ят панă тата
Манăçнă çĕр-шывсене.
Эпир пĕлмен сăмахсем.
Пурин те пĕлтерĕшĕ пур.
Пĕри те паттăр ĕçсĕр пулман.
Пур çĕрте те
паттăр иртнĕ. «Пĕлесчĕ» –
пылак сăмах. «Астăвăн» –
Хăрушă сăмах. Пĕл те асту.
Эппин – ĕнен.
Вĕçнĕ сывлăш карапĕсем,
Сăрхăннă вутăн шевли.
Çуталнă пурнăçпа вилĕм хĕлхемĕ.
Сăмах вăйĕпе çĕкленнĕ
Чул кĕмĕрккисем. Шăраннă
Асамлă çĕçĕ. Картлă çыру
Ăслă вăрттăнлăха упранă.
Каллех куратпăр пурне те.
Пурте çĕнĕ.
Юмах-халап çаврăнать
Пурнăçа. Каллех пурăнатпăр,
Каллех улшăнатпăр. Каллех
çĕрпе пĕрлешетпĕр.
Чаплă «паян» тĕксĕмленнĕ
ыран. Пурпĕр юлĕç
сăваплă паллăсем. Вăхăт
çитсен. Асăрхамĕç вĕсене.
Кам пĕлĕ. Вĕсемех
Пурнăç кӳрĕç. Ăçта-ши.
Сăваплă паллăсем.

*Г.Юмарт куçарнă*

## Курăпăр

Эпир сăваплă паллăсем шырама каятпăр.
Асăрхануллăн та шăппăн пыратпăр.
Çынсем иртеççĕ, кулаççĕ,
пĕрле пыма чĕнеççĕ.
Теприсем васкаççĕ кăмăлсăр.
Хăшĕ-пĕри хăрать.
Пирĕн пурлăха туртса илесшĕн.
Пĕлмест иртен-çӳрен эпир сăваплă
паллăсене шырама тухнине.
Иртĕ хăракан.
Унăн ĕçĕ питĕ нумай.
Эпир сăваплă паллăсем тупасшăн.
Нихăшĕ те пĕлмест:
паллăсене таçта хăварнă.
Чăннипе илсен вĕсем – çул хĕрринчи
чул юпасем çинче.
Е чечекре.
Е юхан шыв хумĕнче.
Вĕсене тупмашкăн пулĕ
пĕлĕтлĕ тӳпере те, ахăр.
Тен, хĕвелĕн çуттинче. Тен,
Уйăх çинче.
Кăвайтпа сăмала çутинче шыратпăр
сăваплă паллăсене.
Шав утатпăр, тимлĕн сăнатпăр.
Нумайăш курмасăр иртнĕ.
Тен, вĕсем те пĕлеççĕ
сăваплă паллăсем тупма хушнине.
Тĕттĕмленсе килет.
Çул-йĕре йĕрлеме хĕн.
Ăнкарми вырăнсем.
Ăçта пулма пултараç вĕсем –
Сăваплă паллăсем. Паян
Вĕсене, тен, тупаймăпăр.
Анчах та ыран кун çуталĕ,
Шанатăп – эпир вĕсене курăпăр.

*Г.Юмарт куçарнă*

**Вăхăт çитсен**

Пире йышпа утмашкăн йывăр
Тăшман таврашĕ тем чухлех.
Темле йĕксĕксем сырăнаççĕ
Иртен-çӳрен çынсене.
Тухар айккине, унта,
Сăрт çамкине авалхи юпа
Ларакан çĕре ларăпăр.
Иртчĕр пурте умран.
Мĕн пур киревсĕр путать аяла,
Эпир тăратпăр кĕтсе.
Сăваплă паллăсем çинчен
хыпар килсен – талпăнатпăр.
Вĕсене йăтса иртес пулсан,
Ура çине тăрса чыс тăватпăр.
Çивĕч куçпа сăнатпăр.
Тимлĕн итлĕпĕр эпир.
Тăвас ĕçе тума, тухăпăр эпир –
уншăн хĕрсе тăма пикенĕпĕр,
вăхăт çитсен.

*Г.Юмарт куçарнă*

## РАБИНДРОНАТ ТАГОР

***

Ăссăр теççĕ вĕсем мана.
Çирĕп пул та ан чĕн эппин.
Сана ылханаççĕ паян.
Питрен пыльчăкпа переççĕ,
Анчах алăку умне ыран
Пырĕç вĕсем чечекпе.
Вăй та влаç та халь вĕсенче,
Çӳлтен аялалла пăхаççĕ пире,
Анчах та ыран хăйсенех
Пуçа пĕкме тивĕ чĕмсĕррĕн.

*Г.Ефимов куçарнă*

## Юрă

Мĕншĕн флейта янрать пылаккăн,
Чĕре ачашшăн, ыррăн шăранать.
Мĕскершĕн-ши тута пĕлмен ахахăн
Яш вăхăта телейлĕн вăратать.
Ӳт-пӳ ыталашушăн хĕртĕнет,
Хура куç хыççăн чун вĕçмешкĕн хатĕр,
Чĕре пĕлми пулать те именет,
Ыррин саманчĕ ĕмĕрлĕх тăрать-тĕр.
Çывăх пулма эпир ĕмĕтленетпĕр,
Чун тунсăхлать тĕтре сĕмлĕхĕнче...
Паян ăна савсан, ыран сивлетпĕр...
Мĕншĕн тесен, анра сĕрĕмĕнче,
Этем чĕрипеле хаяр вылятпăр,
Ултавлăх вăййипе – мĕн йăпанатпăр.

*Г.Ефимов куçарнă*

## Алăсем

Кама хыт пăчăртасшăн çак алăсем.
Юратăва вĕсем епле-ха палăртаççĕ.
«Ан кай, савни!» тунсăхпала хĕрсе,
Кама-ши шăппăн савнине калаççĕ.
Алсем суйла-суйла чи çепĕç сăмахсем,
Ӳт-пӳ çине сас паллисем çырман-и,
Ӳт-пӳ çине кăшт перĕнсе вĕсем,
Чуна ачашшăн çеç пăлхантарман-и.
Яш кунăн çепĕç кăмăлне хывса,
Çав алăсем теприн çине хураççĕ,
Ура умнех хураççĕ-çке пырса,
Çамрăк чĕрен таппин вăйне туяççĕ...
Савни, ĕмĕрлĕхех кăкăр тавра
Ху аллусен ункисене упра!

*Г.Ефимов куçарнă*

***

Вăл пăшăлтатса: «Юратăвăм, пуçна çĕкле!» терĕ.
Эпĕ чĕрепе: «Кай» терĕм. Анчах вăл каймарĕ.
Вăл мана алăран тытса тăчĕ.
Эпĕ ăна: «Хăп ман çумран» терĕм. Вăл хăпмарĕ.

Вăл манăн хăлха патне пĕшкĕнчĕ. Эп ун çине пăхрăм та: «Мĕнле намăс» терĕм. Вăл пур, хускалмарĕ те.
Унăн тути ман пит çăмартине сĕртĕнчĕ.
Эпĕ çӳçенсе илтĕм те: «Эсĕ ытлашши хăтланатăн!» терĕм.
Анчах вăл именмерĕ.
Вăл манăн çӳç хушшине чечек лартрĕ. «Ахалех!» терĕм эпĕ.
Вăл пур пĕр хускалмасăр тăчĕ.
Манăн майри ярăм шерепене хывса илчĕ те вăл кайрĕ.
Эпĕ йĕретĕп те хамăн чĕремрен: «Мĕншĕн-ха вăл каяллa çаврăнса килмест.» – тесе ыйтатăп.

*Г.Ефимов куçарнă*

***

Сана çапла кирлĕ пулсан, эпĕ юрлама пăрахатăп.
Санăн чĕрӳ хыттăн тапать-тăк, эпĕ сан çине пăхмăп.
Эсĕ уçăлма тухсассăн, сана кĕтмен çĕртен шиклĕх пусса илет пулсассăн, эпĕ пăрăнăп та урăх çулпа кайăп.
Ытах та эсĕ манăн умра чечек кăшăлĕ тума именетĕн-тĕк, эпĕ санăн сад пахчине кĕмĕп.
Юхан шыв ытлашши кĕрлет те сирпĕнет пулсассăн, эпĕ хамăн кимĕме урăх çыран патнелле тытăп.

*Г.Ефимов куçарнă*

***

Çак тĕле çитсессĕн, аппăшĕпе йăмăкĕ, çăл патĕнчен килнĕ чух, иккĕшĕ те кулаççĕ.
Вĕсем шыв патне аннă чух йывăç хыçĕнче пĕр çын тăнине чухлаççĕ пулас, шельмăсем.
Темĕн пăшăлтатаççĕ аппăшĕпе йăмăкĕ, çак тĕлтен иртнĕ чух.
Йывăç хыçĕнче тăракан çыннăн шухăшне пĕлеççĕ пулас, шельмăсем.
Кăкшăмĕ тайăлать иккĕшĕн те, чăлт та чалт сирпĕнеççĕ шывĕсем.
Йывăç хыçĕнчи çыннăн чĕри мĕнле тапнине сисеççĕ пулас, шельмăсем.
Пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ çав тĕле çитсессĕн, кулса яраççĕ.
Хыттăн, кула-кула чупса каяççĕ аппăшĕпе йăмăкĕ, йывăç хыçĕнче тăракан çынна вăтантараççĕ кашнинчех.

*И.Ивник куçарнă*

***

Эпӗ ылтӑн пӑлан йӗрне йӗрлетӗп.
Кулма та пултаратӑр манран эсир, тусӑмсем,
анчах пӗр вӗҫӗмсӗр йӗрлетӗп эпӗ ҫав йӗре.
Сӑртсем тӑрӑх, варсем тӑрӑх чупатӑп эпӗ,
мӗншӗн тесен ылтӑн пӑлан йӗрне йӗрлетӗп.

Пасарсене каятӑр эсир, тавар тиесе таврӑнатӑр,
анчах мана тӗлли-паллисӗр ҫилсем ачашлаҫҫӗ,
ӑҫта вӗсен килӗ-йӗрӗ – пӗлместӗп.
Манӑн пуҫӑмра мӗн пурӗ те пӗр ӗмӗт кӑна.
Сӑртсемпе варсемпе эп чупатӑп,
ют ҫӗршывсене ҫитетӗп,
мӗншӗн тесен ылтӑн пӑлана йӗрлесе тытасшӑн эпӗ.

*И.Ивник куҫарнӑ*

***

Вилӗмсӗр хӗрарӑм! Турӑ ҫеҫ мар, арҫын та ҫуратнӑ сана.
Вӗсем сана хӑйсен чӗрисен илемӗпе илемлетеҫҫӗ.
Поэтсем сан валли ылтӑн мӗлкисен ҫипписенчен пир тӗртеҫҫӗ;
художниксем сан сӑнна ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен вилӗмсӗрлетеҫҫӗ.
Тинӗссем сана – хӑйсен мерченӗсене,
сӑртсем – хӑйсен ылтӑнне,
ҫуллахи садсем – хӑйсен чечекӗсене параҫҫӗ сана,
тата та илемлӗрех, тата та хаклӑрах тӑвасшӑн.
Эсӗ – ҫурма ҫын, ҫурма ӗмӗт.

*И.Ивник куҫарнӑ*

***

Таса ҫут ҫанталӑк, сан ҫеҫкӳне татрӑм эп!
Чӗре ҫумне пӑчӑртарӑм эпӗ ӑна,
чечек йӗпписем чикрӗҫ ман ӳтӗме.
Хӗвел анса каҫ пулчӗ, пӑхатӑп: чечекӗм ман шаннӑ,
вӑл ыраттарни ҫапах пур-ха.
Сахал мар чечен те ырӑ чечексем пулӗҫ санӑн, таса ҫут ҫанталӑк.
Чечек пухмалли вӑхӑтӑм иртрӗ ӗнтӗ манӑн, каҫ тӗксӗмленчӗ,
ҫав роза ҫук халь манпалан, – ыратни ҫеҫ иртмест.

*И.Ивник куҫарнӑ*

# ГЕННАДИЙ АЙГИ

## Асăнмалăх

1. Шухăшлатăп хăш чух: çын мĕнпе пурăнать.
Тен, тăватă хăват этеме хураллать:
Пĕри – Сывлăх иккен, Мул теер теприне,
Авалтан Влаç тееççĕ çав виççĕмĕшне,
Тата мĕн-ши тепри. – Йăнăшмастăп пуль эп:
Вăл çынсем хушшинче пире пӳрнĕ Хисеп.
Çылăхпа пархатар пур-мĕн çак вăйсенче,
Ыррине çеç илмест вĕсенчен халь тĕнче.
Çын чунне пĕтерме, астарать-тĕр юри
Çылăха маннисен çак тăватă турри!

2. Сывлăха асăнар. Мĕн унран пахарах.
Халь ав сывлăхсăрри – сыввинчен вăйларах.
Сывлăха астарать пур çĕрте те усал.
Мул пирки пуплем мар, уншăн çук ман вăй-хал.
Влаç – ик енлĕ хăват: кирлине йышăнар, –
Ун тарçи пулар мар, çын хуçи пулар мар.

3. Чăн та кирлĕ çынна кăшт управлă хисеп,
Тен, айван ăсăмпа ăна суннăччĕ эп,
Туяс тенĕччĕ, тен, ун сыхчуллă вăйне!
Эп, хальччен пĕлменскер, пĕлес çук вăл мĕнне.
Ытларах та калам, чăнласа эп пĕлни –
Пур пек çынлăхăма çылăх евĕр туни.
Сăнарлам: пулăсем çуралаççĕ шывра,
Çавăн пек пурăнатпăр эпир мăшкăлра.
Мăшкăл – пирĕн стихия тени, тăвансем,
Сывлăш çук! Антăхать çын чĕреллĕ этем.
Чыс-хисеп ыйтмăп эп, май пулсан та, ку чух,
Халь вăл – влаç йĕкĕрешĕ, халь унсăр вăл çук.
Чыс тени, çавăнпа, халь пăсать çеç çынна.
Митталла хисеп пур, вăл – вилсессĕн кăна.

4. Халь сунатăп хама, çылăхсем нумайран!
Çав суя хăватсем вăй ан паччĕр нихçан!
Çынлăх пултăр, чыс мар.

Çăкăр пултăр, мул мар.
Ăс-тăна упрама çеç халь сывлăх ыйтар.
Пур-ха шай халăхра... Асăнар çав шая, –
Вăрттăн шай, пытанса, пытăрах нумая!
Пурăнать-ха унта кĕтретпе пархатар,
Пурăнать-ха... Анчах сăмах çеç унра мар.

5. Чĕререн эп калатăп: тав сумсăрлăха!
Çав анчах-çке вĕрентрĕ кăштах çынлăха.
Çук, суя турăсен алтарьне эп курман.
Эп Иов сăмахне çеç ăнкартăм аран,
Кăшт ăнлантăм ăна – нишлисен тăванне,
Чыссăр-сумсăр çынсен çĕр çинчи çулташне.
Ун Сăмахĕ анчах çутатсанччĕ Чуна!
Ăнтăлса та савса, шанаймастăн çакна.
Çын курман Çути çеç, тен, ӳкет хут çине...
Чăн тĕрек шыраса пур ăс-хал ырнăçем
Калаçатпăр çапла, – вилнисем, чĕррисем.

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Авалхи Инди литератури çинчен мĕн пĕлетĕр.*

*– Чăваш фольклорĕнче Инди культурин паллисем, чĕлхинчи инди сăмахĕсем пулнине мĕнпе ăнлантарса пама пулать.*

*– Г.А. Ермакова Г. Айхи поэзийĕнче Инди философийĕ палăрнине, «Махабхарата» кĕнекере каланă шухăшсем пурри-не мĕнпе сăлтавлать.*

*– Н.К. Рерих тĕпчевçĕ, поэт, тавра пĕлӳçĕ çинчен эсир мĕн пĕлетĕр.*

*– Р. Тагор пултарулăхĕ çинчен каласа кăтартăр. Унăн сăввисене чăвашла куçарнин сăлтавĕсем, пахалăхĕ.*

*– И. Петровăн «Савпипе Кришна» юмахĕнчи фольклор традицийĕсене усă курнин пĕлтерĕшĕ. Тĕп сăнарсенчен пĕрне автор мĕн сăлтавпа инди çынни пулнине палăртать-ши. Юмахри чăваш тата инди халăхĕсен йăли-йĕркисенчи пĕрпеклĕхсем çинчен калани.*

*– Е. Лисина çырнă «Хупах хăлха Илюк» юмахри слон сăнарĕ. Слонпа чăваш хĕрачи хушшинчи туслăх.*

### *Усӑ курмалли литература*


1. Вивекананда, С. Философия йоги / С. Вивекананда. – Магнитогорск: Амрита, 1992. – 512 с.

2. Гордлевский, В.А. Отзвуки Востока в творчестве И.А. Крылова // В.А. Гордлевский. Избранные сочинения. Т. 2. Язык и литература. – М.: Изд-во вост. лит., 1961. – 557 с.

3. Ермакова, Г.А. Философские мотивы творчества Г.Айги и восприятие их читателем / Г.А. Ермакова. – Чебоксары: Изд-во «КЛИО», 1998. – 110 с.

4. Ермакова, Г.А. Художественно-философский мир Г. Айги: истоки, типологические параллели / Г.А. Ермакова. – М.: Изд-во ЦТЛ «Рон», 2004. – 384 с.

5. Радхакришнан, С. Индийская философия / С. Радхакришнан. Т.1. – М.: Изд-во иностр. лит., 1956. – 618 с.

# Авалхи еврей литературин пуянлăхĕ

Пирĕн эрăчченхи XII-II ĕмĕрсенчи авалхи еврей литературин палăкĕсен паянхи куна çитиччен «Библи» текстчĕсем халлĕн упранса юлнă. Вĕсенче халăхăн кулленхи йăли-йĕрки, сăмахлăхĕ, пурнăçа тытса пымалли йĕркесем, историйĕ палăрать. Авалхи халалăн канонне виçĕ пысăк цикл çине пайлаççĕ: 1) Тора е Пятикнижи, Моисей çырнă пурнăçа тытса пыма вĕрентекен пилĕк кĕнеке; 2) «Пророксем», авалхи хроникăсем, пуласлăх пирки систерсе каланисем («Иисус Навин кĕнеки», «Израиль тӳррисен кĕнеки», «Самул кĕнеки», «Патшалăхсен кĕнеки»; 3) «Писани», тĕрлĕ жанрпа çырнă текстсен пуххи.

Пилĕк кĕнекере çыннăн тата халăхăн пурнăçне йĕркелесе пыма май паракан тĕнпе юридици нормисене çырса кăтартнă. Тора закон тенине пĕлтерет. Пилĕк кĕнекере тĕнче пулса кайни çинчен «Книга Бытия», «Книга Исхода» кĕнекесенче каласа кăтартнă. Яхве Турă хаосран йĕрке тăвать, кунпа каçа, ырăпа усала уйăрать. Унăн ĕçĕсене законлăхăн малтанхи варианчĕ пек хаклама пулать. Хуть мĕнле законра та юранипе юраманни, килĕшӳллипе килĕшӳсĕрри пур. «Книга Бытияра» çемье, общество, кăмăл-сипет нормисем еплерех пулмаллине тĕслĕхсем урлă палăртнă. Кĕнекере Авраам, Исаак, Иаков пророксем Турă ирĕкне халăх патне илсе çитереççĕ, вăл еврей халăхне ырлăх парнелесшĕн пулнине калаççĕ. Килес ырă пурнăç, «земля обетованная» çинчен ĕмĕтленни авалхи еврей литературин тĕп мотивĕсенчен пĕри шутланать.

«Книга Исхода» çинче еврей халăхĕ пусмăртан хăтăлни, уйрăм патшалăхпа пурăнма пуçланине сăнланă. Моисей пророк халăха египет çĕрĕнчен илсе тухать, пуш хир витĕр илсе каять, ырă патшалăх йĕркелет. Пятикнижин кайранхи пайĕсем умĕн каланă шухăшсене малалла тăсаççĕ. «Числосен кĕнекинче» Моисей пророк каланă йĕркепе килĕшменнисене, ăна хирĕç каякансене Турă тавăрни çинчен çырса кăтартнă.

Авалхи еврей литератури чăваш интеллигенцине тĕрлĕ вăхăтра тĕн литератури пек те, тухăç литературин илемлĕ тĕслĕхĕ пек те кăсăклантарнă. XVIII-XIX ĕмĕрсен чиккинче, тĕпрен илсен, ăна халăх хушшинче тĕне çирĕплетес сăлтавпа куçарнă. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ тапхăрта К. Иванов Самсонăн «Юрăсен юрри» кĕнекине куçарни çинчен аппăшĕ аса илсе çырать. Сăвăçа тĕнпе кăсăкланасси мар, авалхи литература тĕслĕхĕн чĕлхе тата сăнарлăх илемĕ тыткăнлани иккеленӳсĕр. Çывăх тухăç литературин тĕслĕхĕсене куçарасси XX ĕмĕрĕн 1980-2000-мĕш çулĕсенче çĕнĕрен вăй илет. Шупашкарти Епархи йĕркелесе пынипе, чун ыйтнипе сăвăçсемпе çыравçăсем куçару ĕçне хутшăнаççĕ. Чăвашла «Еклезиаст кĕнекине», «Еремей пророк кĕнекине», «Еремий хӳхлевне», «Псалтыре», «Иов кĕнекине», «Соломонăн притчисене», «Юрăсен юррисене», «Соломон ăслăлăхĕсен кĕнекисене», «Псаломсене» тата «Авалхи халалпа» «Çĕнĕ халала» куçарнă. Ачапăча Библине чăвашла пичетлесе кăларнă. Çак ĕçе П. Афанасьев, П. Яккусен, Ю. Сементер, Н. Кушманов, Е. Лисина, П. Львов тата ыттисем те хутшăннă.

## АВАЛХИ ХАЛАЛ

### Пултарни

*(Сыпăк)*

Пуçламăшĕнче Турă тӳпепе çĕре пултарнă. Çĕрĕн сăнĕ-тĕсĕ те, нимĕн те пулман, тĕпсĕр шыв тĕлĕнче тĕттĕм тăнă, шыв çийĕн Турă Сывлăшĕ варкăшнă.

Турă каланă: çутă пултăр, тенĕ. Çутă пулса тăнă. Турă çутă аваннине курнă та, Турă çутта тĕттĕмрен уйăрнă. Çутта Турă – кун, тĕттĕме – каç тенĕ. Каç пулнă, ир пулнă: пĕрремĕш кун.

Турă каланă: шыв хушшинче тĕрек пултăр, вăл шыва шывран уйăрса тătăр, тенĕ. [Çапла пулса тăнă.] Турă тĕрек туса карнă та тĕрек айĕнчи шыва тĕрек тĕлĕнчи шывран уйăрнă. Çапла пулса тăнă. Тĕреке Ту-

ră тӳпе тенĕ. [Турă ку аваннине курнă.] Каç пулнă, ир пулнă: иккĕмĕш кун.

Турă каланă, тӳпе айĕнче шыв пĕр çĕре пухăнса тăтăр та, типĕ вырăн тухтăр, тенĕ. Çапла пулса тăнă. [Тӳпе айĕнчи шыв хăйĕн вырăнне пухăнса тăнă та, типĕ вырăн тухнă.] Типĕ вырăна Турă çĕр тенĕ, пухăнса тăнă шывсене тинĕссем тенĕ. Турă ку аваннине курнă. Турă каланă: çĕр ешĕл ӳсен [хăй йышши, хăй евĕрлĕ] вăрлăх сапакан курăксем, çĕр çинче хăй йышши çимĕç туса, ăшĕнче вăрлăх пулакан çимĕçлĕ йывăççем ӳстертĕр, тенĕ. Çапла пулса тăнă. Çĕр ешĕлӳсен, хăй йышши, [хăй евĕрлĕ] вăрлăх сапакан курăксем, [çĕр çинче] çĕр çинче хăй йышши çимĕç туса, ăшĕнче вăрлăх пулакан [çимĕçлĕ] йывăççем ӳстерсе кăларнă. Турă ку аван пулнине курнă. Каç пулнă, ир пулнă: виççĕмĕш кун.

Турă каланă: [çĕре çутатса тăма тата] куна каçран уйăрса тăма, хăватсем кăтартма тата вăхăта, куна, çулталăка палăртса тăма тӳпе тĕрекĕ çинче çутăсем пулччăр; çĕр çине çутă ярса тăмашкăн вĕсем тӳпе тĕрекĕ çинчи çутачкăчсем пулччăр, тенĕ. Çапла пулса тăнă. Турă икĕ пысăк çутă тунă: пысăкрах çуттине – куна тытса тăма, пĕчĕкрех çуттине каçа тытса тăма тунă, çăлтăрсем тунă; Турă вĕсене тӳпе тĕрекĕ çине лартнă: çĕре çутатса тăма, кунпа каçа тытса тăма, çутта тĕттĕмрен уйăрса тăма лартнă. Турă ку аваннине курнă. Каç пулнă, ир пулнă: тăваттăмĕш кун.

Турă каланă: шывра чĕрĕ чунсем кĕшĕлтетчĕр; çĕр çийĕн, тӳпе тĕрекĕ айĕн вĕçекен кайăксем вĕçсе çӳреччĕр, тенĕ [çапла пулса тăнă]. Шывра пулса тăнă мăн пулăсене, шывра кĕшĕлтетекен пур чĕрĕ чуна Турă ăрăвĕ-ăрăвĕпе пултарнă. Турă ку аваннине курнă. Турă вĕсене пилленĕ: хунăр, йышланăр, тинĕс шывĕсене тулăр, çĕр çинче вĕçен кайăксем ĕрчеччĕр, тенĕ. Каç пулнă, ир пулнă: пиллĕкмĕш кун.

Турă каланă: çĕр ăрăвĕ-ăрăвĕпе чĕрĕ чунсем кăлартăр, выльăхсем, çĕлен-калтасем, тискер кайăксем ăрăвĕ-ăрăвĕпе кăлартăр, тенĕ. Çапла пулса тăнă. Çĕр çинчи тискер кайăксене Турă ăрăвĕ-ăрăвĕпе пултарнă, выльăх-

сене те ăрăвĕ-ăрăвĕпе пултарнă, пур çĕлен-калтана та ăрăвĕ-ăрăвĕпе пултарнă. Турă ку аваннине курнă.

Турă каланă: Хамăр сăнарлă [тата] Хамăр евĕрлĕ этем тăвар, вĕсем тинĕсри пулăсене, тӳпери вĕçен кайăксене, [тискер кайăксене], выльăх-чĕрлĕхе, пĕтĕм çĕре, çĕр çийĕн шуса çӳрекен мĕн пур çĕлен-калтана пуç пулса тăччĕр, тенĕ. Турă вара Хăй сăнарлă этем пултарнă, ăна турă евĕрлĕ пултарнă; вĕсене ар çыннине, хĕр арăмне пултарнă. Турă вĕсене пилленĕ, Турă вĕсене каланă: хунăр, йышланăр, çĕре туллиех тулăр, ăна тытса тăрăр; тинĕсри пулăсене, [тискер кайăксене], тӳпери вĕçен кайăксене, [пур выльăх-чĕрлĕхе, пĕтĕм çĕре], çĕр çумĕн çӳрекен мĕн пур чĕрчуна пуç пулса тăрăр, тенĕ. Турă тата каланă: акă Эпĕ сире пĕтĕм çĕр çинчи мĕнпур курăка, вăрлăх сапакан тĕрлĕ тĕслĕ курăка, тата йывăç çимĕçĕ кӳрекен, вăрлăх сапакан тĕрлĕ йывăç патăм, – çакă сире апат валли пулĕ; пĕтĕм чĕрĕ чуна – çĕр çинчи пур тискер кайăка, тӳпери мĕнпур вĕçен кайăка, çĕр çийĕн шуса çӳрекен пур [çĕлен-калтана] – апат валли – Эпĕ пĕтĕм ешĕл курăка патăм, тенĕ. Çапла пулса тăнă. Турă Хăй пултарнине пурне те курнă та: акă питех те аван. Каç пулнă, ир пулнă: улттăмĕш кун.

## Соломон юррисен юррийĕн кĕнеки

Вăл мана чуптуса ачашлатăрччĕ:
Санăн евĕкӳ эрехрен те савăкрах!
Эсĕ ырă шăршăллă çупа сĕрĕнетĕн,
санăн яту – таврана сарăлнă мирă;
хĕрсем çавăнпа юратаççĕ сана.
Кăчăк туртсамччĕ мана, эпир сан хыççăн чупса кайăпăр;
патша мана хăйĕн керменне илсе кĕчĕ –
сана мухтавлăпăр, саншăн савăнăпăр;
юратăва тивĕçлипе юратаççĕ сана!

Эй Иерусалим хĕрĕсем!
эпĕ хура, анчах та хитре,
Кидар чатăрĕ пек,

Соломон чаршавĕ пек хитре.
Мана хура тесе ан тиркĕр,
ӳтĕме хĕвел хĕртсе хуратрĕ:
аннемĕн ывăлĕсем çилленчĕç те мана
хăйсен иçĕм пахчине хураллама тăратрĕç,
çавăнпа хамăн пахчама сыхлаймарăм.
Каласамччĕ мана, чун савниçĕм:
Кĕтĕвне ăçта кĕтсе çӳретĕн.
Кăнтăрла ăçтарах эс канатăн.
Мĕншĕн-ха манăн
Юлташусен кĕтĕвĕ тавра çĕтсе çӳрес.
Эй хитререн те хитре пикемĕр,
çавна пĕлместĕн пулсассăн,
кай та кай сурăхусен йĕрĕпе,
кĕтĕвне качака путеккисене,
кĕтсе çӳре кĕтӳç чатăрĕсем çумĕнче.

Фараон кӳминчи ик турта хушшинчи
кĕсремпе танлаштартăм сана, савниçĕм-пикеçĕм.
Ах, епле чечен курнать шерепе эрешленĕ сăну,
çут шăрçаллă мăю;
эпир сана кĕмĕл тенкĕллĕ
ылтăн шерепе туса парăпăр.

Патша хăй кĕрекинче ларнă чухне
эпĕ сĕрĕннĕ нард çăвĕнчен ырă шăршă сарăлайрĕ.
Манăн савнă каччăм – мирра çупкăмĕ,
яланах чĕре çумĕнче вăл.
Манăн савнă каччăм – Енгедире иçĕм пахчинче
çурăлнă кипре сапаки пек.

Ах, савниçĕм-пикеçĕм, ытарайми хитре эс,
ытарайми хитре!
куçусем – кăвакарчăн куçĕсем.

Ах, савнă каччăм, савнийĕм, мĕнле илемлĕ эсĕ,
мĕнле кăмăллă эсĕ!
пирĕнех те тӳшек – ешĕл курăк;
пирĕнех те çуртсен тăрри – кедр йывăççи,

пирĕнех те пӳртсен маччи – кипарис йывăççи!
Эпĕ – Сарон нарцисĕ,
Эпĕ – айлăмра ӳсекен лили!

Ман савниçĕм-пикем ытти хĕрсем хушшинче –
кӳкен тĕмĕсем хушшинчи лили чечекĕ пекех.
Манăн савнă тусăм ытти каччăсем хушшинче –
вăрман йывăççисем хушшинчи улмуççи евĕрлех.
Çав улма йывăççи айĕнче сулхăнра эп ларма юрататăп,
Вăл мана ĕçкĕ-çикĕ керменне илсе кĕчĕ,
ман тĕле юрату ялавне çакса хучĕ.
Ах, мана юратнă лăштăр ячĕ,
Сыпкăм эрех ĕçтерсе вăй кĕртсемĕр,
Улмапа сăйласа кăшт уçсамăр ăша.
Унăн сулахай алли – ман пуçăм айĕнче,
Сылтăмми вара мана ыталать.
Эй, Иерусалим хĕрĕсем,
ту качаки ячĕпе, хир пăланĕ ячĕпе тархаслатăп сире:
вăранас вăхăчĕ çитиччен савнă пикемĕн ыйхине ан татăр,
ан вăратăр ăна.

Ах, савнă тусăм сасси илтĕнет!
акă килет вăл:
ту çийĕн ыткăнса,
сăрт çийĕн сиктерсе вăл килет.
Ту качаки евĕрех,
çамрăк пăлан евĕрех манăн каччăм.
Акă çитрĕ те –
тăрать вăл кунтах, хӳме леш енче,
кантăкран пăхать,
карта витĕр вĕлтлетсе илет.
Савниййĕм, ытарайми пикеçĕм,
тăрса тухчĕ часрах! тесе
ĕнтĕ тусăм мана йыхăрать.
Акă хĕл те иртсе кайрĕ;
çумăр та çуса иртрĕ;
çĕр питне капăрлатрĕç хитре чечексем;
юрă вăхăчĕ çитрĕ,
çĕршывăмăрта

улатăпа сасси илтĕнет;
смоква йывăçĕ те папкине ĕнтĕ çурчĕ,
иçĕм турачĕсем, çеçкене ларса,
ырă шăршă сараççĕ.
Савниййĕм, ытарайми пикеçĕм,
тăрса тухчĕ часрах!
Ту хушăкне, чул хысак хӳттине
пытанса ларнă кăвакарчăнăм!
кăтартсамччĕ сăнна,
сассуна итлеме парсамччĕ мана:
сассу евĕклĕ санăн.
Тилĕсемпе çурисене
тытса парăр пире,
вĕсем иçĕм пахчисене тустараççĕ,
пирĕн пахча чечекленет-çке.

Савнă тусăмçăм – манăн, эпĕ те – унăн;
вăл лили чечекĕ хушшинче кĕтӳ кĕтсе çӳрет.
Кун сулхăнĕ кайиччен,
мĕлкесем çухаличчен
сăрт-тусем хушшинчи ту качаки пулайса,
çамрăк пăлан пулайса таврăнчĕ, савниçĕм.

Çĕр варринче хам тӳшекĕм çинче
чунăм савакан çынна шырарăм,
шырарăм ăна –
тупаймарăм ăна.
Тăрам-и эппин, хула тăрăх каям-и,
чунăм савакан çыннăма
урамра, уçă хутлăхра эп шырам-и;
шырарăм ăна – тупаймарăм ăна.
Тĕл пулчĕç мана
хула тавра çӳрекен хуралсем:
«Чунăм савакан çынна курмарăр-и эсир.»

Пăрăнса утрăм çеç вĕсенчен,
чунăм савнă çыннăма тĕл пултăм,
çатăрласа тытрăм та ăна – аннемĕн килне çитиччен,
аннемĕн шалти пӳлĕмне кĕриччен

хамран вĕçертмерĕм ăна.
Эй, Иерусалим хĕрĕсем,
ту качаки ячĕпе, хир пăланĕ ячĕпе тархаслатăп сире:
вăранас вăхăчĕ çитиччен савнă пикемĕн ыйхине ан татăр,
ан вăратăр ăна.
Кам вăл – пуш хир енчен
тĕтĕм юпи пек çĕкленсе тухаканĕ.
миррăпа, фимиампа,
миррă шăратаканĕн тем тĕрлĕ сухăр çăнăхĕпе тĕтĕрнĕрен
тĕтĕрлесе тăраканĕ.

Акă унăн, Соломонăн, йăткăçĕ:
ун тавра – утмăл паттăр,
Израиль çĕрĕнчи утмăл паттăр.
Кашниех хĕç тытнă,
ăста вĕсем çапăçма;
çĕрлехи синкертен сыхланма
пилĕкĕ çумĕнче вĕсен хĕçĕ.
Хăйне çĕклесе çӳремелли йăткăçне
Соломон патша ливан йывăççинчен тутарнă;
юписем унăн – кĕмĕл,
Чавсапа сĕвенмелли – ылтăн,
ларкăчне витнĕ йăм хĕрлĕ пустав;
çавă йăткăç ăшне Иерусалим хĕрĕсем
савса-юратса тирпейленĕ.
Эй Сион хĕрĕсем, кайса курăр
пуçкăшăль тăхăннă Соломон патшана,
мăшăрланнă кун,
чун-чĕришĕн савăклă кун,
Амăшĕ ăна тăхăнтартнă пуçкăшăль.

## Екклесиастăн, е вĕрентӳçĕн кĕнеки

1. Екклисиастăн – Давид ывăлĕн, Иерусалимри
патшанăн – сăмахĕсем.

Харамран харам, тенĕ Екклисиаст,
харамран харам – пурте харамлăх!
Ĕçлет, ĕçлет этем çĕр çинче,
мĕн усси ăна хăйĕн ĕçĕнчен.

Ăру килет те, ăру каять,
   çĕр вара ĕмĕрлĕхе пырать.
Хĕвел тухать те, хĕвел анать,
   вăл ăçтан тухнă, çавăнтахваскать.
Çил кăнтăралла вĕрет,
   çурçĕр еннелле пăрăнать,
хăй çулĕ çинче çаврăнать-çаврăнать те
   унччен тĕлех таврăнать.
Пур юхан шыв та тинĕсе юхать,
   тинĕсĕ пĕрех тулса тăкăнмасть:
Юханшывсем ăçталла юхнă,
   вĕсем халĕ те çавăнталлах юхаççĕ.
Сăмах вăл вăйсăр:
   çын мĕн пуррине каласа параймасть;
куç курса тăранаймасть,
   хăлха илтсе пĕтерейместь.
Мĕн пулнă, çавах пулса пырать,
   мĕн пулса пынă, çавах пулса пырать,
   çут тĕнчере нимĕн çĕнни те çук.
Мĕн те пулин пулать те:
   «кур-ха, ку акă çĕнĕскер», теççĕ;
анчах ку унччене,
   пирĕн ĕмĕрччене, пулнă.
Унччен пулни асра юлмасть;
   ĕнтĕ пуласси те
кайран килес çынсенĕн
   асне юлмĕ...

7. Ырă ят хаклă сĕрĕшрен хаклăрах,
      вилĕм кунĕ çуралнă кунран лайăхрах.
Ĕçкĕ-çикĕ çуртне çӳриччен –
   вилнĕ çыншăн хӳхлекенсен килне кайни лайăхрах:
пур çыннăн кун-çулĕ те çапла вĕçленет,
   чĕрĕ çын вара çакна хăй чĕрине илет.
Хуйхă-суйхă кулăран лайăхрах:
 сăн хурлăхлă чухне чĕре ырăланать.
Ăслисенĕн чĕри – хӳхлев çуртĕнче,
   ухмаххисенĕн чĕри – вăйă-кулă çуртĕнче.
Ухмахсенĕн юррине итличчен –

ăсли питленине итлени лайăхрах;
мĕншĕн тесессĕн ухмахсенĕн кулли –
хуран айĕнче кӳкен çаппи çатăртатни анчах.
Çакă та – харамлăх!
Ыттисене хĕсĕрлесе ăсли ухмаха тухать,
чĕрене парне те пăсать.
Ĕçĕн вĕçĕ – пуçламăшĕнчен лайăхрах;
тӳсĕмли мăнаçлинчен лайăхрах.
Эсĕ чунупа çилленме ан васка:
çилĕ вăл ухмахсенĕн ăшне йăва çавăрать.
«Иртнĕ кунсем хальхи кунсенчен мĕншĕн лайăхрахчĕ-ши.» – тесе ан кала,
мĕншĕн тесен çакна эсĕ ăслă пулнăран ыйтмастăн.
Ăслăлăх эткер пекех аван,
Уйрăмах – хĕвеле куракансемшĕн:
унăн хӳттинче кĕмĕл хӳттинчи пекех;
çакă чи лайăххи: вăл пурнăç парать.
Пăх-ха Турă ĕçĕ çине:
Вăл кукăр тунине кам тӳрĕ тума пултарайĕ.

Тĕрĕс-тĕкел кунсенче ырлăхпа усă кур, синкерлĕ кунсенче шухăшла, ăна та куна та Турă этем Хăйне хирĕç нимĕн те ан калайтăр тесе тунă.

Хамăн харам кунсенче эпĕ пурне те çителĕклех куртăм: тӳрĕ çын тӳрĕ пурăннă чухнех вилет; усал çын усал тусах нумай пурăнать. Хăвна пĕтерес темесессĕн ытлашши тӳрĕ те, ытлашши ăслă та ан пул. Вăхăту çитиччен вилес темесессĕн усал ан пул, ăссăр-тăнсăр ан пул. Пĕрне тытса пыни, тепĕрне пăрахманни, аллунтан яманни – лайăх: Турăран хăракан пур асапран та хăтăлĕ.

Ăслăлăх ăслă çынна хулара пуç пулса тăракан вунă çынран та вăйлăрах тăвать. Çĕр çинче çылăха кĕмесĕр ырă туса çеç пурăнакан тӳрĕ çын çук;

çавăнпа ĕнтĕ калакан сăмаха пурне те ан тăнла – хăвна чуру мĕнле хăртнине итлемелле ан пултăр санăн; чĕрӳ пĕлет – эсĕ хăв та ыттисене сахал мар хурланă...

10. Вилĕ шăна мирă шăратаканăн ырă шăршăллă
сĕрĕшне пăсса пăсăк шăршă тăвать;
хисеплĕ çынна чĕптĕм ухмахлăхĕ те

унăн ăслăлăхĕпе чысне
çавăн пекех пăсса хăварать.
Ăслă çыннăн чĕри – сылтăмалла,
ухмах çыннăн чĕри – сулахаялла.
Ухмах çын çулпа çеç утса пырать –
вăл ухмах пулнине кирек кам та курать.
Сана çилленнĕ пуçлăх чĕри вутла хыпса илтĕр,
эсĕ тухса кайма ан васка:
йăвашлăх пысăк айăпа та каçарттарать.

Çĕр çинче эпĕ тата усаллăх куртăм, ăна хуçаран килекен айăп темелле: пĕлменлĕхе мала хураççĕ, пуянсем вара кĕçĕне юлаççĕ. Эпĕ чура пулмалли çынсем – утпа çӳренине, кнеçсем вара, чурасем пек, çурран çӳренине куртăм.

Шăтăк алтакан çав шăтăках ӳкет,
хӳме çĕмĕрекене çĕлен сăхать.
Вырăнтан вырăна чул куçаракан пилĕкне хуçма пултарать,
Вутă çуракан вутранах инкек курма пултарать.
Пуртă мăкалсассăн, ăна хăйраса çивĕчлетмесессĕн,
ытларах вăй хума тивет;
ăслăлăх вара çакна тӳрлетме пĕлет.
Çĕленĕ тухатиччен сăхнă пулсассăн,
ĕнтĕ тухатаканĕ те кирлĕ мар.
Ăслă çын çăварĕнчен тухнă сăмах – тивлетлĕх,
ухмах çыннăн çăварĕ вара ăна хăйне пĕтерет:
вăл калама тытăннă сăмахăн пуçламăшĕ – ухмахлăх,
калаçăвăн вĕçĕ – ăссăрлăх.
Ухмах çын нумай калаçать.
Этем мĕн пуласса пĕлмест.
Ун хыççăн мĕн пуласса ăна кам систерĕ.
Ухмах çынна хăйĕн ĕçĕ ĕшентерет,
мĕншĕн тесессĕн вăл хула çулне те пĕлмест.
Эй çĕрĕм, патшу тарçăсем хушшинчен тухнă пулсассăн,
пуçлăхсем ирех ĕçме-çиме пикенеççĕ пулсассăн,
хуйхă çитрĕ ĕнтĕ сана!
Эй çĕрĕм, патшу чыслă ăруран çуралнă пулсассăн,
пуçлăхсем иртĕхме мар, вăй илмелĕх çеç,
хăй вăхăтĕнче çеç апатланаççĕ пулсассăн, ырлăх сана!
Наянлăха пула мачча авăнса анать,

алă уссассăн, çурта шыв кайма тытăнать;
Ёçке рехетленме ирттереççĕ,
эрех пурнăçа хаваслăрах тăвать;
çакăншăн вара кĕмĕл сапаланать.
Патшана ăшунта та ан хурла,
пуяна çывăрмалли пӳлĕмӳнте те ан сивле:
вĕçен кайăк сан сăмахна урăх çĕре çитерме пултарать,
вăл, çунатлăскер, эсĕ мĕн каланине каласа кăтартма пултарать...

11. Çăкăрна шыв тăрăх яр –
Ăна эсĕ чылай кайран тупатăн.
Хăвăн пайна çичĕ-сакăр çыннах пар:
çĕр çинче мĕнле инкек пуласса пĕлместĕн эсĕ.
Çумăр пĕлĕчĕсем тулса çитсессĕн,
çĕр çинче çумăр çума пуçлĕ;
Йывăç кăнтăр еннелле е çурçĕр еннелле ӳксессĕн, вăл ӳкнĕ вырăнтах выртса юлĕ.
Çиле сăнаса тăраканĕ акаймĕ;
çумăр пĕлĕчĕсем çине пăхаканĕ вырса илеймĕ.
Эсĕ, çил çулĕсене пĕлеймен пекех, йывăрланнă арăм варĕнче шăмăсем мĕнле ӳснине пĕлеймен пекех, пурне те тăвакан Туррăн ĕçне те пĕлеймĕн.
Ирхине вăрлăхна ак, каçхине те аллуна канăçлăх ан пар, мĕншĕн тесессĕн эсĕ пĕри е тепĕри ăнăçлăрах пулассине е иккĕшĕ те пĕр пекех аван пулассине пĕлместĕн.
Çутă хаваслă, хĕвеле курма куçа кăмăллă.
Этем нумай çул пурăнас пулсассăн те ĕмĕрĕ тăршшĕпех савăнса пурăнтăр, анчах хура кунсем нумай пулассине те ан мантăр: мĕн пуласси пĕтĕмпех – харамлăх!
Эй Яш ача, çамрăк чухне савăн, чĕрӳ санăн çамрăклăхра савăнăç курса юлтăр, чĕрӳ ăçталла туртать, куçу ăçталла пăхать – çавăнталла кай; анчах пĕлсе тăр: çакăншăн пуриншĕн те Турă сана суд умне тăратĕ.
Хурлăха хăвала чĕрӳ патĕнчен, пăрса яр усаллине ӳтӳ патĕнчен: ачалăхпа çамрăклăх та – харамлăх...

# Чăваш поэзийĕнчи авалхи еврей литературин мотивĕсем

## ЯКОВ ТУРХАН

### Раштав çĕрĕ

Пĕлĕт çилпе тасалчĕ
Çĕр çанталăк уйăрчĕ
Çил те иртсе лăпланчĕ,
Çĕр илемĕ палăрчĕ.
Çӳлте-çӳлте çăлтăрсем
Вут пек çунса тăраççĕ
Вĕсен хушшинче хăватсем
Çиçĕм пек иртсе çӳреççĕ.
Нумай çăлтăр хушшинче
Çĕнĕ çăлтăр çутăлчĕ,
Тĕттĕм халăх хушшинче
Турă ачан çуралчĕ.
Çуралнă ачана мухтаса
Çӳлте ангелсем юрлаççĕ,
Çынсем ырлăх пуласса
Юрă-сăввипе калаççĕ.
Пĕлĕтпеле çĕр хушши
Илемлĕ сасăпа янăрать,
Ача шуйттана çĕнесси
Пур тĕлтен те янтăрать.
Тĕрĕслĕх хĕвелĕ çуталса
Тĕнче çине сарăлчĕ,
Тĕттĕм унтан хăраса
Тамăк тĕпне пытанчĕ.
Хирти кĕтӳçсем кĕтӳпе
Шурăмпуç кĕтсе тăраççĕ,
Ангел çиçсе пынипе
Сасартăк хăраса чĕтреççĕ.
Ангел вĕсене пуçарса
Йăвашшăн лăпкă каларĕ:
«Кайăр пуç çапма васкаса
Витере Христос çуралчĕ!»

Кĕтӳççем хытă савăнса
Ырă хыпара ĕненчĕç,
Çамрăк ачана мухтаса
Витене пырса пуç çапрĕç.
Паянтан вара аттешĕн
Çăлăнăç ĕмĕчĕ тупăнчĕ, –
Ирсĕр тĕттĕм шуйттаншăн
Пысăк хурлăх тупăнчĕ.

## Хăрушă парне

Ирсĕр халăх хушшинче
Çăлакан Христос курăнать-çке.
Çăлакан Христос куçĕнчен
Ирсĕр халăх пăхать-çке...
Мĕншĕн халăх ун çине
Куçпа тинкерсе пăхатăн.
Мĕншĕн Туррăн ывăлне
Пархатарсăр, пăталатăн.ĕĕ
Мĕншĕн кĕвĕç куçупа
Шуйттан хыççăн каятăн...
Ах, ах, Туррăн халăхĕ!
Хуна ылхан тупатăн.
Эсĕ тĕнче пуçлăхне
Хĕрес çумне пăталатăн:
Ĕмĕр пырас ылханна
Хыт чĕрӳпе сисместĕн,
Шутсăр урса, пăлханса
Ачусем çине илетĕн...
Акă ĕнтĕ Çăлакан!
Йывăç çине пăталатăн:
Пире ĕмĕт Паракан,
Пирĕншĕн хурлăх куратăн:
Пĕтĕм тĕнче Тытакан,
Сана тĕнче пăталарь...
Ирсĕр этем намăсран
Турă умĕнче тармарĕ.
Чунлă этем тĕнчере
Чи усаллиех пулайрĕ...

Кун-пуҫ ҫути пур чухнех
Ҫĕре тĕттĕм хупларĕ.
Хĕвелпе уйăх хурланса
Ҫуттисене ҫухатрĕҫ.
Этемсене чĕтретсе
Ҫĕр тĕттĕмпе хупланчĕ.
Хăрушă тĕттĕм варринче
Хăрушă сасă илтĕнчĕ:
«Аттем, аттем! Ҫак тĕнче
Хăйне юнпа пĕрĕхтерчĕ...
Аттем, аттем! Мана хĕн...
Эсĕ мана хăвартăн...
Аттем, Аттем! Мана хĕн
Сывлăша сана паратăп».

## ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

***

Пурнăҫ панă Аслă Турă,
Тĕнчене тытан хăват,
Кăтартан хура та шурă,
Шайлашса вăл ҫул хывать.

Хамăр халăхăн тымарĕ
Икĕ пин ҫул хушшинче
Ҫухалмарĕ те хăрмарĕ,
Ҫитĕнет-ха йыш ҫинче.

Сивĕре маттур турачĕ
Типрĕ ĕнтĕ сахал мар.
Ун вулли хунав кăларчĕ,
Татăлман-ха тĕп тымар.

Халăх тав тăвать, Хуҫамăр,
Пиллĕхӳшĕн пуҫ тайса.
Тавтапуҫ! Куратпăр хамăр:
Эс хăвартăн упраса.

Пĕтнĕçем пĕтеççĕ ĕнтĕ
Халăхсем те çĕр çинче.
Чăвашсен апла пулин те
Пур тĕрек шăнăрĕнче.

Виç пахалăх – ырă кăмăл,
Ырă шухăш, ырă ĕç
Пур чухне упранăн çăмăл,
Тӳсĕм, тӳсĕм кирлĕ çеç!

Çак ăса ăнкарчĕ халăх
Вăрăм ĕмĕр тăршшĕнче.
Кирлĕ, кирлĕ виç пахалăх
Кулленхи пурнăçĕнче.

Ырă ĕç тени пулаймĕ
Тирпейӳ çитеймесен,
Пурлăхпа пӳлмӳ тулаймĕ
Упрама пĕлеймесен...

Туррăмăр, йĕрке тумашкăн
Пулăшса пырсам пире,
Вăй парсам тăн-тăн утмашкăн
Пăтрашу-хĕвĕшӳре.

Сас паратăп-ха хăюллăн
Аякра та çывăхра.
Çывăрсан – кая та юлăн
Арăш-пирĕш вăхăтра.

Пурнасах тесе çунатпăр
Хĕвĕшӳллĕ тĕнчере.
Те хухатпăр, те хунатпăр –
Ăнкармашкăн хĕнтерех.

Пар та пар кăна тееймĕн,
Хамăрăн та памалла.
Ырлăхпа ыркурнăçемĕн
Ырăпа тавăрмалла.

Ахăр, çакă тивĕçтерĕ
Шайлашу тарасине.
Ахăр, çак йăла çитерĕ
Аслăрах тĕллев патне.

Пиллесемччĕ, Аслă Турă,
Халăха ăс-хал, вăй-хал.
Ун хавалĕ пултăр ырă,
Ĕçĕ пытăрччĕ кал-кал.

Пултăр вăл тĕнче илемĕ,
Куртăр чăн савăнăçне.
Халĕ хам сăмах илем-и
Сăнлама ун кун-çулне.

Туррăм, кĕл тума тăратăп
Ăшă-ăшă питĕмпе,
Кирлĕрех сăмах шыратăп
Çемçеленнĕ чĕлхемпе.

Хăй камне ан мантăр халăх,
Пĕлтĕр хăй аваллăхне.
Ӳстĕр ун чунри пахалăх,
Тайтăр хăйĕн вăй-халне.

## ПЕТĔР ЛЬВОВ

***

Мĕн тунă, ĕçĕ пурте Аслă Туррăн,
мĕн кирлĕ, парĕ кирлĕ вăхăтра Вăл – пурăн!
Сахал тесе ан тăр ху – йышăн кăмăлтан:
Панийĕ Туррăн пулĕ ĕмĕрлĕх мул – курăн.

***

Нумай ĕç тумалла адамăн (ачисенĕн),
çĕклемĕ йывăр, терчĕ пысăк тӳр этемĕн.
Турра пĕлменĕ çеç çӳрет шик шăхăрса –
мĕн чухлĕ пулĕ тамăкра вĕсем ку темĕн!

***

Ятне туса аран хӗрес палли хуратпӑр,
калас кӗлле пӗлмен ҫине ҫурта ҫутатпӑр...
– Чӗтӗресе ӗҫлетӗр ҫын Турра!
Куна пӗлместпӗр. Ҫылӑха ҫапла тухатпӑр.

***

Пур такама ан мухтӑр – мухтӑр Пӗр Турра.
Пур такама ан тиркӗр – тиркейӗр хӑвӑра.
Ырри нихҫан ан чактӑр темшӗн урӑххишӗн,
Мӗн пур мӗн пурӗ кайтӑр яланах ырра.

***

Турра пӗлсе ҫитме ҫын шухӑшлатӑр шухӑш.
Христос тӳсни ҫинчен вӑл шухӑшлатӑр шухӑш.
Вӑл шухӑшлатӑр чун тухас сехет ҫинчен.
Суд, тамӑк, рай – ҫаксем ҫинчен ун пултӑр шухӑш.

***

Ак ҫитӗ тӗрӗс вӑхӑт, юлашки кун килӗ,
шӑпи ҫынсен икке пайланӗ. Турӑ илӗ
сӑваплине пӗр ӗмӗр чӗрӗ пурнӑҫа!
сӑвапсӑр – канӑҫмасӑр ӗмӗр-ӗмӗр вилӗ.

### *Ыйтусемпе ӗҫсем*

*1. Авалхи еврей литературин тӗслӗхӗсемпе паллашӑр. Турӑпа этем хутшӑнӑвӗ ҫинчен авалхи кӗнекесем еплерех ҫырса кӑтартаҫҫӗ.*

*2. «Юрӑсен юрри» текстри илемлӗх мелӗсене тишкерӗр. Еврей халӑхӗсен савнине сӑнлас традицисене палӑртӑр. Савнине тата Турра юратнине сӑнланинче мӗнле уйрӑмлӑх пур.*

*3. Тӗн литературине куҫарас ӗҫ чӑваш ҫӗршывӗнче аталанса пыни. Мӗншӗн поэзи тӗслӗхӗсене куҫарасси каярах пурнӑҫланать.*

*4. Тӗн литературине куҫарнӑ авторсен пултарулӑхӗнче авалхи еврей е тӗн литературин витӗмне асӑрхама пулать-и.*

*5. П. Яккусен, П. Львовӑн, Н. Кушмановӑн тӗн витӗмӗпе ҫырнӑ хайлавӗсемпе паллашӑр, вӗсене хак парӑр.*

### *Усӑ курмалли литература*

1. История всемирной литературы: в 9 т. Т. 1. М.: Наука, 1983. – С. 271-302.

# Турккӑ поэзийӗн пуянлӑхӗ

Турккӑ литератури питӗ ватӑ, ҫав вӑхӑтрах ҫамрӑк та темелле. Авалхи халӑх пултарулӑхӗнче тата классикӑлла поэзире тӗлӗнмелле чаплӑ литература палӑкӗсем пур. Ҫав хушӑрах проза жанрӗсем турккӑ литературинче XX ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринче кӑна аталанма тытӑннӑ.

Турккӑ халӑхӗ XII ӗмӗрте Вӑтам Азинче пурӑнакан ытти тӗрӗк йӑхӗсенчен уйрӑлса Кӗҫӗн (Малая) Азине куҫса килет. Халӑхӑн сӑмахлӑхӗнче пӗрлехи тӗрӗк тапхӑрӗнчен упранакан хайлавсем чылай: тӗнче, этем пулса кайни ҫинчен калакан мифсем, «Огуз-наме», «Кер-оглы» эпоссем. Харпӑр турккӑ фольклорӗ юмахсемпе, юптарусемпе, анекдотсемпе, юрӑсемпе (тюркю, мани, туюг, кошма) пуян. Халӑх сӑмахлӑхӗнчи юрӑра силлабика тата силлабо-тоника метрики тӗпре пулнӑ.

Ҫыруллӑ литература аталанӑвӗ, тӗпрен илсен, ислам тӗнӗн витӗмӗпе тата ҫӗршывӑн пурнӑҫӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Тӗпчевҫӗсем, тӗн витӗмне кура, литературӑна виҫӗ тапхӑра пайлаҫҫӗ: ислам тӗнӗччченхи тапхӑр, ислам тӗнӗ вӑхӑтӗнчи тапхӑр, Европа литературин витӗмӗпе ҫыхӑннӑ «Ҫӗнӗ литература» тапхӑрӗ. Ҫавӑн пекех ҫӗршывра пӑлхавсем пулса иртни, кӳршӗ патшалӑхсене пӑхӑнтарни, султан влаҫӗ юхӑнни те литература аталанӑвне хӑйне евӗр витӗм кӳрсе тӑнӑ.

Ҫыруллӑ турккӑ литературине пуҫарса яраканӗ Джела ад-Дин Руми (1207-1272) пулнӑ. Вӑл, Вӑтам Ази тӑрӑхӗнче ҫуралса ӳснӗскер, хӑй пурнӑҫӗн чылай пайне Турцире пурӑнса ирттерет, араб-перс тата турккӑ чӗлхисемпе сӑвӑсем ҫырать.

XIII ӗмӗрти литературӑра тӗн витӗмӗ тӗпре пулнӑ. Поэзире перс литературин жанрӗсене усӑ курса араб ҫыруллӑхӗпе ҫырмалла пулнӑ. Халӑх сӑмахлӑхӗнчи силлабика тата силлабо-тоникӑна аруз виҫи ылмаштарать. Классикӑлла виҫепе ҫырма меллӗрех пултӑр тесе сӑвӑра араб-перс сӑмахӗсемпе усӑ кураҫҫӗ. Ку вӑхӑтри литература икке пайланнӑ пулнӑ: султанпа ытти феодалсем классикӑлла литературӑна вуланӑ, ыттисем – «халӑх»

литературине. Классикăлла дастан литературинче пророк ĕçĕсене мухтасси, телейсĕр юрату çинчен каласси, перс литературин виçисене çирĕп пăхăнса çырасси характерлă пулнă. Сăвăçăн пултарулăхĕ çĕнĕ шухăша палăртассинче мар, унччен каланине тата та илемлĕрех çавăрса каласcинче палăрнă. Халăх сăвăçисем вара кулленхи пурнăçри терт-нуша çинчен, юратура телейлĕ пуласси çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă.

XIII ĕмĕрте Аксак Темир çарĕсем патшалăха аркатса каяççĕ. Литературăра, çакна май, суфизм идеологийĕ сарăлать. Классикăлла литература вăрçă терт-нушине пĕр сăмахсăр чăтса ирттерме сĕнет пулсан, халăх литературинче Темир патша саккунĕсен пĕлтерĕшне аркатакан Ходжа Насреддин пирки калакан анекдотсем сарăлаççĕ.

Пĕррехинче Насреддин Темира инжир çимĕçĕсене килсе парать. Лешĕ, темшĕн тарăхнипе, куна инжир çимĕçĕсемпе персе пĕтерет. Насреддин, юрать арăм сăмахне итлесе айва çимĕçĕсене илсе килмерĕм, тесе Турра тав тăвать.

Тепрере Темир Насреддина çурт лартма 50 пин манит парать. Лешĕ уй варринче пӳрт алăкĕ çеç лартса хурать. Çынсем Насреддинăн алăкне курсан Темрăн Тимĕр хапхине аса илĕç, унăн ĕçĕсемпе мăнаçланĕç. Ходжа ĕçĕнчен вара ахăлтатса кулĕç, тет вăл.

Айван ăслă курăнакан, ухмаха перекен Ходжа Насреддин сăнарĕ Турккă литературинче, сăмахлăхĕнче вăхăт иртнĕ май улшăнса, пуянланса пырать. Пĕрре вăл ăсĕпе катăкрах çынна пĕлтерет. Халап сюжечĕ унран куççăнах тăрăхланă пек йĕркеленет. Тепрере вăл хăй ухмаха пени урлă чиновниксен, судьясен, пуçлăхсен пĕлӳсĕрлĕхне, айванлăхне, хапсăнчăклăхне çиеле кăларать. Хура халăхпа пĕр чĕлхе тупма пултаракан, ăна тĕрĕсмарлăхран хӳтĕлекен пек те палăрать литературăра Насреддин сăнарĕ. Пурнăç çине оптимистла пăхакан, йывăр тата хăрушă ситуацине шӳте çавăрса хума пултаракан çын та вăл. Хăйĕнчен култарса йывăрлăхсем çинчен манма май парать.

Халăх литературинче çак авторсен ячĕсем палăрса юлнă: Юнус Эмре (XIII), Кайгусуз Абдал (XV), Пир

Султан Абдал (XVI), Джевхери (XVII), Караджаоглан (XVII), Вихии, Фадалоглу (XIX). Юнус Эмре (1240-1320) поэт-суфист пулнă май хăйĕн сăввисенче Турăна илеме ăсталакан пек хаклать, унпа пĕр пуласси çинчен ĕмĕтленет. Хăйĕн шухăшĕсене витĕмлĕрех, ăнланмалларах палăртма вăл халăх сăввин формине, илемлĕх мелĕсене, метрикине усă курать. Ансат сăмахсемпе çутçанталăк ӳкерчĕкĕсене, çынсен сăн-сăпатне ăсталать. Ку вара çĕнĕлĕх çеç мар, çак вăхăтшăн литература нормисене хирĕçлени те пулнă.

Турккăсем чылай тĕрĕк авторĕсене хăйсен классикĕсем тесе хаклаççĕ. Руми авторсăр пуçне çак списока Низамипе Навои те, Физули, Хафиз сăвăç та кĕреççĕ. Вĕсем хăйсен пултарулăхĕнче араб-перс литературин традицийĕсене, Вăтам Азинче сарăлнă жанрсемпе сюжетсене усă курнипе çакна сăлтавлама пулать пулĕ.

XVIII ĕмĕр вĕçĕнче султан тытса тăракан патшалăх юхăнма тытăнать. Пусмăра чăтайман хура халăх пăлхавсем çĕклени, тĕрлĕ вăрçăсенче çĕнсе илнĕ кӳршĕ патшалăхĕсем уйрăлса кайма тытăнни, окупацире пулни тата ытти те патшалăх юхăнасси патне илсе çитерет. Султан Европа çĕршывĕсенчен пулăшу ыйтать. Осман империйĕнче Европа культурине пĕлекен çынсем кирлĕ пулса тăраççĕ. Чылай çамрăк Анăçа кайса пĕлӳ илет. Турцире тухса тăракан хаçат-журналсенче Европа литератури пирки çырма, ун тĕслĕхĕсене куçарса пичетлеме тытăнаççĕ. Уйрăмах франци литератури турккă авторĕсемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Тинех çирĕп йĕркесене пăхăнакан араб-перс литературин традицийĕсене пăрахăçласа поэзине çĕнĕлĕхсем кĕртме май килет. Турккă литературине çĕнĕ формăсемпе жанрсем, мотивĕсемпе сăнарĕсем кĕреççĕ. Анăç литературин юхăмĕсен витĕмĕ те палăрма тытăнать. XIX ĕмĕрти авторсем тĕрлĕ ушкăнсем çине пайланаççĕ, никама пăхăнманлăха, ирĕклĕхе чĕнсе калакан сăвăсем çыраççĕ.

Ку вăхăтри турккă поэзине Назым Хикмет Ран (1902-1963) сăвăç пултарулăхĕ пысăк витĕм кӳрет. Вăл дворян çемьинче çуралса ӳснĕ пулсан та хура халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешет, пăлхава чĕнсе калакан сăвăсем

çырать. Вĕсен тĕп теми – ĕç халăхĕн, рабочисен, хресченчен, пулăçăсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешесси. Хикмет революци идейисемпе Мускавра пурăннă тапхăрта паллашать. Çак вăхăтрах вăл В. Маяковскипе курса калаçать, унăн сăвă хывас ăсталăхне ăша хывать. Хикмет традицилле формăсене сивленĕ. Кулленхи пурнăç чăнлăхне тĕрĕс палăртма май паракан сăмахсемпе формăсене, ирĕклĕ сăвă виçине кăмăлланă. Сăввисем оратор интонацийĕпе, хăйне евĕрлĕ рифмăпа, çĕнĕ, кĕтмен сăнарсемпе тата метафорăсемпе, унсăр пуçне, халиччен килĕшӳсĕр, поэзишĕн юрăхсăр шутланнă темăсемпе тата сюжетсемпе уйрăлса тăнă. XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче Назым Хикмет тĕнчере сарăлма пуçланă фашизм идейисене хирĕçлеме тытăнать. Кĕрешĕве чĕнсе калакан сăвăсем çырнăшăн ăна 28 çуллăха тĕрмене хупса лартаççĕ. Тĕрмере ларнă вăхăтра çырнă сăввисем лирикăлăхпа уйрăлса тăраççĕ, вĕсенче рифма, сăвă виçи, сăвва янăравлăхпа илем кӳртекен паллăсем çукпа пĕрех. Поэтшăн сăвăра чуна уçса калаçасси мала тухать. Вăл сăмахсене перекетлĕрех усă курса, конкретлăрах пулăмсем çинчен çырма тытăнать. Назым Хикмет тĕнче литературинче миршĕн, халăхсен пĕр танлăхĕшĕн кĕрешекен автор пек палăрса юлать. XX ĕмĕрĕн 60-80-мĕш çулĕсенче Хикметăн сăввисене чăвашла чылай автор куçарать. Турккă сăвăçне куçарасси чăн малтанах вăл миршĕн, пĕр танлăхшăн кĕрешекен пулнипе çыхăннă пулсан, каярахри куçаруçăсемшĕн вăл тăванла халăх авторĕ пулнипе çывăх.

Чăваш тата турккă халăхĕсем тăванла халăхсем шутланаççĕ. Вĕсен чĕлхинче, шухăшлавĕнче, сăмахлăхĕнче пĕрпеклĕхсем пулнине çакăнпа сăлтавлама пулать. В.А. Гордлевский хăйĕн тĕпчев ĕçĕнче каласа тухнă турккă юмахĕсен сюжечĕсем хушшинче чăваш юмахĕсене аса илтерекен тĕслĕхсем чылай пулнине палăртма пулать [Гордлевский, 1961]. Унсăр пуçне, истори аталанăвĕнче икĕ халăх хушшинче кайран та тĕрлĕ шайри çыхăнусем чылай пулса иртеççĕ. XIII ĕмĕртен турккă çĕршывĕ мусульман тĕнне тытса тăракан культура центрĕ пулса тăрать. Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнче пурăнакан историксем, чĕлхеçĕсем хушшинче Осман им-

перине кайса пӗлӳ илекен, унта юлса вӗрентӳ ӗҫӗпе ӗҫлекен тӗпчевҫӗсем пулни паллӑ. Турккӑран та тӗрлӗ ученӑй-богословсем Пӑлхар патшалӑхне килсе ҫӳренӗ. Р.М. Амирханов каланӑ тӑрӑх, Абу-л-Али Хамид ибн Идрис ал-Булгари XII ӗмӗрте Бухара, Нишапур хулисенче пӗлӳ илнӗ, тӑван ҫӗршыва таврӑнсан наука шкулӗ йӗркеленӗ. Унӑн вӗренекенӗ Сулейман ибн ас-Саксини араб тата перс чӗлхисемпе этикӑлла дидактикӑлла ӗҫсем ҫырнипе паллӑ. Хадж-ад-Дин тата Хасан ибн Йунус ал-Булгари пиччӗшсем Ирак ҫӗршывӗнче тарӑн пӗлӳ илнӗ, анлӑ тавра курӑмлӑ ҫынсем шутланнӑ. Вӗсем фармакологи, медицина, этика, риторика ӑслӑлӑхӗсемпе тӗпчев ӗҫӗсем ҫырнӑ [Амирханов, 1993. С.65-66].

Хусан ханлӑхӗ вӑхӑтӗнче чӑвашсем мусульман тӗнне йышӑнса тутара ҫаврӑнма пуҫланӑ. Вӗсен хушшинче кайран ходжана, проповедника тухакан пултаруллӑ ҫынсем те пулнӑ. Турккӑ литературинче XV ӗмӗрте паллӑ йӗр хӑварнӑ Хамди Челеби ЎМахмет ходжа ЧелепиЎ (1449-1503) чӑвашра ҫуралса ӳснӗ. Юхма Мишши каланӑ тӑрӑх, вӑл Хусан ханӗсемпе туслӑ пулнӑ, мусульман тӗнне йышӑннӑ. Хӑй тӑрӑхӗнчи чӑвашсене ҫӗнӗ тӗне ҫавӑрас тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Челепи Меккӑна хадж тума каять, каялла таврӑннӑ чухне Стамбула кӗрет. Унта пӗр хушӑ академире ӗҫлесе пурӑнать.

Хамди Челеби тӗрлӗ сӑвӑсем ҫырнисӗр пуҫне «Пятерица» ярӑмӗпе паллӑ. Ытти авторсемпе танлаштарсан, вӑл «Лейлипе Меджнун» поэмине ҫеҫ Низамине евӗрлесе ҫырать. Тепӗр виҫӗ поэмине Фирдоусипе Сулейман Челебине, Язызджиоглу сӑвӑҫсене евӗрлет. «Мухамадия» (Дар влюбленных) поэма оригиналлӑ хайлав шутланать. Кунта ислам тӗнне мухтаса каласси тӗпре, ҫавӑн пекех суфизм сӗмне усӑ курса Осман империйӗн ку чухнехи пурнӑҫне, йӑли-йӗркисене сӑнласа панӑ.

«Ҫавӑн йышши тепӗр ходжи (Меккӑна кайса килнӗ мӑсӑльман) Могалим ятлӑскер пулнӑ, вӑл XVI ӗмӗрте Пӳлер хулинче пурӑннӑ. Ҫав ҫынна пытарнӑ сӑрта чӑвашсем «Валем хуҫа сӑрчӗ», сӑрт айӗнчен юхса тухакан ҫӑла «Валем хуҫа ҫӑлӗ» тенӗ. Валӗм хуҫа (Малӗм хуҫа, Мальӑм хоҫа) ячӗ Сӑр-Ҫавал тӑрӑхӗнчи чӑвашсемшӗн те,

Шур Атăл тăрăхĕнчи чăвашсемшĕн те паллă пулнă. Г. Тагирджанов тĕпчевçĕ çырнипе паллашсан, Аслă Валĕм хуçа Пӳлерте XV ĕмĕртех пурăннине, кайран вăл турккă çĕрне кайса тĕн реформи тунине, 1516 çулта çавăнтах çĕре кĕнине пĕлме пулать. Аслă тата Кĕçĕн Валĕм хуçасем те, Челепи хуçа та чăвашсене ислама çавăракансем пулнă ĕнтĕ. Хăйсем вĕсем чăвашранах тухнă теме пулать» [Родионов, 2006, 53 с.].

XVIII ĕмĕр вĕçĕнче, XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче Раççейре крепостла тата капитализмла пусмăр уйрăмах вырăс мар халăхсемшĕн йывăрланса çитет. Мусульман тĕнĕн витĕмне сарас тĕлĕшпе ĕçлекен Турккă çĕршывĕ Атăлçи халăхĕсене çĕнĕ тĕнре çăлăнăç тупма пулать тесе илĕртет, хăйсем патне куçса пыма чĕнет. Тутарсем йышлăн Турцие куçса кайма тытăнаççĕ. Чăвашсем хушшинче те ырă пурнăç шыраса турккăна каякансем пулнă. Халăх сăмахлăхĕнче çĕнĕ çĕре каякансен юррисем пур. Вĕсенче турккăра акмасăрах тырă шăтать, вырмасăрах кĕлте тулать, тесе каланă çын сăмаххине ĕненнишĕн, тăвансенчен уйрăлса килнишĕн, çĕнĕ çĕртре калама çук пысăк йывăрлăхсене чăтма тивнишĕн кулянать лирика геройĕ.

Н. Шелепи çырса илнĕ халăхра çӳрекен халапсем хушшинче чăвашсем Константинополь хулине тунă çĕре хутшăнни çинчен калани те пур. Кунта та лайăх пурнăç шыраса килнĕ чăвашсен терт-нуша тӳсме тивет. Вĕсем хăйсен утăмĕшĕн ӳкĕнеççĕ, каялла таврăнса асатте-асанне çĕршывĕнче çĕре кĕме çуккишĕн кулянаççĕ.

Д. Архиповăн «Константинопольти чăвашсем» очеркĕнче те çак тема тĕпре. Константинополь хулинче атăпушмак çĕлесе пурăнакан чăвашсем кунта куçса килнишĕн те, çĕнĕ тĕне йышăннишĕн те ӳкĕнеççĕ, каялла таврăнма çуккишĕн кулянаççĕ. Вĕсемшĕн кунта килнĕ кашни чăваш чи хаклă хăна вырăнĕнче.

Турккă тата чăваш хăлăхĕсем хушшинчи çыхăну паянхи кун та çирĕп-ха. Пĕр-пĕрин культурипе, чĕлхипе, литературипе кăсăкланасси аталансах пырать.

## *КУÇАРУСЕМ*

*Фольклортан*

### Чăпар пăлан хӳхлевĕ

– Сунарçă эс хĕрхен мана, терменĕм çук текех,
Хăварччĕ çакăнта мана, çак юнлă тĕм панчех.
Сӳнет куçра хĕвелĕм, вилĕм куçăм умĕнчех...
Йĕрет чăпар пăлан, хӳхлет, йăванчĕ çĕр çине.

– Çапла-ши эс, этем ачи, çав тер выçтах, кăра.
Амантрăн эс мана, мухтантăн. Вăйсăр ман ура.
Епле сикет пепкем йĕре-йĕре халь ман тавра...
Хӳхлет хитре пăлан, хӳхлет, йăванчĕ çĕр çине.

– Хашкаççĕ учĕсем. Çынсем васкаççĕ тир сӳме.
Чакать хăватăм, сивĕ çапрĕ ĕнтĕ ӳтĕме.
Камах хĕрхенĕ ӳлĕмрен ман тăлăх пепкеме...
Йĕрет чăпар пăлан, йăванчĕ çĕр çине.

*В.Ахун куçарнă*

### Ашшĕпе хĕрĕ

– Сан валли туянтăм, хĕрĕм, тутăр.
– Ай, аюк, аттеçĕм, кирлĕ мар.
– Куçлă çĕрĕ, хĕрĕм, сана пултăр.
– Ай, аюк, аттеçĕм, кирлĕ мар.
Ав çынсем кĕрӳ шыраççĕ шутсăр,
Эсĕ те шыраччĕ маншăн мăшăр.

– Сан валли хитре чăлха туянтăм.
– Ай, аюк, аттеçĕм, кирлĕ мар.
– Хаклă мăй çакки илсе çактарăп.
– Ай, аюк, аттеçĕм, кирлĕ мар.
Ав çынсем епле кĕрӳ шыраççĕ,
Маншăн мăшăр эсĕ те куçлаччĕ.

– Ылтăн сулă эп сана парнелĕп.
– Ай, аюк, аттеçĕм, кирлĕ мар.
– Саншăн чаплă çут ĕнчĕ тиртерĕп.
– Ай, аюк, аттеçĕм, кирлĕ мар.
– Эп сана çыруçăпа пехиллĕп.
– Ай, часрах, аттеçĕм, хирĕçлемĕп.

*В.Ахун куçарнă*

## ЮНУС ЭМРЕ

***

Юрату тинĕсне эп путатăп,
    ўксе шыв тĕпне эп утатăп.
Çут тĕнчере те, леш тĕнчере те пулăп,
    черетпе çулсем кумăп.

Хумсен хушшинче путнипех
    пулă пек эпĕ вилмĕп, эпĕ утăп.
Шăпчăк кайăк пулса юрласа,
    Савнине шыраса эпĕ тупăп.

Сан хуплакан инкек-асапа
    эпĕ сирĕп те утăп.
Телей тĕнчине каймалли çула
    саншăн, савниçĕм, тупăп.

Юнус, юрату тыткăнне çаклансан
    эс нихçан та тухаймăн.
Инкек, эс мана савнипе юнашар чух
    нихăçан та мана тупаймăн.

*М.Юхма куçарнă*

## ОКТАЙ РИФКАТ

### Кĕрхи тĕлпулусем

Хул çине бурка пек пĕлĕтсем уртса ятăм,
Вилес пек юратса сан пата пыма тухрăм.

Çул çине, авă, ылтăн сапса тухнă тейĕн,
Çав çулпа эп утатăп çунат хушнă тейĕн.

Кĕркунне çитнипе ман хула та ват çын пек,
Сарă çулçă тăкса, йывăçсем тĕлĕреç пек.

Халь санпа юнашар эп, сана çеç итлетĕп,
Эс мана савнине, кĕтнине эп пĕлетĕп.

Анчах мĕншĕн кашни сăмахху питĕ сивĕ,
Хул çинчи бурка пек пĕлĕтсем те, ав, кивĕ.

*М.Юхма куçарнă*

## НАЗЫМ ХИКМЕТ

### Икĕ юрату

Пĕр чĕрере икĕ юрату
пулма пултараймасть,
суя
пултарать.

Сивĕ çумăрсенĕн хушшинче
çĕрле отельти пӳлĕмре месерле выртатăп,
куçăмсем маччана тинкереççĕ,
пĕлĕтсем шăваççĕ мачча тăрăх,
йĕпе çул çинчи грузовик евĕр
сылтăмра, инçетре
   шурă пĕр çурт
               çĕр хутлă-и, тен
тăрринче ылтăн шевле вылять.
Пĕлĕтсем шăваççĕ мачча тăрăх
арбус тултарнă кимĕ евĕр, хĕвел
               тулли пĕлĕтсем,

ларатăп иккен пĕр çуртăн эркерĕнче
пит çине шыв çути ӳкет,
пĕр-пĕр юхан шыв хĕрринче-им
е тинĕс хĕрринче-шим.
сиксе тăмашкăн вырăн çинчен
чупмашкăн çумăр айĕнче,
чупмашкăн вокзала.
– Эй, машинист, шăллăм,
илсе çитер мана часрах унта.
– Ăçта.

*Б.Чиндыков куçарнă*

***

Берлинта «Астория» ресторанта
пĕр официантка пурччĕ
кĕмĕл тумлам пĕр хĕр.
Тулли, йывăр ывăс çийĕн кулса пăхатчĕ мана.
Çухатнă çĕршывăмăн çĕрĕсене асилтерчĕ.
Анчах пĕлместĕп, мĕн-ма
куç айĕсем кăвакчĕ унăн хушăран.
Унăн сĕтелĕ хушшине ларма
Тӳр килмерĕ.
Пĕрре те пулин лармарĕ манăн
сĕтел хушшине.
Ватăла пуçланă пĕр çынччĕ.
Чирлеччĕ-тĕр, ахăртнех,
диета апачĕсем çиетчĕ.
Куçăмран тунсăхлăн-тунсăхлăн пăхма пĕлетчĕ,
нимĕçле пĕлместчĕ анчах.
Виçĕ уйăх хушши, кунне виçĕ хут,
килетчĕ-каятчĕ,
кайран çухалчĕ.
Тен, тăван çĕршывне таврăнчĕ, тĕр,
Тен, таврăнмасăрах вилсе кайрĕ тĕр.

*Б.Чиндыков куçарнă*

## Керем пек

Сывлăш тăхлан пек йывăр.
Кăшкăрап,
кăшкăрап,
кăшкăрап,
кăшкăратăп:
– Килĕр,
тăхлан
шăратма
йыхăратăп.
Вăл калать мана:
– Эс хăв сассупах кĕл пулатăн, эй!
Керем
пек
çуна,
çуна...
«А-асапĕ
нумай,
хĕрхенмĕ
никам».
Чĕресен
хăлхисем
пăкă-
ланнă.
Сывлăш тăхлан пек йывăр...
Эп калатăп ăна:
– Кĕл пулам,
Керем
пек
çуна,
çуна,
Эп çунмасан,
эс çунмасан,
эпир çунмасан,
епле тухĕç
тĕттĕмрисем
çутта, тăван!.
Сывлăш тăпра пек нӳрĕ.
Сывлăш тăхлан пек йывăр.

Кăшкăрап,
кăшкăрап,
кăшкăратăп:
– Килĕр,
тăхлан
шăратма
йыхăратăп!..

*Г.Дегтярев куçарнă*

**Çуллахи çумăрсем**

Хĕвелпе тумхаллăн, хĕлĕхлĕн çиçеççĕ
Сар хĕр çӳçĕ евĕр капăр çумăрсем.
Нӳрĕ çурт витийĕ – лăпкă канлĕх
Сăрхăнать майĕпен ăшăма.
Эп кĕтетĕп.

*Г.Дегтярев куçарнă*

**Каллех çумăр çинчен**

Çерçи чĕппи пек çумăр.
Сапрăм пӳрт çине
тул пĕрчи.
Çиет хыпăнса, тăкăр-тăкăр,
Çерçи чĕппи пек çумăр.

*Г.Дегтярев куçарнă*

***

Юр хупларĕ çула.
Эсĕ çук.
Чĕркуçлентĕм,
хирĕç тинкертĕм –
куçăм хупă.
Карап шумасть, самолет вĕçмест.
Эсĕ çук.
Сан умри стенана сĕвентĕм.
Калаçрăм, калаçрăм, калаçрăм –
Çăвара уçмарăм.
Эсĕ çук.
Аллăмпа сана сĕртĕнтĕм терĕм –
Аллăм хам питĕм çинче.

*Г.Дегтярев куçарнă*

***

Çитет черетĕм.
Тăрук ăсанăп пĕчченлĕхе.
Ни çĕрекен ӳтĕмрен хыпар пулмĕ,
Ни куç путăкĕнче хĕвĕшекен
хуртсенчен.
Тек вилĕм çинчен шутлатăп,
Черетĕм – çывăх, туятăп.

*Г.Дегтярев куçарнă*

**Верăна**

Килсем, терĕ мана,
Юлсам, терĕ мана,
Кулсам, терĕ мана,
Вилсем, терĕ мана.
Килтĕм.
Юлтăм.
Култăм.
Вилтĕм.

*Г.Дегтярев куçарнă*

**Каллех çĕршывăм çинчен сăмахăм**

Çĕршывăм, çĕршывăм, çĕршывăм.
Карттусăм юлмарĕ, асăнмалăх илсеттĕм,
Çул-йĕре такăрлатнă пушмакăм çĕтĕлчĕ.
Çири кĕпе те, кăмăллаттăм, мăртăхрĕ.
Эс пĕртен-пĕр: çӳçĕмсен шурринче,
чĕрем инфарктĕнче,
çамкам хутламĕнче,
çĕршывăм, çĕршывăм,
çĕршывăм.

*Г.Дегтярев куçарнă*

**Каллех – çĕршывăм пирки**

Çĕршывăм, çĕршывăм,
эс тĕртнĕ, çĕленĕ ман çĕлĕкĕм
çук, авă, ман пуçăмра,
сан тăпрупа тусанланнă
пушмакăм та çук урара.

Бурса пиншакĕ те, ĕнтĕ,
çĕтĕлчĕ-çĕрчĕ ман çурăм çинче...
Эс, халь,
ман питĕм çинче кăна
юлтăн – вуншар
пĕркенчĕкре! – манăн
шурă çӳçре, тата – ман чĕрере,
ун çинчи çĕвĕкре.
Çĕршывăм, çĕршывăм...

*Г.Айхи куçарнă*

***

Тинĕс çийĕн ула пĕлĕт
хумĕ çинче кĕмĕл кимĕ
шывĕнче сарă пулă
тĕпĕнче сенкер курăк
çыран хĕрринче çарамас
пĕр çын
тем шутласа тăрать.
Пĕлĕт-им пулам,
е кимĕ-им
пулă-им пулам
е курăк-им...
Ни пĕлĕт, ни кимĕ, ни
пулă, ни курăк.
Тинĕс пулас пулать,
ывăлăм.
Пĕлĕтлĕ, кимĕллĕ,
пулăллă, курăклă тинĕс.

*Б.Чиндыков куçарнă*

## Арăма çыру

Пĕртен-пĕрскерĕм!
Юлашки çырăвунта:
«Пуçăм кашлать,
чĕрем сурать!» –
тесе çыратăн.
«Сана çакса вĕлерес
пулсассăн,

сана çухатап пулсассăн, –
тетĕн, –
пурăнаймастăп!»
Пурăнатăн, арăмăм,
хура тĕтĕм евĕр сĕврĕлĕ
манăн сăнарăм çил
çинче;
пурăнатăн, хĕрлĕ çӳçĕм,
чи нумаййи, çулталăк
кулянаççĕ
çирĕммĕш ĕмĕрте
вилнĕ çыншăн.
Вилĕм –
вĕрен çинче сулланса
тăран виле.
Çакнашкал вилĕме
ниепле те
йышăнасшăн мар чунăм.
Çапах
пĕлсем, савниçĕм:
мĕскĕн пĕр чиканăн
çăмлă хура эрешмен
карти пек алли
мăйăма вĕрен
тăхăнтартас пулсассăн,
кăвак куçăмсене хăранине
кураймĕç вĕсем
Назыма!
Эпĕ,
ĕнтĕркенĕ юлашки ирĕмĕн
тусăмсене тата сана курăп,
юрласа пĕтереймен
юррăмăн ыратăвне
хампа пĕрле çĕре илсе
кайăп...
Арăмăм манăн!
Ырă чĕреллĕ,
ылтăн тивлетлĕ,
куçусем пылтан та тутлă

хуртăм манăн,
ма çырса пĕлтертĕм-ши сана
мана вĕлерме пултарасса,
суд пуçланнă кăна
шутлас килмест этем
пуçне пули-пулми
çарăк евĕр касса
пăрахасса.
Атя, ан шутла çакнашкал
Ăптăр-каптăр пирки.
Тен, йăлтах-тăр йĕркеллĕ
вĕçленĕ.
Укçу пур-тăк кăштах,
ман валли ăшă кĕпе-йĕм ил,
ура турта пуçларĕ каллех.
Тата ан мансамччĕ çакна:
яланах лайăх япаласем
пирки шутламалла
тĕрмери çыннăн арăмĕн.

*Б.Чиндыков куçарнă*

## Шуйттан йĕрри

Йыттăмăн ячĕ Шуйттанччĕ,
-ччĕ тени ячĕпе çыхăнман,
ятне нимĕскер те пулман.
Ятне кура марччĕ пачах та.
Шуйттан вăл усал пулакан,
шуйттан вăл – ултавлă,
чее,
шуйттан – ăссăр-тăнсăр
хуть те хăçан.
Йыттăм ăслăччĕ.
Кăштах, тен, эп хам та
вĕлертĕм пулĕ
йыттăма,
пăхмашкăн пĕлеймерĕм.
Пăхма пĕлмесен
йывăç та ан ларт.
Аллинче хăран йывăç

терт пулать этеме.
Ишме шывра вĕренеççĕ
тейĕн.
Тĕрĕс.
Анчах путасса та
шывра путса вилеççĕ.
Миçемĕш ир ĕнтĕ
вăранатăп,
тимлетĕп тавралăха,
алăка чăрмалакан çук,
Макăрассăм килет
ăшăмран,
Макăрайманшăн
намăсланатăп.
Çын пекехчĕ.
Чĕр чунсенчен чылайăшĕ
çын пекех,
парăннăскерччĕ ним
юлмиччен.
Ирĕклĕхĕ – шăлĕсемпе
урисенчеччĕ,
евĕк кăмăлĕ – çăмлă
вăрăм хӳри вĕçĕнче.
Тунсăхлаттăмăр
пĕр-пĕриншĕн.
Чи аслă япаласем пирки
калаçаттăмăр:
выçлăх-тутлăх, хура-шур,
юрату.
Тăван çĕршыв тунсăхне çеç
пĕлеймерĕ,
мана тиврĕ вăл ĕç.
Сăвăçа çăтмаха йышăннă
тет...
Вилчĕ.
Ыттисем мĕнле вилеççĕ –
çавăн пекех:
çын-и, чĕр чун-и,
ӳсен-тăран-и,

тӳшек ҫинче-и, тăпрара-и,
   сывлăшра-и, шывра-и,
ăнсăртран-и, кĕтсе тăнă
   ҫĕртенех-и, ыйхăра-и –
ыттисем вилнĕ пек,
эс вилес пек.
Паян сулхăнра вăтăр
                  саккăр.
Вăрманалла пăхатăп
               балконран.
Хырсем яштака та ҫӳллĕ,
                     хĕрлĕ,
тӳпе сенкер-кăвак.
Ҫынсем йĕп-йĕпе тар
                  ăшĕнче,
йыттисен чĕлхисем пĕр
                   хăлаҫ,
кӳл еннелле утаҫ шыва
                   кĕме.
Ҫыран хĕррине пăрахса
                   хăвараҫ
ӳт-пӳ йывăрлăхне,
шывра пулăсем пек
             телейлĕн ишеҫ.

*Б.Чиндыков куҫарнă*

## Пурнăҫ

Ҫук, пурнăҫ вăл шӳт мар,
ҫине тăрсах эс пурăн,
ак, калăпăр, пакша пек:
нимĕскер те
тултан та эс, ҫӳлтен те
ан кĕт.
Ан туртăн пурнăҫран
ниҫта та,
тӳс, пурăн – ҫав кăна.
Шӳт мар-ҫке пурнăҫ вăл:
ак, сăмахран, персе
пăрахĕҫ

е сăнчăрлĕç аллусене,
е шурă халатпа
куçлăхпала
лабораторире ларсах эс
вилĕн,
анчах сан вилĕмӳ
нихçан та ху курман
этемсене
кун-çул пехиллĕ,
    пурăнтарĕ.
Иккĕленмесĕр вилĕн:
тĕнчере
Çак пурнăçран чăнни те
илемли
тек ним те çук.
Сывла, ватăличчен эс
пурăн,
супса çитсен те,
сăмахран,
олива йывăççи лартса ӳстер, –
ачу-пăчушăн мар, ак мĕншĕн:
ху вилмессе шанмашкăн пуçлăн,
вилĕмӳнтен хăра-хăрах
сан пурнăçу ăна çĕнтерĕ.

*П.Хусанкай куçарнă*

## ОРХАН ВЕЛИ

### Вăрçа каякан

Вăрçа каякан сарă çӳçлĕ ача!
Паянхи пек илемлĕ таврăн!
Сан тутуна тинĕс хуратнă,
Куç
харпăкне
тăвар шуратнă:
Вăрçа каякан шурă çӳçлĕ ача!

*Е.Лисина куçарнă*

## Асап

Кунсем илемлĕ пулĕç
Каçсем те лăпкă пулĕç
Сан шăм-шакку ĕшеннĕ...
Асап çеç ĕшенмест.

*Е.Лисина куçарнă*

## Канлĕх

Ку вăрçă вĕçленĕ-ши, тетĕн,
Выçăпа касăлатăп эп, тетĕн,
Ывăнатăп эп, тетĕн,
Канас килет, тетĕн,
Çывăрас килет, тетĕн,
Вилесчĕ, те!

*Е.Лисина куçарнă*

## Сулахай аллçм

Ӳсĕрĕлтĕм те
Сана, шеллесе, аса илтĕм,
Санпа калаçатăп, сулахай аллăм,
Хавшак аллăм,
Мĕскĕн аллăм.

*Е.Лисина куçарнă*

## Парăм сăвви

И, Стамбултан улма килет, нар килет,
Калла пăхрăм, манăн савнă яр килет,
Тупăш ыйтсан –
Ăраскал начар килет.
Анне, аннем,
Тĕрек пар.
Пуçăма тип-шар килет.

*Е.Лисина куçарнă*

## Ăшĕнче

Пирĕн тинĕссем – хĕвел ăшĕнче,
Пирĕн йывăççем – çулçă ăшĕнче.
Эпир килетпĕр, каятпăр, пурăнатпăр
Тинĕссемпе йывăççем хушшинче,
Çуклăх ăшĕнче.

*Е.Лисина куçарнă*

## Шăтăк сăвă

Кĕсье шăтăк, камсул шăтăк,
Çанă шăтăк, сăхман шăтăк,
Кĕпе шăтăк, кĕрĕк шăтăк,
Ара, эсĕ ала-им, тăванăм!.

*Е.Лисина куçарнă*

## Пуйăс сасси

Пĕччен эп.
Калаçмашкăн этемĕм те çук
Манăн çак хулара.
Сывлăх та сунмаççĕ мана.
Пуйăс сасси сĕртĕнет те чуна
Икĕ куçăм –
Ик тăрă çăл куç.

*Е.Лисина куçарнă*

## Уйрăлу

Пăхса тăратăп пăрахут хыçĕнчен:
Сикме юрамасть – пурнăç пурпĕр илемлĕ.
Арçыннăн йĕме юрамасть.

*Е.Лисина куçарнă*

## Тунсăхлатăп

Эрех ĕçетĕп – тунсăхлатăп;
Çыру илетĕп – тунсăхлатăп;
Çула тухатăп – тунсăхлатăп.
Мĕнпе вĕçленĕ ку – пĕлместĕп.

Ӳскӳтарта:
«Ах, хурлă эп», – тесе юрлаççĕ –
Эп тунсăхлатăп.

*Е.Лисина куçарнă*

**Пĕчченлĕх сăвви**

Шăплăх
Çынна епле хăратнине
Пĕччен пурăнманнисем
Пĕлмеççĕ.
Этем хăйпе хăй калаçнине,
Тĕкĕр умне чупса пынине,
Чун асапне
Пĕлмеççĕ.

*Е.Лисина куçарнă*

# Чăваш сăмах культуринчи Турккă çĕршывĕн сăнарĕ

*Фольклортан*

***

Истампул халапĕ кала пуçласан,
Ачасем макăра пуçларĕç...
Эпир Истампула, ай, кайиччен
Акмасăр тырă пулать, тетчĕç,
Вырмасăр кĕлте тулать, тетчĕç.

Эпир Истампула, ай, кайсассăн,
Аксассăн та тырă, ай, пулмарĕ,
Вырсассăн та кĕлте тулмарĕ,
Вутра çунтăр Чанкуш Якурĕ –
Хула пек кил-çуртăма салаттарчĕ.

***

Ырă пурнăç шыраса килсе лекрĕм Тĕрĕке,
Эх, юлташăм, юлташăм, атя кунтан тарар,
Эх, юлташăм, юлташăм, атя кунтан тарар.
Эпир каяс çул çинче чĕрĕ тамăк пур.
Чĕрĕ тамăк леш енче Хура тинĕс пур.
Хура тинĕс леш енче сĕм вăрмансем пур.
Сĕм вăрмансем леш енче çеçенхирсем пур.
Çеçенхирĕн варринче тăван ялăм пур.

## ЛЕОНТИЙ МОЛГАЧЕВ

### Вильгельмпе Мухамет

(*Сыпăк*)

Пирĕн патша çĕрĕнче
Кавказ ятлă тусем пур.
Кавказ тăвĕ хыçĕнче
Турккă патшин çĕрĕ пур.
Турккă патшин халăхĕ
Пурнать ислам тĕнĕпе,
Муллăх-пурлăх тĕлĕшрен

Тавлашаймасть пирĕнпе.
Нумай пулмасть турккăсем
Вăрçа тухрĕç сербсемпе;
Сербияпа болгарсем
Ăшăтасчĕ турăка.
Турккă патши çыннисем –
Ытла айван ачасем:
Çак халĕхи вăрçăра
Пурăнмарĕç лăпланса.
Нимĕç йĕкĕлтенипе,
Умне-хыçне пăхмасăр,
Пĕтĕм кучĕ-пуçĕпех
Кĕрсе ӳкрĕç путлăха.
Нимĕç патши пит чее,
Умне-хыçне астăвать,
Хăйин нимĕç халăхне
Пĕтересрен пит сыхлать.
Вăлă хăйĕн шухăшне
Россияпа Францине
Ик-виç тавлăк хушшинче
Ĕмĕтленнĕ пĕтерме...

Пыра-киле хăй Вильгельм
Курать ĕçсем начарне.
Пĕр хĕрринчен вырăссем,
Лерен Француз хĕртнине.
Мĕн тумалла нимĕçĕн.
Австрияра салтак çук,
Вырăс вăйĕ хисепсĕр,
Унăн çарри пĕтес çук.
Унта-кунта пăхать те
Курать Вильгельм турăка;
Хăш пуçлăхне йĕкĕлтет,
Хăшне илет укçапа...
Çапла нимĕç патшийĕ,
Ултавпа та илĕртсе,
Турккă патшин çаррине
Илсе килет Россие.
Хура тинĕс хĕрринчи

Хветуç ятлă хулана
Сĕм-тĕттĕм çĕр варринче
Çĕмĕрттерсе тупăпа.
Çак ĕç çинчен систерсен,
Пирĕн патша çилленчĕ,
Турккăсене хĕнеме
Пĕр самантра çар ячĕ,
Пирĕн çартан хăраса,
Турккă патши Мухамет,
Икçĕр пин çар пуçтарса,
Саркамăш çĕрне кӳрет.
Хăйĕн хырнă пуçĕпе
Тӳпетейлĕ Мухамет:
«Вильгельм ман тус», – тесе,
Питĕ лайăх шухăшлать.
«Мана Вильгельм пулăшать,
Унăн укçа пит нумай,
Мĕн кирлине вăл парать,
Хăйин тусне пăрахмасть».
Анчах нимĕç патшийĕн
Халĕ шухăш урăхла,
Мухамета вăл хăйех
Пуçлать кайран ятлама...

Çакна илтсен, Мухамет
Питĕ хытă çилленет,
Вильгельм панă çынсене
Килне ярать хĕнесе.
Вара намас кĕл туса
Саркамăшри çар патне
Пуçлăх туса суйласа
Ярать Искак пашине.
Саркамăшра турккăсем
Пурăнаççĕ савăнса,
«Кунта халĕ вырăссем
Çитеймеççĕ час», – тесе.
«Кавказ урлă каççан та,
Саркамăша çитиччен
Кунта ялан сăрт-çырма –

Час çитес çук вырăссем».
Çапла шухăшланипе,
Чĕлĕм чăпăк паккаса,
Салтакĕ те, паши те
Лараç ура хутлатса.
Хĕвел ансан выртсассăн,
Çĕр каçиччен çывраççĕ.
Çутăлсассăн тăрсассăн,
Каллех чĕлĕм хыпаççĕ.
Çăкăр-тăвар сахалтан
Шурă кĕрпе çиеççĕ,
Ытла халран каясран
Хăватлă тапак туртаççĕ.
Пирĕн патша çаррисем,
Çĕнмелле паттăрсем,
Вăл вăхăтра ерипе
Пыраç турккă çĕрĕпе.
Вĕсем пырас çĕр çинче
Тискер кайăк çеç çӳрет;
Сăрт та çыран хушшинче
Юхан сивĕ шыв кĕрлет.
Сăрт тăрринче çап-çутă
Нихçан пĕтми пăр тăрать,
Аяларах шап-шурă
Ик-виç аршăн юр выртать.
Тусем çине хăпарма
Питĕ кансĕр, хăрушă,
Тупăсене хăпартма
Темĕн тĕрлĕ асаплă.
Сăрчĕ çине хăпарсан,
Аялалла пăхма çук;
Астумасăр пăхсассăн,
Хăрамасăр чăтма çук.
Икĕ пăрлă сăрт хушши
Тĕп курăнми, лупашка,
Сăрчĕсенĕн аякки
Пит чăнкă та яп-яка.
Ура-алă тӳсейми
Сивĕ тăрать сăрт çинче;

Аялалла анасси
Кашни салтак пуҫӗнче.
Пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшса,
Пӗрин урлӑ каҫаҫҫӗ;
Шӑтпе чуна пусарса,
Теприн ҫине хӑпараҫҫӗ...

Пирӗн патша салтакӗ
Нимӗнрен те хӑрамасть:
Сӑрчӗ, ҫырми, тӑшманӗ
Ӑна пӗри чараймасть.
Ҫавӑнпала турӑка
Вӗсем сисмен вӑхӑтра
Пӗр тӗттӗм ҫӗр варринче
Илеҫ хӑвӑрт ҫавӑрса.
Ҫакна курсан, турккӑсем
Шартах сикеҫ хӑраса,
Ҫӑварӗнчи чӗлӗмсем
Ӳкеҫ хӗлхем кӑларса...

Вырӑс «урра» кӑшкӑрса,
Йӗннинчен хӗҫ кӑларать,
Штыкне мала тӑратса,
Турккӑпала хутшӑнать.
Каллех тамӑк пуҫланать...
Турккӑ суллать хӗҫӗпе,
Вырӑс, хӗҫне пӑрахса,
Ҫапать пӑшал аврипе;
Кунта турккӑ ахлатать,
Лере вырӑс янӑшать,
Йӗри-тавра ҫӗр чӗтрет,
«Урра», «Аллах» илтӗнет.
Чӗркуҫ таран юр ҫинче
Унта-кунта ҫын выртать,
Вилнӗ-вилмен ҫын ҫинчен
Чӗрри тӑшман хӑвалать.
Штыка хирӗҫ турккӑсем
Нумай вӑхӑт тӑраймаҫ.
Сакӑр-тӑхӑр сехетрен

Хĕç-пăшалне пăрахаç...
Çĕр пин ытла турккăран
Хĕрĕх пинĕ йалт пĕтнĕ;
Хăшне илнĕ тыткăна,
Нумайăшне вĕлернĕ.
Искак паша штабĕпех
Лекнĕ пирĕн тыткăна,
Çарĕн мулĕ пĕтĕмпех
Юлнă пирĕн алăра.
Çакна илтсен, Мухамет
Ансăр пулать хуйхăпа,
Нимĕç патши Вильгельме
Чунтан-вартан ылханать:
«Сăрă хырăм, типĕ пул,
Мĕн турăн эс манпала.
Турккă çаррин мĕн пур мул
Лекрĕ манăн тăшмана;
Пĕр хĕрĕх пин салтакăм
Пĕтрĕ тавлăк хушшинче,
Искак паша пуçлăхăм
Юлчĕ вырăс аллинче.
Мĕн тăвас-ши халь манăн.
Хĕç-пăшалăм пит сахал,
Нумай пĕтрĕ салтакăм,
Ĕçме-çиме пит сахал.
Аллах-Аллах, ан пăрах!
Мана уталанăшăн
Çав Вильгельме тавăрах!
Пăтлантăрах вăл маншăн»!
«Сăрă хырăм çурăлтăр;
Тепĕр алли ун типтĕр,
Вырăссене парăнтăр,
Патшалăхĕ веç пĕттĕр!..» –
Çапла пысăк хуйхăпа
Каять султан мичĕте,
Унта каçхи намасне
Кĕлтумашкăн чунĕпе...

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Авалхи тата хальхи туркă литератури пирки мĕн пĕлетĕр.*

*– Ходжа Насреддин пултарулăхĕпе, ун пирки çӳрекен анекдотсемпе паллашăр. Ăна тӳр килекен сăнар чăваш сăмахлăхĕнче е литературинче пур-и.*

*– Назым Хикметăн пултарулăхĕ çинчен каласа парăр. Унăн поэзири çитĕнĕвĕсем, çĕнĕлĕхсем.*

*– Назым Хикмет сăввисен чăвашла куçарăвĕсем, вĕсен пахалăхĕ.*

*– Чăваш халăх сăмахлăхĕнчи Туркă çĕршывĕн сăнарĕн пĕлтерĕшĕ.*

*– Туркă фольклорĕнче, литература тĕслĕхĕсенче чăваш тĕнчекурăмне тӳр килекен уйрăмлăхсем пур-и.*

*– Л. Молгачев çырнă «Вильгельмпе Мухамет» хайлавĕнче Рессейпе Туркă çĕршывĕ хушшинчи хутшăнусене сăнланă чух автор чăваш фольклорĕнчи мĕнлерех традицисемпе усă курать.*

### *Усă курмалли литература*

1. Алькаева, Л.О. Турецкая литература. Краткий очерк /Л.О. Алькаева, А.А. Бабаев. – М., Наука, 1967. – 187 с.

2. Алькаева, Л.О. Очерки по истории турецкой литературы (1908-1922 гг.) / Л.О.Алькаева. – М., Изд-во АН СССР, 1959. – 219 с.

3. Амирханов, Р.М. Татарская социально-философская мысль средневековья / Р.М. Амирханов. – Казань, ИЯЛИ, 1993. – 124 с.

4. Бабаев, А.А. Назым Хикмет. Жизнь и творчество / А.А. Бабаев. – М., Наука, 1975. - 380с.

5. Вилĕмсĕр кашкăр сасси. Тĕрк халăхĕсен литературин антологийĕ. – Шупашкар: «Аттил», 2006. – 233с.

6. Гордлевский, В.А. Избранные сочинения. 2 т. Язык и литература / В.А. Гордлевский. – М.: Изд - во вост. лит., 1961, – 557с.

7. Егоров, Н.И. Кам пулнă-ши Мехмет Ходжа-Челеби?/ Н.И. Егоров // Хыпар, 1991, юпа 3.

8. Революцичченхи чăваш литератури. Текстсем. I т., – Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 1984.–460 с.

9. Революцичченхи чăваш литератури. Текстсем. II т., I кĕнеке. – Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 1988.–431 с.

10. Родионов, В.Г. Чăваш литератури. XVIII-XIX ĕмĕрсем: вĕренӳ пособийĕ / В.Г. Родионов. – Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 2006. – 463с.

11. Юхма, М.Н. Древние чуваши (Древняя и средневековая история чувашского народа) / М.Н. Юхма. – Чебоксары, Изд-во «Чувашия», 1998. – 454 с.

12. Чăваш халăх сăмахлăхĕ: в 6 т. Т.3. – Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 1978. – 507 с.

# II СЫПĂК

# ТУХĂÇ ПОЭЗИЙĔНЧИ МОТИВ ПУЯНЛĂХĔ

## Тухăç литературинчи кĕреке кĕввисем

Эрехе, ĕçкĕ-çикĕне мухтасси тухăç литературинче анлă сарăлнă мотивсенчен пĕри шутланать. Эрех тени чылай халăхшăн мифологипе, тĕнпе çыхăннă пулăм. Авестăра «хоума» шĕвеке ырласа çырнă текстсем пур. Турă хăй те ашшĕпе амăшĕ çак асамлă шĕвеке ĕçнĕ хыççăн çуралнă, имĕш. Вăтам ĕмĕрти Иран, Вăтам Ази тĕпчевçисем çеç мар, Анăç ученăйĕсем те эрех çын сывлăхĕшĕн усăллă пулни çинчен тĕрлĕ трактатсем çырнă (О.Хайям «Науруз наме», Рудаки «Мать вина»...)

Эрех, чăн малтанах Турăна чӳклемелли ĕçме-çиме шутланнă. Ăна ĕçсен çын кăмăлĕ улшăннине кура унпа тĕрлĕ асамлă пулăмсене çыхăнтарнă. «Хоума славится тем, что после его употребления, бедный чувствует себя таким же мощным, как богач» [Козмоян. 1981. С. 74.].

О. Хайям рубаисенче кĕреке мотивĕ тĕпре. Ватă ăсчах ăна мусульман тĕнне тытса тăракансен икĕ питлĕхне хирĕçлеме усă курать. Зороастризм тĕнĕ эрехре сиен курман, ăна ĕçсе çĕр çинчи савăнăçсемпе киленсе пурăнма чĕнсе каланă. Мусульман тĕнĕ вара эрехе сивлет, шариат саккунĕсемпе килĕшӳллĕн пурăнма хушать. Омар Хайям эрехе мухтани урлă иран культурин авалхи традицийĕсене тепĕр хут чĕртсе тăратать. Унпа килĕшӳллĕн, эрех ĕçни – «это призыв к земным наслаждениям вопреки мусульманским проповедям... У древних египтян в разгаре пира через зал проносили скелет, чтобы напоминанием о смерти заставить пирующих острее наслаждаться жизнью» [Козмоян, 1981. С. 101].

Çакăнтах франци ориенталистчĕн Дж. Дофмистерăн шухăшне илсе пани те ырăнлă пулĕччĕ: «Человек непосвященный сначала будет удивлен и немного скандализирован тем местом, какое занимает вино в восточной поэзии. Однако в ней нет ничего общего с нашими за-

стольными песнями. Коран запрещал вино. Застольные песни Европы – песни пьяниц, здесь же это – бунт против Корана, против святош, против подавления природы и разума религиозным законом. Пьющий для поэта – символ освобождающегося человека, попирающего законы религии» [Брагинский, 1976, С. 160].

Суфизм поэзийӗнче эрех черкки – Турӑ вӗрентӗвӗ, чӑнлӑх тенине пӗлтерет. Лирика геройӗ эрех ӗҫме чӗнсе калани те Турӑна ҫывӑх пулма чӗнни пулать.

Эрехе мухтаса каласси Китай поэзийӗнче те пулнӑ. Вӑтам ӗмӗрсенчи поэтсем, Ли Бо, Ду Фу тата ыттисем те, эрех ҫылӑхлӑ тӗнче ҫинчен манса кайма пулӑшать тенӗ. Вӗсен шучӗпе, эрех ӗҫни сӑвӑҫа хавха кӳрет.

Эрех-сӑра чӑваш халӑх культуринче те пӗлтерӗшлӗ вырӑн йышӑнать. Чӑн малтанах вӑл турӑсене ҫураҫтармалли, чӳклемелли ӗҫме. В.П. Вишневский «Чӑвашсен авалхи ӗненӗвӗ ҫинчен» очеркӗнче чӑвашсем чӳк валли ятарласа ял халӑхӗпе сӑра вӗретни ҫинчен калать. «Ырӑ Турӑ хӑйне халалланӑ чӳке йышӑнтӑр тесен асӑннӑ кун тӗлне сӑра вӗретмелле пулнӑ. Чӳк япалин ҫураҫуллӑхӗ сӑрине ятарлӑ савӑтра вӗретнинчен, савӑчӗпе ахаль чух усӑ курманнинчен килет; савӑтне ятарлӑ вырӑнта упрамалла пулнӑ...» [Вишневский. 2004, С. 10]. Иккӗмӗшӗнчен, сӑра ваттисене, вилнисене асӑнмалли апат-ҫимӗҫ шутне кӗрет. Виҫҫӗмӗшӗнчен, сӑра ялйыша, йӑх-ҫемьене пӗрлештерсе тӑракан символ. Кӗр сӑри уявра, сӑмахран, кив тыр-пулпа ҫӗннине, кив сӑрапа ҫӗннине хутӑштараҫҫӗ. Пурнӑҫра та ҫапла киввипе ҫӗнни ылмашӑнса пытӑр, аталану пултӑр теҫҫӗ. Ватӑсене сума сӑвасси, хурӑнташсемпе хутшӑнасси те тӗпре кунта.

Хӑна-вӗрле пуҫтарсан юрланӑ кӗреке, ӗҫкӗ юррисенче те тӑванлӑх пӗрлӗхӗ тӗпе тухать. Хурӑнташсем сӑра ӗҫесшӗн, шӳрпе ҫиесшӗн ҫеҫ мар, пӗр-пӗринпе тӗл пулма, хутшӑнма пуҫтарӑнаҫҫӗ. Ку юрӑсенче ҫавӑнпа та хӑйне евӗрлӗ философилле шухӑш-кӑмӑл палӑрать. Телейпе усал, пурнӑҫпа вилӗм, пурнӑҫ тупсӑмӗ, илем, юратупа хаярлӑх, ырӑпа усал, тӑван тата ют ҫӗршыв – акӑ мӗн ҫинчен шухӑша каять кунта чӑваш ҫынни. Юрӑра халӑх талайӗ, тавракурӑмӗ палӑрать. Ҫамрӑк чух

савӑнни, тӑвансемпе туслӑ пурӑнни, юлташсемпе калаҫни пӗлтерӗшлӗ чӑвашшӑн. Юрӑсенче тӑванӗсене ырӑ апат ҫимӗҫшӗн, кӑмӑлласа пӑхнӑшӑн тав туни, хӑйсем патне хӑнана чӗнни те пур. Сӑра-эрехе асамлӑ ӗҫмеҫиме шутне кӗртнӗ. Туй вӑхӑтӗнче ав шерпете кӗҫӗн ҫынна ӗҫтерсе кӑмӑлне йӑвашлантараҫҫӗ, мӑшӑрлану каҫӗ валли хатӗрлеҫҫӗ. Ытлашши ӗҫнин сиенӗ пулнине те пӗлнӗ. Черкке тӗпӗнчен симӗс хурт курӑнасран хӑранӑ, унпа пӗрле ята ярасран, намӑс курасран шикленнӗ. «Чуваши говорят, что в винных бочках водятся черви (эрех хорчӗ)... Эрех хорчӗ остаются и в недопитых в кабаках стаканчиках вина, поэтому, чтобы остатками этими кабатчик впоследствии кого не напоил и не приучил к пьянству, чуваши недопитое вино из стаканчиков выливают на пол» [Магницкий, 1881, С. 13].

Эрех-сӑрапа ҫыхӑннӑ сӑмахлӑх чӑваш культуринче сӗм авалтанах килет. Хӑш-пӗр тӗпчевҫӗсем хӑмла сӑмах Авестӑри хоум тенипе пӗр тымарлӑ тесе калаҫҫӗ. *Хӑмла, шерпет, эрех, мухмӑр, техӗм* сӑмахсем араб-перс чӗлхисенчен кӗни те ҫак шухӑша ҫирӗплетме пулӑшать пулӗ.

XX ӗмӗрти 20-30-мӗш ҫулсенчи чӑваш поэзинче эрехсӑра, кӗреке мотивӗсем сарӑлни О. Хайямӑн, Вӑтам Ази литературин витӗмӗпе ҫыхӑннӑ. Ҫакӑ хӑйне евӗрлӗ политикӑна тиркесе каламалли, шухӑша ытарлӑ палӑртмалли мел пулнӑ. Апла пулин те, ку йышши хайлавсем поэтсен архивӗнче паянхи кунччченех упранаҫҫӗ е каярах 70-90-мӗш ҫулсенче ҫеҫ пичетленсе тухма пултараҫҫӗ.

Анӑҫ, христианство литературинче эрех ҫын, Христос юнӗ ӑнлавсемпе ҫыхӑннӑ. Ку йышши мотив чӑваш литературишӗн характерлах мар пулӗ.

## *Фольклортан*

***

Атте мана юратать,
Юратсан та киле кай, тет.
Кăвас пички ан кай, тет,
Эп çуррине çитмен, тет.

Анне мана юратать,
Юратсан та киле кай, тет,
Эрех кленчи ан кай, тет,
Эп çуррине çитмен, тет.

***

Вĕрене курки аври ылтăн,
Пылла-пылла ĕçме хушать.
Сăраях куркан тĕпĕ ылтăн
Юрла-юрла ĕçме хушать.

***

Çӳллĕ тусем çине эп улăхрăм,
Çĕр çĕклейми хăвасем эп куртăм.
Çак тăвансем патне эп килсессĕн,
Пуç çĕклейми сăйсем эп куртăм.

***

Ирхине тăтăм тулпалан,
Ӳсĕрĕлнĕ пек пултăм пылпалан.
Çак тăвансем патне килсен
Савăннă пек пултăм чунпалан.

Симĕс кайăк пуçран сăхрĕ –
Чарсам, йысна, симĕс кайăкна:
Пуç ыратать чăтма çук.

Сарă кайăк вартан сăхрĕ –
Чарсам, аки, сар кайăкна:
Варă ыратать чăтма çук.

***

Хăмли тус, хăмли тус!
Мана та пуçран ма çапас,
Ман пуçа ма ыраттарас,
Мана намăс ма кӳртес.

Урпи тус, урпи тус!
Мана та питрен ма çапас,
Манăн пите ма хĕретес,
Мана та намăс ма кӳртес.

***

Кĕрӳ черкки, çут черкки,
Кĕрӳ черкки, çут черкки,
Çуталать те астарать,
Киле кайма вăл чарать.

Хĕрĕм курки сар курки,
Саралать те астарать,
Саркаланса юрлаттарать,
Киле кайма вăл чарать.

***

Чалăш тăман ай çул пăсать,
Çул пăсать те ай çул юсать.
Çут стаканĕ ай сăн юсать,
Сăн юсать те ай ăс пăсать.

***

Сăра корки тытми тăвас теççĕ поль,
Сăра курки тытми полас марччĕ ман,
Тăвансенчен намăсах курас марччĕ ман.
Эрех черкки тытми тăвас теççĕ поль,
Эрех черкки тытми полас марччĕ ман,
Тăвансенчен намăсах корас марччĕ ман;
Орай хомине корми тăвас теççĕ поль,
Орай хомине корми полас марччĕ ман,
Тăвансенчен намăсах курас марччĕ ман.

# Чăваш поэзийĕнчи кĕреке кĕввисем

## ИВАН ИВНИК

***

Кĕрекере каллех сăра,
Автан тукмакĕ те итес!
Паян каллех: тав пурсăра! –
Тесе калать пек çак кĕтес,
Аллăрсенче каллех сăра.

***

Ĕçес мар-ха урăх, терĕм эпĕ, –
Йалт пăрахăç турăм эрехе.
Шухăшларăм, хутшăнĕ хисепĕ,
Кĕсьере те пулĕ перекет.
Çӳреме пăрахрăм пĕр шеллевсĕр
Хупахсен-мĕнсен урамĕпе.
Анчах туйрăм, эп юлап туссемсĕр,
Ютшăнма пуçларĕç пĕтĕмпех.
И, каллех вара ĕçме пуçларăм,
Халь каллех пуян эп туссенчен...
Ĕçмен çын ниçта та эп курмарăм,
Эс-и тăрса юлăн пĕр-пĕччен.

***

Ĕçместĕп тек эрех, пурĕпĕрех
Сӳнтерейместь ман хуйхăма эрех.
Чĕрем арканчăк, куçăмра сĕм тĕксĕм.
Кам ир вăраннă, вăл ӳкет ирех.

### Эрех

Бюросенче сана вăрçаç, эпир (кунта – мухтар).
Сан хăвату, таса эрех, ан чактăр нихăçан.

Сергей Сергеич, кăмăл ту, черетсĕрех тултар,
Эп туслă пулнă эрехпе, хăвах пĕлен – ялан.

Ах, ан кĕттер, ман ăшăмра хыпса çунать  пушар.
Тултар – яш ĕмĕр тепĕр хут çĕклентĕр ун паян.

Ан тив, Ахазов вăрçтăр-и, вăл маншăн турă мар.
Райран рая вăл кайтăр, тен, сĕм тамăк пултăр ман.

Ан тив, монах пек этемсен шыв пултăр юнашар,
Çĕр чăмрипе Омар Хайям эрехпеле тăван.

«Ĕç хыççăн ĕç», – теет Тукташ, пурнаттăмăр патвар.
«Ĕçе те пĕл, ĕçме те пĕл», – теет Ивник Иван.

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

### Тĕппи курка

Чăваш сăра тума ăста
Чăваш сăри хăмлаллă, теççĕ.

Кирек хăçан, кирек ăçта
Тăнлă çынсем ăна ĕçеççĕ.

Тултар-ха, тусăмçăм, тултар,
Тултар, Шаланкă, янкăс лирĕк!

Тĕнче илемсĕрех те мар
Сăвву кăна шăрантăр ирĕк.

Саватпăр сарă хĕрсене,
Кăвак куçа тупа тăватпăр,

Анчах поэзи хĕрсенех
Вĕсем те кирлĕ мар пĕр тапхăр.

Сăвă, сăвă! Сăра, сăра!
Вĕсем, тен, иккĕш пĕр тăван-тăр.

Тĕппи курка, тав пурсăра...
Ан тив – кайран курки те вантăр.

Çĕрте пурнатпăр пĕрре çеç, –
Чăваш чăпти чаплах пулмин те,

Вĕт çамрăклăх – çурхи чĕкеç, –
Выляс килет ун чух пурин те.

Эс ма пуç усрăн, журналис...
Ах, Гури, Гури, пур-и, пур-и

Кунтан илемлĕ, чаплă чыс.
Кăна тулли кăмăл вĕт турĕ.

Ялан каплах пулаймăпăр,
Сухал хырма пире те тивĕ.

Халь ман хыпать пĕтĕм кăкăр,
Ун чух чĕрем те пулĕ сивĕ.

Çампа ан ус пуçна, ан ус
Кăлкан пек сарă санăн çӳçĕ.

Умра хуйха ӳксессĕн тус,
Пылак сăра та маншăн йӳçĕ.

Хурлантăм хам та эп ĕлĕк,
Çук мар, пурах пăртак ман айăп.

Анчах халь пултăр вăл тĕлĕк,
Тĕреклĕрех çулпа эп кайăп.

Тĕнчи пĕрре те хурлă мар –
Сăвву кăна шăрантăр ирĕк...

Тултар-ха, тусăмçăм, тултар,
Тултар, Шаланкăм, янкăс лирĕк!

Тăван сăвă, тăван сăра,
Вĕсем чăнах та пĕр тăван тăр.

Тĕппи курка! тав пурсăра!
Кайран, ан тив, курки те вантăр.

***

Кирек мĕн кала, тăванăм, кирек мĕн кала:
Ухмахах еретĕп пуль эп Есенинпала.

Пирĕн халăх питĕ лăпкă, сăпă çын Пăлхар;
Вырăс юрăçĕ Есенин пĕртте апла мар.

Хупаха та эрехе мухтать вăл юрринче,
Пĕр-пĕр чикĕ е чарулăх пит унтан инçе.

Никама та пăхăнмасть вăл, ӳксе пуç çапмасть;
Чĕрине çăлса илсен те лирине памасть.

Арăслан пек хăш чухне вăл хыттăн ахăрать,
Тепĕр чух ача пек мĕлкерен хăрать.

Çĕр çинче ун ырлăх пулнă хăй сăвви кăна, –
Ăна пур халне кӳрет вăл, уншăн çакăнать...

Кирек мĕн кала, тăванăм, кирек мĕн кала:
Танлашас теп эпĕ хам та Есенинпала.

Çамрăклах-çке пур хаваслăх манăн сăвăра,
Анчах эп те хама хам пăватăп-ши вара.

Çак тери çĕршыв мана та йăлăхтарĕ-ши,
Чăваш ячĕ тепĕр хут хăйне путарĕ-ши.

«Шанчăк çук сан, ним те тухмĕ», – терĕç теессе,
Тен, чылайăш ĕмĕтленчĕç пуль эп пĕтессе.

«Пессимист» та терĕç мана, тем-тем хăямат, –
Анчах ан çырах теме пĕри те хăяймасть.

Кирек мĕн тĕрлĕ хурлаччăр, сурччăр ман куçа, –
Нихăçан та устараймĕç сăвăллă пуçа.

Куççульпе те çырăп эпĕ, çырăп юнăмпа,
Нӳр тăпра пуссассăн тин лăпланăп чунăмпа.

***

Ай-хай ĕçмĕттĕм эп, ĕçмĕттĕм,
Мухмăра шӳрпе пĕçерметтĕм:
Ӳсĕрле ман пуçăм ыратать,
Урăлла хĕвел те сĕм тĕттĕм.

Урăях уçланкăран иртсен
Ӳсĕр чăтлăхне пытаниччен –
Хĕрĕнкĕ текен пĕр кайăк пур,
Пăхтарать ялан хăй куçĕнчен.

Вара эпĕ çамрăк, эп пуян,
Тараккан та ылтăн вара ман,
Хамшăн хам эп турă та патша,
Тĕнче тикĕс, çут çанталăк тан.

«Ĕç, Тилли, ĕç, – тетĕп эп вара, –
Пĕр курка сим пыл, тепре сăра,
Ăсăма ĕçмен-ши-ха тесе
Хушăран юрла пĕрер çавра».

***

Ай-хай юрлас-юрлас юррăм пур,
Кăмăлăма хуплать хура хур.
Кăмăл уççи –
Хăмла ӳççи:
Тĕрĕслесем,Тилли, сыпса кур.

***

Хăпартăм çӳллĕ ту çине,
Çавăрăнтăм пăхрăм ял çине:
Ялти ватсем-мĕн хупахра,
Алси-калпакĕ саклатра,
Пуш кĕленчи умĕсенче,

Сенкер черкки аллисенче,
Чĕлĕмĕсем шăл хушшинче,
Тĕтĕмĕсем урайĕнче.
Пурак тĕпне шаккаççĕ те
Черкки çине пăхаççĕ-çке:
Ĕçмеллисем – пĕрре сыпма,
Туртмаллисем – пĕр сывлама.
Ан хуйхăрăр, ватсем, сĕре,
Тавăрăрах енчĕкĕре.
Калатăп эп, Тилли, сире:
Ним кӳмесессĕн те пире,
Патша эрех кӳрех тăрĕ,
Табак кимми килех тăрĕ.

## ИЛЛЕ ТУКТАШ

### Иçĕм çырли эрехĕ

Хуть çиллен, хуть ятла халĕ эсĕ мана, – иçĕм çырли эрехĕ ĕçсе ӳсĕрĕлтĕм эпĕ паян.

Хухса туртăннă питĕмсем хĕвел пекех хĕрелчĕç манăн, суранланнă шăммăм-шаккăм çулçă пек çăмăлланчĕ, чĕрем вунçичĕ çулхи евĕр çамрăкланчĕ.

Чашкăрса çеç вĕресе тăрать çап-çут черкке ăшĕнче сим пыл шăршипе кăпăкланакан эрех шерпечĕ.

Тăван çĕршыв хĕрĕсем хăналаççĕ-çке мана, сурансенчен сывалса çитнĕ салтака.

Хам сывлăхшăн ĕçме сĕнчĕç вĕсем мана малтанхи черккене, – эпĕ çĕршыв сывлăхĕшĕн ĕçрĕм. Тăвансен сывлăхĕшĕн ĕçме хушрĕç иккĕмĕш черккене, – эпĕ кăвак шинеллĕ тусăмсемпе юлташсемшĕн ӳпĕнтертĕм.

Хăйсен сывлăхĕшĕн ĕçме ыйтрĕç виççĕмĕш черккине, – эпĕ çутă Атăл хĕрринчи мăшăр хура куçлă çамрăк пике сывлăхĕшĕн ĕçрĕм.

Авă çавăнпа ӳсĕрĕлсе кайнă эпĕ паян. Хуть çиллен, хуть ятла ĕнтĕ халĕ эсĕ мана, – иçĕм çырли эрехĕ шавлать ман пуçăмра...

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Чăваш халăх сăмахлăхĕнчи эрех сиенĕ, ырлăхĕ çинчен каланă шухăшсене çырса илĕр. Вĕсем суфизм вĕрентĕвĕпе тӳр килеççĕ-и?*

*– XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулсенчи авторсем эрех темипе кăсăкланнине мĕнпе ăнлантарма пулать.*

*– П. Хусанкайăн пултарулăхĕнчи тĕрлĕ çулсенче эрех темипе çырнă сăвăсене тишкерсе тухăр. Сăвăçăн шухăшĕ улшăнни мĕнпе çыхăннă.*

*– И. Ивникăн сăввисене хак парăр. Вĕсенче О. Хайям витĕмĕ палăрнине кăтартăр.*

*– И. Тукташ прозăлла сăвăсем çырнине мĕнпе сăлтавлама пулать. Сăвăçăн «Тухăç кĕввисем» ярăмĕпе паллашăр, унти самана сăнарĕн хăй евĕрлĕхне уçса парăр.*

### *Усă курмалли литература*


1. Брагинский, И.С. Двенадцать миниатюр / И.С. Брагинский. – М.: Худож. лит., 1976. – 303 с.

2. Вишневский, В.П. Чăвашсен авалхи ĕненĕвĕ çинчен / В.П. Вишневский// Çамрăксен хаçачĕ. – 2004. – 12 юпа. – С. 10.

3. Козмоян, А.К. Рубаи в классической поэзии на фарси (X – XII вв.) / А.К. Козмоян. – Ереван, АН Арм. ССР, 1981. – 111 с.

4. Магницкий, В.К. Материалы к объяснению старой чувашской веры / В.К. Магницкий. – Казань: Типография императорского ун-та, 1881. – 267 с.

5. Софронова, И.В. П. Хусанкайăн пултарулăхĕнчи тухăç мотивĕсене шкулта вĕрентесси / И.В. Софронова // Халăх шкулĕ. – 2003. – 6 №. – С. 61–67.

6. Софронова, И.В. П. Хусанкай пултарулăхĕнчи кĕреке кĕввисем // Тăван Атăл. – 2007. – 9 №. – С. 150-153.

# Вăтам Ази литературинчи Касăк пуç мотивĕ

Тухăç халăхĕсен сăмахлăхĕнчи Касăк пуç çинчен калакан мотив сĕм авалтанах, ислам тĕнне йышăничченхи тапхăртанах килет. В. Гордлевский академик шучĕпе, Касăк пуç шутне пĕтĕмĕшле усал-хаярсене, масар çинче аташса çӳрекен вилнĕ çынсен чунĕсене кĕртнĕ [Ганиева. 1964. С. 24]. Хăш-пĕр халапсенче Касăк пуç тесе çапăçура пуçне каснă хыççăн та хăйĕн тăван çĕрне, хулине харсăррăн хӳтĕлекен паттăра каланă. Вăл кайран вилмесен те пултарнă, ытти çынсем пекех малалла пурăннă, авланса çемье те çавăрнă.

Мусульман тĕнне йышăнсан Касăк пуç таса тĕне хӳтĕлекен сăнар пулса тăрать. Асăннă сăнар Библи текстĕнчех палăрать. Ватă çын пуш хир тăрăх утса пынă чухне пуç шăммине тупать. Лешĕ чĕрĕлет те иртнĕ пурнăçĕ çинчен каласа кăтартать. Вăл çылăх нумай тунишĕн ӳкĕнет, турă вĕрентĕвĕпе килĕшӳллĕн пурăнма вĕрентсе калать.

Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнче XII ĕмĕрте пурăннă Кул Гали сăвăç Вăтам Азинчи Фарид-аддин Аттарăн хайлавне евĕрлесе «Кисек-баш» поэма çырать. Ăна тĕн вĕрентĕвне тĕпе хурса хайланă. Тĕп сăнар юхан шыв хĕрринче уçăлса çӳренĕ вăхăтра пуç шăммине тупать. Касăк пуç чĕрĕлет те хăйĕн иртнĕ пурнăçĕ çинчен каласа кăтартать. Вăл Мухамедпа пĕр вăхăтри çын пулнă, ăна çĕнĕ тĕне çирĕплетес ĕçре пулăшса тăнă. Меккăна 50 хутчен кайса хадж тунă. Поэмăра паттăрлăх эпосĕн паллисем те пур. Касăк пуçăн асамлă хĕç, паттăрла ут пулнă. Вăл, хăй пурăннă чухне, аялти тĕнчене анса унта дэвпа çапăçнă, тыткăнри çынсене ирĕке кăларнă пулнă. Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнче мусульман тĕнĕ сарăлнă май, çак мотив литературăна, кунта пурăнакан халăхсен фольклорне кĕрсе юлать.

Тĕнче литературинче пуççăр кĕлетке тата кĕлеткесĕр пуç мотивсем тĕл пулаççĕ. Кĕлеткесĕр пуç мотивăн тĕрлĕ варианчĕсем чăваш фольклорĕнче, литературинче пурри çинчен калама сăлтавсем пур.

## Касăк пуç
*(Халап)*

Пĕри Пăлхар хули вырăнне курма пырать. Пăхкаласа çӳренĕ чухне çĕр çинче çын пуç шăмми выртнине курсан, кăна урипе тапса ярать. Пуç шăммийĕ, тапса ярсан, паллă, калай пек, малалла кусса каять. Чарăнсан, тытăнать кунпа калаçма: «Эсĕ урапа тапса янă япала, эпĕ çын пуç шăмми пулатăп. Ĕлĕк эпĕ кунта патша пулса пурăнсаттăм. Турăпа Пӳлĕхçĕм мана хăйсен пур ырлăхне те парсаччĕç: патшалăхăм манăн темĕн пысăкăшчĕ. Хама парăнса тăракан патшасем те пурччĕ. Çарăмсем манăн, арăслан кайăкĕсем пек, пит вăйлăччĕ, вăрçнă чухне тăшмансемпе пит вăйлă вăрçса, вĕсене çĕнтеретчĕç. Манăн патшалăхăмпа ирĕклĕхĕм таçта çитиех сарăлатчĕ. Мĕн тума хушнине пурне те часах тăватчĕç. Эпĕ патшасен пур ирĕклĕхне, пур савăнăçĕсене пĕлсе тăраттăм. Манăн пуç хулама, çакăнта, тĕрлĕ çĕртен: хĕвел тухăçĕнчен, хĕвел анăçĕнчен, çур çĕр енчен, кăнтăр енчен, пур çĕртен те, пур патшалăхран та сутă тума ярмунккана çынсем тĕрлĕ таварсемпе суту-илӳ тума пухăнатчĕç. Никам вĕсене чармастчĕ. Миçе тĕслĕ чĕлхепе калаçакан çынсем пухăнатчĕç пулĕ. Пурте вĕсем кунта йăвашшăн кăна калаçса суту-илӳ тăватчĕç. Манăн патшалăхăма ют çынсем мухтаса: «Мухтавлă çынсен патшалăхĕ», – тетчĕç. Эпĕ тата та нумай çĕрсене вăрçса илме шухăшлаттăм, анчах вилес вăхăтăм çитнине сисмесĕрех юлтăм. Вилсен, ӳтĕме усал хуртсем часах çисе пĕтерчĕç. Манăн ĕлĕкхи ирĕклĕхĕм, çынсен тĕлĕшĕнчен, нимĕн те юрăхсăр пулчĕ. Мана хама халĕ, иртен-çӳрен çынсем курсан, пурте урисемпе тапса яма пултараççĕ...

Эсир, çынсем, чĕрĕ чухне Пӳлĕхĕр панă телейĕрпе ан мухтанăр. Вилсен, малашне эсир те çапла, ман пек, хурлăхлă пулма пултаратăр», – тет те, калаçма чарăнать.

*И. Юркин çырса илнĕ*

## ПЕТӲЕР ХУСАНКАЙ

***

...Эп Атăл хĕрринче ларатăп
Ытахальтен чул суйласа.
Пĕрне илесшĕнччĕ – сасартăк
Чул муклашки кăларчĕ сас:

«Эп Улăп пек çар пуç чĕриччĕ,
Эп пултăм курăк, пыл, упа...
Хăвар мана, этем, ан тивччĕ,
Уттарччĕ ху сукмакупа!»

## ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

**Пăлхар патши**

Пычĕ, тет, пĕри пăхма
Авалхи хула тĕлне.
Пуç шăмми тухать ума
Сирнĕ майăн ун кĕлне.

Ылтăн-кĕмĕл япала
Тупманран кӳреннипе
Тапрĕ ячĕ малалла
Хай шăмма вăл урипе.

Кăлай пек леш хайхискер
Кусрĕ кайрĕ, тет, чылай.
Сас парать, тет, чип-чипер
Чарăнса ĕлкĕрнĕ май:

– Тимлĕрех пăхса утсам,
Ыраттартăн ĕнсене.
Çын шăмми-çке эп, ачам,
Тен, тăсатăн несĕлне.

Тав Турра та Пӳлĕхçе:
Пиллĕх панăччĕ авал.
Патшара хам тивĕçе
Пытăм эп тытса кал-кал.

Çĕрĕм-шывăм тем тери
Сарăлса выртатчĕ ман.
Ют патша та хăш-пĕри
Пуç таймасăр пурăнман.

Паттăрччĕ ман çарăмсем,
Чыс кӳретчĕç патшана:
Арăслан пекех вĕсем
Çĕнтеретчĕç тăшмана.

Эпĕ хушнă сăмаха
Хирĕçсе-туса тăман.
Пĕр каварлă çич йăха
Çĕнеймен хурах тăшман.

Сутуçăсем çурçĕртен,
Кăнтăртан та анăçран –
Пухăнатчĕç ют çĕртен,
Татăлман пуç хуларан.

Мĕн тавар та кам тавраш
Çукчĕ пулĕ пасарта!
Тӳрĕ кăмăллă, йăваш
Калаçатчĕç Пăлхарта.

Пирĕн пуç хуламăра
Пурте хисеплетчĕçĕ,
Ахаль мар-тăр таврара
Аслă хула тетчĕçĕ.

Чапăм ӳснĕ майĕпе
Хам пуçларăм иртĕхме.
Ĕмĕт тытрăм кӳршĕпе
Çапăçса çĕрне илме.

Шухăшламан тапхăрта
Çитрĕ вилĕм-ватлăхăм.
Ӳтĕм çĕрчĕ хăвăртах,
Пĕтрĕ ман сăваплăхăм.

Ӳтĕм çеç мар, нимĕн те
Юлаймарĕ мулăмран.

Пуç хулам ларас тĕлте
Чул та шăмă çеç куран.

Халь мĕнпур иртен-çӳрен
Урипе тапать мана.
Авалхи еткерĕмрен
Юлнă-мĕн халап кăна.

Эс, тăванăм, сывă чух
Ан мухтан тивлетӳпе.
Тыт хăвна сăпайлă, чух,
Ырлăх кӳрĕ çӳл тупе.

## УХСАЙ ЯКОВĔ

### Телей юмахĕ

*(Сыпăк)*

...Çуллен çулах çуркунне
Çырма тăвăр çыранне
Вăйлă шыв, асар-писер
Çĕмĕрсе, çĕршер-пиншер
Ăншăрт саслăн çухăрчĕ.
Арăслан пек ыткăнчĕ,
Юрă юшкăн тăприне
Илсе кайрĕ инçене.
Тата тепĕр кăнтăрла
Сехрене хăпартмалла
Хура пĕлĕт капланса,
Аçа çапса, шартлатса,
Килсе тухрĕ аякран.
Кĕтмен çĕртен, ăнсăртран,
Çавра çил те çиллипе,
Иртрĕ пӳртсен çийĕпе,
Тăррисене сӳрĕ те
Илсе кайрĕ инçете.
Пĕлĕт кашти хуçăлса
Аннă евĕр, чашкăрса
Çумăр хытă çунăçем,
Сарă хăрăк шăмăсем
Тухнă иккен ун чухне

Тарӑн ҫыран хӗррине.
Пултӑм эп унта пӗрре
Масар ҫинче, чикӗре,
Куртӑм пуҫ купташкине,
Катӑкрах янаххине.
Ҫӗр валеҫнӗ чух авал
Хире тухнӑ пӗтӗм ял.
Карма ҫӑвар пуянсем
Хӑйма пекех ҫӗрсене
Шӑпа картнӑ хӑйсене.
Халӑх кайнӑ харкашса,
Сиксе тухнӑ тамаша.
Пуян мурӗ, ҫи те кӳп,
Ал чӑмӑрне кӳп те кӳп!
Пуянӗсем халсӑр мар,
Силленет кӑна чукмар,
Ҫапнӑ та кӗтӳҫӗнне
Хӑйӑрнӑ янаххине,
Вилнӗ мӗскӗн ҫын ӳтне
Чикнӗ ҫыран хӗррине.
«Кӗтӳҫ вилли» теекен
Ансӑр сӑрт ҫине пӗччен
Эпӗ тӑнӑ вӑхӑтра
Сӗмленетӗп шухӑшра.
Лешӗ сарӑ пуҫ шӑмми
Кӑмӑла кайи-кайми
Ал тупанӗ ҫинче выртать,
Пысӑк шухӑша ярать.
Сӗт пек шурӑ шӑлӗсем –
Вӗҫнӗ кайнӑ ун иккен
Ӗлӗкех хӑй виличчен.
Алтӑр пек куҫӗсене
Вӑй питтиллӗ ҫын чухне
Ӳкнӗ пӗлӗт сӑнӗсем,
Ӑмӑрткайӑк вӗҫнисем.
Мӗскӗн ҫыннӑм! Самана
Лутӑрканӑ та сана,
Хӑрса кайнӑ хирсенче
Касса вӗрнӗ ҫил ҫинче

Сан хура çӳç пĕрчисем
Ларнă юр пекех тĕсе.
Мĕншĕн эсĕ тĕнчене
Килсе хуçнă ĕнсӳне!
Этем пулса çӳриччен
Хура халăх çĕрĕнче
Пулмаллаччĕ хур хуххи,
Курмăттăн этем хуйхи,
Мамăк пулса вĕçĕттĕн.
Пулмаллаччĕ сан иккен
Лăпсăркка аçа кикен –
Курмăттăн çак асапа,
Вăштин-вăштин çавапа
Кĕрхи кунта касăлса
Чĕркуç таран паккуса
Кĕрĕттĕн те хĕрĕттĕн,
Вĕт çумăрпа çĕрĕттĕн...
Йĕксĕксем ытла чее
Илнĕ пирĕн телее,
Хупса тытнă хамăра
Ĕмĕрхи асаплăхра.
Мĕншĕн-ха телей пире
Юп курмарĕ тĕнчере.
Мĕншĕн вăл пире пĕлми,
Татăк çăкăр та пами
Сулланса ахаль çӳрет,
Пĕр-пĕччен ларса çиет
Яланах пуян килте
Кукăль те, икерчĕ те.
Вăл пире палламалла,
Ырă пурнăç памалла!..

## ВАСИЛИЙ ЭКТЕЛ

### Чул çырма

Мĕн чухлĕ тарăнрах – çапла инçетрех
аваллăха çитсе эпир пыратпăр:
çӳлте сассем вĕçеççĕ ĕмĕр витĕрех,
пур сăнлăх пурăнать-мĕн тăпрара та.

Вĕçевçĕ-ящерсем тухаççĕ çырмаран
çинçе çунат тĕрриллĕ чул тăмха пек.
Вĕсем тек сывлăша касаймĕç çурмаран
хура чула хура мунча çеç хапăл.
Ăшши парсан, ачаш чуна çӳçентерсе,
чул мар, çав çунатсем шарт! çурăлатчĕç
вĕçев хĕрӳллĕхне тасалăхшăн кӳрсе.
Хальччен упраннă ăнтăлу хăвачĕ!
Хĕвел çутисĕр, сулхăн, тарăн Чулçырма
ӳсен-тăран та ящерлă çыруллăх —
чул хĕрĕвне сан пек пĕлесчĕ упрама,
чĕрем хевти ан пултăр уссăр çунăк!

## Шăхлич

Тахçан кунта ял ларнă тетчĕç,
торфланнă айлăм вырăнта.
Торфне пахча валли илетчĕç
халь пĕтнĕ вăл йăта-йăта.

Унта эп тупнăччĕ эрешлĕ
сăмсаллă пĕчĕкçĕ чӳлмек.
Унпа мĕн чухлĕ-ши тĕрмешнĕ
шалти асамлăхне пĕлме.

Шыв ятăм та – тăма чун кĕчĕ!
Илем кӳрсе вăл Çĕн çула,
текерлĕк евĕр хурлăн йĕчĕ,
тепре юрларĕ шăпчăкла.

Ун пек сасса ниçта илтменччĕ,
ун пек шăхлич ниçта курман.
Пуянлăх вут тĕслĕ чӳлмекчĕ,
ачалăхран мĕн юлнă ман.

Тăпра мулне упра пĕлмерĕм,
Çухатрăм-шим шăхлич чунне.
Пыл сĕрнĕ çу иртет те эрĕм
шăрши калать-мĕн хĕл кунне.

***

Ачапчаччĕ çавă – хаклама пĕлмен,
Мĕн çухатнă  – пĕтнĕ, каялла кĕмен.

Тупнăччĕ тăмхаллă çĕрĕ çырмара,
Кукăр саспаллийĕ – арабла çавра.

Аслăччĕ йĕс унка – шалт тĕлĕнмелле,
Ик пӳрне пĕр харăс çăмăл кĕмелле.

Кукамай калатчĕ: ĕлĕкхи çынсем
Пулнă пысăк пӳллĕ Улăп-паттăрсем.

Тен, ку çĕре чаплă Таяпа ратнин.
Йăх тăмхи пулин те, халь пĕлеймĕн тин.

Ĕмĕрсем кĕрлевлĕн кăтăрса иртсен,
Çаврăнса пăхатпăр, «Аптрашки», – тесе.

Кам эпир. Мĕскершĕн пирĕн ăс кĕске.
Хамăр хыççăн юлĕ пĕчĕк тĕмеске...

Темĕн те пĕлетпĕр, Шумер, Греци, Рим.
Несĕлсĕр, тымарсăр халăх юлтăр-им.

Аякри халь çывăх, çывăххи инçе
Тĕпсĕрлĕх вăл пурçăн çип пекех çинçе.

Арабла çырууллă тупăннă çĕрре
Çĕртен илнĕ – панă каялла çĕре.

Халăхран мĕн илнĕ – тӳрĕ кăмăлпа
Тавăрса парасчĕ туллирех мулпа.

## Ачалăх çырмисем

Тăрна куç евĕр тăрă çăлкуçран
пин шăнкăрав çакса тухатăр,
аннемĕр-çĕр хисепсĕр аслăран
эсир мăнаçланса юхатăрĕ

Çырансемпе чӗр кӗмӗл шыв çине
ытарайми пӑхса тӑруçӑн,
каллех тухать экран пек куç умне
чечен ачалахӑм тӑр уççан.

Çурхи шывсем шавпа юхса кайсан,
çаруранах чупса анаттӑм,
йӗм пӗççине васкавлӑн тавӑрса
сар чечексем татса пухаттӑм.

Египтянсен пергамент тӗрки пек
куçне уçатчӗ сӗм аваллӑх.
Ват йӑмрасен шыври ӗмӗлкипе
сӑн ӳкереттӗм асӑнмаллӑх.

Вара пуçлаттӑм эпӗ çулçӳрев,
пуянлӑхпа тулатчӗ пир хутаçӑм.
Миллионшар çул каялли çӗре
илсе çав хутаççа хураттӑм.

Шыв-шур çурсан тухать кача мучи,
е çӑмлӑ мамонт ӑсав шӑлӗ.
Тискер носорогсен пуç шӑмминчи
куç витӗр тухнӑ çырма çӑлӗ
юрлатчӗ иртнӗ тапхӑр кӗввине.
Сар хӑйӑр çийӗнче çӗр тӗрлӗ сӑрӑ,
тупрам çумне илмесӗр ун тӗсне
епле-ха чунӑм чӑтса тӑрӗ!

Ӗмӗрсемпе якалнӑ вак чулсем
çиçеççӗ хӗрлӗн, симӗссӗн, кӗренӗн.
Тахçан кунта шавланӑ тинӗссем,
эп тинӗс тӗпӗнче çӳренӗ...

***

Çӑлкуç – пурне те куракан çӗр куçӗ,
куç хӑрпӑкӗ – çӑра хӑвалӑх.
Çӑл ешӗл хӳтлӗхре, анчах çул уçӗ,
типпе юлсан – пӗтет хавалӗ.

Куç шăрçине темрен ытла сыхлатпăр,
хăй ирĕкпе ăна кам суттăр.
Анчах мĕн-ма çакна час-час манатпăр:
Çăлкуçсăр çĕр те юлĕ суккăр.

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*- Касăк пуç мотивăн малтанхи варианчĕсем.*

*- Вăтам Ази литературинче Касăк пуç мотива тĕн витĕмĕпе çыхăнтарнин сăлтавĕсем.*

*- Чăваш фольклорĕнче асăннă мотив сарăлнин сăлтавĕсем.*

*- Чăваш литературинчи Касăк пуç мотивăн варианчĕсем.*

### *Усă курмалли литература*


1. Ганиева, Р.К. Сатирическое творчество Г. Тукая / Р.К. Ганиева. – Казань, Изд-во Казан. ун-та, 1964. – 84 с.
2. Путеводитель по Пушкину. – С.-Пб.: Академический проект, 1997. – 432 с.
3. Софронова, И.В. Вариативность мотива отрезанной головы в чувашской литературе // Традиционное и нетрадиционное в чувашской филологии и журналистике, Межвузовский сборник научных трудов / И.В. Софронова. – Чебоксары: Народная мудрость, 2006. – С. 63-69. – 88 с.
4. Яковлев, Ю.В. «Карланкă, çăхан пек, вилĕм сасси кăларчĕ» (И. Юркинпа М. Сунтал медиумсем пирки) / Ю.В. Яковлев. // Хыпар. – 1997. – 19 авăн.

# Тухăç литературинчи ăс-тăна мухтани мотивĕ

Ăс-тăна мухтаса калас традици тухăç литературинче авалтанах килет. Китай литературинче, Индире, каярах араб çырулăхĕнче вĕрентсе калакан, вĕреннин уссине палăртакан хайлавсем чылай пулнă, уйрăм хайлавсенче ятарласа ăс-тăна мухтаса калакан сыпăксем те пулнă. Авалхи вăхăтра патша визирĕсем çамрăк принцсене патшалăха тытса пыма, пурнăç йĕркине вĕрентме ятарласа мифсен, юмахсен сюжечĕсене, историнче пулса иртнĕ событисем пирки каланине усă курса дидактикăлла хайлавсем çырнă. Патшалăх ĕçĕпе ĕçлекен чиновниксен те нумай енлĕ пĕлӳллĕ, анлă тавракурăмлă пулмалла пулнă. Вĕренӳ заведенийĕсенче тĕн йĕркипе çыру ĕçне çеç вĕрентмен, хими, медицина, астрологи, астрономи, вăрçă ĕçĕ, сăвă хывăм, риторика, математика, философи, истори, литература тата ытти пĕлӳсене те панă. Çавна май, сăвăç пек палăрса юлнă çынсем тĕрлĕ ăслăлăх трактачĕсем çырнипе, çĕнĕлĕхсем шăхăшласа кăларма пултарнипе те уйрăлса тăнă, вĕсемех çĕршыв, халăх, культура аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тунă.

Авалхи Инди литературинче Веда, Китайра Конфуций тата Лао-цзы вĕрентĕвĕсем, тухăç халăхĕсен тĕнчипе паллă «Большая книга наставлений» тата «Источники известий», Европăра «Зерцал» ярăмпа тухнă кĕнекесем, вырăссен «Домострой», «Златоустстрой» этикăпа мораль ыйтăвĕсене хускатакан дидактикăлла кĕнекесем пулни паллă. Кашни тĕн кĕнеки Турă сăмахне çынсем патне çитернисĕр пуçне вĕсене пурнăçра тĕрлĕ вăхăтра хăйсене мĕнлерех тытмаллине те вĕрентсе калать.

Вăтам ĕмĕрсенче Вăтам Азинче пурăнакан Юсуф Баласагуни фарси (тĕрĕк) чĕлхипе «Хăтлă пĕлӳ» / Телей кӳрекен пĕлӳ / (Благодатное знание) хайлав çырать. Ку кĕнекере ăс-тăн хăватне пула ырă курса пурăнакан патшапа унăн визирĕн пурнăçне сăнланă. Патша ывăлĕсене, çĕршывра пурăнакан тĕрлĕ ĕçпе ĕçлекен çынсене хăйсене мĕнле тытмаллине вĕрентсе каланă.

Араб чĕлхипе çырнă литературăра та ăс-тăна мухтаса çырас традици аталаннă пулнă. Уйрăм сăвă, касыда, поэма çырнисĕр пуçне сăвăçсем унăн хăвачĕ çинчен ытти хайлавсенче те каланă. Фирдоуси, тĕслĕхрен, хăйĕн «Шах-наме» эпопеин пуçламăшĕнче Аллаха, султана ырласа каланă хыççăн, ăс-тăна та мухтать. О. Хайям вара, ăслăлăх çыннин хăйĕн пурнăçĕнче çитĕнӳсем тăвас тесен туссем, тăвансем, юратнă çын çинчен манса кайсах ĕçлеме хушать. Ибн Сина та хăйĕн пултарулăхне, тăрăшулăхне пула çеç поэзире, философи ăслăлăхĕнче пысăк çитĕнӳсем тума пултарнă.

Ăс-тăна мухтасси халăх сăмахлăхĕнчен килекен традици теме те пулать. И.С. Брагинский тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, авалхи араб юмахĕсенче вăл ту хăвăлне пытараннă хаклă йышши чулсене тӳр килет. Паттăр çав тупрана тупас тесе вăрă-хурахсемпе, тискер чĕрчунсемпе, аçтахасемпе, дэвсемпе çапăçать. Ăс-тăна хаклă йышши чулсемпе танлаштарасси унăн хăватĕнчен, хăйне палăртас нумай енлĕхĕнчен килет. Ăстăн хытса ларсан чул пек çирĕп пулса ларать. Чăвашсен «Çамрăкла вĕренни – чул çинче, ватăлла вĕренни – шыв çинче» ваттисен сăмахне тӳр килекен шухăш. Чула хисеплесси вара мусульман тĕнĕнче Меккăри мичет никĕсне хунă Хура чулпа та çыхăннă.

Ăс-тăн хăватне мухтаса каласси, пурнăç ăслăлăхне вĕрентесси чăваш сăмахлăхĕнче те пур. Дидактикăлăх, ытларах чухне, тӳремĕн пурнăçланмасть, ытарлă калани, ĕç процесĕ урлă пулса пырать. Чăвашла куçарнă вăтам ĕмĕрти текстсенче пирĕн фольклорти тĕслĕхсене тӳр килекен шухăшсем, мотивсем палăрнинчен ним тĕлĕнмелли те çук.

# *КУÇАРУСЕМ*

## ЮСУФ БАЛАСАГУНИ

### Хăтлă пĕлӳ
*(Сыпăк)*

Пĕлӳсĕр этем вăл сĕм суккăр кăна,
Çултан аташсассăн ан ятлăр ăна!
Этем ют çĕрте çитейсессĕн хайхи
Кин пек пулĕ ар та, чĕнмест ун чĕлхи!
Юта çырлахтар эс, ĕçтер, çиме пар,
Ютпа ырă пул эс, пĕлӳ илнĕ ар!
Юта ыр тусассăн сăну çуталать.
Юта ыр тусассăн ыр ят сарăлать.

... Мăн кăмăллă ан пул, ырă чунлă этем,
Ан шан телее, ырă ятлă этем.
Шывпа япшар чĕлхе, телей тĕк лармĕ,
Тĕнче çаврăнать – нимĕн те чармĕ.

*Г.Юмарт куçарнă*

### Вĕренӳпе пĕлӳ ăинчен калани

Ăславçă, пĕлӳ çинченех çак сăмах.
Пĕлӳ ырлăхне эп мухтасшăн кăштах.

Каçхи тĕттĕмри çутă тĕл – вĕренӳ,
Вĕреннĕ çынна пулатех киленӳ.

Пĕлӳ-вĕренӳ сана çĕклĕ çӳле –
Этемĕн хисепĕ килет пĕлӳпе.

Пĕлӳсĕр этем – суккăрсен шутĕнче.
Пĕлӳ куçĕпе йăлт курать çут тĕнче.

Пĕлӳ пуç пулсан халăха та аван.
Ун чапĕ ун чух çухалмасть нихăçан.

Вĕреннĕ çынсем пур ĕçре те хастар,
Пĕлӳсĕр этем кӳрес çук пархатар.

Çӳрет халăхра кун пирки пĕр сăмах:
«Пачах вĕренмен тĕк – вăл чыссăр ухмах».

Пăхсан тĕсереххĕн тĕп-тĕрĕс йăлтах,
Вĕреннĕ çынсен усси пысăк чăнах.

Тăват япала пур – хăватлă вĕсем,
Пачах пĕчĕк мар, теççĕ ват ăсчахсем,

Пĕриййĕ – вут-çулăм, теприйĕ – тăшман,
Хура чир-чĕрпе иккен виççĕмĕш тан.

Вĕсем пĕрле пухăннă ăслăлăха,
Ĕнен хăватне, пулас çук кăлăхах.

Пĕлӳ тĕттĕм çыншăн пачах ют иккен,
Пĕлес темен çын вăл – хăрушă инкек!

Ăсчахшăн пĕлӳ – тăванран та тăван,
Ăнланмĕ çавна нихăçан та айван.

Ăсчахшăн пĕлӳ вăл – апат, тумтирех,
Айванлăх каварлă – тăшман евĕрех.

Усаллăх, хаярлăх – ар çыншăн инкек,
Вĕсен хӳттинче эс çын мар ĕнтĕ тек.

Тăнла, çамрăк тусăм, ăсчах сăмахне.
Çав ыр чăнлăха эс ан ман ĕмĕрне.

«Усал иленсессĕн çухатăн тăнна,
Çилленчĕк çын ăссăр, ун сĕмлĕх кăна.

Мухтавлă ар çын та урсассăн – ухмах,
Ыр çын тилĕрсессĕн – тӳрккес те чăртмах».

Тăнла, тăнлă ар калас çук кăлăхах,
Ялан чун уççи вăл – тăрлавлă сăмах,

«Хăш-хăш япала чуна кӳрĕ асап,
Çын курĕ хĕн-хур çавсемпе туслашсан.

Пĕри вăл – чĕлхе, ун хавалĕ – хавха.
Теприйĕ пулать тытмасан сăмаха.

Эрех-сăрана сăхланни вăл – тепри,
Унпа туслашсассăн пулаймĕ ырри.

Куштан тăк, кăшт кутăн тăк – тепĕр сиен,
Ун пек çынсене хисеп çук ĕлĕкрен.

Тата тепĕр сарăп – чĕрре кĕресси,
Кашни çынпалах харкашса çӳресси.

Çил пек касакан чĕлхери сив сăмах
Çынна вĕлерме пултарать самантрах.

Çак пур хур-инкек пĕр çынра пухăнсан
Ан кĕт ун ĕç-пуçĕ ун чух ăнасса!

Элчелĕ пĕр шелсĕр ăна тĕплетех,
Пĕтерĕ тискер çав синкер тĕппипех!»

*А. Смолин куçарнă*

## АБУЛЬ КАСИМ ФИРДОУСИ

### Ăс-хакăла мухтаса каланă сăмах

*(Патшасен кĕнекинчен)*

Ĕнтĕ кун çитрĕ сăмах пуçламашкăн –
Ăс-хакăла мухтаса каламашкăн.

Чăн шухăша çеç пĕлтертĕр пĕлӳçĕ,
Ырă канаш çеç илтейтĕр илтӳçĕ.

Ăс-хакăл пек чи хакли, ай, мĕн пур-ши.
Ăс-хакăла çитекен ыр ĕç пур-ши.

Пĕтĕм чĕр-чунăн илемĕ – ăс-хакăл,
Пурлăх та пурнăç вут хĕмĕ – ăс-хакăл.

Чун-чĕрере вăл çĕрте те, çӳлте те,
Çӳрĕ ертсе сана пур çĕрте те.

Ырă кун-çул курасси – унран килĕ,
Аслă ята илтесси – унран килĕ.

Çак çĕр çинче камăн чунĕ сăваплă,
Уншăн пулсассăн ăс-хакăл чи хаклă.

Ăслă çынсем ак мĕнле халалланă,
Тӳрĕ ĕçе юратма халалланă:

«Шухăшламасăр ĕçе пикен те,
Ĕçĕ ăнмасть те – вара ӳкĕнетĕн.

Эсĕ вара ухмантей шутланатăн,
Çывăх çынсемшĕн ютта çаврăнатăн».

Ĕмĕр чыс курăн ăса пуç тайсассăн,
Ĕмĕр терт курăн ăспа ют пулсассăн.

Çутă ăсу чун-чĕрӳ витĕр куçĕ,
Аслă тĕнче тавралла вăл çул уçĕ.

Чи малтанах кун куранĕ – ăс-хакăл,
Чун-чĕрене сыхлаканĕ – ăс-хакăл.

Куç та, чĕлхе те, хăлха – ыр управçă.
Санăн чунна çавсемех палăртаççĕ.

Ăс-хакăла хисепе кам кăларĕ.
Эс кăларсан та – кама савăнтарĕ.

Çутă ăса ĕненсе эсĕ пурăн,
Çутă ăса сивлемесĕр эс пурăн.

Мĕн ачаран ăс пухмашкăн эс тăрăш,
Ăс шыраса эс ут тĕнче тăрăх.

Мĕн илтнине хыпарла эс пурне те.
Тĕплĕн тĕпче эс ăс тымарне те.

Ăс йывăççин тымарне çеç тĕпчевçĕ –
Чи кирлине тĕпчесе пĕлеймен.

*Г.Юмарт куçарнă*

## ОМАР ХАЙЯМ

***

Кам çаврăннă утса тĕнче тавра,
Кам çĕннине пĕлтерĕ – мухтавра.
Тĕнче çинчен эпир ăнкарнă чухлĕ
Вĕсем пĕлме пултарĕç-ши вара.

*И.Г. Трофимова куçарнă*

***

Тăнласа пурнакан – сăвать вăкăра,
Ăслă çын яланах вăл юлать çуклăха,
Тупăшпа ку чухне – кам перет ухмаха,
Çавăнпа ăс паян виçĕнет ыхрапа.

*Л.А. Карягин куçарнă*

***

Мĕн-ма кĕтетĕн усă ăс-халран
Унччен сĕт суса илĕн такаран.
Пер ухмаха – пайтах эс усă курăн.
Ăса йӳне хураççĕ курăкран.

*И.Г. Трофимова куçарнă*

***

Пурнăçра усси çук ăс-тăнран, эх – анчах,
Аванрах шăпама эп пулсан сĕм-ухмах.
Ярса пар-ха, тăван, йӳç шĕвек кăкшăмран,
Ăраскалăм лăпкатăр тытса çурăмран!

*Ю.М. Салмин куçарнă*

***

Кам çамрӑклах хӑй ӑсне çеç шанать,
Тӗрӗслӗх шыраса типсе пурӑнать.
Кам вара ачаран пурнӑçпа паллашать,
Виноград пуличчен, изюм пулса тӑрать.

*Л.А. Карягин куçарнӑ*

***

Пӗлӳ ман чун-чӗремшӗн ют пулман,
Пӗлсе çитейменни нумай юлман.
Эп çитмӗл икӗ çул шав шухӑшларӑм,
Ӑнлантӑм – ӑсӑм ним те çуккӑ ман.

*И.Г. Трофимова куçарнӑ*

***

Пурнӑçна ан ирттер кӗнеке вуласа,
Кӑкшӑмран хатӗрлен эс сыпма сӑхсӑхса.
Ӑс-тӑну урӑ чух вӗрентме хӑтлансан,
Ярса ил те вӗрент эс ӑна хӑлхаран!

*Ю.М.Салмин куçарнӑ*

***

Енчен те ӑс-тӑн виç пуса тӑмасан,
Ухмахпа тӑмсая хисеплеççӗ пулсан,
Путарам-ха ак çак куркана хам ӑса,
Ӑраскалӑм кӑтартӗ мана та кулса.

*Ю.М.Салмин куçарнӑ*

***

Парсам кунта эрех. Пулмасть халь çывӑрса,
Салам сире, туссем, салам çак ешӗл куркӑка.
Çак йӑлӑхтаракан ман ватӑ ӑс-тӑна
Сапам-ха питӗнчен, ан лартӑр хурланса.

*Л.А. Карягин куçарнӑ*

***

Эс чӑнлӑха шыран. Ман ачуна та арӑмна,
Чи лайӑх кунсене, ман тӑванна та юлташна.
Сирсем кирлӗ марне, çулта ан чӑрмантарччӗр.
Татсам пур сӑнчӑра, хаваслӑ пулӗ çул çинче утма.

*И.В. Софронова куçарнӑ*

***

Каçхи хунар тӗнчен пӗтми уçлӑхӗнче
Хӑй куçӗпе арпаштарать мӗн пур ӑсчахӑн шухӑшне.
Ӑс-тӑн сухалӗнчен ан яр, сана вӑл илсе кайӗ
Ытти çӳревçӗсем хӑйман сукмаксемпе.

*И.В. Софронова куçарнӑ*

## ВАН-БО-ХЭУ

### Виç сӑмахлӑх

Çуралать кашни этем
Хӑйӗн ырӑ чунӗпе.
Чунӗпе пӗрех вӗсем,
Уйрӑм пулӗç ӳснипе.

Вӗрентсе пыман чухне
Çыннӑн чунӗ улшӑнать:
Вӗрентӳ ӗç мехелне
Тимлӗрех тытма хушать.

Ӑс памасӑр ӳстерни
Пулӗ ашшӗн айӑпӗ.
Хыт тытса вӗрентменни
Пулӗ вӑл наяннипе.

Пӗчӗкрен ӑс илмесен
Пархатарӗ çук унра.
Ача чух вӗренмесен
Мӗн кӗтейӗн ватлӑхра.

Виçӗ ӗçчен тӗнчере:
Çӗрпеле тӳпе, этем.
Виç çутаткӑç тӳпере:
Уйӑх, хӗвел, çӑлтӑрсем.

Виçӗ тӗрлӗ çыхӑну:
Патша, тарçӑ тӳрлӗхӗ,
Арӑм вара пӑхӑну,
Ашшӗ, ывӑль пӗрлӗхӗ.

Вуласа пыр тутупа,
Тупсăмне пĕл ăсупа.
Пул малтан та çавăн пек,
Пул кайран та çавăн пек.

Вĕсем арăм пулсан та
Ĕçне тунă çивĕчĕ.
Юн вĕретĕр санăн та –
Вăл арсенĕн тивĕçĕ.

Цзу-ин саккăрта чухне
Пĕлнĕ юрă кĕввине.
Ли-ми çиччĕре чухне
Пĕлнĕ шахмат вăййине.

Пурте тăнă тĕлĕнсе
Вĕсем ăслă пулнинчен.
Кам пырасшăн вĕренсе –
Тĕслĕх илĕр вĕсенчен.

Йытă сыхлать çĕрĕпе,
Авăтать автан ирпе.
Вĕренмесен ку чухне
Кĕрейместĕн çын шутне.

Пурçăн – пурçăн хуртĕнчен,
Пылĕ – вĕлле хуртĕнчен.
Çын ăса вĕренмесен
Кая юлĕ вĕсенчен.

*Г.Юмарт куçарнă*

## *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Авалхи Китай, Инди поэзийĕнчи ăса мухтаса калас традицисем, паллăрах çырулăх тексчĕсем.*

*– Ю. Балосогуни çырнă «Хăтлă пĕлӳ» поэмăн идейи, тĕп шухăшĕ. Поэмăри хăш-пĕр çаврăмсен чăваш халăх сăмахлăхĕнчи сăнавсемпе каларăшсен тӳр килĕвĕсене тупса палăртăр, вĕсене сăлтавлăр.*

*– Вăтам Ази поэзийĕнчи ăса мухтас традицисен уйрăмлăхĕ.*

*– Куçарнă текстсен пахалăхне хак парăр.*

*– О. Хайямăн пессимизмĕ мĕнрен килет. Унăн ăсхакăла мухтаса каланă сăввисенчи биографи паллисем.*

*– Чăваш литературинче кун йышши хайлавсем пур-и.*

*– Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен ăса мухтаса каланă тĕслĕхсем илсе парăр.*

## *Усă курмалли литература*

1. Баласагуни, Ю. Благодатное знание / Ю. Баласагуни. – Л.: Худож. лит., 1990. – 555 с.

2. Брагинский, И.С. Двенадцать миниатюр / И.С. Брагинский. – М.: Худож. лит., 1976. – 303 с.

# Тухăç литературинчи ватлăх кунĕсем мотивĕ

Этемĕн çĕр çинчи пĕлтерĕшĕ, вырăнĕ, вăл ăçтан килет, вилсен чунĕ ăçта каять йышши ыйтусем çынсене яланах хумхантарнă. Этем çут тĕнче пек вăрăм ĕмĕрлĕ пулас тесе те пуçне сахал мар ватнă. Тĕрлĕ тĕнсем этемĕн çĕр çинчи, кайранхи пурнăçĕ çинчен тĕрлĕрен ăнлантарса параççĕ. Çĕр çине унăн чăтăмлăхне тĕрĕслеме янă, кайран вĕçĕмсĕр ырлăх кĕтет тени пур. Китай философийĕпе килĕшӳллĕн çын пурнăçĕ çут çанталăкри пулăмсем евĕр. Çуркунне ӳсен-тăран ешерет, кĕркунне хăрса типет. Çитес çул вăл татах чĕрĕлет. Этем те çавăн пек. Пĕр пурнăçне пурăнса ирттерсен вăл вилет, кайран, курăк евĕр, çĕнĕрен çуралать. Çавăнпа та китай çыннишĕн вилĕмрен хăрасси характерлă мар. «Жизнь человека между небом и землей мимолетна, как белый жеребенок, промелькнувший мимо щели солнечный луч. Каждый появляется внезапно, стремительно, а исчезает плавно, в одиночестве. Развившись рождается, развившись умирает. Освобождаются лишь от своего природного чехла, сбрасывают с себя природный мешок – одни суетятся, другие уклоняясь; душа разумная и душа телесная уходят, за ним и тело. Это и есть великое возвращение» [Дао. 2000. С. 295].

Буддизм тĕнĕнче çыннăн çĕр çинчи пурнăçне йĕркелесе пыма карма вĕрентĕвĕ пулăшать. Этем тепĕр пурнăçĕнче кам е мĕн пулса, мĕнлерех ашшĕпе амăшĕнчен çураласси, çĕнĕ пурнăçра мĕнле шăпана тивĕçесси тата ытти те вăл ку пурнăçра мĕн шутланинчен, еплерех ĕçсем пурнăçланинчен килет. Çыннăн ачалăхĕ те, яшлăхĕ те, ватлăхĕ те пĕтĕмпех карма аллинче.

*Будто черные пчелы – такого цвета*
*Были волосы у меня когда-то.*
*В старости стали они на пеньку похожи, –*
*Как говорил Правдивый, так и случилось.*

*Все это тело, что было когда-то прекрасным,*
*Стало теперь вместилищем многих болезней,*

*Неприглядным, как дом с обвалившейся штукатуркой, –*
*Как говорил Правдивый, так и случилось.*
*(«Сутапитака» кĕнекери*
*палламан автор сăвви).*

Çын пурнăçĕн тăvată тапхăрне уйăрасси, вĕсене тĕрлĕ пулăмсемпе танлаштарасси, кашни япала хăй вăхăчĕпе илемлĕ пулнине палăртасси чылай халăхăн пур. Чăваш халапĕ ĕнентернĕ тăрăх, ĕмĕр валеçнĕ чух çын кушакăнне, йытăнне, лашанне, упăтенне кивçен илет. Çавăнпа малтанхи çирĕм çулне кушак пек ырлăхра, савăнса, юрласа, хуйха-суйха пĕлмесĕр пурăнать. Çитĕнсе çитсен лаша пек ĕçлет, хуçалăх тытасшăн тапаланать. Ватлăх енне сулăнсан вунă çулне йытă пурнăçĕпе ирттерет. Юлашки кунĕсенче упăте пек илемсĕрленсе, пĕкĕрĕлсе ларать.

XIII-XIV ĕмĕрсен чиккинче пурăннă Вăтам Ази сăвăçи Саади çыннăн хăй ĕмĕрĕнче икĕ тĕслĕ пурнăç пурăнса ирттермелле тесе шутланă: пĕрремĕшĕнче шырамалла, йăнăшмалла, ăс пухмалла, тĕнче курса çӳремелле, иккĕмĕшĕнче пухнă ăса кирлĕ пек усă курмалла, ыттисем патне çитерме тăрăшмалла. Хăй пухнă ăс-хакăла Саади «Гулистан», «Бустан» хайлавсем урлă килес ăрусем патне çитерме тăрăшнă.

Этемĕн пурнăç тапхăрĕсен вăрттăнлăхĕ, кăткăслăхĕ Алишер Навоине те шухăшлаттарнă. Хăйĕн «Сокровищница мысли» кĕнекине те вăл тăватă пая уйăрать, пурнăçăн кашни тапхăрне мухтаса калать: «Чудеса детства», «Редкость юности», «Диковины среднего возраста», «Последние советы старости». Сăвăç шучĕпе этем çĕр çине ăнсăртран килмен, вăл е ырлăх, е çылăх идейисене пурнăçлать. Навои хăйĕн пултарулăхĕ урлă çынсене ырă ĕçсен хисепне ӳстерме вĕрентсе калать.

Гер-оглы эпосра ватăлса çитнĕ паттăр хăй пĕччен юлнишĕн кулянать. Унăн лаши те халсăрланнă. Иртнĕ кунсем çинчен аса илни элеги евĕр илтĕнет. Ватлăх килсе çитни, вилĕм çывхарни паттăршăн трагедилле пулин те вăл кулянса лармасть. Пурнăçĕнче туса ĕлкĕрнĕ паттăрла ĕçĕсемпе кăмăллă. Вилĕмĕ те унăн пархатарлă. Гер-оглы Тăван çĕршыва хӳтĕлесе вилет.

Ватлăх кунĕсене халалласа çырнă хайлавсенче тунсăх кĕвви пуррине асăрхама пулать, лирика геройĕ ытларах ĕмĕр иртсе пынишĕн кулянать. Вăл иртсе кайнă пурнăçне аса илет, унăн çамрăк ăрăва халалламалăх ăстăнĕ, пĕлĕвĕ те пур. Вилĕм çитнине асра тытнипе пĕрлех лирика геройĕ хăй пурнăçĕпе кăмăллă пулнине, ватлăхăн та хăйне май илем пуррине палăртать. Ку йышши сăвăсенче, çавăн пекех, пурнăç пĕлтерĕшĕ, этемĕн çĕр çинчи вырăнĕ пирки калани тĕл пулать. Куляну туйăмĕпе пĕрлех философилле шухăш та палăрать.

## *КУÇАРУСЕМ*

## РУДАКИ

### Ватлăх сăввисем

Йăлтах-çке ӳкрĕç шурă шăлăмсем,
Пăчланчĕç ялтăр çутă çăлтăрсем.
Шăратнă йăлтăр кĕмĕл пек çиçсе
Ларатчĕç шăкăр хаклă ĕнчĕсем.

Мерченлĕ сывлăм евĕр ялкăшса,
Çăварăмра вылятчĕç тутамсем.
Ăçтан-ха килчĕ манăн çак инкек.
Тивейрĕç-ши Сатурнăн çиллисем.

Аюх, çӳлти Сатурнăн мар,
Çакна эс, çыннăм, ӳлĕмрен пĕлсем:
Пилленĕ Турă, ун йĕрки çапла,
Пире упраççĕ Турă çыннисем.

Тĕнчемĕр вĕççĕр улшăнать, асту,
Тапса юхаççĕ унăн çăлĕсем.
Паян сим пыл, ыран ав – чăн аху,
Эмел тесе хыпаççĕ чирлисем.

Çитет çапах ак ватлăх та майпен,
Аран кура пуçлаççĕ куçусем.
Ӳкет сив тăм, кĕр те часах çитет,

Хăрса ӳкеççĕ капăр чечексем.
Çапла вăл пурнăç, унăн ĕренки,
Эпир кунта, пĕлсемĕр, хăнасем.

*В.Ахун куçарнă*

## АМБАПАЛИ

(*Сыпăк*)

Çĕн çăвăр хурт пекехчĕ – йăм хураччĕ,
Юхса, вĕçсе тăратчĕ манăн çӳç.
Халь, ватлăхра, чăлханнă чĕпĕк евĕр, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Ар сисĕмне чĕртсе кăпăкланатчĕ
Чечек тирсе тирпейлесен кăтрамĕ
Халь, ватлăхра, мулкач тирин шăршиллĕ, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Çăран, илемлĕн ӳснĕ чăтлăх евĕр
Çӳç хумханатчĕ турама тăрсан,
Халь, ватлăхра, тăнлав таран çаралчĕ, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Пуç йĕпписен çиçĕмĕпе çиçетчĕç
Сăрт-ту шарлакĕ евĕр çивĕтсемĕ
Халь, ватлăхра ар çын пек кукшалантăм, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Ăстан çемçе мĕлки ӳкернĕ евĕр,
Кăнтарнă пек хитреччĕ куç харши.
Халь, ватлăхра, ăна та пĕрĕм татрĕ,–
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Хура та витĕр тăрă пысăк куç.
Халь, ватлăхра, шăрçи ун тĕссĕрленчĕ, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.
Яка чул ту пек ӳĕкленетчĕ шуррăн

Çӳхе çунатлă măкарах сăмса.
Халь, ватлăхра, вăл ишĕк ту пек тĕмлĕ,–
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Ӳнерлĕ тунă ал сули пек авăк,
Çеçкесенчен хитреччĕ ман хăлхаĕ
Халь, ватлăхра, кĕрхи кăмпа пек шаннă, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравланиĕ

Банан папакĕ евĕр шуррăн-шуррăн
Йăлтăртататчĕç кулнă чух шăлсем.
Халь, ватлăхра, урпа пекех саралчĕç, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Каталăхри чи çепĕç ӳлтĕк евĕр
Кăвăлтатма пĕлеттĕмччĕ тахçан.
Халь, ватлăхра, чĕтрет янравсăр сассăм, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Яка шапа хуранĕ пек пĕр йĕрсĕр,
Пĕр пĕрĕмсĕрччĕ çулăм ӳтлĕ мăй.
Халь, ватлăхра, е тур палли е шĕпĕн, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Е лотос çеçкилле авкаланатчĕ
Е çирĕп те ачашчĕ аллăм ман.
Халь, ватлăхра, тип туратран та хытă, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Вут куçлă ылтăн-кĕмĕл çĕрĕсемл.
Пӳрнеçĕмсем илемлĕччĕ епле.
Халь, ватлăхра, тымар пек кукăр-макăр, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Çап-çавракаа та çӳллĕччĕ ман чĕччĕм
Сĕтек тутам чăп тулнă çимĕç пек.
Çĕве хутаççисем пекех халь усăк, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Чи хаклă ылтăнтан шăратнă евĕр,
Чеченчĕ те тасаччĕ çамрăк ӳт.
Пăвать халь пĕркеленчĕк серепийĕ, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Слон хобочĕ пекехчĕ чăмăр пĕççĕм,
Çӳл хум пек явăнатчĕ утнă чух.
Халь бамбук патакки – ӳт хĕснĕ шăмă, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравланиĕ

Шыв-шур çĕленĕ ункăн-ункăн пăвнă
Ама туна пекехчĕ пăкăлчак
Халь сулăсем те тытăнса тăмаççĕ, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Чи хăвăрт юхăмри çут пулă пекч.
Илемлĕ, ывăна пĕлми ура.
Халь, ватлăхра, ӳт-тирĕ çурхахланчĕ, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

Тахçан кӳлемлĕ пулнă кӳлепем те
Халь, ватлăхра, пин чир-чĕр хупăлчи.
Çитменнине ак-ак тӳнес пек вăл та, –
Чăн пулчĕ тӳрĕ чун хуравлани.

*В. Энтип куçарнă*

# Чăваш поэзийĕнчи ватлăх кунĕсем мотивĕ

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

***

...Чие тымарĕнчен пĕр чĕлĕм турăм,
Кăпчанкăран эп аврăм чăпăкне,
Савăнăçпа та, хуйхăпа та туртрăм,
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.
Çăка çăпанĕнчен эп алтăр алтрăм,
Шăтăкласа тĕрлерĕм аврине,
Сирсе сирĕлейми сим-пыл тултартăм,
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.
Вĕренерен эп купăс ăсталарăм,
Хĕр пилĕкĕ пек турăм аврине,
Пĕр савăнса, пĕр хурланса каларăм –
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.

***

Пĕчĕкçĕ тăваткăл куçкĕски,
Тума пĕлнĕ те иккен ăсти!
Ир тăрсассăн та тытса пăхаттăм,
Каç выртуçăн та тытса пăхаттăм,
Астумарăм, тантăшăм, туймарăм:
Нар пек хĕрлĕ питĕм пĕтĕмпех
Пĕркеленнĕ кайнă пĕлĕм пек.
Урхамах та пуçлă йĕс тура
Пиçиххи çинчехчĕ ман çумра.
Ир тăрсассăн та пуçа тураттăм,
Каç выртуçăн та пуçа тураттăм,
Астумарăм, тантăшăм, туймарăм:
Пăрçа лавĕ евĕр çӳçĕмпе
Кукшаланнă юлнă йĕтем пек.
Ик кашта шур чăххăм пурччĕ ман,
Вăтăр икĕ шăлăм пурччĕ ман.
Пăтавкка тулла çыртса йăтаттăм,

Çĕнĕ сӳс тăлла çыртса тататтăм,
Астумарăм, тантăшăм, туймарăм:
Хавшаса каяйнă каштамсем,
Вĕçнĕ аннă шурă чăххăмсем.

Пăсташа тавран куç пурччĕ ман,
Пăхаймастчĕ куçăмран тăшман.
Тинкерсессĕн йывăçа хăртаттăм,
Лашама виç çухрăмран паллаттăм,
Кăнтăрла та çăлтăр эп кураттăм.
Шел, вилсен сая каять, мăнтарăн:
Куçăм халь те витĕр çивчĕ ман,
Кама эп пиллем-ши куçăма.

***

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Ман пуçăмра сăсар çĕлĕкчĕ,
Çĕлĕкĕмĕн тӳпи – чăн тарай,
Чи тăрринчи çӳçи кĕмĕлччĕ.

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Хура тăлăпăмçăм йӳлеччĕ,
Пилĕкĕмре кĕрен пиçиххи,
Кăкăр ăшши сарă тилĕччĕ.

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Тĕве çăмĕн алсипелеччĕ,
Айра çуна, умра урхамах,
Алра чăмăр чĕн тилхепеччĕ.

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Çĕр çухрăма та ман пĕлĕшчĕ,
Ваттипеле ват çын, яшпа яш,
Ăçта та ман сăмах тĕплĕччĕ.

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Пăшатан пек куçлă йĕкĕтчĕ,
Кача пӳрнем тулли çĕрĕччĕ,
Кăчăк туртмассерен пĕр хĕрччĕ.

Ёлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Телей йĕкĕр енчĕкпелеччĕ...
Шухăшласа пăхсан – пурнăç мар,
Çывăрмасăр курнă тĕлĕкчĕ.

***

Çуралнă эп чышкă чăмăртаса –
«Çак çут çанталăк – манăн!» тенĕ пек.
Вилсессĕн выртăп пӳрнене сарса, –
Пĕр ывăç пурлăха та илмĕп тек.

Манран тухман, манпа пĕтмен йăла:
Пăрахăр çĕр çутилĕх пилĕк пус.
Алтса пытарăр та юрла-юрла,
Ташла-ташла салантăр килнĕ тус!

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Рудаки сăвăçăн пултарулăхĕ пирки каласа парăр.*
*– А. Навои çырнă хайлавăн тĕп шухăшĕ.*
*– Чăваш халăх сăмахлăхĕнчи ватлăха сума сумалли çинчен калана тĕслĕхсем.*
*– В. Ахунăн куçарăвĕн пахалăхĕ.*
*– П. Хусанкайăн «Тилли юррисем» ярăмра ватлăх кунĕсем мотива уçса парăр.*
*– Чăваш литературинче кун йышши тӳр килӳсем урăх пур-и.*

### *Усă курмалли литература*


1. Брагинский, И.С. Двенадцать миниатюр / И.С. Брагинский. – М.: Худож. лит., 1976. – 303 с.
2. Дао. Гармония мира. – М.: Эксмо-Пресс, 2000. – 860 с.
3. Конрад, Н.И. Средневековое Возрождение и Алишер Навои // Конрад, Н.И. Запад и Восток. – М.: Наука, 1972. – 496 с.
4. Чăваш халăх сăмахлăхĕ: в 6 т. VI т. 2 п. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1987. – 449 с.

# III СЫПĂК

# ТУХĂÇ ПОЭЗИЙĔНЧИ ЖАНР ПУЯНЛĂХĔ

## Вăтам Ази литературинчи газель жанрĕ

Газель классикăлла тухăç литературине араб фольклорĕнчен кĕнĕ. Вăл бедуинсен репертуарĕнчи юрату туйăмне палăртмалли юрă шутланнă. Сăвă 12 е 15 бейтран тăма пултарать. Литература традицийĕсемпе килĕшӳллĕн газелĕн малтанхи бейчĕ *аа* рифмăпа вĕçленет пулсан, кайранхи бейтсен иккĕмĕш йĕрки те *а* рифмăпа вĕçленмелле: *ба, ва, са*... Юлашки бейтра сăвă авторĕн ятне асăнни (тахлус) пулмалла. Авалхи вăхăтра газель виçипе çырнă сăвăсенче хĕрарăма юратни çинчен каласси тĕпре пулнă. «Словарное значение слова «газал» – «ухаживание за женщиной», «воспевание женщины в стихах». В газели описание красоты возлюбленной и изображение состояния любви и пылкой страсти были основными темами», – тесе ăнлантарать М. Гайснер тĕпчевçĕ [Гайснер, 1962, С. 17].

Тухăç литературинчи юрату лирикинче тĕп темăсем çаксем пулнă: телейсĕр юрату (е юрату-асаплану), телейлĕ юрату (е юрату-киленӳ), савнин илемне сăнлани, уйрăлăва пула асапланни. Сăвăра икĕ семантика центрĕ пур: пĕри – лирика геройĕ, эпĕ; тепри – юратнă хĕр.

Газель пуçламăшĕнче палăрнă шухăш кайранхи бейтсенче малалла аталанать, юлашкинчен тепĕр хут тĕл пулать. Лирика геройĕ пĕрремĕш бейтра, сăмахран, савнин çӳçĕсене килĕштерни çинчен калать пулсан, кайран вĕсемпе килленнине, вĕсене пула асапланнине палăртать. Юлашкинчен çав çӳçсемшĕн, вĕсен хуçишĕн, тĕнче хĕрне çитиех кайма хатĕр, тет. Пĕр шухăша тепĕр хут каланинче сăвă формине çирĕп тытса пыни тата семантика пĕлтерĕшне уçăмлатни пур. Лирика геройĕ юратури асапланăвне

сăнласа пама тытăнать, кайран çак туйăм мĕн патне илсе çитернине кăтартать.

Газельте поэтика фигурисем хире-хирĕçле симметри йĕркипе вырнаçма пултараççĕ. Кун пек чухне савни илемне хитререн те хитререх сăнлать лирика геройĕ, хăйĕн асапланăвĕ вара ӳссех пырать. Лешĕн пичĕ хĕрлĕ пулсан, каччин – сарă (чир тата кĕркунне палли); герой кĕрхи çулçă пулса савнин урисем айне ӳкет, савни, кипарис пек, яланах яштака та тӳрĕ, вăл пилĕкне те нихăçан авас çук. Татăлса ӳкнĕ кĕрхи çулçă çилпе вĕçсе кайни – юратакан çын йывăрлăха лекни, савни вара роза пахчинче ĕмĕр-ĕмĕрех чечекленсе ларĕ. Лирика геройĕн куçĕнчен юнлă куççулĕ юхать, пичĕ хуйхăпа сарăхса ларать. Ăна терт-нуша кӳрекенĕ – савнипе уйрăлса кайни е юратнă хĕр унăн туйăмĕсене асăрхаманни. Çĕр çинчи пур асапа та, хăй тӳссе irттернине те вăл савнă çынпа пĕр самантлăх тĕл пулсанах манса кайĕ, чĕрĕлсе тăрĕ. Илемлĕ пикен сăнарне ӳкернĕ чухне çут çанталăк пулăмĕсемпе, пурлăх тата чун культурин япалисемпе танлаштарни йăлана кĕнĕ. Пĕтĕмĕшле сăнартан ытларах савнин пуçне (пичĕпе çӳçĕсем) тата кĕлеткине сăнласси пур.

Çавра пите хĕвел, роза, тюльпан, шиповник, жасминпа танлаштараççĕ, вăл сĕт пек, жасмин пек шурă, хĕвел пек çутă пулма пултарать. Куçсем газель пек, нарцис пек, çав хушăрах вĕсем ӳсĕртеççĕ, вĕлерме пултараççĕ, юна ĕçеççĕ. Тутасене рубинсемпе, хĕрлĕ эрехпе, коралсемпе, роза бутонĕсемпе танлаштараççĕ. Вĕсен тути пыл, эрех, сахăр, шербет евĕр пылак. Вĕсемех пурнăç парнелеççĕ, вилнисене чĕртме пултараççĕ, эмел пек. Куç харшисене ытларах чухне сăнăсемпе тата кинжалпа танлаштараççĕ. Вĕсем лирика геройĕн чĕрине тăрăнса асап кӳреççĕ.

Çӳç асамлăхне тухăç халăхĕсем авалтанах ĕненеççĕ. Юратура вĕсен хăвачĕ тата та пысăкрах пĕлтерĕшлĕ. Çӳçсен тĕсне, шăршине, вăрăмăшне, кăтра е тӳрĕ пулнине палăртасси пур. Вĕсен хăвачĕ те лирика геройĕн чунне асаплану кӳрет. Çӳçсене амбрăпа, бази-

ликпа, гиацинтпа, фиалкăпа, жасминпа, драконпа, хетанти мускуспа, сăнчăрсемпе, тĕттĕм хура каçпа, тĕтĕмпе, утлă çарпа танлаштараççĕ.

Газель жанрĕ, унăн тĕпрех мотивĕсем чăваш литературине куçару урлă кĕнĕ. Вĕсемпе ытларах куçаракан авторсем хăйсен пултарулăхĕнче усă кураççĕ. И. Ивник тухăç сăвă виçине XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчех чăваш литературине кĕртес тесе тăрăшнине асăнса хăвармалла. Сĕм авалтан килекен тухăç поэзийĕн жанрĕ кӳршĕлле литературăсене çеç мар, Анăç, çав шутрах, вырăс литературине те витĕм кӳрет, çĕнелсе малалла аталанать.

## *КУÇАРУСЕМ*

### НИЗАМИ

***

Куç пекех куллен упра, ан тарт илемлĕ ăшлăхна.
Ют çĕрте, асаплă çул çинче, тупаймăн эс ăна.

Ав утать асатлă шур сухал. Шырать, тен, яшлăхне.
Çук, утсан та ĕмĕр-ĕмĕр, тек тупаймĕ вăл ăна.

Ан вĕçтер пуçтах çилпе эс хăвăн çамрăк вăхăтна.
Пур яланлăх, эс çавна пĕл! Эс паян пултар ăна.

Ывăçпа мерчен тытсан та – ун хакне пĕлмест хурах.
Эсĕ пĕл – яш ĕмĕр хаклă, эс сая ан яр ăна.

Савнăçна хуйху-суйху хуса яраймĕ хăратса.
– Шухăш çук, – тесе ан ыткăн, вăл сан пур – ан ман ăна.

Эй, янра, вархан[1], хăватлăн! Сим шерпет ярсам, сăйпуç!
Пур юрру сан, Низами! Тĕнче умне кăлар ăна.

*В.Ахун куçарнă*

---

[1] **Вархан** – музыка инструменчĕ.

## АЛИШЕР НАВОИ

***

Юрату тăмхисем упранаççĕ ман чун тĕпĕнче,
Тĕнчере мĕн пурри, ыттисем – манăçу хăминче.

«Савăш вутлă çĕмрен мĕншĕн тиврĕн кăра кăкăра.»
Хуравларăн: «Курсам – пур сăлтавĕ çĕмрен вĕçĕнче».

«Хăш çĕршыв шахĕсен пуçĕсем кермену́ тавралла.»
Хуравларăн: «Вĕсен ячĕсем – ман кермен ту́пинче».

Тĕлĕнсе пуç таяççĕ Вамык та Мажнун ман умра,
Ма тесессĕн, ман ят юрату шăписен юрринче.

Юрату кĕнеки асăнать çĕр те пин инкеке
Тата пĕл ман çинчен çĕр те пĕр уйрăлун тĕркинче.

Кам чухласшăн асап ку́рекен юрату тупсăмне,
Эпĕ уншăн чу́кленĕ тупрам – савăш ванчăкĕнче.

Халиччен эс вуланă Якуб ĕсĕклевĕ çинчен,
Ман ху́хлевĕм çĕр хут вăйлăрах хуйхăру çуртĕнче.

Сапаланчĕç таçта вĕçсе кĕлеткем таткисем,
Кашни пайĕ асаплăн ху́хлет çав тĕпренчĕксенче.

Юрату су́ннипе аманса вилнине пĕлтерме,
Навои, шăрçала та хăвар диванун йĕкинче.

*В.Эктел куçарнă*

***

Эй, савни, саду чипер сан, савăш куçĕсем хитре,
Çыншăн кăмăлу пит сапăр, маншăн сурансем хитре.

Ытаруллăн чечекленчĕ сăн-питу́ сан шерпетпе,
Лăпкă шыв çине у́кеççĕ, калăн, çеçкесем – хитре.

Ман чĕрем тĕпне çутатрĕ, уйрăлу халь тарама,
Мĕн тери хăватлă, çепĕç – лал сăмахĕсем хитре.

Уйăх чаплă-и е гури[1]. Çук, ан ыйт, савни, манран:
Çăтмахра пулман эп, тусăм, çĕр çинчи илем хитре.

Шуçăм çапнă пĕлĕт сăнĕ танлашаймĕ уйăхпа:
Сан кăвак кĕпӳйĕ çийĕн уйăх тĕррисем хитре.

Ватăлсан анчах ăнлантăм эпĕ çамрăклăх хакне,
Яшлăхра анчах çунатлă, савăш кунĕсем хитре.

Икĕпитлĕхпе каварлăх престолне, Зехид, эс ил,
Навоишĕн çеç пĕчченлĕх, чăтăмлăх, пĕлсем хитре.

*В.Эктел куçарнă*

***

Намăс тиврĕ курма ухмахсен, ăслисен хушшинче,
Ятăм кайрĕ инçе тĕнчери халăхсем хушшинче.

Çук, савни сивĕнмен, уйрăлу арпаштарчĕ аса,
Эп йăлтах юрату вучĕпе асапсен хушшинче.

Чăтăм, туйăм та çук, чĕрере чĕр суран –
Караван çухалсан кĕл юлать бархансен хушшинче.

Куç харши сăннисем чĕрере, ĕмĕтре пери[2] çеç,
Эпĕ халь Бабилти Юсуф пек виллисен хушшинче.

Сан чуралăхунта эп вилем, ирĕк те кирлĕ мар,
Çак тăмха пĕрешкел кĕлмĕçпе чаплисен хушшинче.

Пур Захидшăн çăтмах, Навоишĕн пĕр эсĕ анчах –
Пысăк уйрăмлăх-çке ăссăрпа ăсчахсен хушшинче.

*В.Эктел куçарнă*

---

[1] **Гури** – юмахри илемлĕ пике.
[2] **Пери** – пирĕшти, илемлĕ хĕр.

***

Эс каларӑн: куҫ вылять. Сӗр эппин ӑна эрех.
Хуравларӑн: кирлӗ мар, куҫӑм ӳсӗр ахалех.

Кӗлчечекӗн те пулать уҫӑлман чечен ҫеҫки,
Сан чипер питри туту ҫавӑ тӗвӗ евӗрех.

Те сана хӗвел теес, е хӗвел – ӗлккен сӑну.
Нимӗн уйрӑмлӑх та ҫук – иккӗри йӗкӗреш пӗрех.

Эс ан тӗлӗн, сӗртӗнем сан йыттун йӗрне куҫпа,
Тем тесен те ҫавӑ йӗр маншӑн халӗ айн пекех.

Тарават узбек сӗнет чашӑлти кумыс курки,
Ырсунанлӑхӗ аннен сӗтӗнчен те сиплӗрех.

Юрӗ, иҫӗм пикипе мукбача[1] чури пулам
Тен, хупахҫӑна ҫапла хӗрпе ывӑл кирлӗрех.

Ҫулҫӳрен тӳпе ҫаври – ӗҫпелен асап ҫӳпҫи,
Тупрӑм алтӑр ҫавринче эп чӗре сурри тинех.

Халӗ эсӗ, Навои, хупахсен мурид чури,
Ҫавӑнпа та вӗсенчен хӑпаймастӑн ӗмӗрех.

*В.Эктел куҫарнӑ*

***

Хӑш чухне чечек ҫеҫки кӑтартать садра питне,
Пытаратӑн эсӗ ҫеҫ тутусен йӑл куллине.

Асат хуҫнӑ этеме, халсӑрскер, тӑма тӑрсан,
Таянатӑп ӳкесрен эрешмен карти ҫине.

Куҫҫульпе сӑн-пит мана супӑшран ҫӑлас пулсан,
Кирлӗ хӗрлӗпе шафран талисманлӑх сыхлӑхне.

Ҫук ҫӗршыв пушанман куҫҫульпе юхса пӗтсе,
Уншӑн айӑплӑр хура тухатуллӑ куҫсене.

---

[1] **Мукбача** – алтӑрҫӑ.

Пилсĕр ӳтĕм çĕртĕр пăнтăх сăнă тăрăнсан,
Курăк пусĕ, тусăмсем, çывăхри хупах çулне.

Хăçантан савни юрри çунтарать ман чĕрене,
Тĕвĕлерĕм çав кунтан эп зунарăн[1] çиппине.

Кĕлĕ умĕн пит-куçа çумалли кăмкан вансан,
Хупахра кĕлмĕçленсе тытăп тутăх катăкне.

Чап керменĕн тӳпине эрешленĕ вăхăтра
Сăрăç маннă ӳкерме ĕненӳллĕх тĕррине.

Тĕнчене тăшманусем хупласан ан хуйхăр эс.
Навои, пĕрех куна парнеле чун савнине.

*В.Эктел куçарнă*

***

Тулли çут уйăх пек хитре хĕре çухатрăм эпĕ.
Сада тухма ан чĕн – хула мана паян тĕрме пек.

Пĕр çепĕç розăшăн çунсах пуçа çухатрăм пулĕ, –
Ик куçăмра тумлам куççуль юлмарĕ-çке йĕме те.

Эсир хаваслăх черккисем йăтса, эрех ĕçетĕр
Эп пур – савни пирки вутра кăна çунса çӳретĕп.

Кун-çулăмра нимле хаваслăх та тăрса юлмарĕ,
Тӳсми асап анчах ăшран тухма пĕлмест пĕрре те.

Ман чунăма телейсĕр юрату сăнни амантрĕ,
Пĕр сан ятупала кăна хама эп хӳтĕлетĕп.

Ман хурлăхăм çынсемшĕн, тен, йĕрӳ те кулă пулĕ,
Анчах эп вĕсенчен пуçа чиксе кăна иртетĕп.

Килсем, килсем! Вутра çунми, шывра путми хăват пек
Юратупа ман чунăма сыпăнтарсамччĕ, тетĕп.

---

[1] **Зунар** – пиçиххи.

О, Навои, савма пăрахиччен вилмешкĕн çăмăл, –
Илтсем, çут уйăх пек пикем, сана эп тилмĕретĕп.

*И. Тукташ куçарнă*

***

Эпех-ши вăл – санпа чи çывăх тус пулас этем.
Хăçан эп çак аташнă телее хуса çитем.

Тĕнче курать, ман çутă ĕмĕтĕм пĕр эсĕ çеç;
Эс пулмасан вара мĕн пур хаваслăх та кичем.

О, чунăмçăм! Эс маншăн çывăх туслăх тинĕсĕ,
Çав тинĕс тĕпĕнче куратăп эп çап-çут илем.

Эрех черкки ан сĕн мана текех çак ĕçкĕре,
Эп сан çăварунти шерпет сăмахусене ĕçем!

Ни уйăх кирлĕ мар мана паян, ни çут хĕвел, –
Вĕсем сан сăн-сăпатунтах çиçсе тăраç иккен.

О, Навои, пĕлместĕп эп: санпа туслашрăм-ши,
Е çут тĕнче хуçи пулса тăрайрăм-ши, пикем.

*И. Тукташ куçарнă*

***

Ман пурнăçăн пуянлăхĕ çак çутă çеçкере
Эй, ыр хуçам, тултар çине-çине эрех!

Тулли иккен çап-çут черкки, эрехĕ пыл пекех
Анчах савнин сăмахĕсем чăн-чăн шерпет пекех.

Сенкер тӳпе черкки ăшне тумлать ав шурăмпуç,
Тумлать те чашкăрать кăна çут эрехпе пĕрлех.

Эс те тултар çут черккӳне, ĕçем те ӳсĕрлем,
Пĕр самантпа хуйха манса çĕклентĕр ман чĕрем.

Яш ĕмĕре илемлетем эрехпе те пулсан,
Чуна уçса юрра ярар чи йӳнĕ эрехпех.

Ах, йывăр-çке, ах, çăмăл мар сив масара кĕме!
Çампа куçа уçми ларап эп çакă ĕçкĕре.

Ан улталан эс, Навои, телей çине пăхса,
Çамка çине çырман телей вăл, вилĕмпе пĕрех!

*И.Тукташ куçарнă*

***

Асап çинчен ыйтмасăрах эс ман ăша хыптартăн.
Чуна лăплантарас чухне вĕри вутпа çунтартăн.

Чĕре суранĕнчи юна тăпăлтарма ыйтсассăн
Ик куçăмран куççулĕ мар, юн тумлатса хăвартăн.

«Салхулăха сирсем», – тесен хитре сăнупала эс
Ман çепĕç, тунсăх чĕреме пачах ăсран кăлартăн.

Ĕнтĕ чĕрем пытанчĕ сăрт пек асап айнех,
Анчах хĕрӳ юратупа эс çав сăрта аркатрăн!

Сан тар тумламне те пулин сăвва хывас тесе,
Эп, Навои, мерчен пухса, çак юррăма шăратрăм.

*И. Тукташ куçарнă*

***

Пикем, сана манас пулсан – чĕрем чуллантăр,
Анчах тепри те саншăн ывăнсан – пăчлантăр.

Эп урăх пикене савсан – шăм-шаккăм çĕртĕр,
Анчах тепри те сан пулсан – пуçне çухаттăр.

Эп урăх пикене пăхсан – куçа шур илтĕр,
Анчан сана куç хывнă çын та суккăрлантăр!

Сана усал калас пулсан – чĕлхеçĕм хыттăр,
Анчах теприн усал çăварĕ те хуплантăр!

Ем-ешĕл пахчана чечек татма тухсан,
Çын куçĕнчен сана ман куç сыхлатăр!

Çук сан пекки! Эс уйăх питлĕ, çăлтăр куçлă,
Таса турамăш чунĕнчен те эс таса-тăр!

Эй, кĕрекеçĕ! Тултарсамччĕ шерпетне,
Ман ăш хыпать, асапăма кăштах пусартăр!

Çук, çук! Шерпет те, ним те кирлĕ мар мана!
Эп чĕрĕлеп: савни, савни анчах çывхартăр!

Вăл ман кун-çул! Вăл ман телей! Ман пулмасан –
Çут кун çухалтăр, сар хĕвел тарса пытантăр!

Эй, Навои! Ан çун-ха пит, кăшт кĕт-ха эс:
Пĕркенĕ каç пĕркенчĕкне, сас-чӳ лăплантăр...

*С.Шавлы куçарнă*

## НАСИМИ

***

Чиперккеçĕм, телейĕм те шанчăкăм манăн,
Савнă тусăм, тĕрек те пуласлăх эп санăн.

Ман чĕре хуçи эс, манăн сывлăш та пурнăç,
Вилесрен хăрасан частарах манпа курнăç.

Уйăхпи эс, хĕвел хĕрĕ эс, савнă тусăм,
Кипарис, ман тирек, ман жасмин, хура куçăм,

Пĕр сана суйласа илнĕ эпĕ, савниçĕм,
Пирĕшти эсĕ маншăн, тулса çитнĕ пĕр иçĕм.

Ах, ниçта та кайса çук санран çăлăнмашкăн,
Эс мана илĕртесшĕн те темшĕн тарасшăн.

Эс – ахах та мерчен, ялкăшан çутă ĕнчĕ,
Насими, юрласа, сана хăй патне чĕнчĕ.

*М.Юхма куçарнă*

## ФУРКАТ

***

Ирсерен тăратăп сан çулу çинче.
Куç хуралса килчĕ сан çулу çинче...

Ман чĕре таппийĕ илтĕнет кунта,
Эсĕ çеç çитместĕн, васкаса таçта.

Урхамаху ăмăр, таçталла васкан,
Мана таптаса çеç эс ялан каян...

Зулейха юратнă Юсуфа чунтан.
Зулейха пек кил-ха ман пата савсан.

Унсăрăн Фуркатшăн пурăнăç та çук,
Эсĕ çук пулсассăн, эп те кунта çук.

*М.Юхма куçарнă*

# Чăваш поэзийĕнчи газель жанрĕ

## ИВАН ИВНИК

***

Пикем, эхер те санпалан пĕрлешмесен кун-çул,
Çири кĕпем вил пирĕ пул, кил-çуртăм тупăк пул.

Эхер те санăн çут сăнна пултарас пур манма,
Чун-чĕреме кăшлатăр хурт, хамах кăтартăп çул.

Нӳрелчĕ курăк сывлăмпа. Тухсамччĕ йăпанма.
Кашни чечек çинче çунать мерчен те хаклă чул.

Юратупа супсан этем, савăнăттăм эп, ăнман,
Çавна пула халь хамăн ман ан юхтăрччĕ куççуль.

Çухатрăм эпĕ канлĕхе, пĕлместĕп ăнланма.
Ак мĕн каласчĕ тусăма: «Тек ан кĕт, сывă юл!»

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

***

Алла тытман шур ал тутри –
Савнийĕм пурччĕ ман,
Çумма çыхман çут пиçиххи –
Савнийĕм пурччĕ ман,
Йĕке кĕмен йĕкĕрĕлче –
Савнийĕм пурччĕ ман,
Пĕр тăхăнман çĕн çĕрĕччĕ –
Савнийĕм пурччĕ ман,
Çип витĕрмен ахах пĕрчи –
Савнийĕм пурччĕ ман,
Хăлха тирмен алка ĕнчи –
Савнийĕм пурччĕ ман,
Мăя çакман тарай çуха –
Савнийĕм пурччĕ ман,
Пуçра пулман мерчен тухья –
Савнийĕм пурччĕ ман,

Сĕркĕчлемен çĕн купăс пек
Савнийĕм пурччĕ ман,
Тута тивмен шăхличĕ пек
Савнийĕм пурччĕ ман.
Шур тутăрăм хуралчĕ-çке,
Пиççи лекмерĕ пилĕке,
Йĕкĕрĕлчем ман катăлчĕ,
Ман кĕмĕл çĕррĕм татăлчĕ,
Ахах пĕрчи çухалчĕ-çке,
Алка ĕнчи ванайрĕ-çке,
Тарай çухамçăм тăпăлчĕ,
Тухья мерченĕ тăкăнчĕ,
Çĕн купăс çĕмĕрĕлчĕ-çке,
Шăхличăм питĕрĕнчĕ-çке...
Пуянччĕ эп Пӳлĕхçĕрен,
Халь чухăн эпĕ кĕлмĕçрен!

## ВАСИЛИЙ ЭКТЕЛ

***

Теме систерсе ирĕлет кĕрхи кун,
Санпа юнашар çамрăкланчĕ ман чун.

Çĕре çупăрлать лăпкăн карчăк ăшши,
Умра юлашки хĕрлĕ çулçă ташши.

Карать эрешмен тăрăшсах кĕмĕл çип,
Унпа çил вылять – кĕркунне кĕслеçи.

Манран сан пата тăсăлаççĕ çипсем,
Анчах тирĕнмеççĕ шăрçа-сăмахсем.

Эп пăхрăм та пăхрăм сана куçунтан,
Эс нимĕн сисместĕн, шăп-шăпăрт паян.

Салхуллă та вăрттăн Джоконда пекех
Ларатăн, вăтаннăн пуçна эс пĕкен.

Пăлхатмăп, аркатмăп эп çак илеме,
Сăмахсăр пытарăп кĕрхи хĕлхеме.

Хăюсăр та вăйсăр ват кĕлмĕç эп халь,
Пуçра тилмĕрӳ: «Ан пăрах, ан çухал!»

Чĕлхем çаврăнмарĕ: «Ан кай-ха», – теме,
Эп выртăттăм, йĕрĕттĕм – маннă йĕме.

***

Парнелерĕн мана виçĕ çутă сăмах –
Манăн чунăм унпа тасарах, çутăрах.

Пăшăлтатрăн мана виçĕ хаклă сăмах –
Кашниех хамăн пурнăçăмран хаклăрах.

Эс каларăн мана виçĕ ăшă сăмах –
Çуллахи хĕвелтен те вĕсем ăшăрах.

***

Ним сисмесĕр ялан ярăнса эс иртетĕн,
Тăлăх йывăç пекех хурланса эп йĕретĕп.

Эс усрав кайăк пек маншăн ĕмĕрлĕх юлăн,
Е çухалăн куçран, калăн йăмпăлтăк пулă.

Серепе-чĕреке лартас çук çакланасшăн,
Тĕмсĕлет сĕмсĕр çеç йăпанушăн, артакшăн.

Эпĕ çур сăмахпа туйăма пĕлтермесĕр,
Сан чечен ӳт-пӳне пӳрнепе сĕртĕнмесĕр.

Юнашар пурăнса сансăр уйрăм çӳрем-и. –
Тăтăр куç умĕнче çут тĕнчемĕр илемĕ.

***

Эс кайрăн та, çука эп юлтăм.
Кама халь айăп тумалла.

Тен, кирлĕччĕ мана çур утăм,
Сан еннелле çеç малалла.

Эс кайрăн та, тавра пуш-пушă,
Кĕрхи кĕрен салхуллăх çеç.

Пуласчĕ сан манпа пĕр хушă –
Туймастăн-им çилсем ӳкеç?

Çук, ан шутла, эп хăрамастăп,
Çĕнтерес çук ĕпхӳ вута.

Пĕрех çак каç сӳнме памастăп
Эс чĕртнĕ çутă кăвайта.

Ура айне ӳкет сар çулçă –
Пăшăлтату, чăштăртату.

Пĕлетĕп, ку – тĕнчешĕн куçăм,
Çук икĕ чуншăн çеç тату.

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

*– Газель виçин хăй евĕрлĕхĕ çинчен каласа кăтартăр.*

*– Вăтам Ази литературинчи паллăрах авторсен пултарулăхĕпе паллашăр. Вĕсен çитĕнĕвĕсем, çирĕпленнĕ мотивĕсемпе традицийĕсем çинчен каласа парăр.*

*– Вăтам Ази авторĕсене чăвашла куçарас ĕçĕн историйĕ, тăтăшлăхĕ, пахалăхĕ.*

*– И.Ивникăн газель виçине чăваш литературинче çирĕплетес ĕçри çитĕнĕвĕсем.*

*– П.Хусанкайăн сăввине тишкерĕр. Телейсĕр юрату мотива сăвăç еплерех уçса паратъ, сăвăри рефрен пĕлтерĕшĕ.*

*– В.Эктелĕн куçарăвĕсен пахалăхĕ, хăй çырнă газельсенчи семантика центрĕсем.*

## *Усă курмалли литература*


1. Брагинский, И.С. Двенадцать миниатюр/ И.С. Брагинский. – М.: Худож. лит., 1976. – 303 с.
2. Брагинский, И.С. Из истории персидско-таджикской литератур / И.С. Брагинский. – М.: Наука, 1972. – 523 с.
3. Брагинский, И.С. Из истории персидско-таджикской народной поэзии / И.С. Брагинский. – М.: АН СССР, 1956. – 495 с.
4. Занд, М.И. Шесть веков славы / М.И. Занд. – М.: Наука, 1964. – 251 с.
5. Навои, А. Лирика. – С.-Пб.: Дилия Паблишинк, 2000. – 320 с.
6. Стеблева, И.В. Семантика газелей Бабура / И.В. Стеблева. – М.: Наука, 1982. – 326с.
7. Софронова, И.В. В.Эктель тата Вăтам Ази литератури / И.В. Софронова. // Тăван Атăл. – 2005. – 6 №. – С. 60-61.
8. Софронова, И.В. П.Хусанкайăн пултарулăхĕнчи тухăç мотивĕсене шкулта вĕрентесси / И.В. Софронова// Халăх шкулĕ. – 2003. – 6 №.– С. 61–67.
9. Эктель, В. Алишер Навои / В. Эктел // Эктел В. Пĕчĕк тĕнче те аслă. – Шупашкар, 2002. – 326 с.
10. Юмарт, Г. Иван Ивникăн пĕр тетрачĕ / Г.Ф. Юмарт // Тăван Атăл. – 1996. – 2 №. – С. 67.

# Вăтам Ази литературинчи рубаи жанрĕ

Рубаи – тухăç литературинче анлă сарăлнă кĕске формăллă жанр. Е.Э. Бартельс каланă тăрăх, вăл çыруллă литературăна халăх сăмахлăхĕнчен кĕнĕ. «В фольклоре четверостишие – это, как правило, любовный куплет, исполняемый от лица юноши или девушки» [Бартельс, 1960, С. 66]. Кĕске такмаксенче хĕрсемпе каччăсем пĕр пĕринчен тăрăхласа каланă е хăйсен туйăмĕсем çинчен юратнă çыннине пĕлтернĕ. Çыруллă литературăра пуçласа ку жанрпа Рудаки çырать. Вăл çырнă рубаисенче юрату тематики тĕпре. Сăвăç усă курнă мотивсем – телейсĕр юрату, асапланнине курман чунсăр пике, çамрăксен юратăвне хирĕçлекен ашшĕ-амăшĕ – каярах çыруллă литературăра традицилле пулса тăраççĕ. Хĕрĕн илемне ятарлă символсем урлă палăртассине (пичĕ – роза, çӳçĕсем – мускус, шăлĕсем – жемчуг, тутийĕ – сахăр...) йăлана кĕрет. Хăй сăввисенче Рудаки пысăк романа вырнаçма пултаракан шухăша, сюжета вырнаçтарать, телейсĕр шăпасем çинчен каласа кăтартать. Рубаисене çавăнпа та хăйне уйрăм илемлĕ хайлав пек е пĕчĕк драмă пек хаклама та пулать.

Тытăмĕ тĕлĕшĕнчен рубаи икĕ бейтран е тăватă йĕркерен тăрать. Вăл шухăша кĕскен, сăнарлăн калама ыйтать. Унăн малтанхи икĕ йĕрки пусăрăнчăклă интонаципе вуланаççĕ, сăввăн экспозицине йĕркелеççĕ. Виççĕмĕш йĕрки çĕкленӳллĕ интонаципе вуланать. Ку йĕркере ыйтăва, кăмăлсăр пулнине палăртмалла. Вăл сăввăн кульминацийĕ пулать. Тăваттăмĕш йĕрки пусăрăнчăклă интонаципе вуланать, лартнă ыйту çине хуравлать, малтан каланине пĕтĕмлетет, афоризмла шухăш палăртать. Композици аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен пăхсан, пĕрремĕш бейтăн малтанхи йĕрки шухăша палăртать, иккĕмĕшĕ ăна малалла аталантарать. Иккĕмĕш бейтри малтанхи йĕрки каланине хирĕçлет, юлашки йĕрки сăвăри шухăша ытарлă сăмах урлă пĕтĕмлетсе хăварать.

Вăтам ĕмĕрти автор хăй сăввисене диалог формипе, ыйту-хурав евĕр те çырать, пуçласа этем тата шăпа мотива рубаи жанрне кĕртет. Этемпе çут çанталăк пĕр-пĕрне хирĕçлесе тăракан пулăмсем. Çут çанталăкĕ ĕмĕрлĕх япала пулсан, этем çак çĕр çинче хăналăх. Шăпа пӳрнинчен те иртме çук. Шахмат вăййинче Шăпа яланах начар вылякан этеме çĕнтерет. «Проблема «судьба – человек» всегда решается в пользу судьбы. Лирический герой всегда занимает подчиненное положение: он целиком зависит от нее и безропотно сносит удары рока и «коловращение небес», считая борьбу и сопротивление бесполезным» [Козмоян, 1981. С. 23].

Рудакин каярахри юрату лирикинче философи сĕмĕ пуррине палăртмалла. Юратакансем çинчен çырнă май вăл çын пурнăçĕ вĕçевлĕ пулни çинчен калать. Вăл усă курнă «тĕлпулу», «уйрăлу» мотивсем кĕçех суфистсен поэзийĕнче философи категорийĕ пулса тăраççĕ.

Вăхăт иртнĕ май рубаи çырас традицисем те улшăнса пыраççĕ. Сăвăçсем ытарлă сăмах урлă хăйсем пурăнакан саманана, пурнăç йĕркисене, пуçлăхсене тиркеççĕ. Арçын сăвăçсемпе пĕрлех хĕрарăм сăвăçсем пулни те паллă. Рубаи жанрне тĕнчипе чапа кăларакан вара Гияс ад-Дин Абу-ль-Фатх Омар ибн Ибрахим Хайям Нишапури пулнă. Омар Хайям хăй вăхăтĕнчи паллă астроном, математик, физик, философ, царедворец шутланнă. Рубаисене вăл ытларах чух экспромт майлă çырнă. Поэт сăввисемшĕн ирĕк шухăш, тарăн философиллĕх характерлă. Вăл пĕрре турăна ĕненни çинчен çырать, тепре ăна çĕр çинче йĕркелесе янă пурнăç вĕçĕмсĕр пулманнишĕн вăрçать. Этемĕн çĕр çинчи пĕлтерĕшĕ, вырăнĕ çинчен, турă ячĕпе усă курса пурăнакансем çинчен калать. Юрату çинчен çырнă рубаисем те пур. Вăл кулленхи пурнăçа, çут çанталăка сăнлать. О. Хайям турăпа, ытларах чух, вăл йĕркеленĕ тĕнче идеаллă пулманнишĕн тавлашать. Ăна вĕрентме пăхать. Тĕрĕслĕх шырать. Рубаисенче авторăн чун тарăнăшĕ палăрать. Вăл тĕнче вăрттăнлăхне тупни, ун çинчен вулакана пĕлтерес тени сисĕнет.

О. Хайям хӑй шухӑшне палӑртма рубаи жанрне ӑнсӑртран суйласа илмен. Хӑй вӑхӑтӗнчи ҫынсенчен ӑслӑлӑх шайӗпе чылай мала аталанса ҫитнӗ философ хӑй калас тенине сӑнарлӑ, ытарлӑ палӑртма тӑрӑшать. Кунта шариатран сыхланни те, ирӗклӗ шухӑша поэзи чӗлхипе палӑртас тени те пур. Поэт рубаисенче хӑй шухӑшне 1) вӗҫне ҫитиех каласа пӗтерет; 2) вӑрттӑнлӑхне ҫурри таран ҫеҫ палӑртать; 3) каламасӑр хӑварать. Ҫак ӗҫре ӑна суфистсен символӗсемпе сӑнарӗсем, философилле ӗҫӗсем, математик пулни, пурнӑҫ опычӗ пулӑшаҫҫӗ. Суфистсен символӗсенчен вӑл ытларах «эрех» тата «юрату» сӑнарӗсемпе усӑ курать. Вӗҫӗмсӗр юратма, эрех ӗҫме чӗнсе калани урлӑ туррӑн хӑватне пӗлме йыхӑрать. Ку тӗнчери пурнӑҫра савӑнса юлмалла тесе калать.

Эрех тени О. Хайям поэзийӗнче тӗсӗпе те пӗлтерӗшӗпе те тӗрлӗ. Ку вӑл пӳрнӗ йывӑрлӑхсем те, турӑ панӑ чӑнлӑх та, шӑпа та, ҫамрӑк вӑхӑтӑн ырлӑхӗсем те, пултарулӑхри ҫитӗнӳсем те, наукӑри ҫӗнӗ сӑмах та, юлташсемпе киленни те. Эрех тесе О. Хайям хӑй вӗрентӗвне те калать, ытларах ку сӑнара шариат йӗркисене тиркеме усӑ курать. Юрату темипе ҫырнӑ рубаисенчи шӑпчӑк тата роза сӑнарӗсем фольклортан кӗнӗ. Тӑм ҫӑракан турӑ, вилсен кӗлетке тӑма куҫни мотивсем тухӑҫ ҫынни ӗненсе тӑракан пурнӑҫ куҫӑмне кӑтартаҫҫӗ.

Таса лирикӑлӑхпа палӑрса тӑракан рубаисен чӗлхи ансат, ҫепӗҫ, уҫӑмлӑ пулсан, ытти сӑввисенче сӑнарлӑ чӗлхен мелӗпе илемлетнӗ философи формулисене, ятарлӑ чӗлхене, символсене усӑ курнине палӑртмалла. Поэт символӗсем яланах пӗр япалана пӗлтереҫҫӗ, вӗсем ылмашӑнмаҫҫӗ. О. Хайям сӑввисем ытти авторсенчен хӑйсен спецификӑлӑхӗпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Вӗсемшӗн яланах скепсис, ирони, систерсе калани, турӑна тиркени, эпикуризм, фатализм пулни характерлӑ.

Тухӑҫ авторӗн пултарулӑхӗ темиҫе ӗмӗр хушши тӗпчевҫӗсене, сӑвӑҫсене тӳпери ҫӑлтӑр евӗр хӑй патне илӗртет, ҫапах та тӗпчесе пӗтерейми ҫӑлкуҫ пек тӑрса юлать.

## *КУÇАРУСЕМ*

## ОМАР ХАЙЯМ

***

Урăххине епле-ха юратам.
Мĕнле пике вăл, туррăм, каласам.
Унччeнхине манмашкăн-и пултарăп.
Пĕр уншăн çеç йĕрсе тăратăп хам.

*И.Г.Трофимова куçарнă*

***

Шăпчăксем юрату юррине юрлама пуçласан,
Ӳпĕнтер пĕр черкке, савнине те парсам.
Эсĕ курăн ун чух юрату çулăмпе çунакан пикене,
Шута ил, эсĕ каччă пулсан, сарă хĕр туйăмне.

*Л.А. Карягин куçарнă*

***

Сахал мар ушкăнсем курнă эп тĕнсенче,
Килĕштертĕм пĕрех юрату кĕтесне.
Турă пул, парнеле çăтмахри савнăçа,
Вилесле юратса каçарам çылăха!

*Ю.М.Салмин куçарнă*

***

Пĕтĕмпех-çке иртет, шанчăк вăрлăх памасть,
Эсĕ пухнă тупра нимĕне те тăмасть.
Ырлăхна вăхăтра юлташпа пайламастăн –
Вăл тăшмансăр пуçне никама та юлмасть.

*Н.А. Ильина куçарнă*

***

Эх, яшлăх кĕнеки, вĕçлентĕн вуласа!
Хаваслăх кунĕсем иртейрĕç васкаса!
Ах, çамрăклăхăм – чĕкеç!
Пи кайрăн та ши кайрăн,
Манран эс ешĕл симĕс улăх шыраса.

*И.Ивник куçарнă*

***

Мĕн вăл этем? Эс ыйтатăн ялан,
Турă мĕлки теç хăшĕсем. Апла пулсан
Мĕншĕн-ха вăл пире авăртан кăларать,
Çитсен пурнăç вĕçне, каллех çавăнта чăмтарать?

*Л.А. Карягин куçарнă*

***

Тип тытма чарăнса, ӳт-пĕве йăпатсан,
Ан шутла, сана çылăх тесе – йăнăшан!
Типĕ тытнă кунсем – чи хура каççем евĕр,
Кĕме çылăха каççерен – çылăх мар, тусăмсем!

*Ю.М.Салмин куçарнă*

***

Салху-им. Тура хашиш – пулмастăн тек салху.
Е ĕç кăштах эрех, иртет хуйху-суйху.
Эхер те суфий эс – ĕçместĕн те туртмастăн.
Пĕлместĕп пулăшма, чухлатăн пулĕ ху.

*И.Ивник куçарнă*

## АБУ АЛИ ИБН СИНА

***

Хĕрмесĕр, ăнтăлмасăр пурнаймĕ чун.
Васка: харкам самантшăн вăй хурасшăн çун.
Ан ил юратăва укçан, ят-сум ан ыйт.
Кам телее хакламĕ – çулĕ нĕрсĕр ун.

*Г. Юмарт куçарнă*

***

Намăс – сывах пурăнуçăн юлсан тăр-пĕччен,
Хăв халиччен тунине ӳкĕнсе тиркесен.
Вăй çитнипе паянах, пĕтĕмпех эсĕ ту, –
Тен, нихçан та тăраймăн эс вырăн çинчен.

*Г. Юмарт куçарнă*

***

Эп ăнкартăм сăмах асамне,
Тупрăм тĕнчен тупăнман тупсăмне.
Çитнĕ-ши эпĕ хама ăнкарса.
Пĕлтĕм хам ним пĕлмен иккенне.

*Г. Юмарт куçарнă*

# Чăваш поэзийĕнчи рубаи жанрĕ

## ИВАН ИВНИК

***

Саркаланса çӳреймĕп урăх эп,
Вăй-хал пĕтсе килет, аван илтеп.
Юрать хам ĕмĕре туллин кăна ирттертĕм
Мана çынсем ялан тăватчĕçĕ хисеп.

***

Яш ĕмĕр иртрĕ, тĕлĕк пек васкав
Тен, ялкăшсах çунмасть ман çитмĕлти пустав.
Чи çывăх тăвансем вилсе çухалчĕç,
Пӳрсемччĕ Сывлăх каялла май пур пулсан.

***

Ĕçместĕп тек эрех те, пурпĕрех
Сӳнтереймест ман хуйхăма эрех.
Чĕрем арканчăк, куçăмра сĕм тĕксĕм.
Кам ир вăраннă, вăл ӳкет ирех.

***

Анчах та ĕçлĕ эп, вулап, çырап,
Тахçан çырнисемпе чакаланса ларап.
Пĕлме хушман, тен, пулĕ тăрĕ чудо.
Халех вĕçлемĕ, тен, хăй çул-йĕрне карап.

***

Пурте юхать, пĕтĕмпех улшăнать,
Иртсе кайĕç кунсем-çулсем –
Халĕ эс пур, ыран тупаймĕç сана –
Юрату пĕтес çук – пĕлсем.

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

***

...Тӳре-шара ялан тӳре тет,
Çĕрте патша, çӳлте Турă тет,
Тилли кăна паян ăнсăртран
«Йăлтах вĕсем этем мурĕ», – тет.

***

...Инкекпеле-синкек – пĕр тĕкел,
Çĕртипеле çӳлтин – пĕр мехел:
Парсан – парать, чарсан – чарать,
Пĕрне – мăйăр, пĕрне – йӳç йĕкел...

***

...Ай-хай юрлас-юрлас юррăм пур,
Кăмăлăма хуплать хура-шур.
Кăмăл уççи – хăмла йӳççи,
Тĕрĕслесем, Тилли, сыпса кур...

***

...Ни Киремет, ни Пӳлĕх, ни Хăрпан
Мана хăтараймарĕç ватлăхран.
Кун-çул вĕçне тухатăп эп пĕччен,
Чун сивĕнчĕ пур ырă-усалтан.

***

Чӳклерĕм чӳк эп, тытрăм ураса,
Пĕтертĕм сум пĕр пуслăх упраса,
Анчах уйăраймарăм халиччен
Турăшпала пăрахăç турпаса.

***

Эп куртăм хĕвеле те уйăха,
Эп пĕлтĕм пурлăха та çуклăха.
Мĕскершĕн ман тата юлашкинчен
Чун вăрăнчĕ çак пысăк хурлăха.

***

Çуралнă эп çут тĕнчене – рахмат,
Йĕр тунă эп çак çĕр çинче – рахмат.
Мĕскершĕн эп йăлт хăнăхса çитсен
Пурне те тивĕç харăс пăрахма.

***

Тĕнче манпа пуйрĕ-им ĕнтĕ? – Ай-хай...
Ман хыççăн вăл юра ер-им? – Ай-хай...
Мĕн-ма – тăпра кăмпи эп çĕнĕрен
Тăпра пулмашкăн тивĕç? Калăр-ха.

***

Карти-карти ай кайăк хур иртет,
Ӳре кайăк хурне ай вăй килет.
Хĕр-ывăл ӳстерсе, ватта супса
Ача ăсĕпех çĕре кĕме тивет...

***

Çуралнă эп çарамас иккен,
Ăсанăп эп шап-шур кĕпепелен.
Ан сун мана эс, пуп, леш тĕнчесем,
Ку тĕнчере те ывăннă эп, тен...

***

...Ниçта ярса пусма аптратăп:
Çыр хĕрринчи сар хăйăр та,
Ана çинчи хура тăпра та
Пулман-ши чунлă, тупата.

***

Сарайăмра çапатăп кирпĕч,
Сасартăк тăм калать, илтеп:
«Хуллентерех. Юна ан сирпĕт.
Эп – эсчĕ, эсĕ пулăн – эп».

***

Лаçра сăра сĕретĕп эпĕ
Чипер тыткаллă[1] ман чăма.
Çичче çитсен куркам хисепĕ,
Чăм тус чĕлхе кăларчĕ ман:

«Илемлĕ хĕрччĕ эпĕ, – терĕ, –
Мĕскершĕн халь ман алă тăм.
Ах, эп сана, ват супнăскерĕм,
Ытарайми ыталăттăм!»

***

Эп Атăл хĕрринче ларатăп
Ытахальтен чул суйласа.
Пĕрне илесшĕнччĕ – сасартăк
Чул муклашки кăларчĕ сас:

«Эп Улăп пек çар пуç чĕриччĕ,
Эп пултăм курăк, пыл, упа...
Хăвар мана, этем, ан тивччĕ,
Уттарччĕ ху сукмакупа!»

## ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

### Пĕрле пурнар

Тĕнче тытас пек ан капаш,
Çын кăмăлне кура телей.
Ик хут пурнас пек ан аташ,
Пĕрне чипер пурна пĕлей.
Пурнаймăн иккĕ çĕр çинче,
Çĕртен пулни кĕрет çĕре.

Тараймăн вилĕм аллинчен,
Ун умĕнче эпир пĕр тан.
Ĕçле, пултар вăл киличчен,
Пĕл савăнма кун-çул пуртан.

[1] **Тыткаллă** – авăрлă.

Вилме тивсен те уйрӑмшар,
Унччен, туссем, пӗрле пурнар.

Умра пайтах хури-шурри,
Ӑна тӳсмешкӗн ал тытар.
Усалӑн улттӑ, тет, ури,
Ӑна пӗрле ҫапса хуҫар.
Ах, такӑнмасӑр ӳкес мар,
Ах, ватӑлмасӑр вилес мар.

## АНАТОЛИЙ ТИМОФЕЕВ-ЫХРА

***

Улт-ҫиччӗре чупса кӑна ҫӳреттӗм.
Халь утмӑлта. Мехел – утма кӑна.
Хам ҫӗр ҫулхи васкавӑмпа черетӗм
Выртма та, тен, вӗрентӗҫ-ха мана.

***

Уй варринчи юман атте пуль, терӗм –
Вӑл пулнӑ мӗн, атьсем, аҫа ҫури.
Куляннипе куян пекех ҫӳрерӗм:
Аҫа ҫури ачи – тӗнче чури.

***

Уй варринчи ҫӑка анне пуль, терӗм –
Вӑл пулнӑ мӗн, ырсем, ама ҫури.
Хурланнипе хур кайӑк пек йӗрейрӗм:
Ама ҫури ачи – тӗнче хури.

***

Уй варинчи шур ҫӗмӗрт тус пуль терӗм –
Вӑл пулнӑ мӗн, арсем, пасар сарри.
Ҫилленнипе ҫил-тӑвӑл пек кӗрлерӗм:
Савнисӗр ар, атьсем, тӗнче сурри.

***

«Чи пылакки – кӑнтти!» – ача калать,
«Пехетлӗ чӗлӗм..!» – тет, ав шухӑшлавҫӑ,

«Чи пылакки савни тути пулать», –
Тет сарă каччă. Пин сăмах – пин лавçă.

***

Эй, арăм! Пит йӳçё-çке шур эрём!
Çавтер пылак хура, кёрен çырла!
Çак чăнлăха эп халь кăна сёмлерём:
Ӳсеççё юнашар юрла-юрла.

***

Тёнче пуçламăш теттём ялăма,
Пăхатăп та, тёнче варрийё – мён.
Юлашки хут уçсассăн куçăма,
Тен, курăнё тёнчемёр пётмёшён.

## ЭНТИП ВАÇÇИ

***

Чăн-чăн пархатар мённе туйсан,
Ак çакна та ăнкарса илетпёр:
Çумăр виç тумлам кăна çусан,
Асамат кёперё те илемсёр.

***

Татах çӳле тухса çухăрашатăн,
Çакна хăçан туйса илетён эс:
Виç хăлаçран та, виççёр çухрăмран та
Ултав сасси чăн пек илтёнеймест.

***

Çулла аса килет – вăй хушăнать,
Хёлле аса килет – чун ăшăнать.
Тёнче шухăшёпе арпашнă май
Чи çывăххи вăл манăçать.

***

Вёççёр пурнăçра пёртен пёр чăнлăх
пурнăç хăй пуль; вилём ун мёлки.

Вилĕмрен вара çынсем çеç çăлĕç
пурнăçа – çапла тĕнче йĕрки.

***

Курак-çăхан йышне кунран куна
апат сапса парсан,
сĕмсĕрленсе сăхма пăхать куçна,
тăранайми пулсан.

***

Тĕлленнĕ тĕлĕнтермĕш илĕртӳллĕ,
пурнăçринчен чипер,
унпа тĕл пулнă вăхăт хĕпĕртӳллĕ,
уйрăлусем синкер.

***

Вĕçленмен-ха вĕçевĕм –
эй, тĕнче, ырă сун:
Çĕрпеле тӳпе евĕр
тĕл пулать чунпа чун.

***

Вĕçсен вĕçесчĕ çӳлерен çӳле,
кайсан та, каяс марччĕ пĕтĕмпех.
Çак çавра çил çĕкленĕ вĕт çӳпле
е тӳпери çухалнă тĕтĕм пек.

## МИХАИЛ СЕНИЭЛ

***

Çуралсанах вилмешкĕн кирлĕ мар,
ӳссем, выля, унтан пулсамччĕ ар,
авлан, ачусене ӳстер, çын ту та –
пырап тесе, лере хыпар эс яр.

***

Çухататпăр, акă, канлĕхе,
Ӳпкелетпĕр ĕнтĕ пӳлĕхе.

Каймалла пулассине пĕлсех те,
каясах килмест çав халлĕхе.

***

Хăшне савса, хăшне ыталам,
элле пуринчен те эп тарам.
Вилĕмрен тарма çук пек,
тараймăн пурнăçра хĕртен-хĕрарăмран.

***

Чĕре, сиксе, çĕклерĕ чунăма,
анчах нумай тăмарĕ шанчăк ман,
епле апла никам çак ырă, хаклă
ахах-ĕнче хальччен те шăтарман.

***

Йĕке кĕмен-ши-ха арличченех
вĕр-çĕнĕ çаврака йĕрĕлчине,
тесе шăналăк сиртĕм эпĕ шăппăн.
Çапла – такам арланă унччченех...

***

Тарăн шыва ан чăм ăшăх тесе,
инçе çула ан тух çывăх тесе,
пурăнăçна татса ан хур астумасăр,
пурăнмашкăн пурнăç çăмăл тесе.

***

Тӳрĕпе пурăнасчĕ, малта кун сахал.
Эсĕ пур вак-тĕвек ырлăхпа асăхан.
Чăн-чăнни тĕнчере – иксĕлми шухăш-туйăм.
Ытти йăлт çухалать, чăн-чăн мар, асăрхан.

***

Çӳрерĕм Хусанăн-Вăрмарăн,
çӳрерĕм Мускавăн-Вăрнарăн.
Пурăнăç тупсăмне шыраса,
пĕр самант та канăç курмарăм.

## НИКОЛАЙ ТЕВЕТКЕЛ

***

Ма кинеми темскер шырарĕ халь сивĕ нӳхрепре
Нӳхрепĕ те тин чавнă çеç виле шăтăкĕ пек
Сив шăплăхпа юнать ăна. Анчах пĕр кĕтесрен
Тин калчаланнă çĕр улми шырать кăвак тӳпе.

***

Перо чĕриклетни – поэтшăн музыка,
Хеврунь сасси пĕрех сухаçшăн чун кĕввийĕ
«Атя, кун илемне мĕн пур этемшĕн уçăпăр!»–
Çилпе авкаланса юрлать çырма хăви.

***

Ятне вăл тӳпери хĕвел пек тесшĕн –
çине тăрсах шырать çук тивĕçне.
Пуçларĕ халь ту çӳллĕш ӳстермешкĕн
чĕрне хури пек пĕчĕкçĕ ĕçне.

***

– Мана эс кĕтнĕ-кĕтнĕ те... çухалнă...
– Каçар! Эп пыраймарăм çав...
– Эп çитрĕм, тусăм, хам – кăвак сухаллă...
– Каçар! Эп... паллаймарăм çав...

## ГЕННАДИЙ КУЗНЕЦОВ

***

Ачан малашлăх пур тесе калатпăр,
Вăл тяппине вăльт-вăльт вылятсанах.
Кун пек чухне теме манса каятпăр
Кун-çул кĕскелнине кашни кунах.

***

Килсех тăрсан йĕпе çине сапа,
Чун хатĕр çĕнтермешкĕн асапа.
Телей çине телей çапла килет-тĕк,
Этем – тĕлĕннипе! – тăрук вилет-тĕр.

***

Туссем нумай пулнишĕн савăнатăп.
Анчах та çакăн пур ун япăх ен:
Ăс-тăнупа ӳсмешкĕн чарăнатăн.
Тăшман та кирлĕ юнашар иккен.

***

Пылакпа йӳççе пĕрле ан асăн,
Ик тĕрлĕ иккĕшĕн тути.
Пыл çисе вар-хырăмна пăссассăн,
Саншăн сиплĕ пулчĕ армути.

***

Ботаниксем хăш-пĕр чечексене те
Кĕртеççĕ-мĕн çум курăксен шутне.
Çак меслетпе виçер-и çынсене те,
Хăш-хăшĕ тивĕç мар этем ятне.

***

Çиес килни касатчĕ ăшчике,
Кулачлисем чĕнмен кĕрекене.
Халь тутă эп. Ах, хамăн та иккен
Куççем пăхмаççĕ выççисем çине.

## ПЕТĔР ЛЬВОВ

***

Пур такама ан мухтăр – мухтăр Пĕр Турра.
Пур такама ан тиркĕр – тиркĕр хăвăра.
Ырри нихçан ан чактăр темшĕн урăххишĕн,
Мĕн пур мĕн пурĕ кайтăр яланах ырра.

***

Турра пĕлсе çитме çын шухăшлатăр шухăш.
Христос тӳсни çинчен вăл шухăшлатăр шухăш.
Вăл шухăшлатăр чун тухас сехет çинчен.
Суд, тамăк, рай – çаксем çинчен ун пултăр шухăш.

***

Хам ăшăм-халăма ят хутăм: *сывлăш.*
Ăс-тăнăм, чунăм, вăйăм, нишĕм, сывлăш
Виçи те пуçĕ çавă пулĕ терĕм.
Анчах кам эп, çук-тăк Турă Сывлăш.

***

Ӳсеççĕ веç: улах ларма пĕлмен хĕрсем,
Хут купăс калама пĕлмен яш каччăсем.
Ӳссе çитсен килтен тухса вĕçме пĕлеççĕ –
Пĕлмеççĕ канăçпа йăпанăç амăшсем.

***

Хăранă, эй! Киреметрен, Тухатмăшран.
Хуртан ӳке-ӳке тарни тухмасть асран...
Çумрах сехре хăппи яшшин те, вăй питтин те...
Ман, халь тесен, чун çук вак шухăшри ăсран.

***

Çилсем вĕреççĕ йывăçсем кашланăран.
Е çăлтăрсем ӳкеççĕ – хамăр курнăран.
Юри сăмах-и?
Шутлăр, мĕншĕн ватăлатпăр:
Çулсем иртеççĕ – хамăр кун шутланăран.

## НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

***

Тем пысăкăш ыйту палли – тĕнче,
Шикленчĕк тĕлĕнӳ ун куçĕнче.
Пăнчийĕ тумламран та пĕчĕк атом,
Талса ансан, пĕтет вара тĕнче.

***

Нихçан та çухалмасть çук япала,
Пурри вара – паяншăн та ыраншăн.
Тупайманнишĕн мар кулянмалла –
Мĕн пуррине йĕркеллĕн упрайманшăн.

***

Епле чее хăш пĕрисем тата! –
Вутпа шыва пĕр савăтра тытасшăн:
Поэт пек хытă юратасшăн та,
Ăсчах пек сивĕ ăслă та юласшăн.

***

Йĕрсе çуралнă чух эп çак виçесĕр,
Килпетсĕр тĕрĕсмарлăх тĕнчине
Ма савăнса-кулса ташланă эсĕр,
Тăван-пĕтенĕмсем, мĕн ирчченех.

***

Эп савăнса, пĕр чĕптĕм вĕчĕхӳсĕр
Каяс чухне пĕртанлăх тĕнчине
Ма хурланатăр, ма йĕретĕр эсĕр,
Тăван-пĕтенĕмсем, мĕн каçченех.

***

Пăлхавăрлă тĕнченĕн чир-чĕрне
Эс шут тытман-и, тусăм, пĕтерме.
...Мăн Атăл хĕрринче шур Шупашкарăн
Пур пульница, чиркӳ тата тĕрме.

***

Ăслах пурнасшăнччĕ хĕпĕртесе,
Мĕн ма ĕç-пуç пырать хĕрсе.
Ялан телейлĕ пурăнас тесессĕн,
Пурăнмалла-шим ухмаха персе...

***

Пăлхар ялавне кĕмĕл кӳлĕ чӳхенĕ – эккей!
Пăлхар ялавне пур давралăх чӳк тунă – эккей!
Ăна сар хĕвел те çут уйăх чуп тунă – эккей!
Ăçта халь чăваш пĕветнĕ пĕтевĕ? – эй-эй...

***Ыйтусемпе ĕçсем***

*– Халăх сăмахлăхĕнчи çавра юрă тĕслĕхĕсемпе паллашăр. Вĕсен тӳр килĕвĕ тутар, мари, удмурт фольклорĕнче пулнине мĕнпе сăлтавлама пулать?*

*– О. Хайям пултарулăхĕпе паллашăр. Унăн рубаисенчи тĕпрех мотивсене, йăлана кĕнĕ сăнарĕсене асăнса тухăр.*

*– И. Ивникăн рубаисенчи самана сăнарĕпе тухăç традицийĕсем çураçăннине сăнаса пăхăр.*

*– И. Ивникăн рубаисен куçарăвне хак парăр.*

*– П. Хусанкайăн «Тилли юррисем» ярăмĕнчи хăш-пĕр сăвăсемпе çаврасем рубаисене тӳр килнине мĕнпе ăнлантарма пулать.*

*– П. Хусанкайăн, Г. Юмартăн рубаи ярăмĕсен уйрăмлăхĕсене палăртăр.*

*– XX ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулсенчи поэтсен пултарулăхĕнче рубаи жанрĕ тăтăшрах тĕл пулма пуçлани мĕнпе çыхăннă. Ку чухнехи тематика пуянлăхĕ, илемлĕх пахалăхĕ мĕнлерех шайра.*

***Усă курмалли литература***

1. Брагинский, И.С. Двенадцать миниатюр / И.С. Брагинский. – М.: Худож. лит., 1976. – 303 с.

2. Брагинский, И.С. Из истории персидско-таджикской литератур / И.С. Брагинский. – М.: Наука, 1972. – 523 с.

3. Козмоян, А.К. Рубаи в классической поэзии на фарси (X-XII вв.) / А.К. Козмоян. – Ереван.: АН Арм. ССР, 1981. – 111 с.

4. Кондратьев, М.Г. Чувашские «çавра юрă» и ее татарские параллели/М.Г. Кондратьев. – Чебоксары: ЧГИЯЛИЭ, 1993. – 78 с.

5. Софронова, И.В. Тĕнче вăрттăнлăхне тупнă поэт // Омар Хайям. Рубаисем (Куçарусем) / сост. И.В. Софронова. – Чебоксары: «Новое время», 2005. – 84 с.

6. Софронова, И.В. Особенности жанра рубаи в чувашской литературе // Сопоставительное изучение разнотипных языков, научный и методический аспекты: материалы Всероссийской научно-практической конференции: в 2 т. Т. 2. – Чебоксары: ЗАО «Порядок». 2006. – С. 170-173.

7. Тимаков, В.П. Философская лирика П.Хузангая / В.П. Тимаков // Чувашский язык, литература и фольклор. ЧНИИ Вып. 4. – Чебоксары, 1974. – 402 с.

8. Чекушкин, В.С. «Тилли юррисем» ярăмăн хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем / В.С. Чекушкин // Петĕр Хусанкай: Статьясем. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, – 1988. – С. 7 – 22.

9. Юмарт, Г. Иван Ивникăн пĕр тетрачĕ / Г. Юмарт // Тăван Атăл. – 1996. – 2 №. – С. 67.

# Вăтам Ази литературинчи бейт жанрĕ

Бейт икĕ йĕркерен тăракан сăвă. Вăл араб-перс литературинче анлă сарăлнă сăвă виçисенчен пĕри. Бейт уйрăм хайлав пек çӳреме пултарать, ăна пысăкрах сăвă е поэма çырнă чухне усă кураççĕ. Кĕске сăвăра мăшăр рифма пулмалла, вăл вĕçленнĕ шухăша палăртмалла. Бейт тытăмĕпе икке пайланма та пултарать. Ку чухне унăн кашни пайĕ уйрăм шухăшпа çыхăннă. Çав хушăрах малтанхи йĕрки (мисра) иккĕмĕшĕнче калас шухăша систерсе калать, тепри вара малтан каланине малалла аталантарать, уçса парать, вĕçлесе çитерет. Чылай чухне бейт тытăмĕ сăнарлă параллелизм çинче никĕсленсе тăрать.

Шухăша сăнарлă, афоризмла çавăрса калас уйрăмлăхне пула классикăлла сăвăçсен бейчĕсем ваттисен сăмахĕсем пек халăх асĕнче пурăнаççĕ.

Араб-перс литературинчен бейт виçи, мусульман тĕнĕ сарăлнипе пĕрлех, ытти халăхсен литературине те куçать. Вăтам ĕмĕрти тĕрĕк халăхĕсен литературинчи классикăлла хайлавсене те çак виçепе çырнă.

Чăваш литературинче бейт виçипе XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче усă курма тытăнаççĕ. Çакă куçару ĕçĕ аталаннипе çыхăннă. Сăвăçсем унпа Вăтам Ази литературин тĕслĕхĕсене куçарнă май паллашаççĕ. И. Ивникпа Я. Ухсай тутарсен Г. Тукай сăвви-поэмисене те ик йĕркелĕхпе куçараççĕ. Вăл шухăша уçăмлă, вырăнлă палăртма май парать. 60-80-мĕш çулсенчи тата паянхи авторсен, ытларах, истори темипе, фольклор материалне усă курса çырнă сăввисемпе поэмисенче бейт виçине уйăрма пулать.

## *КУҪАРУСЕМ*

### Туркка поэзийĕнчен

***
Эс мана, аллах, сыхлаччĕ тăшманран,
Пĕр тĕлли-паллисĕр, нĕрсĕр палкасран.

***
Хăвна эс ан шутла ăсчах, пĕлӳҫ тесе,
Пĕр лав шур хут пĕтернипех ҫырса, ҫĕртсе.

***
Ҫирĕмре чухнех палкавлăх палăрсан,
Темĕн, ăс кĕрес ҫук пулĕ ватăлсан.

***
Енчен мана кам та пулин ҫиес пулсан,
Пыйтланнă тилĕ мар, кăшлатăр арăслан.

***
Ухмах хăна кăна кӳпсех ҫиет, ĕҫет.
Рахмат калас шут ҫук, часрах килне вĕҫет.

***
Ҫурла уйне юлать, вырма пĕтсен,
Тыр-пул хиртен йĕтем ҫине ҫитсен.
***
Стамбул кушакĕ ҫурнă унăн халатне,
Багдат енне чупать вăл йытă хĕнеме.

***
Йытă кĕл туни ҫитмест аллах патне,
Шăмă, ҫумăр пек, ӳкмест-ҫке ҫĕр ҫине.

***
Пĕри выҫса ларать, теприн, ав пыл та ҫу.
Ҫавна пулах пирте тухать пуль тытăҫу.

***

Кашнин сухалĕнчен пĕрер шур пĕрчĕ –
Çара янах валли сухал та пулчĕ.

***

Темле чее пулсан та сарă тилĕ,
Пĕрре алла лексе çуха вăл пулĕ.

***

Хулан ку пайĕнче пурнаççĕ суккăрсем,
Кунта сутмаççĕ тĕкĕр ăслă сутăçсем.

***

Кирлĕ мар мĕн кĕлĕ иçĕм лаççинче,
Вăл кĕтет куллен пахчаçă катмакне.

*В.Ахун куçарнă*

# ХАГАНИ

## Ывăлĕн тивĕçĕ

Çип арласа çыхать, сутма тухать!
Эй, Хагани! Сана аннӳ пăхать.

Мĕн ма ларатăн хĕсĕк Ширванта.
Куçлатăн çеç аннӳ тертне кунта.

Тӳсместĕн эс никамăн пусмăрне,
Çиетĕн пĕр аннӳ сĕт-çăкăрне.

Салху сăнпа ларан кун каçиччен,
Хăпмастăн эс аннӳ çывăхĕнчен.

Эс хăçанччен ларасшăн йăвара.
Тек чĕпĕ мар, çул тыт тĕнче тавра.

Эс пурăнан аннӳ çимеллипе –
Турра та аннӳне шаннипеле.

Сана пӗлеççӗ пурте çакăн пек –
Исса çинчен кашни ас тунă пек.

Эс хăçанччен ларасшăн анраса.
Хазыр пекех ларасчӗ ыр туса.

Сана Тур панă ăс, анчах мӗн-ма
Пӗлмерӗн эс килтен уйăрăлма.

Телей тупмашкăн кай çут тӗнчене.
Анчах хăтар тертрен эс аннӳне.

Инçе каймашкăн кун çитсен
Ан ман эс хăвăн тивӗçӳ çинчен.

Эс хăв юратакан аннӳшӗн те
Тӳсмешкӗн хал çитер мӗн пур терте.

Аннӳн те çитӗ пурнăçӗ вӗçне,
Тыт асунта эс ывăл тивӗçне.

*Г.Юмарт куçарнă*

## АЛИШЕР НАВОИ

### Эрмен çӗрне Хосров тапăнни

*(«Хосровпа Ширин» поэмăран)*

Сăввуна, поэт, йӗрки-йӗркипе
Çапăçу хирне илсе кай ирпе.

***

Çилӗллӗ Хосров çивӗч хӗç çӗклет,
Эрменсен çӗрне вăрçăпа килет.

Унăнах çарсем шутсăрах нумай,
Çӗр те палăрмасть, иртсе пынă май.

Хыçалта тусан çӗкленсе юлать,
Кăнтăр çуттине хупласа хурать.

Çав тусан, иккен, таçтан инçетрен,
Пăр та пар вĕçсе, курăнать иккен.

Çавăн пек тискер, чи усал çара
Астуман тĕнче тахçантан вара.

Çул çинче вăрах аптратмасть çарне,
Час çитет Парвис эрменсен çĕрне...

Ак, Бану патне час хыпар çитет.
Çав хыпар калать, ют пит нĕрсĕр, тет.

Ут таптанă çĕр çаралса юлать,
Хĕç тивертнĕ çĕр юн пулса юлать.

Çул çине тухсан, пăрăнма та çук,
Хурлăхран-хуртан хăтăлма май çук.

Шикленмест Бану, вăл пĕлет аван
Çак инкек ăна пӳрнине тахçан.

Хулара ун пур пĕр пит аслă çын.
Тăшмансем кунта урса килĕçин, –

Авалтан-тахçан тунине пула,
Ванăнми чул пек халь ларать хула.

Шăллă хӳмисем кăвак пĕлĕте
Çитиех иккен халь çĕкленнĕ те,

Нимĕнле тăшман илес çук ăна,
Тăшмансем кунта çитчĕрех кăна, –

Хӳмесем çине – ют астутăрах –
Воин мар, Бахрам хăй пырса тăрать.

Кӳлĕсем кунта – çĕр варне çити,
Шывĕсем унта йăлтăр-йăлтăрти,

Каç пулса çитсен, çӳллӗ тӳперен
Çӑлтӑрсем ӳксе ялкӑшаç иккен.

Çакӑн пек иккен çирӗп ку хула.
Ӗçмелли-çимелли туллиех хулан.

Пӗлӗте çити арман çаврӑнсан,
Пӗтереймӗ-тӗр тырӑ авӑртса.

Сурӑхсем унта – çӑлтӑр кӗтӗвӗ,
Ӗнесем унта – çӑлтӑр кӗтӗвӗ.

Мӗн пурне йӑлтах шута илес çук,
Шут кирлех те мар, пурлӑх пысӑк чух.

Халь Михин-Бану тӑшманне кӗтет.
Хӑйӗн халӑхне шухӑша илет.

Халь Ширин пике шухӑша каять,
Вӑл çар пуçлӑхне хӑй патне йыхрать.

Эс Фархат патне çитсе килччӗ, тет.
Пирӗн ӗç çинчен хыпарлаччӗ, тет.

Ун шӑпишӗн-çке чун хӑрать-çке ман.
Килтӗр, тет, кунта. Калама ан ман.

Шутламан Фархат пытанас тесе,
Пике кӑмӑлне хуçас мар тесе,

Вӑл унта пыма самантрах шутлать,
Пурпӗрех ютпа çапӑçма пулать.

Çапӑçма хушать чун пек юрату.
Çав хула панче пулнӑ чӑнкӑ ту.

Ун çине çитсе вырнаçать Фархат,
Тӑшманне кӗтсе, сӑнаса тӑрать.

Ак унта Хосров çывхарса çитет,
Пĕтĕм хулана çавăрса илет.

Тул енчен вара, çарне хăварса,
Пĕчĕк ушкăнпа, ун пуçне тăрса,

Урхамах утне карт туртать те вăл,
Сиктере парать сăнамашкăн вăл.

Пĕр йĕри-тавра пăхкала илет,
Пĕр хула çине куç хывса илет.

Шухăшлатъ, шутлать, тĕлĕнсе тăрать,
Çӳллĕ ту çинче çав хула ларать.

Пĕлĕтрен çӳлте. Пĕлĕте çĕнме
Кам пултарĕ-ши вăй-хал çитерме.

Шухăшлать, шутлать, ӳкĕнсе илет,
Хулана çапах илесех килет.

Вăрçăпа тухсан, тен, усси те çук,
Каялла чаксан, ним хисеп те çук.

Ак, Хосров пăхать чăнкă ту çине,
Вăл курах каять Фархат тăнине.

Чĕрине хĕç пек вут тивсе каять,
Хăйĕн çыннине вăл çапла калать,

«Çывăхар унта. Кам вăл çав, пĕлтер,
Чун çунтармăшĕ, пит хăюллăскер».

Ушкăнран пĕри карт туртать утне,
Сиктере парать чăнкă ту патне.

«Аслă шах хушать, каласа кăтарт,
Кам эс, мĕн тăван, ма тăран кунта.»

Хуравлать Фархат чăнкă ту çинчен,
«Чап-мухтав юрри хумăп хам çинчен.

Патшасен йăхне эпĕ тивĕç мар,
Чаплисен шутне хумăп ятăма.

Маншăн ют вăл ят, чунăм çуннипе,
Кĕлленсе çитсе, вĕçнĕ вăл çилпе.

Юрату чĕртсе çунтарчĕ чунăма,
Çавăнтан вара çухатрăм пуçăма.

Этемсем анчах ĕненесшĕн мар,
Çунтармасть, теç пуль, чĕрене кăвар.

Ӳтĕме пулин асăнса кăна,
Çавăнтан вара «Фархат» теç мана».

Хурлă-шухăшлă çак сăмахсене
Илтсенех Парвис çухатать ăсне,

Кĕвĕçсе урса каясса çитет.
«Ку сăмахăн пур сим пылак, тет;

Калаçма ăста ман тăшман Фархат.
Пылакпа хутăш наркăмăш ярать.

Çĕлене тытса вĕлерме – шел мар,
Ӳлĕмрен нихçан сăннуна ан яр.

Ӳлĕмрен нихçан ан хăтлан сăхма,
Пăрăн ман çулран, эсĕ – ман тăшман,

Вăхăт ун çине вĕрен ывăтма,
Параппан çапса шăтăка яма».

Кăшкăрать хайхи. «Кам хăюллăрах!
Тытăр çав çынна, тытăр хăвăртрах!»

Фархата туран курӑнах каять,
Вунӑ юланут ун патне юртать,

Кӑшкӑрать ҫӳлтен: «Кил-ха, ҫывӑхар!
Хосров Парвисӗ мар-и эс, Сардар».

Вӑл эсех пулсан, эп сана питлем,
Хӑлхуна уҫса, тимлӗрех итле.

Ҫыннусем кунта мӗншӗн килчӗҫ сан.
Хӑнана чӗнме килчӗҫех пулсан,

Сӑнӑ янтласа килес ҫук вӗсем,
Хӗрӗх таканпа таптас ҫук вӗсем.

Вилӗмпе мана хӑратас тесен,
Хӑтӑлаймӑн эс ху та вилӗмрен.

Вунӑ ҫын вилли ху умна ӳксен,
Турӑ умӗнче ҫылӑха кӗрен.

Мухтанан теме санӑн ирӗк пур,
Эс шлемна асту – ан хывайса хур.

Чул кӑна ывтам сан пуҫу ҫине,
Ярӑп хӑйпӑтса шлем тӑрнаскине.

Акӑ, ман салам. Эсӗ илтнӗ пул!
Халӗ чул вӗҫет, асӑрханнӑ пул!»

Ак, чул хыҫҫӑн чул ывӑтать Фархат,
Шахӑн шлемӗ ҫук – ыткӑнса каять.

Малалла калать: «Куртӑн-и, Парвис,
Ҫакӑ вӑл – ҫынсен юрату парни.

Ҫивӗч куҫӑм пур, вӑйлӑ аллӑм пур,
Чӗрере-чунра хаяр ҫиллӗм пур.

Хăвăрт пухăнма ху çарна кала,
Хăвăртрах вĕçтер килнĕ çулпала.

Халь хĕрхентĕм-ха кăмăл килнĕ чух.
Эс кунтах тăрсан, пуçу юлас çук.

Ман канаш çапла, ăслăрах пулсан,
Çар умне тăрса, каялла çул сан.

Тек йăвашлăх та пĕр чикесĕр мар,
Ытлашши мана ан хаярлантар.

Çак чăнкă тăвăн кашни чулĕпе
Пĕтерме пулать сире пуçĕпех.

Турă пӳрнипе пултăм, терĕн, шах;
Маншăн пĕр асап пултăр тăтăшах.

Анчах сан ĕçӳ тĕнчере тискер,
Эс манран çĕр хут ытла мĕскĕнскер.

Çĕрĕн-кунĕн эс алхасса çӳрен
Хĕçпеле, вутпа çынна хур кӳрен.

Е патша ятне эс илтнипеле
Пуçна каçăртма тивĕç, тен, элле.

Манăн сăмаха хисепе хурсан,
Тен, çĕкленмĕччĕ шет хĕçӳ те сан.

Юрату пирки килтĕм, тейĕн эс.
Кам ĕнентĕр-ха!.. улталатăн эс.

Чĕлхӳне касса, вутпала çунтар.
«Юрату» теме эсĕ тивĕç мар...»

Чĕтĕрет Хосров. Вăл каять халтан.
Сирпĕтрĕ Фархат ун шлемне малтан,

Халь ун чӗрине тирчӗ сӑмахпа.
Сӑмахпа та мар, ҫивӗч сӑнӑпа.

Хӗрелет Хосров. Вӑл хуплать питне.
Ҫаврӑнса каять ҫарӗсем патне.

Кӗреке хуҫи, эрехне тултар!
Хурлӑха сирсе, чӗрене пусар.

Чухӑна-и вӑл, патшана-и вӑл –
Юрату пӗр пек ҫунтарать-ҫке вӑл.

*А. Алка куҫарнӑ*

## ФИРДОУСИ

### Зохакпа Каве Тимӗрҫӗ такмак

*(Патшасен кӗнекинчен)*

Иран ҫӗршывӗнче Захак ятлӑ ҫын патша пулса тӑнӑ. Ӗлӗкрех унӑн хул пуҫҫийӗсене шуйттан чуп тунӑ пулнӑ та ҫав вырӑнта икӗ ҫӗлен ӳссе ларнӑ пулнӑ. Захак ҫав ҫӗленсене этем пуҫ мимипе тӑрантарнӑ. Ҫӗленсем нумай ҫамрӑк йӗкӗтсемпе хӗрсене ҫисе янӑ, ҫав шутра Каве ывӑлӗсене те ҫинӗ. Вара ҫак ирсӗр пусмӑрлӑ йӗркепе кӗрешме пултаракан Феридун паттӑр сиксе тухнӑ, вӑл ӗлӗкхи патшасен несӗлӗ пулнӑ. Зохак вара Феридунран хӑранипе нимӗнле канӑҫ тупайман пулнӑ.

Зохак юншӑхланать чарӑнми чӗлхипе:
Феридун мӗлки умра каҫпа-ирпе.
Ӳтне-пӳне унне асап кукӑртрӗ,
Чунне пӑсӑр-писер пек чӗтӗретрӗ.
Пӗрре ларчӗ вӑл шӑмӑ престол ҫине,
Тӑхӑнчӗ ӗлккен ахахлӑ венецне.
Вӑл пур облаҫсен пуҫлӑхӗсене чӗнчӗ,
Патшалӑх каҫанне тӳрлетме хушрӗ.
Вара калать мобатсене сӑмахсем:
«Эй, пилпе тулли ӑслӑ асамҫӑсем!
Манӑнах пур-ҫке пӗрех вӑрттӑн тӑшман.

Ăсли пĕлет каламасăрах вăл кам
Инкек тăшмана эпир тиркемĕпĕр,
Хаяр Кепене çиллентермĕпĕр.
Çарăм пултăр виçĕ хут чухлĕ ытла,
Хĕрсем, ийесем пулччĕр арсем тавра.
Хăватлă çар авăрласа чăмăртас,
Çынсене шуйттансемпе хутшăнтарас.
Ман ятпа çыру ярăр пур тĕле те
Патша çĕршыва ырă акрĕ тесе.
Патша чĕлхи чăн сăмах калать пултăр,
Вăл тĕрĕслĕхе упранăн курăнтăр».
Çĕр тытанран пур пуçлăх хăранă
Çĕлен çыруне алă пусса пурте
Хайхи пур ватăсем те, çамрăксем те.
Ак хапха патĕнче пĕри пит кĕрлет.
Сисĕнет – тĕрĕсе хӳтĕлеме чĕнет.
Патша пуçа усать, хуйха ӳкет.
«Кала, çыннăм, кам тиврĕ-ши сана?» – тет.
Леш кăкăрне çапать, кăшкăрса ярать:
«Эх, патша, эпĕ Каве, чăнлăх шырап,
Асап курма çӳлте-çке çырнă теççĕ.
Мĕншĕн пĕтертĕн ывăлсене эсĕ.
Вĕсем вун çиччĕш, манăн тӳремçĕм,
Халĕ манпа пĕрех юлчĕ пĕчченçĕм.
Эй, патшам, пил парсам, пĕрне хуть хăвар.
Аса ил: манăн ӳпке-пĕвер вут-кăвар.
Эпĕ çуннине, венецлă пуç, асăрха,
Малалли ытла асапсенчен упра.
Хуйхă-суйхăпа çурăм-çке хуçăлчĕ.
Чĕрем татăлчĕ, пуçăм çĕмĕрĕлчĕ.
Çамрăк ĕмĕрĕм иртрĕ, ачамсем çук.
Тĕнчере вĕсенчен пуçне симлĕх çук.
Усал-тĕсел урать пӳрнĕ шăпапа,
Пусмăрлă ĕçсем пăсаççĕ сăлтавпа.
Мĕнле санăн сăлтав. Каласам мана:
Мĕншĕн кӳртрĕн мана пысăк асапа.
Эпĕ йăваш тимĕрçĕ, пĕр айăпсăр.
Эсĕ çунтаратăн пуçăма вутсăр.
Эсĕ, патша, питӳпе çĕлен тĕслĕ,

Анчах пулман ĕçĕмре пĕрре пиллĕ.
Эсĕ çичĕ анна пуçах та тесен
Мĕншĕн ху кăна пĕчченех киленен.
Санăн мана ответ тӳрех памалла,
Унпа пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтермелле.
Вара, тен, сан хуравран курăнĕ
Мĕнле-çке ачасене шăпа тивнĕ.
Епле эс ман ачасен мимине
Илнĕ те çĕленӳсене çитернĕ».
Тĕнче хуçи тимĕрçе тăп итленĕ.
Ахаль çын çапла хăйнинчен тĕлĕннĕ.
Вара вăл ывăла хăварма суннă.
Тимĕрçе парнепе сийлеме хушнă.
Юлашкинчен патша çырăва панă
Айя алă пустăр тесе каланă.
Тӳресене вăрçать пур хавалĕпе:
«Эсир пит-куççене тамăка чикнĕ,
Чĕрĕрсене ирсĕре сутса çĕртнĕ.
Эпĕ çакăнта аллăма пусаймăп,
Çĕр патшине унпа усă тăваймăп».
Вăл сиксе тăчĕ те ахăрса ячĕ,
Çырăва çурчĕ, таптаса тăкрĕ.
Ывăлне çавăртса, çухăрса чупрĕ,
Патша килĕнчен урама ыткăнчĕ.
Каве дворец хапхинчен кăна тухать,
Пур пасарти халăх пуçтарнать.
Вăл ялан кăшкăрать, хӳтлеме ыйтать,
Пур тĕнчене ĕçе хутшăнма чĕнет.
Вăл хăйĕн тир саппунне салтса илет,
Млатукран хӳтлен саппунне-çке çĕклет,
Ăна сăнă вĕçне тирет те лартать.
Пасарта тусан пĕлĕтех хăпартать.
Вăл ялав çĕклет, çапла-çке ĕхĕрет:
«Эй, эсир, Иездана чуна панисем!
Сирĕн вĕт чĕрĕр Феридун аллинче.
Хăмăта хывăр законсен ĕнсисенчен,
Эпир пурте Феридунпа пулăпăр.
Унăн пиллĕ управĕнче канăпăр.
Калăр – сирĕн пуçлăх тӳрĕр Ахриман

Тĕнче тăвана питех хаяр тăшман.
Çак çĕтĕк ластанка çӳле çĕклĕпĕр,
Тăшман-и, тус-и – сасăран пĕлĕпĕр».
Вăл теветкелсемпе малалла утнă,
Вĕсене таçтан та пуçтарса пынă.

*М. Юман куçарнă*

# Чăваш поэзийĕнчи бейт жанрĕ

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

### Юрă

Эп сунманччĕ ырă та сывах
Таврăнасса çак çĕршыва.

Асăмра та çукчĕ ман тепре
Курасси çак йывăç кĕпере.

Кĕпер урлă каçрăм та – çарран
Макăрмасăр тӳсрĕм эп аран.

Шурути пĕркеннĕ сывлăма
Сирпĕтессĕм килчĕ чунăма.

Сулхăм шыв çăвать йăмра ӳтне,
Тăсăлса выртайăттăм ӳпне.

Тăсăлса выртайăттăмччĕ те –
Тутанса пăхăттăм шерпете.

Ан ăмсан мана, чипер йăмра,
Йывăр шухăш манăн пуçăмра.

Ан ăмсан, ан илĕрт, эс, хăва:
Чĕрепе эп сутăннă сăвва.

Пур лаши ула, тепри хăла,
Шăварма анать мĕн хĕр çăла.

Те палларĕ, те ют çын тӳри
Те палламĕш пулчĕ вăл юри.

Янраса кĕçенчĕ ула ут,
Йăнкăсланчĕ чунăм тепĕр хут.

Утланассăм килчĕ ман пĕрле
Чуп тăвассăм килчĕ сар хĕре.

***

Ан ларах салхуллăн, кулянса ан лар.
Халь те эп саватăп, анчах сана мар.

Ху та вĕт пĕлетĕн, аванах пĕлен:
Сан çине пăхмастăп, сан патна килмен.

Иртсе çеç пыраттăм, темме ăнсăртран
Çаврăнса пăхам-ха, – терĕм, – кантăкран.

Чĕрем кăлт та тумĕ, вăл ĕнтĕ хăвăл;
Эс ютта савсан та хуçăлмĕ кăмăл.

Хăвăлланчĕ чунăм, минкĕленчĕ пуç, –
Санпа паллашаймăп, çулăм кăвак куç.

Хушăмăрти уйрăм тем пекех иккен:
Эс сĕткенлĕ çеçпĕл, эп çĕрĕк кикен.

Урăха юрат эс, çамрăка савах.
Эпĕ ыталатăп хам çырнă сăввах.

Хăвна савнине те, тусăмçăм, вара
Шырасассăн тупăн çырнă сăвăра.

Каçпала эп çӳрĕп Атăл хĕррипе,
Тен, сана тĕл пулăп çĕнĕ тӳррӳпе.

– Добрый вечер! – тейĕн эс мана хуллен,
Хытăрах ыталăн çумăнтин хулне.

Эп те сана шăппăн: – «Чăвашран ан пис, –
Тейĕп те хушатăп, – Добрый вечер, miss!»

## ИЛЛЕ ТУКТАШ

### Хура чĕкеç

Чĕвĕлех те чĕвĕл хура чĕкеç
Юхăм шыва пӳлсе вĕçетчĕ çеç.

Мăшăр çунаттипе шыва çурса
Йăпанать хавас кĕвĕ хурса.

Йăпанмашкăн кăна вăл чарăнсан,
Ăçта ларса канĕ, пĕр ывăнсан.

Ларса канас тесен, йывăççи çук,
Йывăççисем пулсан, туратти çук.

Тураттисем тулли вĕçен кайăк,
Чĕвĕл чĕкеç кăна мĕскĕн майлă...

Вĕçен кайăксемех сăвăласа
Çут тĕнчене мухтаç юр юрласа.

Вĕçен кайăксемех юрланă чух
Чĕвĕл чĕкеçĕн çеç тăванĕ çук.

Çавăнпа та вĕçет вăл тăлăххăн
Юхăм шыва пӳлсе пĕр тăлăххăн.

Чĕвĕл кăна чĕвĕл чĕкеç
Юрласан та юрлĕ хурлă çеç.

Ун хурлăхлă юррисене пула
Атте-анне чĕрийĕ çурăлать.

Ывăлсăр та хĕрсĕр атте-анне
Кăлăхах-çке кĕтет хăй тăванне.

Тăванĕсем ютран таврăнас çук,
Таврăнсан та текех савăнас çук.

Ывăлсăр та хĕрсĕр атте-анне
Хăçан кĕтсе илĕ хăй тăванне.

Кам çине шанĕç ватăлсан,
Мĕн çине тайăнĕç ывăнсан.

Тайăнсан та тайăнĕç туя çине,
Шансассăн та шанĕç çич ют çине.

## И çилсем вĕрет

И çилсем вĕрет, вичкĕн çил вĕрет,
Вăйлă тăвăлсем капланса килет...

Ултавах тĕнчи, йывăр самани,
Пирĕн пурнăçа тыткăна илет.

Пахчари чечек, сарăях чечек,
Кĕрхи сивĕпе шăнса кайрĕ-çке.

Улăхри лаша, çӳренех лаша,
Унăн уринче тимĕрех такан.

Маттурах ачи, сарăях ачи
Унăн уринче тимĕрех тăлă.

Тимĕрех тăлă, улаях çулĕ...
Ĕмĕрĕ иртет Çĕпĕр çĕрĕнче.

Çĕпĕр çĕрĕнче, патша тĕрминче,
Читлĕхе хупнă ăмăрт кайăк пек.

# ТУРАТ ВАÇÇИ

***
Ăс виçместĕн ăс-тăнпа,
Тайăлмастăп ылтăнпа.

***
Çынпа çын пек пурăнсан,
Ырă ят та пулĕ сан.

***
Çиес килсен пит тутлă
Ĕçлес пулать çын шутлă.

***
Хыпаланса утакан
Хăвала, тет, хыçалтан.

***
Иртни куçа курăнмасть
Паянни вăл таврăнмасть.

***
Ватла киле ăс çитет,
Ăс çитет тет вăй пĕтет.

***
Ухмахланать ăсларан,
Ăслăланать ухмахран.

***
Ватта кирлĕ тӳрĕ çул,
Яш-кĕрĕме – укçа-мул.

***
Ĕçлемешкĕн ӳркенсен,
Эс пурнăçна ан кӳрен.

***

Сарӑ, хӗрлӗ пӗрлӗхен
Каярахпа тутланать.
Пысӑк тӑнлӑ этемрен
Ӑслӑх мулӗ хушӑнать.

***

Алпа тунӑ пур палӑк
Хӑй вырӑнче лармалла.
Ватакана чӗр тамӑк
Ӗмӗрӗнче тумалла.

***

Сар чечекпе ҫырлана
Кам-ши татма юратмасть.
Яш вӑхӑтпа ҫут куна
Кам ырӑпа асӑнмасть.

## ЮРИЙ АЙДАШ

***

Вӑл ашшӗ-амӑшне паллать. Анчах
Хӑш йӑх-тӗпрен, ҫавна пӗлмест пачах.

***

Этем кун-ҫулӗ ункӑ пек ҫавра:
Текех ташлатӑн хӑв шӑпу тавра.

***

Шӑши куҫҫулӗ кушака тивсессӗн,
Мана та ӑнсӑртран палларӑн эсӗ.

***

Ҫын ӑшӗнче вут-ҫулӑм явӑнать,
Тӗлӗнмелле, ҫапах ҫӗр ҫаврӑнать.

***

Паян мана пӗр хуйхӑ вӗлерет.
Сыхлан, тӑшман: таҫта та халь черет.

***

Паян тусан ыран тăвассине
Мĕскер тăвам теейmĕн виçмине.

***

Тăват кĕтеслĕ çут çанталăкра
Нимрен те никамран та ан хăра.

***

Саркайăк пек савасчĕ măшăра.
Аюк: кунсем путаççĕ шăв-шавра.

***

Кĕске те, вăрăм та этем кун-çулĕ:
Телей çитмест, йăлăхтармасть куççулĕ.

***

Туссем, хăш чух эпир чăнах хăлхасăр:
Чун вăранмасть вун иккĕ чан çапмасăр.

***

Куллен икшер йĕрке сăха-сăха,
Хуллен тухатпăрах философа.

***

Чӳк качаки хăй шăпине ылханнă,
Анчах чӳкçи те тамăках çакланнă.

***

Кама мĕнле вăл – пурăнăç тути:
Пыл çиекеншĕн – йӳçĕ армути.

***

Хăш чух мĕскĕнсене пит хĕрхенетĕп:
«Шереметсем, мĕнле шăватăр?» – тетĕп.
***

Çапла умри мура сайра куратпăр,
Аçа çапсан кăна шута каятпăр.

***

Сăвап пек çылăх та хăш чух чысра, –
Эппин, пурах шуйттанлăх Турăра!

***

Усал, эс чăн та Усалах пулсан,
Мĕн-ма сăнна йăл-йăл хупса пăсан.

***

Тĕлĕнмелле: тухать, тухать суя,
«Ăсчах» тесен те пуççăр тăмсая.

***

Нихçан ан çун çын умĕнчи хăймашăн,
Çун шухăшна пурнăçлама хăйманшăн.

***

Сыхла хăв ĕмĕтне йывăрлăхра,
Инкекрен мар эс – ырлăхран хăра.

***

Икшер йĕрке, ик алă пек – юрат,
Ик çивчĕшлĕ хĕç пек – мура тура!

***

Çĕртен тухатпăр та çĕрех кĕретпĕр,
Анчах чунпа пĕлĕтеллех вĕçетпĕр.

## ЭНТИП ВАÇÇИ

***

– Аван-и? – терĕм те, тунсăхăма пăрахрăм.
– Сыв пулăр! – терĕм те, хыçра ахлатрĕ ахрăм.

***

Чун тĕкĕрĕччĕ сан куçу тахçан.
Мĕн халь унта – тăвар-и е тусан.

***

Ăсли кăткăслăха та тиркеймен,
Айван ансатлăхран та иртеймен.

***

Пыр тĕпĕпе каланă сăмаха
Чунпа чĕре варне епле кĕртейĕн-ха.

***

Халь çирĕп йĕрке çĕнтерет пурнăçа,
Йĕрке çук çĕрте нĕрсĕр йĕрĕх хуçа.

***

Ар картине кĕрсен çак чăнлăха чухларăм:
Арçынсенчен ялан кăшт çамрăкрах хĕрарăм.

***

Чунлинчен кула-кула тупăшне виçет,
Мул пухать те чунлине вăрттăн кĕвĕçет.

***

Нумай-нумай пĕлсе сахал калаçакан
Пулаймĕ виççĕр çул кранклатакан çăхан.

***

Ăсли айваннипех çӳрет,
Ухмах ялан ăсла перет.

***

Пĕлĕшӳ алхапăл туслашсан,
Сăмахне çавхатĕрех ан шан.

***

Ĕç умĕнхи сăмах янра, ятуллă,
Ĕç хыççăнхи кĕске, татуллă.

***

Виçе патакĕ икĕ вĕçлĕ –
Усал ăна тытсан мĕн ĕçлĕ.

***

Чăнлăхшăн тĕмсĕлни сахал –
Чăнлăхпа сывламалла ман халь.

***Ыйтусемпе ĕçсем***

*– Бейт виçин хăй евĕрлĕхĕ çинчен каласа кăтартăр.*

*– Вăтам Ази литературинче бейта уйрăм сăвă халлĕн тата пысăкрах хайлав çырнă чухне усă курни.*

*– И. Тукташăн, П. Хусанкайăн XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенчи пултарулăхĕсенче бейт виçине усă курас уйрăмлăхсем. Çакă куçару витĕмĕнчен е урăх сăлтавсенчен килет.*

*– Турат Ваççин, Ю. Айдашăн, В. Энтипăн сăввисен пахалăхĕ.*

*– XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче Вăтам Ази классикине куçарнин историйĕ, сăлтавĕсем, пахалăхĕ.*

*– Г. Юмарт, В. Ахун тата ытти сăвăçсен пултарулăхĕнчи ик йĕркелĕхсен пĕлтерĕшĕпе пахалăхне палăртăр.*

***Усă курмалли литература***


1. История всемирной литературы: в 9 т. Т.3. – М.: Наука, 1985. – 816 с.
2. Кер-Оглы, Х.Ю. Узбекская литература / Х.Ю. Кер-Оглы. – М.: Наука, 1976. – 302 с.
3. Навои, А. Фархад и Ширин / А. Навои. – М.: Книга, 1984. – 564 с.
4. Османов, М.–Н. О. Синтаксическая структура бейта / М.Н. Османов // Проблемы восточного стихосложения. – М.: Наука, 1973. – 182 с.
5. Фирдоуси, А. Шах-наме /А. Фирдоуси. – М.: Худож. лит., 1972.

# Эпос куçарăвĕсем

Эпос вăл халăхăн кун-çулне, тĕнче курăмне, ыpă пурнăç çинчен ĕмĕтленнине тата сăмахлăхăн пуянлăхне палăртакан, пысăк калăпăшлă, нумай сийлĕ фольклор хайлавĕ. Хăш вăхăтра йĕркеленнине кура эпосра миф, юмах, истори халапĕ, йăла-йĕрке поэзийĕ, вак жанрсем тĕрлĕ шайра палăраççĕ. Йăх-çемье тапхăрĕнче йĕркеленнĕ эпоссенче миф пĕлтерĕшĕ ытларах. Çавăнпа вĕсем тĕнче пулса кайни, тĕп сăнар тĕнчене йĕркелесе ярас ĕçе хутшăнни çинчен каланисемпе уйрăлса тăраççĕ. Паттăрăн тăшманĕсем те ку чухне мифсенчи усал-тĕселсем: абаасысем, аçтахасем, демонсем, дэвсем... Феодализм тап-хăрĕнче йĕркеленнĕ эпоссенче тĕп сăнар – кĕрешӳçĕ-паттăр. Ку эпоссенче мифсăр пуçне халăх историне палăртасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Паттăр ютран килнĕ тăшмансемпе (калмăксем, китаецсем, арабсем...) е пусмăрçă феодала хирĕç кĕрешет.

Эпоссене хăçан йĕркеленнине тата мĕн çинчен каланине кура вăрçă, паттăрлăх, çемье, романтика ушкăнĕсем çине уйăраççĕ. Каярахри эпоссем тĕн е çырулла литература витĕмĕпе йĕркеленни паллă.

Миф витĕмĕ карелсен «Калевала», çурçĕр Кавказ халăхĕсен «Нарты», бурятсен «Гэсэр» эпосĕсенче, якутсен «Эр-Соготох» çинчен калакан халапĕсенче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Паттăрлăх эпосĕсем шутне узбексен «Алпамыш», кăркăссен «Манас», туркменсен «Гер-оглы», грузинсен «Амирани», эрменсен «Давид Сасунский», якутсен «Олонхо» тата ыттисем те кĕреççĕ.

В.М. Жирмунский тĕрĕк халăхĕсен паттăрлăх эпосне «Тюркский героический эпос» ĕçĕнче тишкерсе тухать. Эпосăн композицине йĕркелекен пĕлтерĕшлĕ самантсене палăртать. Паттăр çураласси асамлăхпа çыхăннă. Ватта юлнă ашшĕпе амăшĕ Турăран ача ыйтса илеççĕ. Паттăр амăшĕ улма çинипе е чечек шăршланипе пĕтĕленсе юлать. Манас амăшĕн йывăр çын чухне арăслан чĕрине çиес килни çуралас ача паттăр пулассине систерет. Паттăр çуралсанах пысăк, вăл хăвăрт ӳсет. Ăна çитерсе

тăрантарма, чĕркесе пĕтерме çук. Тантăшĕсенчен вăл вăйлă пулнипе уйрăлса тăрать. Вылянă чухне вĕсене амантса пĕтерме пултарать. Пулас паттăр кĕтӳç ачисемпе пĕрле çитĕнет: эрменсен Давичĕ, тутарсен Идегейĕ, узбексен Алпамышĕ... Çакă вăл хура халăха çывăх пулнине палăртма кирлĕ.

Паттăр хăйĕн пĕрремĕш паттăрла ĕçне 6-9 çулта чухне пурнăçлать, çакăнпа унăн ачалăхĕ вĕçленет. Ăна халăх патшана суйласа лартать. Пĕрле ӳснĕ кĕтӳç ачисем унăн шанчăклă çар çыннисем пулса тăраççĕ. Патшана ларнă паттăр ютран килнĕ тăшмансемпе çапăçать, ют патшалăха кайса хăйне валли арăм илсе килет. Пулас мăшăрĕ ăслă, хитре, хĕр-паттăр пулнипе уйрăлса тăрать. Çамрăкăн ăна çĕнсе илме унăн тăванĕсемпе çапăçма, тĕрлĕ ăмăртура çĕнтерме тивет.

Чылай эпосра паттăр килте пулман чухне унăн мăшăрне тăшманĕ качча илме пуçлани мотив пур. Паттăр хăй арăмĕн туйне таврăнса тăшманĕсене хуса ярать, чăнлăха çиеле кăларать. Эпоссенче, çавăн пекех, паттăр çапăçăва хатĕрленнине, çапăçу саманчĕсене сăнлани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Калура детализаци, темиçе хут каласси, паттăрăн вăйне ӳстерсе, тăшманăнне пĕчĕклетсе каласси тĕпре. Эпосра ача çурални, ят пани, туй йăли-йĕрки, тĕрлĕ уявсене сăнлани тата пытару йăли пур. Калу паттăр вилĕмĕпе вĕçленет. Паттăрăн тĕп функцийĕ – усалсемпе, тăшмансемпе кĕрешесси, хура халăхшăн ырă пурнăç йĕркелесси.

XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче чăваш çыравçисем халăха тĕнче, вырăс литературин пуянлăхĕпе куçару урлă паллаштарас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнаççĕ. Мал ĕмĕтлĕ интеллигенци тăванла халăхсен сăмахлăх тĕслĕхĕсене куçарма тытăнать, халăхăн ăнне вăртма тăрăшать. Çак юхăма пула чăвашла калмăксен «Джангар» эпосĕн сыпăкне И. Малгай, эрменсен «Давид Сасунский» эпосне И. Ивник куçараççĕ. Хăш-пĕр çыравçăсем тĕслĕхсем çине таянса чăваш «Улыпиадине» çырма пикенеççĕ: Ç. Элкер «Улăп» поэма (1927ç.), М. Юманăн хăш-пĕр ĕçĕсем, Çуйăн Хĕветĕрĕн тата Лапшу Çтаппанĕн шыравĕсем, каярах Г. Юмартăн «Улăпсем» сăвви. Анчах та вульгарлă социологизм принципĕсене тĕпе хуракан критиксем

ку юхăма тиркеççĕ. Национализм енне туртакан авторсене айăпласа пĕтереççĕ.

Халăх сăмахлăхĕн пуянлăхне усă курса Çуйăн Хĕветĕрĕ «Улăп» чăваш эпосне 60 çул енне çырать. 1996 çулта уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать. Паллах, уйрăм автор йĕркеленĕ япалана халăх эпосĕ тесе хаклама çук. Сăмахлăхра ку жанра аталанма тĕрлĕ истори условийĕсем чăрмантарнине тата чăвашсен сăмах культуринче каласа парассинчен кăтартса парасси ытларах аталаннине шута илмелле. Ахальтен мар, фольклорта йăла-йĕрке поэзийĕ анлă сарăлнă. Çуйăн Хĕветĕрĕ Улăп пирки калакан халапсене пĕр çĕре пуçтарса уйрăм хайлав пек йĕркеленине вара пултарулăх ĕçĕ пек хакламалла. Кун пек тĕслĕхсем Атăл тăрăхĕнчи халăхсен татах та пур. Мордвасен В.К. Радаев «Сияжар», «Волга да Угава» поэмăсем тата А. Шоронов «Масторава» эпос çыраççĕ. Марисен А. Спиридонов фольклорист «Югоро» поэмăна сăмахлăх тĕслĕхĕсем çине таянса хайлать. Комисен К. Жаков йĕркеленĕ «Биармия», удмуртсен М. Худяков çырнă «Дорвыжи» хайлавсем пур. Вĕсем халăхăн кун-çулне, мифологине, йăла-йĕрке пуянлăхне, тĕнчекурăмне, ытти халăхсемпе хутшăннине кăтартса параççĕ.

## ДЖАНГАР

### Хаяр Хура Санал çинчен хунă юрă

(*Сыпăк*)

Зан-Тайши хан ĕçкĕ ĕçет,
Ĕçкĕ ĕçет вунă пин паттăрпа.
Ун кĕрекинче тем чухлĕ эрех...
Санал вырнаçать сылтăм енне,
Сылтăм енчи ретĕн варне.
Никам та асăрхамаççĕ ăна,
Ют çĕршывран килсе кĕнĕ çынна.
Санал пăхкалать те савăнать,
Сăнать те шутлать вăл ăшĕнче çапла:
«Ку паттăрсем вăйлăрах, çирĕпрех
Аслă Джангарăн паттăрĕсенчен».

Ларса вăл ирттерчĕ шăпах çичĕ кун
Хура эрехпе хăна тунă çĕрте.
Тăчĕ Санал кĕмĕл трон умĕнче,
Аллисене кĕсйинчен кăлармасăр
Зан-Тайши хана вăл каларĕ çапла:
– Сана калама хушрĕç пысăк сăмах,
Çавна эп каласшăн халĕ сана,
Ман урлă калать аслă Джангар:
Пурнас тен пулсан Джангарпа килĕшсе,
Кала тӳррипе: Килĕшетĕп, – тесе.
Вăрçасшăн пулсан: Вăрçатăп эп, – те.
Килĕшместĕн пулсан шăпах алă çул,
Шăпах алă çул хырçă парăн пире,
Пин те пĕр çул хушши куланай тӳллĕн;
Джангара пăхăнма тупа эс тăвăн.
Е вăрçă вăрçасшăн пулсан пирĕнпе,
Мана Джангар хушрĕ вакласа тăкма
Сирĕн хура-чăпар ялавăра,
Мĕн пур татăкĕсене хампала илме;
Сакăр миллион пуçлă пуян кĕтӳрен
Сакăрвун пин ута хăваласа пыма...
Сулахай ретре пуç пулса ларакан
Одон-Цаган паттăр тăрса
Пиçхи çумне çакнă хура кинжалне
Кăларчĕ те пычĕ Санал умнелле:
– Унран çакăн пек сăмахсем илтиччен,
Чикес кăкринчен витерех кинжалпа.
Зан-Тайши хан ăна лăплантарчĕ хуллен:
– Сана эпĕ хушсан эсĕ те ыран
Çавăн пек сăмахсем калăн çынсене;
Ăна кунта янă патшалăх хуçи,
Апла тăк хăналăр ăна эрехпе,
Ăш хыпнă пуль унăн инçетрен килсе.
Итлĕр ун лайăх сăмахĕсене.
Одон-Цаган, вырăнне ларсан,
Пачĕ ыйтусем Санала:
– Джангарăн пур, теççĕ, пит те вăйлă паттăр,
Арăслан пек вăйлă Хĕрлĕ Хангор.
Мĕнле вăл манпа танлашсан.

– Ăçтан танлаштарăн хăвна эс унпа,
Хăватлă арăслан пек Хĕрлĕ Хонгорпа.!
Мĕнле ăссăрскер пултăн эс капла...
Çĕр пинлĕ сурăх кĕтĕвĕ çине
Тапăнакан хĕрлĕ кашкăр пек вăйлă вăл.
Çĕр пин сăнăсен вĕçĕпе
Пĕр харăс çапсан та, ăна нихăçан
Пĕр хут та ураран ӳкерес çук.
Вăл яланах малта – вăйлă çапăçнă чух,
Чи кайран чакать вăл чакас мĕн пулсан.
Вăл илем кӳрет çитмĕл пинлĕ çара.
Ăçтан танлаштарăн ăна хăвпала.
Мĕнле ăссăр пуç пулмалла.! –
Каларĕ Санал пĕç çапса, тĕлĕнсе,
Кулса ячĕ хырăмĕ ыратса кайиччен.
Сылтăм енчен siксе тăчĕ тепри,
Ку – Гудун паттăр, вăл ыйтрĕ çапла:
– Джангар çарĕнче вăйлă паттăр пур, тет,
Ун ячĕ – Йывăр Алăллă Савар;
Мĕнле вăл манпа танлаштарсан.
Буменгирăн ывăлĕ – чăрсăр Санал
Кулчĕ те каларĕ пăхса сылтăма:
– Итле-ха мана, мĕскĕнĕм эс;
Унăн учĕ çӳрен-хăларах;
Питĕ те лайăх ут пулĕ, тесе,
Тихаллах илнĕ ăна ютран;
Темиçе миллион çемье уншăн панă.
Ăна «Кăйкăрч» тенĕ çынсем хушшинче,
Темле вăйлă паттăра та Савар унпа
Часах ӳкерет харсăр учĕ çинчен.
Сана, кирлĕ пек ăс кĕрсе çитменскере,
Унпа танлашма шут тытнăскере,
Мĕнех-ши юлать ĕнтĕ халь калама.
Унтан паттăрсен сулахай ретĕнчен
Модон-Харга паттăр ыйтать Саналран:
– Сирĕн Джангарăн пур, теççĕ, тата
Хаяр Хура Санал текен паттăр
Мĕнле вăл манпа танлаштарсан.
– Ха-ха-ха! – Кулса ячĕ Санал,

Капарĕ вăл çапла: – Мĕскĕнсем,
Итлĕр эпĕ хушнине лайăхрах,
Сире усăллă пулĕ манăн канаш:
Мир тени усăллăрах сире,
Тăвăр тупа Джангара пăхăнма,
Вăрçă тени сирĕншĕн пит начар,
Ахалех çын пĕтет çапăçу хирĕнче.
Калатăр пулсан «Вăрçатпăр», – тесе
Тухап та çурап хура-чăпар ялавăра,
Илетĕп мĕн пур таткине хампала.
Нарин шывĕ тăрăхĕнчи
Ешĕл курăк çинче çӳрекен
Сакăр миллион утлă кĕтĕвĕртен
Илеп те каяп сакăрвун пин ут.
Ун чух мана хăвалама эсир
Кăларса ярăр хăть миллион паттăр,
Ăçта та пулин хăвса çитсен мана, –
Хам çине тапăнакансене кашнинех
Пĕрре çапнипех аркататăп, унтан
Лаша çумне çыхса лартăп вĕсене
Ут хырăмĕ айне йĕнере çавăрса,
Пуçлăп хума учĕсене кĕтӳпе.
Ун чух эсир лайăх пĕлейĕр вара,
Кам Хура та Хаяр Санал пулнине.
Ак тăчĕç пĕр харăс вунă пин паттăр,
Пурте, çĕлен сăхнă пек, хаяр мĕн хăйсем
Хир сыснисен ушкăнĕ пек тапăнса,
Санал çине ӳкрĕç пур енчен тапăнса,
Санал çине ӳкрĕç пур енчен.
Кăларчĕ Санал шпагине ак туртса,
Тухса килнĕ чух Гюбе панăскерне.
Тăшман кинжалĕсем çĕмĕрлеç таврара...
Унăн мухтава тухнă шпаги
Çӳрет тăшмансен хырăмĕсем çийĕнче...
Вĕрет кĕрешӳ. Чĕркуççи таран юн...
Ту пек çӳллĕ ула-сарă кермен
Çĕртен пуçласа çӳлтенех чĕтренет.
Сасартăк Санал акă курчĕ мĕскер:
Алăксем патнелле каякан çулсене

Тасатнӑ-мӗн вӑл; вунтӑватӑ алӑка уҫса,
Тухса тӑчӗ Санал ирӗке.
Ҫурса вакларӗ хура-чӑпар ялава,
Кӗсйине чиксе хучӗ татӑкӗсене.
Утланчӗ те ларчӗ учӗ ҫине.
Илемлӗн те вӗттӗн утне чуптарса,
Сар ылтӑнпа тунӑ кӗпер урлӑ каҫрӗ.
Нарин шывӗ тӑрӑхӗнчи
Ешӗл курӑк ҫинче ҫӳрекен
Сакӑр миллион утлӑ кӗтӳрен
Сакӑрвун пин лаша илет вӑл суйласа,
Хӑвалать хӑй ҫуралнӑ ҫӗршыв еннелле,
Ҫуталса тухакан хӗвел патнелле,
Унтан вӑл капӑр эрешленӗ утне
Ҫапрӗ ик енчен нухайкипеле;
Ҫапрӗ пӗр сассӑр ҫичӗ пин хут,
Ҫапрӗ шӑп сакӑр пин хут сас туса.
Ахаль ут пӗрре ҫаврӑнса иличчен,
Саналӑн лаши – хӑла сарӑ лаша –
Илет ҫаврӑнса ҫич-сакӑр хутчен.
Пурне те хӑвать, хӑюллӑн хӑвать,
Пӗрне те кая хӑй хыҫне хӑвармасть,
Каялла пӗр пӑхмасӑр чупаҫҫӗ утсем;
Хӑйсем кӑларакан тусанран хӑраса,
Чупаҫҫӗ ҫапах малалла ыткӑнса;
Урисен айӗнчи ҫӗр пурри-ҫуккине
Чухлаймасӑр чупаҫ малалла ыткӑнса;
Такансем янӑранӑ сасран хӑраса,
Чупаҫҫӗ ҫапах малалла ыткӑнса.
Чупса пыракан лашасен йӗррисем
Юлаҫҫӗ кайра чавса кайнӑ ҫул пек.
Кӗсле пек янраҫҫӗ вӗсен ҫилхисем,
Сӗрме купӑс евӗр янраҫ хӳрисем.
Чупаҫҫӗ, тусан юпа пек ҫӗкленет,
Мӗн пур таврана пӗлӗт пек хупласа.
Чупаҫҫӗ утсем мангуссен ҫӗршывне
Хӑрушӑ тусанпа хупӑрласа.

*И. Малгай куҫарнӑ*

## ДАВИД САСУНСКИЙ

### **Виççĕмĕш пайĕ**

(*Сыпăк*)

... вĕçтерет Давид
Хĕрĕх витязь патне пырса çитет.
Хандут-Хатуншăн пĕр вырăнта
Хĕрĕх витязь пĕр вырăнта ларaç.
Никампа калаçман Хандут-Хатун, –
Панулми ывăтрĕ Давида.
Çилленчĕç витязьсем, каларĕç çапла:
– Çичĕ çул хушши ларатпăр кунта,
Памарĕ вăл пире парне.
Пычĕ çеç Сасун Давичĕ –
Пĕр пăхмасăр палми пачĕ ăна.

Пырать те Давид, пĕрле ларать;
Сĕтел çине апат хатĕрлеç,
Вăрттăн витеç сĕтел çиттине:
Çиттин айĕнче кашнин хĕçĕсем.
Çич çул ларнă гранат эрех илсе пыраç,
Куркийĕсем – курите тарăнăш вĕсен.
Параç Давида – Давид ĕçет;
Татах параç – Давид калать:
– Тăванăмсем, капла юрамасть
Ĕçер кашни черетпе.
Ӳсĕрлекен вырттăр, ан тив,
Кам ӳсĕрлмест – савăнтăр шав.
Анчах вĕсем-и Давидпа ĕçме.
Çич çул ларнă эрехе ĕçме.
Тытăнчĕç ĕçме пурте лĕнчĕрех,
Вырăнсем çине кайрĕç выртма,
Хăйĕн тарçине Давид калать:
– Тăр та эс сирсем сĕтел çиттине,
Çăкăра ватма юрамасть ăна.
Тăрать те тарçи çиттине илет,
Унăн айĕнчи хĕçсене курать,
Ун айне, иккен, пытарнă лешсем.

Давид ал тăсать, хĕçсене пухать
Чĕркуççи çине хурать те хуçать:
– Илсе хур-ха эс йăлтах хутаçça,
Лайăх хурçăран тунă вĕсене
Ут таканĕ тума юрăхлă вĕсем.

Çĕрле кайрĕ Давид Хандут-Хатун патне,
Ирчченех çывăрчĕ вăл унта,
Ирпе тăчĕ, тӳрех пит çума тухса кайрĕ.
Хандут-Хатун кӳрейрĕ шывне,
Ал çине тăкса ячĕ ăна.
Хĕре тытрĕ Давид чуптума пикенсе,
Анчах парăнмарĕ ăна пике,
Çапса ячĕ кăна Давида,
Çăварĕнчен юн çеç тухать:
Хушрĕ Давид: Хандут-Хатун, Турра кĕл тăван,
Ир енне пĕлĕтре мĕн чул пĕлĕт куран,
Çавăн чухлĕ чатăр çавăртăр хулуна,
Пурте пулччĕр тăшман сан аçуна.
Ир енне пĕлĕтре мĕн чул çăлтăр куран,
Çавăн чухлĕ палатка-шатер пухăнать
Хандут-Хатун хули тавралла,
Унăн ашшĕне пурте тăшмансем.
– Кам вăрçма килĕшет. –
Хандут-Хатун ыйтрĕ ирпе,
Хĕрĕх витязь калаççĕ кăна:
– Сан парнӳ хăшĕнче, çав тухать халь вăрçма,
Е, пулсан кăмăлу, хуш тухатпăр эпир.
Тăчĕ Давид ирпелен,
Ут утланчĕ те тухрĕ вăрçа,
Сылтăма сулчĕ, сулахая сулчĕ – çур çара ӳкерчĕ.
Каçхине таврăнать Хандут-Хатун патне.
Тепĕр кунне каллех тухрĕ вăрçа.
Çĕнеймерĕ никам Давида.

Канашларĕç тăшмансем ир те каç.
Дзенов-Ован патне, Сасун хулине
Халап патшине ятарласа яраç.
Калаççĕ ăна: – Пĕтетпĕр эпир,

Сасун хулинче паттăрсем пит нумай.
Эсĕ яр пĕрине вăл килтĕр кунта,
Пур пĕрийĕ унта, пит паттăр вара.
Вĕлерсессĕн ăна – сана çичĕ хула.
Цыран-Вэрон ывăлĕ пур,
Ячĕ унăн – Парон-Астхик.
Хай Парон-Астхик ларчĕ учĕ çине,
Çил çунатлă, вĕри учĕ çине,
Вĕçтерсе çунтарса пырса çитрĕ вăрçа.
Курчĕ Давид: ку – Парон-Астхик.
Каçхине Хандут-Хатуна вăл калать:
– Тухмастăп ыран вăрçмашкăн эп, тет.
Хандут-Хатун калать:
Намăс мар пек пулсан, эпĕ хам тухăп, тет.
Давид малалла: – Эппин тупа ту:
Эп вăрçмашкăн тухсан, алăк урлă ан каç,
Алăка эс ан уç, чӳрече эс ан уç.
Вара тин тухатăп вăрçма.
Каларĕ Хандут-Хатун:
– Килĕшетĕп, питĕретĕп алăка,
Тĕрĕ çинче эп ларатăп пĕччен.
Давид ирпелен тухса кайрĕ вăрçма.

Вĕçтерчĕ Давид, çапăçрĕ ирччен,
Парон-Астхикпа çапăçрĕ пур халпа.
Хĕçсен хĕмĕпе çутатать чӳрече,
Вара курах кайрĕ Хандут-Хатун:
Пӳлĕм каяйрĕ çуталса.
Шухăшлать кăна. – Ку мĕн-ши капла.
Пĕлĕт таса, çумăр-мĕн çук,
Шăп кăнтăрла çиçĕм çиçмест.
Чăтаймарĕ Хандут-Хатун,
Чӳречине уçса ячĕ, пăхать.
Курать: вут-çулăм утпа
Давид тавралла явăнать пĕри,
Авлуни хĕçпе сулкалать,
Давид пуçĕ çине хĕлхем тăкăнать.
Вĕреннĕ те ăслă Хандут-Хатун
Кăларать кĕнеке, вуласа пăхать:

Вăл курать – Давид куккăш ачи
Давид пуçĕ çинче хĕç вылятать,
Вут хĕмпе хăмсарать, ун тавра явăнать,
Ним тума та пĕлмест унпа Давид.
Хандут-Хатун юрлать çакăн пек:
– Ырă тăватăн, кукка, эс пире –
Давид пуçĕ çине ятăн вут-кăвар;
Давид пуçĕ çине сапрăн вут-кăвар –
Хандут-Хатун вучахне сӳнтеретĕн эс.

Ун сассине илтсессĕн çак Давид калать:
– Ан пулсамччĕ эс хĕрарăм шантарни!
Чăтас çуккине сисрĕм эп санне!
Хыт çилленчĕ Давид,
Тытрĕ, тĕллерĕ ухă йĕппине
Парон-Астхикăн лашин хырăмне,
Тухрĕ вăл вара çыннин пуçĕнчен.
Ӳкрĕ çĕр çине вăл кăшкăрса калать:
– Пирĕн йăхран пулмалла ку, – тет.
Давида иккен пĕлеймест-ха вăл.
– Эсĕ кам пулан. – ыйтрĕ хăй Давид.
– Эп Парон-Астхик, Цыран-Вэрго ачи.
Давид каларĕ:
– Йăмăхрĕç иккен манăн куçăмсем!
Йăлисем çапла, кам вилме выртать,
Тăван çын çине хăй пуçне хурать,
Чĕрине-чунне Турра парнелет.
Парон-Астхик пуçне
Чĕркуççи çине хурать Давид.
Турткаланчĕ те чунĕ тухрĕ ун.
Вăл вилсессĕнех пирĕн Давид та
Ним пĕлми пулать.
Килчĕçĕ çарсем Давида тытма.
Давидăн лаши, ăйăр Джалали,
Давид тавра çӳрет,
Давида тытма памасть.
Вăранать Давид, утне утланать,
Килнĕ çарсене аркатса ярать.
Таврăнмарĕ Давид Хандут-Хатун патне.

Давида вĕлерчĕç, – шутлать Хандут-Хатун.
Тăрать ирхине, арçынла тумланать,
Утне утланать, илет пăшалне, калать çапла:
– Каятăп, тупап Давид виллине хам пытарап.
Тухса каять Хандут-Хатун.
Сăннипе çапать, виллисене çĕклет,
Патараз хĕресне шырать вĕсем çинче,
Ун тăрăх пĕлесшĕн Давид виллине;
Давичĕ, тум-тирне улăштарнă, пыма,
Хандут-Хатуна вăл паллать,
Хандут-Хатун çеç пĕлеймест ăна.
Ыйтать Давид: – Кама шыран.
Эсĕ шыракан çынна эпĕ вĕлертĕм хам.
Хандут-Хатун калать:
– Ытах эс ăна вĕлертĕн пулсан,
Пирĕн иккĕн çапăçас пулать
Е эпĕ уншăн сана вĕлереп,
Е эсĕ мана та вĕлерĕн.
Тăчĕç вĕсем, çапăçаç вĕсем.
Хандут-Хатуна ӳкерчĕ Давид,
Чĕркуççипе пусрĕ ун кăкри çине.
Хандут-Хатун калать:
– Шеллесем мана, хĕрарăм-çке эп!
Калать Давид:
– Хам та пĕлетĕп, хĕрарăм эс.
Çăвартан пĕрре чух мана çапнăччĕ эс,
Çăвартан юнпа шыв анса ман ун чух,
Çав ĕçшĕн туянтăн эсĕ çакна.
Ыйтать Хандут–Хатун: – Эс-и, Давид.!
Давид хуравлать: – Ку – эпĕ.
– Унашкал пулсан, эсĕ яр мана
Курса-çке эсĕ хĕрĕх витязе:
Çичĕ çул кĕтеççĕ ĕнтĕ вĕсем,
Эп паман вĕсене парне,
Пытăн та эс, патăм сана.
Давид, ярсам эсĕ мана.
Халь эп – сан арăму, эсĕ – ман упăшка.
Давид тивмерĕ ăна.

*И.Ивник куçарнă*

## *Ыйтусемпе ĕçсем*

*1. Тĕрĕк эпосĕсен традицийĕсем çинчен каласа парăр.*

*2. Чăваш сăмах культуринче мĕн сăлтава пула эпос йĕркеленеймен.*

*3. Тĕрлĕ халăхăн фольклор тĕслĕхĕсене вырăсла куçарас енĕпе ăнăçлă ĕçлекен С. Иринин куçаруçăн ĕçĕсене хак парăр.*

*4. Чăваш литературинчи тĕрĕк эпосĕсене куçарнин историйĕ, пахалăхĕ. Куçару ĕçĕ авторсен пултарулăхне витĕм кӳни.*

*5. И. Дмитриевăн вырăсла куçарнă «Улăп» эпосăн сыпăкĕсемпе паллашăр, вĕсене хак парăр.*

## *Усă курмалли литература*


1. Жирмунский, В.М. Тюркский героический эпос / В.М. Жирмунский. – Л. 1974.

2. Жирмунский, В.М. Народный героический эпос / В.М. Жирмунский. – М.-Л., 1962.

3. История всемирной литературы: в 9 т. Т. 2. – М. 1989.

4. Мелетинский, Е.М. Происхождение героического эпоса / Е.М. Мелетинский. – М. 1963.

5. Гринцер, П.А. Эпос древнего мира/ П.А. Гринцер // Типология и взаимосвязи литератур древнего мира: сб. ст. – М. 1971.

# ТУПМАЛЛИ

**Ум сӑмах**.....................................................................................3

**I сыпӑк. Тухӑҫ поэзийӗ ҫинчен пӗтӗмӗшле кала-ни**...................5
Авалхи шумер литературин пуянлӑхӗ...................................5
Китай поэзийӗн пуянлӑхӗ.....................................................13
Чӑваш поэзийӗнчи Китай литературин мотивӗсем............38
Китай поэзийӗнчи ҫул йывӑрлӑхӗ мотив............................42
Яппун поэзийӗн пуянлӑхӗ.....................................................46
Чӑваш поэзийӗнчи яппун лирикин традицийӗсем..............56
Инди поэзийӗн пуянлӑхӗ.......................................................65
Авалхи еврей литературин пуянлӑхӗ...................................84
Чӑваш поэзийӗнчи
авалхи еврей литературин мотивӗсем.................................96
Турккӑ поэзийӗн пуянлӑхӗ..................................................102
Чӑваш сӑмах культуринчи
Турккӑ ҫӗршывӗн сӑнарӗ ...................................................124

**II сыпӑк. Тухӑҫ поэзийӗнчи мотив пуян-лӑхӗ**..........................131
Тухӑҫ литературинчи кӗреке кӗввисем..............................131
Чӑваш поэзийӗнчи кӗреке кӗввисем..................................136
Вӑтам Ази литературинчи Касӑк пуҫ мотивӗ..................143
Тухӑҫ литературинчи ӑс-тӑна мухтани мотивӗ................154
Тухӑҫ литературинчи ватлӑх кунӗсем мотивӗ...................165
Чӑваш поэзийӗнчи ватлӑх кунӗсем мотивӗ.......................171

**III сыпӑк. Тухӑҫ поэзийӗнчи жанр пуян-лӑхӗ**..........................174
Вӑтам Ази литературинчи газель жанрӗ........................174
Чӑваш поэзийӗнчи газель жанрӗ......................................184
Вӑтам Ази литературинчи рубаи жанрӗ.........................189
Чӑваш поэзийӗнчи рубаи жанрӗ.......................................194
Вӑтам Ази литературинчи бейт жанрӗ............................207
Чӑваш поэзийӗнчи бейт жанрӗ.........................................220
Эпос куҫарӑвӗсем..............................................................230

Учебное издание

Автор-составитель
СОФРОНОВА Ирина Владимировна

# ОБРАЗЦЫ ВОСТОЧНОЙ ПОЭЗИИ

## Хрестоматия

Отв. за выпуск Н.С. Орлова

Подписано в печать 12.12.2008. Формат 60x84/16. Бумага газетная.
Печать оперативная. Гарнитура Times. Уч.-изд. л. 13,81.
Усл. печ. л. 13,95. Тираж 250 экз. Заказ № 29.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15